22-4
№ 65

НАЧАЛЬНЫЙ КУРС ГЕОГРАФИИ.

ЧАСТЬ 2-я.

Издание Союза Потребительных Обществ
Чувашской Автономной Области.

МАЛТАНХИ КУРСРИ КЕОКРАХВИ.

2-МЁШ КЁНЕКЕ.

АҪИ, АФРИК, АМЕРИК, АВСТРАЛИ.

ҪЫРАКАННИ Г. И. ИВАНОВ.
ТӐВАШЛА КУҪАРАКАННИ М. П

СИМБИРСК.
ТИПОГРАФИЯ № 1 С. Н. Х.
1922 Г.

ПЎЛЁМСЕМ.

Аçи çĕрĕ	3
Африк çĕрĕ	55
Америк çĕрĕ	84
Австрали çĕрĕ	117

Çўревçĕсем çинтђен кĕскен каласа кăтартнисем.

Тешнев çинђен	130
Пршеваљски çинђен	132
Ливинкстон çинђен	140
Стенли çинђен	144
Кук çинђен	149
Миклухха-Маклай çинђен	154
Нанссĕн çинђен	159
Амунтсĕнпе Скотт çинђен	166

НАЧАЛЬНЫЙ КУРС
ГЕОГРАФИИ.

ЧАСТЬ 2-я.

Издание Союза Потребительских Обществ
Чувашской Автономной Области.

МАЛТАНХИ КУРСРИ
КЕОКРАХВИ.

2-мĕш кĕнеке.

Аҫи, Африк, Америк, Австрали.

Ҫыраканни Г. И. Иванов.

Тăвашла кусараканни М. П.

СИМБИРСК.
ТИПОГРАФИЯ № 1 С. Н. Х.
1922 Г.

Ҫӑваш хушшинҫе халиҫҫен илтӗнмен йе сахал илтӗннӗ патшалӑх, ту, тинӗс, тинӗс-утти, ҫӗр-шыв, тата ытти ҫавӑн пек вырӑнсенӗн йаҫӗсене йе халӑх йаҫӗсене вӗсем тухнӑ тӗп ҫӗлхене ҫывӑхрах туса ҫырма, тата, май килнӗ таран, ҫӑваш ҫӗлхийӗн йӗркисене хирӗҫ, унӑн историне хирӗҫ пымалла мар туса ҫырма, ҫӑвашла авалтанпах пуррисене улӑштарма сӑрах хӑварма тӑрӑшрӑмӑр.

Картсене клишше ҫуккипе ку кӗнекене кӳртей-мерӗмӗр, вӗсене уйрӑм кӑларатпӑр

Тӳрлетмелли тӗлсем пулсан, вулакансенҫен пире пӗлтерме ыйтатпӑр

Аҫи ҫӗрӗ.

Пӗтӗмӗш ҫинҗен калани.

Аҫи вырӑнӗ, унӑн пысӑкӑшӗ.

Аҫи вӑл ытти ҫӗрсем ҫывахӗнҗех, йунашарах тӑрат. Йевроп ҫӗрӗпе вӑл таҗах сыпӑҫса тӑрат, Йевроп ҫӗрне Аҫи ҫӗрӗн ластӑкӗ, ҫур-утравӗ (полуостровӗ) теме те пулат. Йевроп ҫӗрӗпе Аҫи ҫӗрӗн кранӗсем—Урал тӑвӗсемпе Йейӗк (Урал) шывӗ тата Капкас тӑвӗсем пулаҫҫӗ.

Африк ҫӗрӗпе Аҫи ҫӗрӗ Суес йатлӑ ҫӗр-сыпӑкӗпе пӗрлешсе сыпӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫав ҫӗр-сыпӑкӗ урлӑ, нумай пулмаст, канал алтса хунӑ, ӑна *Суес каналӗ* теҫҫӗ.

Австрали ҫӗрӗпе Аҫи ҫӗрӗ хушшинҗе Малай утравӗсен (островсен) ушкӑнӗ (Малай аpxxиппелакӗ) пур; ҫавсем тӑрӑх Австралипе Аҫи иккӗшӗ хутшӑнса тӑраҫҫӗ.

Аҫи ҫӗрӗ Перинк тинӗс пырӗ пайӗнҗе Америк ҫӗрӗ ҫывӑххнех пырат; вӑл тинӗс пырӗн сарлакӑшӗ мӗн пурӗ те 100 ҫухрӑма йахӑн анҗах, хӗлле, ҫав тинӗс пырӗ шӑнса ларсан, Аҫипе Америке вара пӑртан тунӑ кӗпер пӗрлештерсе тӑрат.

Аҫи ҫӗрӗ—пит пысӑк ҫӗр. Вӑл Йевроп ҫӗрӗнҗен 5 хут пысӑкрах; етем пурӑнакан ҫӗрӗн виҫ тӳпинҗен пӗр тӳпи вӑл пулат. Аҫи ҫӗрӗн аслӑшӗ, тӑваткӑл-тӑваткӑл ҫухрӑм туса шутласан, 40 мӗлйуна ҫитет.

Карт ҫинҗе тупӑр: Аҫи ҫӗрӗн җи ҫур-ҫӗр йенҗи Җелӳскин тийекен сӑмсине, тата Пуру текен җи кӑнтӑрти сӑмсине. Унтан пӗлӗр: ҫавсем кашнийех ҫӗр-сарлакӑшӗнҗе (широттара) хӑш тӗлте, ҫӗр вӑрӑмӗшӗнҗе (долготтара) хӑш тӗлте? Малалла масштап тӑрӑх шутласа кӑларӑр: вӗсем хушши миҫе ҫухрӑм. Тата тупӑр карт (план) ҫинҗе: Аҫи ҫӗрин җи каҫалри Папа тийекен сӑмсипе җи мал-йенҗи сӑмсине, Тешнев йатлине. Пӗлӗр: ҫӗр вӑрӑмӗшӗнҗе хӑш тӗлте вӗсем. Масштап тӑрӑх шутласа кӑларӑр: вӗсем хушши миҫе ҫухрӑм? Тешнев сӑмси ҫинҗе тӑр-кӑнтӑрла җух, Папа сӑмси

çинчe хĕвел те тухмасть. Мĕншĕн вăл апла? Челюскин сăмсипе Пуру сăмси çинче кăнтăрла пĕр тĕлерехрех пулать. Мĕншĕн вăл? Анчах Пуру сăмси çинче хĕвел çанталăк хĕрринчен (горизонтран) çӳлте тăнă вăхăтра Челюскин сăмси çинче айалта тăрать. Мĕншĕн вăл апла?

Аçи çĕрĕ хĕррисем.

Аçи çĕрĕн хĕррисене мăн шыв каса-каса кĕрсе, тинĕссем тинĕс-урисем туса пĕтерне. Ун тĕлĕшĕнчен пулсан, Йевроп çĕрĕ анчах унтан иртерет.

Мал-йенчен Аçи çĕрне Аслă оккеан çуса тăрать, вăл йенче темиçе тинĕс те пур. *Перинк тинĕсĕ, Оххотск тинĕсĕ,* тата урăххисем те пур. (*Тата мĕнле тинĕссем пур, çавсене пурне те карт тăрăх пĕлсе тухăр*). Çав тинĕссене пурне те оккеан шывĕнчен йĕрки-йĕркипе ларса тухнă утравсем уйăрса тăраççĕ.

Кăнтăр йенчен Аçи çĕрне Инти оккеанĕ çуса тăрать. Кунта та тинĕссем те пур, тинĕс-урисем те пур. (*Карт тăрăх пĕлĕр: мĕнлескерсем?*)

Çур-çĕр йенчен Аçи çĕрне Пăрлă оккеан çуса тăрать, ку йенче пĕр тинĕс анчах—*Кара* тинĕсĕ.

Каçал йенчен Аçи çĕрне Çĕр варринчи тинĕспеле Хура тинĕс çуса тăраççĕ.

Аçи çĕрĕн тинĕселле кĕрсе тăракан çур-утравсемпе (полуостровсемпе) утравсем (островсем) нумай, вĕсем Аçи çĕрĕн тăвата тӳпинчен пĕр тӳпи пулаççĕ. Тинĕселле кĕрсе тăракан сăн аслă çĕрсем виççĕ: *Арави* çĕрĕ, *Интокиттай* çĕрĕ тата *Инточтан* çĕрĕ. Вĕсенчен пĕчĕкреххисем ак çаксем: *Кĕçĕн Аçи, Таймăр, Камччат,* тата *Корей.*

Аçи утравĕсем пуринчен ытла мал-йенпе кăнтăр хушшинче, вĕсене *Малай ушкăнĕ* (Малайский архипелаг) теççĕ. Ытти утравсенчен чаплăраххисем тата ак çаксем: *Йаппон утравĕсем,* тата *Сахалинпе Сейлен (Цейлон).* Аçи утравĕсене пĕр çĕре пуçтарсан, вĕсенĕн аслăшĕ Арави çĕрĕн аслăшĕпе танрахах пулать.

Аçи çĕрне пĕлни.

Йевропри çынсем Кĕçĕн Аçи çĕрĕпеле Çĕр варринчи тинĕс таврашĕнчи çĕрсене тахăçантанпах пĕлсе тăраççĕ.

Аравипе Инти ҫӗрне вӗсем мӗн авалтанпах пӗлеҫҫӗ. Унти халӑхсемпе вӗсем суту-илӳ туса пурӑнна. Анђах Аҫари ытти ҫӗрсене, Христос ҫуралсан кайран 12 ӗмӗре ҫитсен те, Йевропри халӑх ним те уҫҫӑн пӗлмен.
(Карт. ҫине пӑх).

13-мӗш ӗмӗрте *Маркко Поло* йатлӑ ҫын хӑйӗн аппӗпеле, муђӑшӗпе пӗрлӗ Аҫи-Варри урлӑ Киттай ҫӗрне кайнӑ. Унта вӑл 17 ҫул пурӑннӑ та, вара Интокиттайпала Интостан ҫӗрӗ тавра кайса, киле ҫавӑрӑнса ҫитнӗ. Вӑл хӑй ҫӳрени ҫинђен кӗнеке ҫырнӑ, унта вӑл хӑй курни—илтни ҫинђен пит лайӑх каласа кӑтартнӑ. Ҫавӑнпа ҫав Маркко Поло ҫӳревӗ ђаплӑ, пуйан ҫер-шывсене ытти ҫынсем те кайса курас пӑн пулнӑ, анђах ҫулран хӑраса тӑнӑ: типӗпе, тинӗспе ҫӳреме хайар пулӗ, тенӗ. Ун ђухне халђхи пек Суес каналӗ пулман. Африк тавра кимӗпе ҫӳреме те пӗлмен. Ҫавӑнпа вара карапӗҫсем нумайӗшӗ: ку Инти ҫӗрне ҫитмелли тинӗс ҫулне ӑҫтан тупас-ши? тесе, шухӑшла пуҫланӑ.

15-мӗш ӗмӗр вӗҫне тухнӑ ђухне тин пӗр *Колумп* йатлӑ иттал ҫынни, ҫӗр ђӑп-ђӑмӑр тесе шутланӑ тӑрӑх, Атлант оккеанӗ урлӑ тӳрех Йевропран каҫалла (кай-йеннелле) ҫав Инти ҫӗрне кайма тухнӑ; анђах вӑл Инти ҫӗрне ҫитеймен, Америк ҫӗрне тӗл-пулнӑ.

Ҫав Колумп вӑхӑтӗнђех тепӗр Порттукал ҫынни *Васко-та-Кама* йатлӑскер, Инти ҫӗрне Африк ҫӗрӗ тавра тинӗспе кайнӑ. Вӑл ҫӳрени ӑнӑҫлӑ пулнӑ: вӑл Инти ҫӗрне ҫӳремелли тинӗс ҫулне тупнӑ. Унтан нумай та тӑман, тата тепӗр Испан ҫынни, *Макеллан* йатлӑскер, унта ҫӳремелли ҫул тата тепӗре тупнӑ: вӑл караппа ҫӗр йӗри-тавра ҫӳренӗ ђух, Америк тавра кӑнтӑр йенђен кайнӑ та, Филиппин утравӗсем патне пырса тухнӑ Ҫавӑнтан кайран вара Йевроп ҫыннисем кӑнтӑр йенђи Аҫи ҫӗрне те мал-йенђи ҫӗрне те ҫӳреме пуҫланӑ.

16-мӗш ӗмӗрте вырӑс касакӗсем Урал тӑвӗсем урлӑ каҫнӑ та, Ҫипир ҫӗрне тупнӑ; ун ҫинђен унђђен Йевропри халӑх нимӗн те пӗлмен. Малтан ҫав касаксем каҫал йенђи Ҫипир ҫӗрне ҫӗнтерсе туртса илнӗ, унтан, пӗђӗккӗн-пӗђӗккӗн малалла кайса, Аслӑ оккеан хӗррине ҫитсе тухнӑ. 1648-мӗш ҫулта Ҫемен Тешнев (Дежнев) йатлӑ касак Аҫи ҫӗрӗн ђӑн малти сӑмсине тупнӑ, ӑна халӗ—*Тешнев* сӑмси теҫҫӗ.

Анђах ҫав Тешнев тупнӑ ҫӗре нумайђђен никам та пӗлмен; Аҫи ҫӗре Америк ҫӗрӗпе ҫыпҫӑнса тӑрать-и, йе вӗсем тыҫӑҫмасӑр уйрӑм тӑраҫҫӗ-и, ӑна Аслӑ Петӗр вӑхӑтӗнђе те пӗлмен. Ҫавна пӗлме Аслӑ Петӗр вырӑс

хлотĕнҫе пурăнакан пĕр Перинк йатлă капиттана хушнă. Перинк хатĕрленнĕ те, Питĕртен мал-йенне типĕ ҫулпа тўрех кайнă; темиҫĕ ҫул ҫўресен, вăл Камҫҫат ҫĕрне ҫитнĕ те, унта карап тунă; вара, ҫав карапа ишсе ҫўресе, Америкпе Аҫи ҫĕрне уйăрса тăракан тинĕс пырне те, тинĕсне те пĕлсе ҫитнĕ. Кайран тинĕсне те, пырне те *Перинк* йатлă хунă. Ҫав Перинк шухăшĕпех тепĕр пысăк ĕҫ пулнă, ăна *Великая Северная Экспедиция* теҫҫĕ, вăл *Ҫур-ҫĕр йенҫи Ҫаплă Експетитси* тени пулаť, ҫав експетитсине Пăрлă тинĕс хĕррисене пĕлсе ҫўреме йанă. Унта ҫўресси пит хурлăхлă пулнă. Сивĕпе, вăл-ку ҫитменнипе унта кайнă ҫынсем нумайĕшĕ вилсе пĕтнĕ, ыттисем ҫапах та вĕсен ĕҫнə пăрахман. Ҫавсенҫен пĕри, *Ҫелўскин* йатлă штурмăн, Аҫин ҫăн сивĕри сăмсине ҫитсе курнă, ăна халĕ *Ҫелўскин* сăмси теҫҫĕ.

Ҫапла ĕнтĕ Йевроп ҫыннисем ҫăн малтан Аҫи ҫĕрне каҫал йенҫине пĕлнĕ, унтан кăнтăр йенҫине, тата ҫурҫĕр йенҫине. Пĕлменни Вăта Аҫи анҫах йулнă. Маркко Поло ҫўренĕренпе унта Йевроп ҫыннисенҫен урăх ҫын никам та ҫўремен. 19-мĕш ҫур ĕмĕрте-ҫеҫ вырăс ҫыннисем сивĕ йенҫен, акăлҫан ҫыннисем кăнтăр йенҫен ҫав Аҫи варрине пыра-пыра кĕре пуҫланă. Ҫавсенҫен ҫăн ҫапли пирĕн ҫўревҫĕ Пршеваљски. Вăл ҫав Аҫи варрине тăватă хутҫен ҫитнĕ. Вăл, лаша утланса, тĕвесем кўлсе, караванпала, хĕҫ-пăшаллă ҫынсемпеле, Йевроп ҫыннисем унҫен никам ҫўремен ҫĕрсене нумайĕшне витĕр ҫўресе тухнă. Пиллĕкĕмĕш хут ҫўреме кайсан, унăн вăй пĕтсе ҫитнĕ те, Таң-Шаң тăвĕ патĕнҫе вăл вилнĕ.

Ку таранҫен Аҫире пĕрре те пĕлмен ҫĕрсем хăш-хăш тĕлте Типетре пур, тата Арави варринҫе пур.

Аҫи ҫĕрĕ ҫийĕ.

Аҫи вăл тĕнҫери ытти ҫĕрсенҫен пуринҫен те ҫăн ҫўлĕ ҫĕр. Унăн хăпарса тăракан ҫўлĕ вырăнĕсем—йарăмăн-йарăмăн сыпăнса тăракан тусем. Ҫав тусем пĕкĕ майлă кукăр тăраҫĕ: кукăррин тулаш йенĕ йе Аслă оккеан йеннелле, йе тата Инти оккеанĕ йеннелле тăраť. (*Карт ҫинҫе ҫав тусене асăрхаса пăхăр*). *Аслă оккеан* йеннелле пăхса тăраканнисем ак ҫаксем: *Пайккал тăвĕсем*, *Улма-йывăҫҫи тăвĕсем*, *Стан тăвĕсем*, *Хинкан тăвĕсем*, *Киттай тăвĕсем*, тата ыттисем те пур. Аҫин мал-йенҫе пĕкĕ аванҫăкĕ

пек ларса тухнӑ утравсем те ҫав Аслӑ оккеанран кунталла ҫавӑрӑннӑ, тӑраҫҫӗ

Кӑнтӑралла, *Инти оккеанӗ* патнелле, ак ҫак тусем пӑхса тӑраҫҫӗ: *Сайан тӑвӗсем, Алттай тӑвӗсем, Ҭаҥ-Шаҥ тӑвӗсем; Куен-Луҥ тӑвӗсем, Караккорум тӑвӗсем, Хималайӑ тӑвӗсем, Хинтукуш тӑвӗсем, Кӑнтӑрти-Иран тӑвӗсем,* тата ыттисем те пур. Хималайӑ тӑвӗсен ҭӑн ҫӱлӗ пуҫӗ *Еверест* йатлӑ, ӑна тата урӑхла. *Каурисанккар* тӑвӗ теҫҫӗ. Тинӗсри шыв тӑрӑх шутласан, унӑн ҫӱллӗшӗ 8 ҫухрӑм ҫурӑ. Караккорум тӑвӗсен ҭӑн ҫӱлӗ пуҫӗ. *Котвин-Остӗн* йатлӑ; унӑн ҫӱллӗшӗ 8 ҫухрӑм ытларах.

Ҫав Хималайӑпа Караккорум тӑвӗсем ҫинҭе тӑршшӗпех нихӑҫан ирӗлми ӗмӗр-ӗмӗрхи йур тӑрать, вӑл йур айалтан 4 ҫухрӑм ҫӱр хӑпарсан пуҫланса кайать. Вӑл тусен *Хималайа* тенӗ йаҭӗ те *йур ҫуралнӑ вырӑн* тени пулать.

Куен-Луҥ тӑвӗсем те, Хинтукуш тӑвӗсем те, Ҭаҥ-Шаҥ тӑвӗсем те, (вӗсене тата *Пӗлӗтлӗ* тусем теҫҫӗ) пит ҫӱллӗ. *Хан-Тенкри* тийекен пуҫӗн ҫӱллӗшӗ 7 ҫухрӑма йахӑн. Алттай тӑвӗсемпеле Сайан тӑвӗсем лешсенҭен пӗҭӗкрех; анҭах вӗсем те хӑшӗ-хӑшӗ ҫӱлӗ те, вӗсен тӑрринҭе ӗмӗрхи йур выртать, ҫав йурсем кунта Хималайӑ тӑвӗ ҫинҭи йурсенҭен айалтарахран пуҫланса кайаҫҫӗ. *Мӗншӗн вӑл аплӑ?*

Аҫи ҫӗрӗнҭи тусем пур те карттин пек тӗлӗнмелле курӑнса тӑраҫҫӗ: вӗсем тем аслӑшӗ ҫӗр ҫинҭе сарӑлса ларҫҫӗ, хӑйсем хутлӑн-хутлӑн пулса пӗтнӗ; ҫӱлтен пӑхсан темӗскерле хумханса тӑнӑ хушӑрах шӑнса хытса ларнӑ тинӗс пек курӑнаҫҫӗ. Тӑвӗсене хумсем пек теме пулать; вӗсен ҫӗрӗ сийӗн-сийен хӑпарса, хутланҭакӑн-хутланҭакӑн пулса тӑнӑ Хумӗсем икӗ оккеан патнелле сарӑлса кайнӑ пек: пӗр хумӗсем Пайккал тӑвӗсемпеле Улма-ӗывӑҫҫи тӑвӗсенҭен пуҫланса Аслӑ оккеан патнелле кайнӑ пек, ыттисем Алттай тӑвӗсенҭен пуҫланса Инти оккеанӗ патнелле кайнӑ пек тӑраҫҫӗ. Хӑш-хӑш тӗлте хумӗсем, хӑйсенӗн ҫӱлӗ ҫинҭе темӗскер ҭаракана тӗл-пулнӑ пек; унта вара вӗсем пӗр пӗрин ҫине пырса кӗрсе, ҫапӑнса, пӑтранса пӗтнӗ пек те, урӑх ҫӗрелле кайнӑ пек курӑнаҫҫӗ.

Тусем пӗр-пӗринпе ҫывхарса ҫыпӑҫса тӑнӑ ҫӗрте сӑртлӑ ҫанталӑк пулать. Ҫавнашкал сӑртла ҫӗр *Памир ҫӗрӗ*, кунта Караккорум, Куен-Луҥ, Ҭаҥ-Шаҥ, Хинтукуш тӑвӗсем пур, ҫав пысӑк тусем пӗр-пӗринпе пит ҫывӑх тӑраҫҫӗ те, „тӗпӗсем" вӗсен ҫыпӑҫсах ларнӑ.

Аҫпре тата тепӗр сӑртлӑ ҫӗр пур, вӑл—*Типет* ҫӗрӗ, вӑл лешинҫен те аслӑрах. Кӑнтӑр йенҫи|ҫиккинҫе унӑн Хималайӑ тӑвӗсем тӑраҫҫӗ, ҫур-ҫӗр йенҫи ҫиккинҫе—Куен-Лунҫ тӑвӗсем пур; Типет ҫӗрӗ варринҫе ытти тусем те нумай, вӗсем Хималайӑ тӑвӗсемпе пӗр май тӑсӑлса тӑраҫҫӗ. Ҫав тусем хушшинҫи ҫӗрсем ҫинҫе туран пулса кайнӑ ҫӗмрӗксем пит нумай, ҫавӑнпа пӗтӗм Типет ҫӗрне ту тӑрӑхӗ теме те пулат; унӑн ҫӳллӗшӗ, вӑтамран шутласан, 4 ҫухрӑм ытларах пулат; ку ту тӑрӑхӗ ҫапла ҫӗр ҫинҫе ыттисенҫен пуринҫен те ҫӳлӗрех.

Типет вӑл *Аҫи варринҫи ту тӑрӑхӗн* пӗр татӑкӗ анҫӑх; ҫав ту тӑрӑхӗ, Хималайӑран пуҫласа, Сайан патне ҫитиҫҫенех пырат, тата Памиртен пуҫласа Хинкан таранах кайат. Вӑл ту тӑрӑхӗ, Куен-Лунҫрен ҫур-ҫӗр йеннелле кайсан, Типетрен лутрарах, тусем те унта тэҫах ҫыпӑҫса тӑмаҫҫӗ.

Иран ту тӑрӑхӗпе *Кӗҫӗн Аҫи* ту тӑрӑхӗсем Типет майлах, анҫах лутрарах.

Текканпала Арави ту тӑрӑхӗсем пӗтӗмпех урӑх тӗслӗ. Вӗсем иккӗшӗ те тем пысӑкӑш ҫул катӑкӗ пек; ту таврашӗсем вӗсен сийӗн-сийӗн тӳп-тӳрӗ, тан-тан, пӗр-май выртаҫҫӗ, пӗр хутланҫӑк та ҫук; вӗсенӗн хӗррисем хӑпарса тӑраҫҫӗ те, тусем пек курӑнаҫҫӗ, пуринҫен ытла тинӗс ҫийӗнҫен пӑхсан.

Айлӑм ҫӗрсем Аҫи ҫӗрӗнҫе виҫ пайран пӗр пай анҫах пулаҫҫӗ. Ҫӑн пысӑккисем *Ҫипир* ҫӗрӗпе *Туран* ҫӗрӗ. Вӗсем ӗлӗк тинӗс тӗпӗ пулнӑ, ҫав тинӗс Аҫипе Йевроп хушшинҫе пулнӑ. Вӑл тинӗсрен халӗ Каспи тинӗсӗпе Арал тинӗсӗ анҫах тӑрса йулнӑ. Каспи тинӗсӗ те типсе ҫакнипе унӑн шывӗ халӗ океанри шывран 10 ҫалӑш ытла айаларах тӑрат.

Ытти айлӑмсем пысӑках мар, вӗсем тинӗс урипывӑрӑнесем, ҫав тинӗс-урисем хӑйӑрпала лӑйма тулнӑран типсе ларнӑ. Ҫапла пулнӑ айлӑмсем ак ҫаксем: *Мессоппоттами ҫӗрӗ*, вӑл Тикр шывӗпе Йевфрат шывӗнҫен пулнӑ; *Интостан ҫӗрӗ*, вӑл Инт шывӗпе Канк шывӗ, тата Прамапутрӑ шывӗнҫен пулнӑ, унтан *Киттай ҫӗрӗ*, вӑл Сарӑ шывӗнҫен пулнӑ.

Ҫак айлӑм ҫӗрсем пурте гӳрем ҫӗрсем; вӗсенӗн ҫӗрӗ пӗр си тӑм, тӗлер си хӑйӑрпа ытти кӑпка йапаласенҫен пулнӑ.

Аҫири тӗрлӗ-тӗрлӗ вырӑнсене пӗрле танлаштарсан, вӗсем пӗр пек марри витӗрех курӑнса тӑрат: пӗр тӗлте тусем купаланса тӑраҫҫӗ, тепӗр тӗлте сийӗн-сийӗн выртакан тӳрем ҫӗр-

сем пур; хăш-хăш вырăнта тем çӳллĕш тусем пур; ытти вырăнта тата ытла та айлăм путăк çĕрсем пур; вăл çĕрсем оккеанри шыв хĕрринчен те айаларах тăраççĕ. Çавнашкал айлăм çĕрсем чăн асли—Каспи тинĕсĕ таврашĕнчи çĕрсем (Прикаспийская впадина), чăн айлăмми—Вилĕ-Тинĕс çĕрĕ, вал оккеанри шыв хĕрринчен пĕр çухрăм тата айаларах, путăкрах тăрать.

Аçи утравĕсем пурте унтан хăйĕнчен уйăрăлса йулнă. Çавăнпа вĕсенĕн çĕрĕ Аçи çĕрĕ пекех.

Сейлен (*Цейлон*) йатлă утрав, Теккан пек, чуллă çĕр; Малай утравĕсем, тата Йаппон утравĕсем, Аçи çĕрĕнчен Мал-йеннелле тăракан утравсем те пурте оккеан варрине путнă вăрăмăн тăсăлса тăракан сăртсем.

Камччат çĕрĕнче, тата Аслă оккеана ытти Аçи тинĕсĕсенчен уйăрса тăракан утравсем çинче вулккансем пит нумай; сӳнменнисем те пур, сӳннисем те пур. Вĕсем Камччатран пуçласа Çĕнĕ Квинейе çитичченех пыраççĕ.

Климăт.

Аçи вăл пит пысăк, ун çинче темиçе тĕрлĕ çĕр те пур. Çавăнпа, сивĕрен-ăшăран пулсан та, Аçи çĕрĕ пĕр мар.

Аçи варринчи Сăрт пур оккеансенчен те инçе тăрать, ăна пысăк тусем картласа тăраççĕ; çав тусем тинĕс çилĕсене хăйсем урлă йамаççĕ, вĕсем илсе пыракан йĕпе-сапана та пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех хăйсем туртса илеççĕ. (*Мĕншĕн апла вăл?*). Çавăнпа Аçире, вăта-çĕрĕнче, *климăт, çанталăк* пит *уйăр тăрать.* Çӳлте çумăр пĕлĕчĕсем хутран-ситрен анчах тухкалаççĕ; çӳлте тăракан хĕвел лаптак тусене çула вара пĕр май хĕртсе тăрать; хĕлле, хĕвел айалта чух, шăнтса тăрать. Çапла ĕнтĕ Вăта Аçире *чăн конттинент климăтче, чăн тип-çĕр çанталăкĕ*: хĕлле унта хăйар сивĕсем, çула—вăйлă шăрăх.

Вăта Аçире сывлăшра тусан вĕçсе çӳрет, çĕртен çӳлелле ăна хăрăк çилсем хăпартса йараççĕ; çула вара пĕтĕм çанталăка шупкарах тĕтĕм карса илнĕ пек пулать те, хăш чухне хĕвел те, сӳнсе ларнă пек, курăнми пулать. Лăпкă çанталăкра тусанĕ айала анса ларать те, çилсем тухсанах, тĕпер хут хăпарса, вĕçсе çӳрет. Çав тусан Вăта Аçи хĕррисене çитех вĕçсе пырать; унта çумăрсем пулкаласах тăраççĕ, вара çав çумăрпа çуса анса, сарă тусан-

сем ҫӗр ҫине лараҫҫӗ; ҫапла унта мӗн ӗмӗртенпе ларчӑ тусанран апат-ҫимӗҫ кӳрекен тем хулӑмӑш сарӑ ҫӗр (ђосс) пулса тӑнӑ.

Ҫур-ҫӗр йенђи Аҫи ҫӗрне, Ҫипире, пођус ҫавракӑшӗ каҫса кайаҭ, *унти климӑт ҫавӑнпа пит сивӗ.* Хӗвел вӑл ҫӗре ӑшӑтаймасҭ; вӑл ҫула та ҫӳлех хӑпараймасҭ те, хӗлле ытла та айалта тӑраҭ. Пођус крамӗнђен лерелле *пођус патӗнђи хура-ҫӗр (полярная ночь)* пулаҭ, ун ђухне вара хӗвел нумайђен пӗрре те хӑпармасҭ. Ђелӳскин сӑмси ҫинђе ҫав хура-ҫӗр 4 уйӑх ҫилапах пыраҭ, 4 уйӑх хушши тӗттӗм каҫ пулаҭ. Ҫавӑнпа та Ҫипирте, Ҫур-ҫӗр йенђи Аҫире, хӗлсем пит хайар пулаҫҫӗ: сивӗсем ђас-ђасах 40⁰—50⁰ ҫитеҫҫӗ; Йан шывӗ ҫинђе, Ленӑ шывӗнђен мал-йеннелле, вӑл сивӗсем хӑш ђухне 60⁰—70⁰ ҫитеҫҫӗ. Ҫӗр пит тарӑн шӑнса лараҭ те, ҫула ҫийелтен анђах ӑшӑнса ирӗлет; вӑл ђӑн ҫур-ҫӗр йенђе, тунтӑрта, ҫапла та, унтан кӑнтӑралла та, Пайккал кӳлли патӗнђе, вӑрмансем ђусекен ҫӗрте, ҫаплах. Ҫур-ҫӗр йенђи Аҫире ҫула ӑшши ӑшӑ та, ҫултаӑкра пулакан сивӗ кунсемпе ӑшӑ кунсене вӑтам хисеппе шутласан ҫултаӑк ӑшши ҫапах та пит сахал, Ҫипирте нумай ҫӗрте—0⁰-ран айалта тӑраҭ.

Ҫур-ҫӗрти Аҫи ҫӗрне Пӑрлӑ оккеан ҫуса тӑраҭ; вӑл тинӗс нӳрӗкӗ пит сахал; Аслӑ оккеанпа Инти оккеанӗнђен Ҫипир ҫӗрне пысӑк тусем пӳлсе картласа тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ Ҫипир ҫанталӑкӗ типӗ ҫанталӑк; йепе-сапа инђетрен Атлант оккеанӗ ҫинђен анђах килет, вӑл та пулсан, пит сахал пулаҭ.

Кӑнтӑрти Аҫи ҫӗрӗ,—Интостан, Интокиттай, Малай утравӗсем,—екваттӑрпа троппик хушшинђе тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа унти ҫанталӑк *вӗри ҫанталӑк.* Ҫула хӗвел ҫӳлте ђи пуҫ тӑрри тӗлӗнђе тӑраҭ, питӗ хытӑ хӗртет. Хӗл хушшинђе те ҫанталӑк хӗррив-ђен, хорисонтран, нумай ҫӳлте ҫӳрет; пирӗн хӗл пек хӗлсем унта асӗнђе те ҫук, унти ҫӗр ҫине йур ӳксе курмасҭ; унта хӗлпе ҫу хушши уйрӑмӗ ҫук; ҫултаӑк ӑшшине танлаштарсан, пур ҫӗрте те унта ӑшӑ 20⁰-ран малта тӑраҭ.

Йӗпе-сапа Аҫи ҫӗрӗнђе ӑҫта мӗн теслӗ пулни.

Кӑнтӑрти Аҫи ҫӗрне Инти оккеанӗ ҫуса тӑраҭ, вӑл нумай нӳрӗк парса тӑраҭ, ҫавӑнпа унти ҫанталӑк *нӳрӗклӗ ҫанталӑк.*

Йěпе-сапасене кăнтăрпа каçал хушшинҫен вěрекен *муссон* текен çилсем кўреççě, çав çилсем çула çăвěпех сивěрех тăракан оккеан çинҫен хěвелпе хěрсе çитнě çěр çинелле вěрсе тăраççě. Хěлле хěлěпех çав çилсем тепěр май вěреççě: çěр çинҫен тинěселле. (*Пěлěр: мěншěн апла пулăт вăл?*)

Мал-йенҫи Аçи çěрě,—Вăта-Çěрěвҫен Хěвел-тухăçнелли çěрсем, тата Йаппун утравěсем,—пит лайăх шăварăнаççě, мěншěн тесен вăл çěрсем Аслă оккеанпа йунашар тăраççě, тата çав оккеанри *Куро-Çиво* тийекен ăшă шыв та вěсем патнех йухса пырат. Кăнтăрпа мал-йен хушшипе вěрекен муссонсем, çав ăшă шыв урлă вěçсе пынă ҫухне, унран тухса тăракан мěн пур нўрěке çěр çине илсе пырса тăкса хăвараççě. Хěлле пулсан вăл муссонсем тепěр май вěреççě,—çěр çинҫен оккеан çинелле,—ун ҫухне вара сивě сывлăшпа типě сывлăша тинěселле илсе кайаççě. Çур-кунвепе кěр кунне, çав муссонсем улшăнвă вăхăтра, Аçире мал-йенҫе, *уракан* хăрушă çил тăвăлсем пулаççě, вěсене *тайфун* теççě; çав тайфунсем çěр çинҫе те, шыв çинҫе те тем тěрлě сăтăр тăваççě. Çавнашкал хайар çилсемех çав вăхăтрах тата Аçи çěрěн кăнтăрти хěрринҫе пулаççě; пуринҫен ытла Пенкали йатлă тинěс-уринҫе пулаççě.

Аçи çěрин хыçал-йенпе мал-йен хушши пысăк, çанталăк та ăрасна, анҫах çур-çěр йенҫипе кăнтăрти пекех ăрасна мар. Хыçал-йенҫе те, мал-йенҫе те хěвел çанталăк хěрринҫен çўлелле пěр пекех хăпарат, анҫах мал-йенне вěçě-хěрри çук оккеан шывěсем çуса тăраççě, хыçал йенҫе пěҫěк тинěссем анҫах: Арави тинěсě, Хěрлě тинěс, Çěр варринҫи тинěс, çитменнине тата унта Африкри типсе çуннă çěр йунашар тăрат. Çавăнпа Хыçал-йенҫи Аçире,—Иран çěрěнҫе, Арави çěрěнҫе, Кěçěн Аçи çěрěнҫе,—çанталăк *типě*; унта çула хайар шăрăхсем, уйар çанталăксем пулаççě; хěлле сулхăн çанталăк пулăт, çўмăрсем те пулкалаççě, ту-айаккисем йурпа витěнеççě.

Çапла Аçи çěрě хăй йепле ăрасна, çанталăкě те унта çавнашкалах пит ăрасна: çур-çěр йенҫе ҫăтма çук сивě, кăнтăрта çунтарса йаракан шăрăх; вăта-çěрте шутсăр типě, кăнтăрпала мал-йенҫе йěпе-сапа.

Шывсем, кӳлӗсем.

Аҫи ҫӗрӗнђи ђăн пысăк шывсенӗн пуҫӗсем Вăта-Ҫӗрти сăртла выРăнсенђен тухаҫҫӗ те, тӗрлӗ ҫӗрелле сарăлса йухса кайаҫҫӗ.

Аҫи ҫӗрӗн ҫур-ҫӗр йеннелли сулăнки майӗпе Пăрлă оккеана ак ҫак шывсем йухса кӗреҫҫӗ: *Оппеле Ирттыш* йатлӗ турађӗ; *Йениҫҫейпе Пайккал* кӳллинђен йухса тухакан *Анкара* йатлă турађӗ, тата *Лекă*. Оппеле Ирттыш иккӗшӗ пӗрле Аҫири шывсенђен пуринђен те ђăн вăрăмми пулаť, мӗн пурӗ вăл 5000 ҫухрăм ытла, пӗтӗм тӗнђере те унтан пысăк шывсем мӗн пурӗ виҫҫӗ анђах: Миҫҫиҫҫиппипеле Миссури, Нил, тата Амасон. Оппеле Ирттыш картине кӗрекен ҫӗр те (бассейн) ђăн пысăк.

Аҫире сив-йенђе йӗпе-сапа сахал пулаť пулсан та, унти шывсем, унти ҫырмасем пит туллăх, мӗншӗн тесен вӗсем пит туратлă, нумай ҫӗртен шыв туртаҫҫӗ, тата унти ҫанталăк йалан сулхăн тăнăран шыв сахал пӗтсе пыраť. Унти шывсем пурте пӗр пек тикӗс йухаҫҫӗ (*мӗншӗн апла вăл?*); ҫавăнпа вӗсем тăрăх кимӗпе ҫӳреме те пит лайăх. Анђах пӗр ырă мар йапала пур: вӗсем йухса кӗрекен оккеанра ӗмӗрех пăрсем капланса ҫула картласа ҫӳреҫҫӗ, тата хăйсем те вӗсем пит нумайђен пăрланса тăраҫҫӗ; ҫур-кунне пулсан, хӗллехи йурсем ирӗлнӗ ђухне, ҫав шывсем йейӳ тухса сарăлса кайаҫҫӗ.

Аслă оккеана ак ҫак пысăк шывсем йухса пыраҫҫӗ: *Амурпа* унăн турађӗсем Шилккапа Аркунђ; *Сарă* шыв, урăхла *Хуан-хе*, *Кăвак* шыв, урăхла *Йан-тсы-тҫан*, тата *Мекконк*.

Ҫав шывсем ҫула, ҫумăрсем ҫунă вăхăтра, пит туллăх пулаҫҫӗ; ҫурхи шывпа вӗсем тулмаҫҫӗ, мӗншӗн тесен унта йур пит сахал ӳкет. Кимӗсене ҫӳреме ђăн лайăххи—Кăвак шыв; ун тăрăх тинӗс карапӗсем те тăвалла пӗр 1000 ҫухрăма йахăн хăпараҫҫӗ.

Сарă шыв апла мар, ун тăрăх кимӗсем нумайах ҫӳреймеҫҫӗ: унăн пăтранђăк шывӗнђе темӗн ђухлӗ сарă пылђăк, ҫавă пылђăк Сарă шыв тинӗсе пырса кӗнӗ ҫӗрте айала тăрăлса лараť те, вара унта пӗр майах ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ăшăх вырăнсем пулса пыраҫҫӗ. Хутран-ситрен вăл шыв хăй вырăнне те улăштарни пур; 50 ҫул ӗлӗк вăл Сарă тинӗсе, Кăвак шывпа йунашар, йухса пырса кӗрет-ђӗ, халӗ вăл *Ђшили* текен тинӗс-урине пырса

кӗрет. Хӑй выранне улаштарнӑ ђух, Сарӑ шыв вӑл уйсене, йалсене, хӑш ђухне хуласене те шӑлса тухаӗ; ун пек ђух вара темӗн тери халӑх пӗтет.

Киттай айлӑмӗ ҫав Хуан-хе шывӗн йушкӑнӗпе витӗнсе тӑраӗ; ҫав йушкӑн ҫӗр ҫийӗнђе анђах мар, ҫӗр айӗнђе те темӗн хуламӑш тӑраӗ; ҫапла ӗнтӗ Киттай айлӑмӗ вырӑнӗнђе авал тинӗс ури пулнӑ пулӗ, теме пулаӗ. Ҫав ҫӗрте пуринђен ытла ђосс анђах, ӑна унта Хуан-хе шывӗ Вӑта Аҫирӗн илсе пыраӗ.

Инти оккеанне йухса пыракан мӑн шывсем ак ҫаксем: *Канкпа* унӑн *Прамапутрӑ* тийекен турађӗ, *Инт,* тата *Тикрпала Евфрат.* Ҫав шывсем пурте ҫӳлтен, тусем ҫинђен, темӗн ђухлӗ хӑйӑр, темӗн ђухлӗ ҫӗр йухтарса пыраҫҫӗ, тинӗсе пырса кӗнӗ ҫӗрте ӑна ҫуса лараҫҫӗ те, ӑшӑх вырӑнсем туса хураҫҫӗ; ҫавӑнпа ҫав шывсем тӑрӑх кимӗсем ҫӳресех каймаҫҫӗ. Тинӗсе пырса кӗнӗ ҫӗрте вара пуринӗн те *теђттисем* пур; теђттӑ тесе шыв уйӑрӑла-уйӑрӑла туратланса кайнине калаҫҫӗ. Ҫав туратсем Канкпа Прамапутрӑн пуринђен нумай, вӗсенӗн теђтти Атӑлӑнђен 5 хут сарлака; вӑл пысӑкланнӑ-ҫемӗн пысӑкланса пыраӗ, Пенкали тийекен тинӗс ури ҫинелле тапса пыраӗ.

Инт ҫинђе, Канк ҫинђе, Прамапутрӑ ҫинђе ҫула йейӳ тухаӗ, Тикрпа Евфраг ҫинђе—хӗлле. *(Мӗншӗн вӑл?).*

Аҫи варринђе, тата Туран айлӑмӗнђе йӗпе-сапа сахал пулаӗ, шӑрӑхпа шывсем ҫӳле кайаҫҫӗ, хухаҫҫӗ (ђакаҫҫӗ); ҫавӑнпа унти авалхи пысӑк тинӗссем те хухса тӑварлӑ кӳлӗсем пулса йулнӑ; вӗсен хушшинђе ђӑн пысӑккисем *Каспи* тинӗсӗпе *Арал* тинӗсӗ. Йухан шывсем унта сахал; пулсан та, вӗсем йурлӑ ту тӑррисенђен йухса анаҫҫӗ те, ђи тинӗсе ҫитех пымаҫҫӗ, вӗсем йе хӑйӑрсем ӑшне сӑхӑнса пӗтсе лараҫҫӗ, йе пӗр-пӗр кӳлӗ ӑшне пырса кӗреҫҫӗ. Ҫав шывсем хушшинђе пысӑкраххисем ак ҫаксем: *Тарим,* вӑл *Лоп-Нор* кӳллине пырса кӗрет, тата *Сыр-Тарйапа Аму-Тарйа.* (*Пӗлӗр: вӗсем ӑҫтан пуҫланса кайаҫҫӗ? ӑҫта пырса кӗреҫҫӗ?*

Ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк.

Аҫире, ҫур-ҫӗр йенђе, сивӗре, *тунтӑр* анђах. Ҫав тунтӑрсем пӗтӗм Пӑрлӑ тинӗс хӗррипе витӗрех тӑсӑлса выртаҫҫӗ;

унта пит сивӗ хӗлсем пулаҫҫӗ, ҫулисем те сулхӑн, тӗтрелӗ пулаҫҫӗ.

Тунтӑр ҫӗрӗнҫе сип-симӗс мӑксем, тӗксӗм-шупка лишшайсем, хутран-ситрен ҫеҫек кӑларакан куракссем, шурҫырлисем, кӗтмелсем ӳскелеҫҫӗ; тӗллӗн-тӗллӗн нимӗн те пулмасӑ тата: ҫап-ҫара, ҫу касаҫҫен пӗртте ирӗлеймен ҫӗр анҫах выртать. Ҫав тунтӑрсен кранӗ тӳрӗ мар, кукӑр-макӑр: хӑш тӗлте, сивӗрех, ҫӳлӗ вырӑнсенҫе, нумай кӑнтӑралла кайать, шыв лупамӗсенҫе кайалла, ҫур-ҫӗр йеннелле, ҫакса кайать.

Тунтӑрсенҫен кӑнтӑртарах сивӗ хӗл хыҫҫӑн ӑшӑ ҫусем пулаҫҫӗ, унта Ҫипир вӑрманӗсем ӳсеҫҫӗ. вӗсене *тайка* теҫҫӗ. Вӗсем Урал тӑвӗсенҫен пуҫласа Аслӑ оккеан хӗррине ҫитех пӗр татӑксӑр сарӑлса лараҫҫӗ; ҫав хушӑра вӗсем витӗр шывсем анҫах йухса выртаҫҫӗ, тата тӗллӗн-тӗллӗн кӳлӗсемпе мӑкланса тӑракан лаҫакасем вырӑн илсе тӑраҫҫӗ; етем алли вӑл вӑрмансене пырса тӗкӗнменпе пӗрех; вӗсене пӗр Ҫипир ҫукунҫулӗ тӑрӑх анҫах каскалавӑ.

Тайка вӑл *пит тискер, тата пӗр тӗслӗ;* унта аслӑшпех сивве ҫӑтакан сухӑрлӑ йывӑҫсем анҫах ӳсеҫҫӗ: лиственница, ҫӑрӑш, Ҫипир кетӑрӗ, хыр, шурӑ ҫӑрӑш (пихтӑ). Ҫулҫӑ кӑларакан йывӑҫсем хутран-ситрен анҫах пулкалаҫҫӗ, вӗсем те Йевропри Раҫҫей ҫӗрӗнҫе пулакан йывӑҫсенҫен пурте мар. Ҫапла Урал тӑвӗсенҫен пуҫласа Пайккал патне ҫитеҫҫен пӗр йуман та, пӗр хурама та, пӗр вӗрене те тӗл-пулаймӑн; Аслӑ оккеан патнелле ҫывхарнӑ-ҫемӗн, тӗслӗрен йывӑҫсем пур: Улма-йывӑҫҫи тӑвӗсен айаккисенҫе йӳҫӗ улма-йывӑҫҫисем те пур, Амур таврашӗнҫе хурама та пур, йуман та пур, вӗрене те пур, шӗшкӗ те пур, тата урӑх йывӑҫсем те пур. Уссури шывӗ хӗррисенҫе вӗсем тем пысӑкӑш вӑрмансем пулса ларнӑ; тӗллӗн-тӗллӗн йӳҫӗ иҫӗм-ҫырли йывӑҫӗҫӗм те вӗсем тавра сырса илсе ӳскелеҫҫӗ.

Аҫи варринҫе, Туран айлӑменҫе, тата Аҫире хыҫал-йенҫе те климӑт типӗ, ҫавӑнпа унта *ҫеҫен-хирсемпеле пуш-хирсем* пит нумай. Пушӑ-уйсенҫен ҫӑн пысӑккисем мал-йенҫе *Копи*, хыҫал-йенҫе—*Арави* ҫӗрӗ. Ҫав *ҫеҫен-хирсемпе пушӑ-хирсем* Аҫире, Хинкан тӑвӗ патӗнҫен пуҫласа, Хӗрлӗ тинӗс патне ҫитех пыраҫҫӗ те, Африке каҫса кайаҫҫӗ; ҫав хушӑра вӑрмансем нӳрӗклӗ ту хӗррисенҫе тӗл—пулкалаҫҫӗ, тата шыв хӗррисенҫе оаҫиссенҫе пӑт-пат курӑнкалаҫҫӗ.

Çеçен-хирсенђе, степсенђе, хытă куракçем,—кăлкансем, ерĕм-утисем анђах,—ÿскелеççĕ. Вĕсем те аслăшпе ÿсмеççĕ, тĕллĕн—тĕллĕн-кăна ÿскелеççĕ; курăк тĕмĕсем хушшинђе çара çĕр анђах выртаĭ. Çур-кунне, йурсем ирĕлсенех, степри куракçем ђасрах шăтса тухаççĕ те, сарăлса, ђеђеке лараççĕ, вăрăсем кăлараççĕ, унтан çу пуçламăшĕнђех типсе хăрса кайаççĕ; тымарĕсемпе кăкĕсем анђах ђĕрĕ тăраççĕ, тата вăррисем, çирĕп хупăлăскерсем, ђĕрĕ тăрса йулаççĕ.

Пушă-хирсенђе ÿсен-тăран йывăç-курăк тата сахалтарах; вĕсем те çур-кунне ђас шăтса тухакан куракçем, йе тĕмĕн-тĕмĕн ÿсекен вĕтĕ çуђçăлă, вăрăм тымарлă йывăççем анђах.

Оаçиссенђе *çимĕç кÿрекен йывăççем* лайăх пулаççĕ: улмаççисем, перççиксем, априккоссем; Хыçалти Аçире *ĕмĕр симĕс тăракан йывăççем те* пур, çавăн пек йывăç çу-йывăççи; Иран çĕрĕнђе, кăнтăрта, тата Аравире—финнь тăвакан пађмă ÿсет.

Кăнтăрти Аçире, çав хĕвел пĕçертсе тăракан йĕпе-сапалă çантлăкра, *троппик вăрманĕсем* ÿсеççĕ; Интостанри, Интокиттайри, Малай утравĕсенђи йĕпе вырăнсем пĕтĕмпех вăрман айĕнђе тăраççĕ.

Çав вăрмансем тĕлĕнмелле ђаплă, *йывăçĕсем тĕслĕрен*, йарса пусмассерен çĕнĕ йывăç, тĕрлĕ пађмăсем,—коккос пађми, сакă пађми, сулхăн тăвакан пађмă,—унтан пантансем, смоквă-йывăççисем, сĕткенĕнђен кауђђук кăларакан фиккуссем, тата урăххисем те нумай. Йывăçĕсем çийеçийĕн, *нумай йатташлă* пулса, ÿсеççĕ; хăйсем витĕр тухма çук çăра, хăйсене лиан курăкĕ сырса илнĕ; турађĕсем çинђе, çĕрĕк хупăлă тĕлте, *еппифит* тийекен куракçем йе урăх йывăç-курăкăн сĕткенне ĕмсе пурăнакан *параçитсем* ÿсеççĕ. Вăрман варринђи лађакасенђе *ђункличем* нумай, çавсем пулаççĕ пампук курăкĕпе ытти исполин пек тем пысăкăш куракçем; тинĕс хĕррисенђе—*манкров* текен лађакасем пит нумай, вĕсене пĕтĕмпех йывăç пусса илнĕ; çав йывăççен тымарĕсем, тинĕс шывĕ тапса килнĕ ђух, ун айне пулаççĕ, кайалла ђакса кайнă ђух сывлăш çинђех çаканса тăраççĕ.

Кăнтăрти Аçи çĕрĕнђе типĕ вырăнсенђе троппикри çеçен-хирсем пур, вĕсене *саваннăсем* теççĕ Çав саваннăсем çинђе етем алли тĕкĕнмесĕрех пит çăра курăксем ÿсеççĕ, тата етем хăй аллипе ĕçлесе тусан та, унта çимĕç кÿрекен йывăç-курăк тĕслĕренех ÿсет.

Мал-йенђи Аçире,—Киттай айламĕнђе, Йаппун утравĕсенђе,—ырă *уй-хирсем*, темĕн ђухлĕ илемлĕ *пахђасем, сатсем* симĕсленсе тăраççĕ; Киттайпа Йаппун тăвĕ айаккисенђе *троппикри* ĕмĕр симĕс тăракан вăрмансем ÿсеççĕ; унта çуђçă тăка пĕлмен *камелисем, лаврсем* пур.

Çапла Аçире çĕр тĕлĕшĕнђен пулсан та, климăтран пулсан та, çанталăк пĕр пек мар; çавăн пекех йывăç-курăкран пулсан та, унти çанталăкра *контраст* пит нумай: тунтăрта ÿсен-тăран йывăç—курăк пит нађар, çукпа пĕрех, унта йунашарах Çипир тайки, вĕçĕ-хĕрри çук сĕм-вăрман; типсе-хăрса кайнă çеçенхирсемпе пуш-хирсем, çавăнтах тата троппикри вăрмансемпе ђунклисем.

Етеме кирлĕ йывăç-курăкран пулсан, Аçи çĕрĕ ытти çĕрсенђен пуринђен те пуйан. Етем малтан пит паха йывăç-курăксене çав Аçи çĕрĕнђе тупнă та, халĕ вĕсене хăй вайĕпе ĕçлесе уса курса пурăнаť. Çапла *тулă, йĕтĕн, сухан* Хыçалйенђи Аçирен тухнă йапаласем; *рис, сахăр хăмăшĕ, панан, хăйар* Кăнтăрти Аçирен тухнă йапаласем; *ђей-йывăççи* (чайное дерево) Мал-йенђи Аçи çĕрĕнђе пулаť.

Ђĕр-ђунсем.

Аçи çĕрĕнђе пурăнакан ђĕр-ђун та темĕн тĕрлĕ нумай. Тунтăрсенђе те çула темĕн ђухлĕ кайăк пуçтарăнаť; пуринђен ытла унта вĕçен-кайăк нумай пырса тулаť; вĕсем пурте çав Пăрлă оккеан хĕррине Кăнтăрти Аçи çĕрĕнђен вĕçсе пыраççĕ; вĕсем валли унта апат-çимĕç пит туллăх: пулăсем те пур, çырласем те пур; вĕсем унта ирĕкре ђĕпписене пĕр хăрамасăр кăларса ÿстереççĕ те, кĕр-кунне пулсан, каллех ăшă çĕрелле вĕçсе кайаççĕ. Хĕлле пурăнма тунтăра ђĕр-ђун нумайах йулмасť: *шурă хир-ђăххисем (куропаткасем),* *сивĕри тилĕсем* (песец), сивĕри пăлансем; вĕсем те хĕлле сивĕрен хăраса тайкана тараççĕ, унта йывăç хÿттинђе вĕсене сивĕ çилсем çапаймаççĕ.

Тайкăра мамăк пек çемçе çăмлă кайăксем пит нумай; унта вакшасем, тилĕсем, кашкăрсем, упасем, тата ытти кайăксем те йаланах пурăнаççĕ; мал-йенђе Çипирте ђăн хаклă паха кайăксем пурăнаççĕ: *сопăђсем, йуссем*. Тайкара вăрманта пурăнакан *вĕçен-кайăксем* нумай: *карăксем, ăсансем, пăђăрсем.*

Çав ђĕр-ђунсем çулталăк хушшинђе хăйсене пурăнмалăх апат-çимĕç тайкара çителĕклех тупаççĕ: вĕçен-кайăксем йывăç-курăксен кăђăкисене, çырлисене çисе пурăнаççĕ; вакшасем кетăр йывăççин мăйăрĕсене, ђăрăш вăррисене çисе пурăнаççĕ; тилĕсем тата вĕçен-кайăксене, вакшасене тыта-тыта çийеççĕ, ытти кайăксем те çавнашкалах пурăнаççĕ.

Çеçен-хирсенђе *çивĕђ-шăллă* кайăксем пит нумай, тата *лаша ђĕрниляĕ* кайăксем те нумай. Çивĕђ шăллă кайăкĕсем, суроксем, ђиркассем, шăши-йусĕсем, хĕлле пулсан, хăйсен шăтăкĕсенђе ăйха кайаççĕ; лаша ђĕрнилĕ кайăксем, хир-ашакĕсем (кулансем), анттилопсем, курăксене йур айĕнђен кăларса çийеççĕ: йурĕ вăл Аçи çĕрĕнђи çеçенхирсенђе çўхен анђах çуса лартаĭ. (*Мĕншĕн вăл апла?*).

Типет çĕрĕнђе тĕрлĕ кайăк пит нумай: унти çеремсем çўлĕ çĕрте, унта етем çукпа пĕрех, тискер кайăксем те çук, çавăнпа унта лаша-ђĕрнилĕ кайăксем ирĕкре кĕтў-кĕтўпе çўреççĕ; çав кĕтўсенђе, сăнаса çўрекен çынсем шутласа кăларнă тăрăх, темиçе çĕршер, хăшинђе тата темиçе пиншер пуç пулнă; унта пуринђен ытла *хир-ашакĕсем (кулансем), анттилопсем, ту-вăкăрĕсем (йаксем)*, тата *шăхăракан* сурок, йус майлă çивĕђшăллă кайăксем нумай пулаççĕ.

Хыçал йенђи Аçи çĕрĕнђе лаша ђĕрнилĕ кайăксем те пур, çивеђ-шăллисем те пур, анђах вĕсем ытти çĕрти пек йышлах мар, мĕншĕн тесен, унта етемсем те пур та, тата хайар кайăксем нумай; çав кайăксенђен хăшĕ-хăше Африк çĕрĕнђен тухса килнисем пур, сăмахран калас,—*хийенсем, шаккалсем*; Арави çĕрĕнђе, Иран çĕрĕнђе *арăслансем те* пур.

Кăнтăрти Аçи çĕрĕнђе, троппик вăрманĕсенђе, саваннă çеçен-хирĕсенђе *темĕн ђухлĕ, темĕн тĕрлĕ кайăк пурăнат*; вĕсенђен хăшĕ-хăшĕ йывăç-курăк çисе пурăнаççĕ, хăшĕ ытти ђĕрђунсене тытса çисе пурăнаççĕ; нумайĕшĕ троппик çĕрĕнђе ăшăра анђах пурăнаççĕ, лăп-сулхăнлă çĕрти сивĕсене те ђăтаймаççĕ. Унашкал кайăксем ак çаксем: *етем-тĕслĕ упăтесем* (оранкутанк, киппон), тата *хулăм-тирлĕ кайăксем*: Инти слонĕ, мăйракасăмса (носорог), тата таппир.

Кăнтăрти Аçи çĕрĕнђи хайар кайăксенђен ђăн вăйлитикăр, вăл хăмăш хушшинђе, пампук хушшинђе, пурăнаĭ; *вĕле-*

рекен ҫӗленсем Кӑнтӑрти Аҫире пур ҫӗрте те, вӑрмансенҗе те, саваннӑ ҫеҫен-хирӗсенҗе те, йӑшӑлтатса ҫӳреҫҫӗ; шывсенҗе крокотилсем пурӑнаҫҫӗ. Темиҫе тӗрлӗ вӗҫен-кайӑксем хушшинҗе җӑн хитре тӗклисем ак ҫаксем: ӑсансем, туткӑшсем, пӑппукайсем.

Кӑнтӑрти Аҫире тем тӗрлӗ кайӑк та пур та, анҗах кашкӑрсем, тилӗсем, упасем унта паҗах ҫук; ҫак кайӑксем ытти ҫӗрте Аҫире пур ҫӗрте пур, Йевропра та, Америкре те пур. Ҫакӑнтан ӗнтӗ паллах: Кӑнтӑрти Аҫире пурӑнакан кайӑксем вӗсем уйрӑм кайӑксем, вӗсем хӑйсем уйрӑм патшалӑх пек пурӑнаҫҫӗ.

Мал-йенҗи Аҫи ҫӗрӗнҗе халӑх пит ҫӑра; унти ҫӗре пӗтӗмпех етем хӑй аллипе ӗҫлесе пурӑнать, ҫавӑнпа унта тискер кайӑк ҫукпа пӗрех; пӑт-пат йулнӑ кайӑкӗсем йе Кӑнтӑрти Аҫи ҫӗрӗнҗи пеккисем, йе Сивӗ-йенҗи Аҫи ҫӗрӗнҗи пеккисем, йе тата Вӑта Аҫире пурӑнакан йышшисем.

Ҫапла Киттай сӑрҗӗсем хушшинҗи айлӑмсенҗе туткӑшсем, ӑсансем пур; Йаппун вӑрманӗсенҗе маккаксем (хӗрлӗ питлӗ хӳресӗр упӑтесем) пурӑнаҫҫӗ; кроккотилсем Киттайпа Корейри пек ҫӗр ҫинҗе урӑх ҫӗрте нисҫта та сивӗ йенне ҫав тери инҫе каймаҫҫӗ; Йаппун шывӗсенҗе тата пит шултӑра калтасем пур. Ҫаксем пурте троппикре пурӑнакан җӗр-җунсем. Ҫав хушӑрах тата Мал-йенҗи Аҫире кашкӑрсем те, тилӗсем те, упасем те пур, тата ҫеҫен хирте пурӑнакан анттилопсем те, хир-ашакӗсем те пур. Амур ҫинҗе тата тикӑр та, Ҫипир сопӑлӗ те, ҫеҫен-хирти анттилоп та тӗл-пулкалать.

Карта выҗӑхӗ пурте Аҫӑрен тухнӑ; ҫавсем халӗ, етем ӑҫта пурӑнать, унта ӑна пӑхӑнса пурӑнаҫҫӗ. Аҫи ҫӗрӗнҗе етем вӗсене ирӗкре тӗл-пулнӑ та, усӑ курасшӑн, хуллен алла вӗрентнӗ. Ҫапла лашапала тӗве (верблюд) иккӗшӗ те Аҫи ҫӗрӗнҗи ҫеҫенхирсенҗен тухнӑ җӗр-җунсем; Вӑта Аҫире, ҫеҫен-хирсенҗе, халӗ те вӗсем ирӗкрә нумай ҫӳреҫҫӗ.

Ӗнесем тӗ, сурӑхсем те, каҗакасем те, сыснасем те Аҫи ҫӗрӗнҗенех килнӗ.

Типет ҫӗрӗнҗе тата *ту вӑкӑрне* (*йакка*) алла вӗрентнӗ; Инти ҫӗрӗнҗе *курпун вӑкӑра* (*зебу*), тата шыв ӗнине (буйвол) алла вӗрентнӗ; ҫав ҫӗртех тата алла вӗрентнӗ кайӑксенҗен җӑч вӑйли слон та етеме пӑхӑнса пурӑнать.

Халăхсем.

Аçире етем мĕн пурĕ 800 мĕлйун ытла, вăл вĕтĕм етемĕч çурри ытла пулаť. Аçи çĕрĕн сарлакăшĕ тăваткăл-тăваткăл çухрăм туса шутласан 40 мĕлĕуна йахăн пулаť; апла пулсан *пĕр тăваткал çухрăм çинтђе* Аçире, круком шутласан, *20 çынна* йахăн пурăнаť.

Тунтăрта етем пуринђен сахал пурăнаť; унта етеме кирлĕ йапала тупса пурăнма пит хĕн: çĕр ĕçлеме пулмасť, алла вĕревнĕ ыђăхсенђен унта етеме пăхăнса ĕçлесе тăраканнисем пăланпала кӳлсе çӳремелли йытăсем анђах. Çавăнпа та тунтăрта етемсем пит сахал пурăнаççĕ, пăлансене усраса пурăнакан самойетсен, ђукђăсен ăшă-ӳплисем унта пăт-пат анђах тĕл-пулкалаççĕ.

Çипир çĕрĕнђи тайка вăрманĕсенђе те етем пит сахал. Сĕм-вăрмансенђе шалта кайăксене тытса сĕтĕрĕнсе çӳрекен çынсене (гункуссене) тĕл-пулкалан анђах; пысăк шывсем хĕррипе, тата Çипир ђукун-çулĕ тăрăх вырăс йалĕсем ларса тухнă; вĕсем тертлепсе ĕçлесе сĕм-вăрмансене кăкласа уйсем тăваççĕ те, тырăсем акаççĕ. Сивĕ йенђе çур Çипир çĕрне ĕçлесе тырă-пулă тума пулмасť. (*Карт çине пăхса, тырă пулакан çĕрĕн ђиккине пăхăр*).

Аçи çĕрĕнђи çеçен-хирсем пит типĕ; тырă-пулă тума унта майĕ çук; çавăнпа унта нумай ыђăх усраса куçса çӳрекен халăхсем пурăнаççĕ,—монколсем, кăркăссем,—вĕсем ыђăх апађĕ шыраса пер майах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреççĕ; кĕтĕвĕсене пăхма аслă вырăнсем кирлĕ, çавăнпа вĕсем пурăнакан çеçен-хирсенђе пурăнакан етем пит сайра.

Пушă-хирсенђе тата халăх çеçен-хиртинђен те сахалтарах, мĕншĕн тесен етем вăл пушă-хирсенђи оаçиссенђе анђах пурăнма пултараť.

Аçире кăнтăрпала мал-йенђе тепĕр тĕслĕ çанталăк: çĕр çинђи етемрен çурри ытла унта пурăнаť; халăх унта пит çăра; Интостанпа Киттай айлăмĕнђе пĕр тăваткал çухрăм хушшинђе 200 çын, 200 те ытларах пурăнаť. Унта ăшă, нӳрĕ çанталăк, тата çĕрĕ те пит ырă, етем ĕçлени пит усăлă, çавăнпа унта халăх пит çăра пурăнаť. Тахăçан авалтанпах унта

çĕр ĕçлекен халăхсем пурăнаççĕ: интуссем, киттайсем, тата ыттисем те.

Аçи çĕрĕнђе пурăнакан халăхсем пуринђен ытла *сарă ўтлĕ халăхсем*; çав халăхсенђен ђăн паллисем ак çаксем: киттайсем, йаппунсем, монколсем, тата малайсем. *Тата малалли карт çинђе мĕнле сарă-ўтлĕ халăхсене кăтартнă, çавна каласа пăрăр.*

Шурă-ўтлĕ халăхсем Интостанра пурăнаççĕ, Хыçал-йенђи Аçире, тата пăртак Сив-йенђи Аçире те пур; шурă-ўтлĕ халăхсенђен паллăраххисем: интуссем, перссем, арапсем, тата вырăссем.

Ђĕлхе тĕлĕшĕнђен пулсан, шурă-ўтлĕ етемсем ик тĕслĕ: пĕрисене *арисем* теççĕ, теприсене *çемитсем* теççĕ. Арисем ак çаксем: интуссем, перссем, ерменсем, вырăссем, йевропра пурăнакан халăхсем те пур; çемитсем: арапсем, йеврейсем, тата Африкре пурăнакан хăш-хăш халăхсем те пур.

Хура-ўтлĕ етемсем Аçире кăшт анђах, вĕсем Интостанра, ђи кăнтăрта, тата Тсейлонра пурăнаççĕ, Тсейлонра пурăнаканнисем—травитсем.

Астуса илĕр: сарă-ўтлĕ етемсем, шурă-ўтлĕ етемсем, хура-ўтлĕ етемсем мĕнтен пĕр пек мар? мĕнтен уйрăм?

Аçи çĕрĕнђе хăш-хăш тĕлте етемсем хутăшса пăтранса кайнă. Çапла Текканра, тата Тсейлонра пурăнакан травитсем интуссемпе хутшăнса пăтранса кайнă, Кĕçĕн Аçири тĕрĕксем (турккăсем), сарă-ўтлĕскерсем, шурă-ўтлĕ халăхсемпе пăтранса кайнă.

Йевропра пурăнакан çынсем Аçи çĕрне пĕлни нумайах та пулмаст те, вĕсем çапах та Аçи çĕрне пуринђен ытла йарса илнĕ: виçĕ пайран пĕр пай ытларах *Раççей* тытса тăрат; Интустанпа Интокиттайăн çурри *акăлђан* аллинђе, йулашки *хрантсус* аллинђе, ыттисем те çаплах. Çав Йевроп çыннисем тытса тăракан Аçири, Африкри, Америкри, Австралири çĕрсене *колонисем* теççĕ; çапла Çипир çĕрĕ Раççей колонийĕ пулат, анђах вăл пĕтĕм Раççей çĕрĕпе пĕтĕçсех тăрат те, çавăнпа ăна Раççей патшалăхĕн пайĕ теме те пулат. *Пăх Аçи картђĕ çине—политтике кăтартса тăраканни çине.*

Хайсем ирĕкĕпе пурăнакан патшалăхсем Аçи çĕрĕн çуррине йахăн анђах тытса тăраççĕ; вĕсен хушшинђе ђаплăрах-

хисем ак çаксем: *Китай*, *Иаппуни*, *Перççи*, тата *Тĕрĕк патшалахĕн* ђи пысăк пайĕ те Аçирех.

Аçи çĕрĕн пайĕсене уйрăмăн-уйрăмăн пăхса тухни.

Вăта Аçи.

Аçи варрин пер йенĕ Хималайă тăвĕсенђен пуçласа Сайан тăвĕсем патне çитет, тепĕр йенĕ Памиртен пуçласа Хинкан патне çитет. Ун тавра йĕри-тавра çӳлĕ тусем тăраççĕ, çавăнпа унти çанталăк типĕ, çĕр —пушă, пуринђен ытла ђăн варринђе,—унта *Хан-хай* йатлă тарăн айлăм пур; Хан-хай тени „типнĕ тинĕс" тени пулаТ. Ĕлĕк-авал Хан-хай ђăнах та тинĕс айĕнђе пулнă, анђах халĕ унта пушă-хир анђах, хыçал-йенђе хăйăрлă, ăна *Такла-Маккан* теççĕ, мал-йенђе ђуллă, ăна *Копи* теççĕ.

Такла-Маккан йатлă пушă-хир вăл Куен-Луњпе Тањ-Шањ хушшинђи айлăмра; ун тăрăшшĕпех хăйăр, купи-купипе лараТ; кăшт çил пулсанах, вăл тапранаТ; вăйлă тăвăлра çӳле ҫĕкленсе кайаТ те, хура пĕлĕт пек пулса çӳрет, пĕтĕм пĕлĕте, хĕвеле хупласа илет. Вăл пушă-хирте йывăç-курăк çукпа пĕрех. *Тарим* шывĕ хĕррипе тата тусем çинђен йухса анакан шывсенĕн хĕррипе анђах тĕллĕн-тĕллĕн оаçиссем пур.

Копи пушă-хирĕ кăнтăр-йенђе Такла-Маккан пекех, ытти çĕрте вăл ђуллă пулсан та, ытла çарах мар; унта тĕмĕн-тĕмĕн ӳсекен йывăçсем, хытă курăксем ђылай пулкалаççĕ.

Копи сив-йенђен пуçласа, хуллен-хулленех çеçен-хир пулса, *Монкол çеçен-хирне* çитсе кĕрет; вăл хирте сайра лутра курăк ӳсет. Çур-кунне вăл аслăшĕпе сип-симĕс пулаТ, ђеђексем тĕп-тĕрлĕ сарăлса лараççĕ, анђах вăл нумайа пымасТ: çу пуçланса кайсанах, вăл типсе хăрса кайаТ те, тусан айне пулса лараТ. Тырă-пулă тума Монкол хирĕ йурамасТ, мĕншĕн тесен вăл ытла типĕ.

Типет çĕрĕ те етеме пурăнма ытла йурăхлă çĕр мар; вăл —çак çĕр çинђи ђăн çӳлĕ сăртлă çĕр (*Астуса илĕр-ха: вăл йепле пулнă?*) Типет тăвĕсене йур хупласа тăраТ, ту-айаккисене ђул,

ђул-катăкĕ тулнă, мĕншĕн тесен Типет ҫĕрĕнђе шывлă ҫырмасем сахал та, вĕсем шывпа йухса кайаймаҫҫĕ, ҫавăнпа ĕмĕр хушшинђе вĕсем темĕн ђухлĕ пуҫтарăннă. Типет ту-хĕррисене, сăрђĕсене нађар курăк анђах шăтса тухаť; вăрман сукпа пĕрех; айлăмсенђе кӳлĕсем нумай; паллăраххисем: *Кукку-Нор, Тенкри-Нор*; анђах ҫав Типет кӳллисем пурте — тăварлă кӳлĕсем.

Аҫи варринђи халăхсенђен ђăн пысăкки—монкол халăхĕ; вĕсем сарă-ӳтлĕ етемсенђен ђăн паллисем, ҫавăнпа та сарă-ӳтлĕ етемсене *монколсем* теҫҫĕ. Монколсем кил-ҫуртпа пурăнмаҫҫĕ, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куҫса ҫӳреҫҫĕ; вĕсем Монкол ҫĕрĕ тăрăх, мал-йенђи Турккестан тăрăх ҫӳреҫҫĕ, Типет ҫĕрне те кăшт кĕреҫҫĕ. Вĕсем пĕр ĕҫпе анђах пурăнаҫҫĕ, вăл ĕҫ—*выђăх тытса усрани;* вĕсем сурăхсем, лашасем, икĕ курпунлă тĕвесем усраҫҫĕ; ҫав тĕвесем хĕллехи сивве те, ҫулахи шăрăха та пит лайăх ђăтаҫҫĕ.

Монколсем хăйсен кĕтĕвĕсене ҫулталăкĕпех ирĕкре пăхса усраҫҫĕ. Ҫула, тӳрем ҫĕрте курăк ĕнсе типсе кайсан, вĕсем кĕтĕвĕсене пăхма ту-айаккисем ҫине кайаҫҫĕ. (*Пĕлĕр: мĕншĕн?*). Кĕр-кунне, тусем ҫинђе ҫил-тăмансем пуҫланса кайсан, монколсем каллех айалалла анаҫҫĕ. Хĕлле выђăх хăйне валли апат йур айĕнђен ђавса кăлараť, мĕншĕн тесен Аҫи варринђе йур пит ҫӳхе ҫуса лартаť.

Выђăх-ђĕрлĕх усраса, монколсем хăйсене кирлине йăлтах вĕсенђен кăлараҫҫĕ.

Сĕт-турăх, ҫу, тăпăрђă, ђăкăт, аш-пăш—вĕсенĕн апађĕ; кĕсре сĕтĕнђен вĕсем хăйсем йуратакан кăмăс тăваҫҫĕ; тирсем, ҫăмсем тумтир тума та йураҫҫĕ, хăйсене пурăнмалли ӳпле (хӳшĕ) тума йураҫҫĕ; ҫав хӳшшине вĕсем шађҫасем тăратса тăваҫҫĕ те, кĕҫҫепе витеҫҫĕ.

Выђăхĕсем хӳшĕ патĕнђи ҫывăхри курăка ҫисе пĕтерсен, монколсем ăна салатса пăрахаҫҫĕ те, пуҫтарса, тĕве ҫине купаласа, урăх ҫĕре куҫса кайаҫҫĕ.

Вĕсем ҫак пурăнăҫа пит йуратаҫҫĕ; вĕсем лаша ҫинђе утланса ҫӳреме пит ăста; ађисене виҫ ҫултанах утланса ҫӳреме вĕрентеҫҫĕ, вĕсем валли йури урăхла йĕнер тăваҫҫĕ. Монколсем ҫуран ниҫта та каймаҫҫĕ; кун каҫађђен кунĕпех вĕсем выђăхĕсене пĕр ҫĕртен тепĕр ҫĕре хă-

валаса, лапа ҫинҙе ларса, пăхса ҫӳреҫҫĕ. Вĕсен выӆасси-куласси--лашасене ҙуптарни; тата вĕсем хăнана ҫӳреме йуратаҫҫĕ, вуншар, ҫĕршер ҫухрăм утланса кайаҫҫĕ. Вĕсем тата Киттай ҙикки хĕррине кайма йуратаҫҫĕ: унта вĕсем ҙей илеҫҫĕ. Ҙей ĕҫес йăлана монколсем Киттайран илнĕ, анҙах ҙейне вĕсем хăйсем майлă пĕҫереҫҫĕ: вĕсем ăна хуранта, ҫу йарса, тăвар йарса, вĕретеҫҫĕ. Ҙейне ĕҫессе пит нумай ĕҫеҫҫĕ, мĕншĕн тесен Аҫи варринҙе таса шыв тупасси пит хĕн.

Пĕр май пурăнакан вырăнсем Монкол ҫĕрĕнҙе пит сахал, унашкал вырăнсевҙе йе Пут (Будда) тĕнне тытса пурăнакан манахсен, *ламасен, мăнастирĕсем* пулаҫҫĕ, йе тата пĕҙĕк хуласем пулаҫҫĕ; вĕсен хушшинҙе ҙăн пысăкки *Урка* йатлă; вăл хулара Пут кĕлĕ-ҫурҙĕсем, мăнастирĕсем пит нумай, ҫавсенҙе темиҫе пин лама пурăнаҭ, вĕсем пурте хăйсен пуҫлăхне—хутухтана—пăхăнса пурăнаҫҫĕ; хутухта вăл Монколи ҫĕрĕнҙе Пут вырăнĕнҙе тăраҭ.

Ĕлĕк монколсем пит сатур халăх пулнă; вĕсем Ирттыш шывĕ улăхĕпе, Аҫи варринҙен тухса пырса, Туран айламĕнҙе пурăнакан халăхсене, Интире пурăнакан халăхсене, Йевропра пурăнакан халăхсене хăйсене пăхăнтарнă: вырăссене ҫĕмĕрекен тутарсем те ҫав монкол кĕнеҫĕсен аллинҙе пурăннă. Монколсем киттайсем ҫине те пыра-пыра кĕнĕ, лешсем вара хăйсен ҫĕрне вĕсенҙен сыхлама *вăрăм ҭул карта* (хӳме) ҫавăрнă, ҫав картан (хӳмев) тăршшĕ 2000 ҫухрăм ытла. Анҙах кайран монколсем вăйсăрланса ҫитнĕ те, киттайсене парăннă.

Нумай та пулмаст, монколсем ҫак 20-мĕш ĕмĕрте, Раҫҫей пулăшнипе, Киттай аллинҙен хăтăлса тухрĕҫ те, хăйсем уйрăм патшалăх турĕҫ; ăна *Монколи* теҫҫĕ, пуҫ-хули—*Урка*. Ҫак патшалăха хутухта кĕнеҫсемпе пĕрлĕ тытса тăраҭ.

Типетре монколсенҙен пуҫне тата вĕсемпе пĕр йышши урăх халăхсем те пурăнаҫҫĕ: *танкутсемпе типетсем.*

Танкутсем вĕсем выӆăх-ҙĕрлĕх усраса *куҫса ҫӳрекен* халăхсем, вĕсем сурăхсемпе лашасенҙен пуҫне тата *йаксем* тытаҫҫĕ; вĕсем ҫинҙе утланса та ҫӳреҫҫĕ, йапала та турттараҫҫĕ. Йаксем вĕсем, ҫурăмĕ ҫине пысăккăн тийесен те, ту-айаккисем ҫине ҫăмăллăн хăпараҫҫĕ. Танкутсем вĕсем йак ҫăмĕнҙен тунă хуп-хура ҙатăрсенҙе пурăнаҫҫĕ.

Типетсем кил-çуртпа пурӑнаççӗ, тусем хушшинҫи айлӑмсенҫе вӗсем *урпапа тулӑ* акаççӗ; вӗсем ҫулран тунӑ çуртсенҫе пурӑнаççӗ. Типет пуç-хули—*Лхасса;* унта *талай-лама* пурӑнаҫ, вӑл çӗр çинҫе Пут вырӑнӗнҫе тӑраҫ, Пут тӗнне тытса тӑракан пуп таврашӗсенӗн вӑл ҫӑн аслӑ пуçлӑхӗ.

Çав талай-ламана пуççапма Вӑта Аçирен те, малйенҫен те, кӑнтӑр-йенҫен те çынсем цинӗ-пинӗпе пуçтарӑнаççӗ; Лхассара пуринҫен ытла манахсем пурӑнаççӗ.

Мал-йенҫи Турккестанра мӗн пурӑнаканӗ пурте Тарим шывӗ хӗррипе ытти шыв хӗррисенҫе ларакан оаçиссенҫе анҫах пурӑнаççӗ; çав шывсем çӳлӗ тусем çинҫен йухса анаççӗ те, кайсан-кайсан, хӑйӑрсем ӑшӗнҫех пӗтсе лараççӗ. Унта тӗрӗкпе тутар йышши халӑхсем (сартсем) пурӑнаççӗ. Вӗсем темӗн ҫухлӗ каналсем (*арӑксем*) алтаççӗ те, çав арӑксем тӑрӑх шыва хӑйсен анисем çине, пахҫисем ӑшне илсе çитереççӗ; вара вӗсенӗн унта туллисем те, арпусӗсемпе мӑн-хӑйӑрӗсем те, тата априккоссем те, перççиксем те, ытти йышши çимӗçсем те пит лайӑх пулаççӗ. Арӑк вӗçӗ пӗтнӗ çӗрте пахҫасем те, уйсем те пӗтеççӗ; унта вара хӑйӑрлӑ пушӑ-хирсем пуçланса каяççӗ.

Ҫункари çӗрӗнҫе те, Ҭаҥ-Шаҥрен çур-çӗр йенҫе, çавнашкал оаçиссем пур.

Мал-йенҫи Турккестанра ҫӑн пысӑк хула—Йаркент, Ҫункаринҫе—*Кулҫа.*

Аçи варринҫи çӗрсем, Монколирен пуçне, пурте *Киттай* патшалӑхӗ аллинҫе тӑраççӗ; Типетпе Мал-йенҫи Турккестана Киттай лартнӑ тӳресем пӑхса тӑраççӗ; вӗсем пур хуласенҫе те пур, вӗсен аллинҫе киттай çарӗсем. Типет çӗрне талай-лама тытса тӑраҫ, анҫах ӑна та Киттай тӳре-шарисем асӑрхаса пӑхса тӑраççӗ.

Киттай.

Киттай, йе *Ҫӑн-Киттай* тесе пысӑк Киттай патшалӑхӗн ҫӑн аслӑ пайне калаççӗ; вӑл Киттай патшалӑхӗ Памиртен пуçласа, Аслӑ оккеан хӗрри таран пыраҫ, тата Амуртан пуçласа Интокиттай таран çитет; çапла Киттай патшалӑхне пӗтӗм Аçи варринҫи çӗрпе Киттай çӗрӗ, тата Манҫури çӗрӗ кӗрет. Киттай çӗрӗсене Раççейпе танлаштарсан, Киттай Раççей патша-

лӑхӗн виҫ пайӗнҫен пӗр пайӗ анҫах пулат̆, халӑхӗсем Киттайра Раҫҫей халӑхӗнҫен икӗ хут нумайрах,—Раҫҫейре мӗн пурӗ 175 мӗлйун ҫын, Киттайра—*350 мӗлйуна* йахан; ҫав 350 мӗлйун ҫын, пурте тенӗпе пӗрех, Ҫӑн-Киттайра пурӑнат̆.

Ҫӗр-шывран пулсан, Киттай ҫӗрӗ икӗ тӗслӗ: сив йенҫе пӗр тӗслӗ, кӑнтӑр йенҫе тепӗр тӗслӗ; ҫав *Ҫур-ҫӗр йенҫи* Киттайпа *Кӑнтӑр йенҫи* Киттайа уйӑрса тӑраканнисем—Куен-Лунҫ тӑвин мал-йенҫи сӑрҫӗсем.

Ҫур-ҫӗр йенҫи Киттайра *Киттай айлӑмӗ* пур. Ҫав айлӑм—вӑрмансӑр, ҫара, тӳрем ҫӗр; ӑна ҫимӗҫ пултаракан ҫосс йатлӑ ырӑ сарӑ тӑпра витсе тӑрат̆. (*Вӑл ҫосс мӗнле пулнине астуса илӗр-ха*).

Кӑнтӑрти Киттайра тӳрем ҫӗр ҫукпа пӗрех, унта пур ҫӗрте те тусем анҫах, вӗсем ҫӳлех мар та, анҫах ҫӑнкӑ, вӗсен айаккисенҫе камелисем, тата ӗмӗр симӗс тӑракан ытти йывӑҫсем те ӳсеҫҫӗ. Унти ҫӗр—*хӗрлӗ ҫӗр*, тӑмлӑ тӑпра; вӑл ҫӗр ҫосс пек ырах мар та, ҫапах та ун ҫинҫе пур ҫимӗҫ те пит лайӑх пулат̆, мӗншӗн тесен Кӑнтӑрти Киттайра ҫанталӑк Ҫур-ҫӗр йенҫи Киттайран нӳрӗкрех тӑрат̆, ӑшӑрах пулат̆. Ҫур-ҫӗр йенҫи Киттайра хӗлле сивӗ те пулат̆, йур та кӑшт ӳкет, выртасса нумайах выртмаст̆; Кӑнтӑрти Киттайра йур нихăҫан та ӳкмест. Ҫур-ҫӗр йенҫи Киттайра тырӑ ҫулталӑк хушшинҫе пӗр-ик хут вырса илеҫҫӗ, кӑнтӑрти Киттайра—ик-виҫӗ хут выраҫҫӗ.

Киттай халӑхӗ тӗлӗнмелле тӑрӑшса *ҫӗр ӗҫлекен халӑх.* Вӗсен тӗп-ӗҫӗ *ҫӗр ӗҫӗ.* Ҫур-ҫӗр йенҫи Киттайри тӳрем ҫӗрсем ҫине *тулӑпа* нимӗҫ пӑрҫи акаҫҫӗ; Кӑнтӑрти Киттайра тусем хушшинҫи айлӑмсенҫе *рис уйӗсем, сахӑр хӑмӑшӗ* пахҫисем, тата *нампук* рашҫисем сарӑлса тӑраҫҫӗ. Мамӑкпа мӑкӑне Киттайра пур ҫӗрте те тӑваҫҫӗ, пулса ҫитмен мӑкӑнрен *оппиум* кӑлараҫҫӗ.

Хӑйсен уй-хирӗсене Киттайсем пирӗн хӗресҫенсем пахҫисене пӑхнинҫен те лайӑхрах ӗҫлесе пӑхса пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем кирек-мӗн тӑкӑнса-сапӑнса выртакан йапаласене хӑйсенӗн уй-хирӗсене тӑкса йусама тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсен уй-хирӗнҫе урлӑ-пирлӗ каналсем пур шыв-шурсенҫен те пыра-пыра кӗреҫҫӗ. Тырра вӗсем акмаҫҫӗ, анисем тӑрӑх алăпа йӗрки-йӗркипе ҫипер лартса тухаҫҫӗ; ҫумсене пӗр май тасатса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсе-

нĕн тырри ĕмĕрех лайăх пулаť; пĕђĕк ана ҫинђех Киттай ҫынни хăй кил-йышне тăрантармалăх ҫителĕклĕ тырă тăваť.

Киттай халăхĕсем ҫĕр ĕҫне ђăн кирлĕ ĕҫ вырăнне хураҫҫĕ, тата ăна ђăн паха, ђăн ырă ĕҫ тесе хисеплеҫҫĕ. Вĕсенĕн ҫĕр-ĕҫ праҫникĕ пулаť; ҫав праҫникре ĕлĕк Киттайсенĕн ĕмпĕвĕ хăй пĕр пĕђĕк ана сухаланă.

Киттайсем хăйсен пахђисене (сађĕсене) те пит лайăх, тăрăшса пăхаҫҫĕ; пуринђен ытла Кăнтăрти Киттайра ҫапла пăхаҫҫĕ, унта *ђей йывăҫĕ*, тата пурҫăн хурђĕн йывăҫĕ, *тут*, ўсет. Ђей йывăҫĕн ҫулђсинђен киттайсем ђей тăваҫҫĕ, тут йывăҫĕн ҫулђсипе пурҫăн хурђĕсене тăрантарса пуранаҫҫĕ. Ђейпе пурҫăна киттайсем пит нумай тăваҫҫĕ, вĕсене унтан Йевроп ҫĕрне те темĕн ђухлĕ турттарса кайаҫҫĕ.

Киттайсем *пулă тытса* нумай усă кураҫҫĕ. Киттай тинĕсĕсем, шывĕсем, тата ана-ҫаранĕсене шăвармалли каналĕсем, пулăран пулсан, пит пуйан; унсăр пуҫне тата Киттайсем пулăсене пĕвесенђе усраҫҫĕ, рис уйĕсенђе те ĕрђетеҫҫĕ; кĕр-кунне рис вырса илсен, уйне шыв йарса тултараҫҫĕ те, вĕт пулăсене. йграҫҫĕ; хĕл каҫаđђен ҫавсем ђылай пулах пулаҫҫĕ; ҫур-кунне киттайсем вĕсене ăшăх шыв ăшĕнђен ним асапсăр тытаҫҫĕ.

Киттайсен апаđĕ—рис. нимĕђ-пăрҫи, тата пулă. Вĕсем тата сыснасене, йытăсене, кушаксене те пусса ҫиклеҫҫĕ. Киттайсенĕн тата йуратакан тепĕр ҫимĕҫ пур, вăл—тинĕсре пурăнакан *трепанк* йатлă хурт, тата тинĕс ђĕкеҫин, *саланканăн*, йăви. Усĕртекен спиртлă йапалана киттайсем ĕҫмеҫҫĕ, анђах вĕсем оппиум туртаҫҫĕ; вăл оппиум етем сывлăхне спиртрен те ытла пăсаť.

Выђăх-ђĕрлĕх Киттайра нумай усрамаҫҫĕ, мĕншĕн тесен тырă тума йурăхлă ҫĕре пĕтĕмпех акаҫҫĕ те, выђăх ҫўремелĕх ҫĕр те йулмасť. Сĕт турăхпа ҫу таврашне киттайсем пĕлмеҫҫĕ, сĕт-турăх ĕҫне те пĕлмеҫҫĕ. Выђăх ҫукран турттармалли йапаласене Киттай ҫĕрĕнђе рапођисем ҫĕклесе кайаҫҫĕ, вĕсене *кули* теҫҫĕ. Кăнтăрти Киттайра ҫуна-урапа ҫулĕ те ҫук, ҫуран ҫўрекен утма-ҫулсем анђах. Киттайра шыв тăрăх ҫўреме шывсем, йури тунă каналсем нумай, вĕсем тăрăх темĕн ђухлĕ кимĕсем ҫўреҫҫĕ; ђăн вăрăмми *Ĕмпў каналĕ*, унăн тăршшĕ 1000 ҫухрăм ытла.

Киттайра суту-илў ĕҫĕ пит вăйлă, киттайсем вăл ĕҫре пит пултараҫҫĕ; хăйсен ҫĕрĕнђи суту-илў ĕҫĕ пĕтĕм Киттай аслăшĕпех вĕсенĕн аллинђе.

Пур ремесла ĕçне тума та киттайсем пит ăста çынсем. Пурăннă пурăнăçра кирлĕ йапаласене, тата пур капăр йапаласене киттайсем мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе ĕçлесе хатĕрлеççĕ. Пуринҫен ытла вĕсем фарфортан тĕрлĕ савăт-сапа тума, паха пирсем тĕртме пĕлеççĕ, лакпа сăрлама пĕлеççĕ, йывăçран, слон шăмминҫен касса тĕрлесе паха йапаласем тăваççĕ.

Киттайсем йалĕ-йалĕпе, хули-хулипе, пурăнаççĕ. Вĕсем çурт-йĕрĕсене пит хĕсĕнсе тăваççĕ, çĕр тăвăртан, кил-çурҫĕсене вĕсем ҫас-ҫасах сулăсем çине, кимĕсем çине туса хураççĕ, шыв çинҫех пурăнаççĕ; Çур-çĕр йенҫи Киттайра тата ҫосс сăрҫĕсем айаккисене алтса туса çĕр пӳртсенҫе пурăнаççĕ. Киттайсенĕн кил-çурҫĕсем хăйсем пекех ытла та таса мар. Киттай хулисем тавра пысăк хулăм ҫул картасем (хӳмесем) тытнă; ĕлĕк авал куçса çӳрекен халăхсем пырса кĕрсе тапăнсан, çав картасем (хӳмесем) ăшĕнҫе киттайсем хăтăла-хăтăла йулнă. Киттай хулисенҫе халăх нумай пурăнат, анҫах вăл хуласенҫе илем сахал.

Киттай пуç-хули—*Пеккин*, вăл хулара 1 мĕлйун ытла халăх пурăнат.

Пеккин хули икĕ пайа уйăралат: кăнтăр йенҫе Киттай хули, çур-çĕр йенҫе Манҫур хули, ку Манҫур хулинҫе тата Ёмпӳ хули пур; çак Пеккинĕн икĕ пайне те ҫул карта (хӳме) тытнă.

Киттайра тинĕс хĕрринҫи хуласенҫен ҫаплăраххисем ак çаксем: *Тиен-Тçин*; кунпала Пеккин хушшинҫе ҫукун-çул çӳрет; тата *Шанхайпала Канттон*. Çак хуласем урлă Йевроппа Йаппонирен Киттай çĕрне хапрăксенҫе, савăтсенҫе тунă йапаласене илсе пыраççĕ, тата Интирен оппиум, Интокиттайран рис турттарса пыраççĕ. Киттайсем хăйсем те рис тыррине нумай акса тăваççĕ, çапах хăйсене тăранса пурăнмалăх туса çитереймеççĕ.

Ытти Киттай хулисенҫен ҫаплăраххи тата *Хаңкоу* пур; вăл Кăвак шыв çинҫе ларат. Унта пысăк ҫей пасарĕ пур; çавăнтан вара ҫейе тинĕс карапĕсемпе Йевропа, Америке темĕн ҫухлĕ турттарса кайаççĕ. Ҫейпеле пурçăн—Киттайран тухакан ҫăн пысăк тавар.

Ăшкулри вĕренў Киттайра тахçан авалтанпах пырат̆. Халăха вĕрентмелли ăшкулсене Киттайра Йевропринҫен малтантарах пуçласа йанă.

Вĕсем кĕнеке çапма та малтантарах пуçланă, компаспа тар та малтантарах кăларнă. Анҫах Киттайсем авал мĕнле пуранна, халĕ те çаплах пурăнаççĕ. Вĕсем *авалхи йăласене хытă тытса пурăнаççĕ*, авалхи тĕп-аслашшĕсем кăларнă йĕркесене улăштарни çылăх теççĕ. Аҫисене вĕсем сахал вĕрентнĕ. *Науккăсем* вĕсен пулман, пĕр арифметтик анҫах пулнă; вăл вĕсене суту—илў ĕçĕнҫе кирлĕ пулнă. *Киттай çырăвĕ*—пит йывăр çыру, мĕншĕн тесен вĕсенĕн сас-паллисем çук, пĕрерĕн-пĕрерĕн *сăмаха* пĕлтерекен паллăсем анҫах; вĕсем пит нумай; çав сăмахпаллăсене пурне те пĕлсе çитекен пит сахал; ыттисем 3—4 кĕнеке анҫах вулама пĕлеççĕ, çав кĕнекесенҫе авалхи ăслă çынсем каласа хăварнă сăмахсене çырса тултарнă. Халĕ, нумай пулмаст̆, киттайсем тин хăйсен ăшкулĕсене йусама хăтланаççĕ.

Пĕлмен пирки пĕтĕм киттай халăхĕ хурлăх курат̆; пуринҫен ытла вăл *йсталăх* ĕçĕсем малалла каймасăр ҫарăнса тăнивҫен паллă. Çапла, сăмахран каласан, Киттайра çĕр айĕнҫе çĕр-кăмрăкĕ выртат̆ темĕн ҫухлĕ, анҫах ăна кăларакан çукпа пĕрех. Киттай тăрăх ĕçлекен халăх (кулисем), ĕçсер аптарăса, ушкăнĕ-ушканĕпе сĕтĕрĕнсе çўреççĕ, пинĕ пинĕпе йут çĕре, Индокиттайа, Африке, Америке—кайаççĕ те, унта ҫи йўн хакпа тарçа кĕрçеççĕ. Хăшĕ хăшĕ вĕсенҫен, пурăнсан-пурăнсан, каллех килне таврăнаççĕ; ыттисем пурте харпăр-хăй çуралнă çĕр-шывне ĕмĕрлĕхе пăрахса кайаççĕ.

Киттайра пуç-пулса тăракан *тĕн* çук, Киттайсем, пурте тенĕпе пĕрех, çўлти пĕлĕте, çĕре, çĕр-шыв хăватне пуççапса пурăнаççĕ; нумайĕшĕ *Пута* (Буддана) ĕненеççĕ, хăшĕ тата авал пулнă ăслă *Конфутсийе* хисеплесе пурăнаççĕ; киттайсем тата пурте *ваттисене асăнса* парнесем параççĕ.

Кăмăлтан пулсан, киттайсем—кунĕ (йăваш), ăшă-кăмăллă халăх; телей çук, тесе, вĕсем телейе хур тумаççĕ, сахалпа тутă пулма пĕлеççĕ. Пĕр-перинпе вĕсем пит вашаватлă; пĕр-пĕрне хисеплесе вĕсем тем-те-пĕр хăтланаççĕ; пуринҫен ытла хăнасем кўртнĕ ҫух, йе хăнана кайсан, пит йапшăрланаççĕ. Вĕсем хăйсене тĕрлĕ йапалапа йăпатаççĕ: хут-çĕленсем çўле йарса вĕçтереççĕ, фейерверксем

йараççĕ, тĕрлĕ асартлă вăйă выляççĕ, тата театтăра мыскара курма çÿреççĕ.

Халăха пăхса-тытса тăрасран пулсан, Киттай темиçе çĕр çул хушши пĕр çын аллинче, *пĕр çын ирĕкĕнче* тăракан патшалăх, чăн-чăн *монарххи* (*неограниченная монархия*) пулнă; унăн пуçлăхĕ *пĕлĕт ывăлĕ* текен ĕмпÿ пулнă. Анчах нумай пулмаст, Киттайара урăм-сурăм самана тапранса кайсан, ĕмпÿ патшаран тухнă; халĕ Киттайра—респуплик кăларнă, вăл респуплике *преçитент* тытса тăрат, анчах çĕнĕ йĕркене киттайсем пурте тытса тăрасшăн мар, çавăнпа унта пĕр майах халăх хушшинче пăтрав тăрат.

Киттайсем мĕн ĕмĕртенпех хăйсем таврари халăхсенчен пуринчен те ытларах вĕренвĕ халăх пулнă, çавăнпа вĕсем йут-çĕртен пыракан çынсене тиркерех пăхнă. Йевроп çыннисем çине те вĕсем ку таранччен çÿлтен пăхат-чĕç, вĕсенчен курсл вĕренесси-тăвассине вĕсем намăс тенĕ. Халĕ, нумайах та пулмаст, Йевроп халăхĕсем вĕсене вăрçăра çĕнтеркелесен тин вĕсем хăйсен салтакĕсене Йевропри пек вĕренте пуçланă, тата çав Йевроп çыннисенех Киттай çĕрĕнче чукун-çулсем тутарнă, хуласенче хапрăксем, савăтсем тутарнă.

Йевроп çыннисем, хăйсен вăйне кура, тинĕс хĕрринче хăшхăш Киттай хулисене хăйçен аллине илнĕ. Çав хуласен хушшинче чăн пахи—порт *Виктори*, вăл *Хонк-конк* тийекен утрав çинче, акăлчансен аллинче тăрат. Çав Хонк-конкра Йевроппа, Интипе, Киттайпа Йаппуни хушшинче çÿрекен карапсем пурте чарăнаççĕ.

Манчури.

Манчури çĕрĕ—пуйан çĕр; унта кăнтăрта, *Лао-хе* шывĕ тăрăх, тăршшĕпех ырă уй-хирсем, çур-çĕр йенче сĕткен куракла çеçен-хирсем сарăлса выртаççĕ; Манчури тавра ларса тухнă тусем вăрманлă, ылттăнтан çĕр кăмрăкĕнчен пуйан.

Çак çĕрти тĕп-халăх—*Манчурсем*. Çав манчурсем ĕлĕк никама парăнми вăйлă халăх пулнă. Темиçе çĕр çул ĕлĕк вĕсем Киттайа туртса илнĕ. Çав Киттайра çак çулсем çитичченех пĕр Манчур ăрачĕ (*тинасти*) патшара ларнă. Манчурсем

Киттайа туртса илсен, киттайсене хăйсене пăхăнтарнине кă-тартса вăрăм çивĕтпе çӳретеççĕ; вăл çивĕте киттайсем нумай-ĕшĕ халĕ те çĕклесе çӳреççĕ. Анђах киттайсене парăнтарсан, манђурсем хăйсем вĕсемпе хутăшса кайнă та, пурте халĕ киттай йăлисене тытса пурăнаççĕ, хăйсен ђĕлхине те ĕнтĕ маннă. Халĕ Манђуринђе те киттайпа манђура уйăрма йывăр. Киттайсем тата *Ђао-хе* шывĕпе *Сункари* шывĕ тăрăх тăршшĕпех ларса тухнă, унта вĕсем хăйсен хирĕсене *Каођан* (шултăра вир), нимĕђ-пăрçи, *мăкăњ*, тапак акаççĕ те, пит тăрăш-са ĕçлеççĕ. Йулашки çулсенђе киттайсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе те-мĕн ђухлĕ çур-çĕрпе хĕвел-анăçĕ хушшинђи Манђурин çеçен-хирĕсене куçса кайса лараççĕ. Пĕр тусем çинђи вăрмансенђе анђах манђурсемпе пĕр кăкран тухнă *тункуссем*, тата ытти-халăх çыннисем те ухутара çӳрекелеççĕ; вĕсем сопăђсене, сăсар-сене (сăсăрсене), тикăрсене тытаççĕ.

Киттайсене, Манђурсене *ђукун-çулсем* питĕ пысăк усă кӳреççĕ, вăл çулсене вырăссем тутарнă. Вĕсенђен пĕри çур-çĕр йенђи Манђури урлă кайат, вăл пирĕн Çипирти ђукун-çула *Влативостока* çитерет; тепĕр çулĕ Сункари шывĕ çинђи *Хар-пинрен* кăнтăралла кайат, вăл, Манђурири *Муктен* йатлă аслă хула витĕр тухса, нихăçан шăнман Порт-Арттура çитет; вăл Порт-Арттур халĕ йаппунсен аллинђе.

Йаппуни.

Йаппуние урăхла *Тухакан-Хĕвел çĕрĕ* теççĕ, вăл Аçи çĕ-рĕнђе мал-йенђе, ђăн хĕррипђе. Вăл темĕн ђухлĕ утравсене тыт-са тăрат. Çав утравсенђен ђăн пысăккисем ак çаксем: *Хонто*, урăхла ăна *Ниппон теççĕ*, *Киу-Шиу*, *Шиккок*, *Иессо*; кусенђен пуç-не йаппунсен аллинђе *Курил* утравĕсем, кăнтăрти çур Сахалин, *Риу-Киу* утравĕсемпе *Формос*.

Йаппуни аллинђе татăкăн-татăкăн тăракан утравсем анђах та, çапах та вăл йаппунсемшĕн пулсан, пĕр татăк-сăр çĕр пек; йаппунсем вĕсем тинĕсре çӳреме пит ăста халăх; вĕсемшĕн пулсан, пĕр утрав çинђен тепĕр утрав çине ишсе пырасси нимĕн те мар, çăмăл ĕç; тинĕспе çӳ-ренине вĕсем пуринђен мала хураççĕ. Тата вĕсен çĕрĕсе-не уйăрса тăракан тинĕссем, тинĕс пырĕсем кимĕсемпе çӳ-

реме пит лайăх: вĕсем тарăн, нихăçан та шăнса лармасçĕ кимĕсем тăмалли ырă вырăнсем те нумай.

Йаппуни утравĕсем пурте сăртлă. унта тата ђас-ђасах çĕр ђĕтрет. 1855-мĕш çулта Йаппуни пуç-хулинђе, Токкиора, 80 хутђен çĕр ђĕтренĕ, ун ђухне вара 100000 çын ытла халăх пĕтнĕ. Ту тăррисем унта вулккансем; вĕсенђен хăшĕ сӳннĕ, хăшĕ халĕ те вĕресе тăрат. Вĕсем хушшинђе ђăн çӳлли—Фуçийама, унăн çӳллĕшĕ виçĕ çухрăм çурă, вăл Хонто утравĕ çинђе, ăна йаппун халăхĕ таса ту тесе хисеплет.

Куро-Çиво тийекен ăшă тинĕс шывĕ Йаппуни çĕрне ăшăпа нӳрĕке пит нумай илсе пырат. Çула пулсан çав шыв тăрăх кăнтăрпа мал-йен хушшипе *муссонсем* вĕреççĕ; çав муссонсем вара шыв пăсне çĕклесе Йаппунине çитереççĕ те, *илпĕк* çумăр пулса çăваççĕ.

Çав Куро-Çивон пĕр турађĕ Йаппун тинĕсне пырса кĕрет. Хĕлле маттерик çинђен вĕрсе килекен муссонсем çăв ăшă шывăн ăшшипе ăшăнаççĕ те, нӳрĕкс хăпсен ăшне илеççĕ, вара вĕсем те Йаппунине йĕпе-сапа илсе пыраççĕ

Çапла климăт ăшă, вӳрĕ пулнă пирки, Йаппуни çĕрĕсенђе йывăç-курăк ытла та лайăх ӳсет: тусем вăрман айĕнђе лараççĕ, сăртсем çинђе, айлăмсенђе уй-хирсем, пахђасем, сатсем курăнаççĕ.

Курил утравĕсемпеле Саххалин утравĕ сивĕ, пăслă Оххотск тинĕсĕ варринђе лараççĕ; çавăнпа унти çанталăк, унти климăт сивĕ те, йывăç-курăк унта нађар: йĕп-çуççăлă йывăççсем, тунтăрти курăксем—çеç ӳсеççĕ. Курил утравĕсем нумайĕшĕ—сӳннĕ вулккансем, вĕсене ĕмĕрхи йур хуплăса тăрат, пĕр айалта анђах йывăç-курăк пăртак пулкалат. Етеме пурăнасран пулсан, çав Оххотск тинĕсĕ варринђи утăсем пĕрре те лайăх мар. *Формос утравĕнђе* тата климăт ытла шăрăх, сывлăхлă мар; йывăç-курăк унта троппикри пекех. *Йаппун* утравĕсенђе ӳсен-тăран йывăç-курăк троппикри пекех: унта ĕмĕр симĕс камелисем, кăнхвара лаврĕсем, лак йывăçĕсем ӳсеççĕ, пĕр *Иейссо* çинђе анђах вĕсем çук; Хонто çинђе кăнтăрта тата паљмăсем те, пампук та пур.

Йаппуни Раççейрен 50 хут, Корейпе пĕрле шутласан, 25 хут пĕђĕкрех; анђах унта хăлах йышлă, Раççейринђен 3 хут анђах сахал: унта халăх мĕн пурĕ *55 мĕлйуна* çитет, Корейпе пĕрле шутласан, *75 мĕлйуна* йахăн. Йаппуни çĕрĕнђе çав тери

нумай халăх пурăнни акă мĕнтен килет: пуринҫен ытла унта ҫĕр-шыв пит ырă, ҫанталăк лайăх, унтан тата йаппунсем хăйсем те пит хастарлă, ĕҫҫен халăх.

Йаппунсенҫе пуринҫен ытла—*йурлă хĕресҫен халăхĕ* нумай; вĕсенĕн ҫĕрĕ пит тăвăр, ҫур теҫеттине пулсан, ăна вĕсем пысăк ҫĕр теҫҫĕ. Вĕсем хăйсенĕн пĕҫĕкҫĕ анисене, киттайсем пекех, питĕ тăрăшса, йуратса ĕҫлеҫҫĕ; пуринҫен ытла вĕсем *рис* тăваҫҫĕ.

Кĕр-кунне, рисне вырса пĕтерсен, ҫав уйах йаппунсем хĕллене хирĕҫ урпа йе тулă акса хăвараҫҫĕ те, вĕсене ҫур кунне вырса илеҫҫĕ; кăнтăрта Йаппунире кашни уйра виҫ тырă туса илеҫҫĕ.

Тырă анисем Йаппунинҫе пурте айлăмсенҫе. Тӳпемсенҫе, ҫӳлĕрех вырăнсенҫе йаппунсем ҫей йывăҫĕ пахҫи тăваҫҫĕ, сăрт айаккисенҫе пурҫăн-хурҫĕ йывăҫĕсене ӳстереҫҫĕ. Пурҫăна вĕсем пит нумай тăваҫҫĕ, вăл Йаппуниррен тухакан ҫăн пысăк тавар; ҫейне йаппунсем хăйсемех ĕҫсе пĕтереҫҫĕ; йаппун ҫейĕ киттай ҫейĕпе Инти ҫейĕнҫен наҫартарах.

Тинĕс хĕррисенҫе йаппунсем пулăҫĕпе хăтланаҫҫĕ. Ку ĕҫ, йаппунсемшĕн пулсан, киттайсенҫен те пахарах. Йаппуни таврашĕнҫи тинĕссем, пулăран пулсан, пит пуйан, тата вĕсенҫе паха пулăсем пит нумай: лоссоҫсем, ҫелтсем (ҫиҫуткăсем), трескасем пур; Йаппунире тинĕс хĕррисенҫе тăршшĕпех пулăҫă йалĕсем лара лара тухнă. Ҫăн ҫаплă пулă ĕҫĕсем Ийессо ҫĕрĕнҫе; тата Саххалинре, кăнтăрлара. Унта йаппунсем темĕн ҫухлĕ ҫелтсем тытаҫҫĕ те, вĕсенҫен тирĕслĕк вырăнне кайакан йапала тăваҫҫĕ, ҫав тирĕслĕке вара рис акакан уйа тăкаҫҫĕ. Пулăран пуҫне йаппунсем тата *крап* тийекен тинĕс ракĕсене, *тинĕс купăстине* (водоросле), тата *трепанк* тийекен тинĕс хурҫĕсене тытаҫҫĕ.

Рис, пулă, нимĕҫ—пăрҫи, тата тинĕс купăсти, йаппунсемшĕн пулсан, ҫăн кирлĕ ҫимĕҫсем. Рис йаппунсемшĕн ҫăн паха ҫимĕҫ пулни ак ăҫтан курăнать: вĕсем *ирхи апат* тес вырăнне ирхи рис теҫҫĕ, *кăнтăрлахи апат* тес вырăнне *кăнтăрлахи рис* тĕҫҫĕ, тата *каҫхи апат* тес вырăнне *каҫхи рис* теҫҫĕ. Аш-пăш апатне, сĕт-турăха, ҫу таврашне вĕсем курманпа пĕрех, мĕншĕн тесен ҫĕр-шыв сахал пирки вĕсем выҫăх-ҫĕрлĕх усраймаҫҫĕ.

Йаппунсем пурте йалсенҫе пурăнаҫҫĕ. *(Мĕншĕн апла?)*. Вĕсенĕн йалĕсенҫе тап-таса: ҫӳпĕ-ҫапă куписене есир унта ниҫта

та кураймăр; выҫăх-ҫĕрлĕх тытмаҫҫĕ те, вĕсенĕн хушшинҫе тирĕслĕк куписем те ҫук. Пӳрҫĕсем вĕсенĕн йывăҫ пӳртсем; ҫтенисем ҫӳхе, уҫса хупмалла тунă; пӳлĕмĕсене пĕр-пĕринҫен пĕҫĕк ҫăп-ҫăмăл *ширмăсем* (картасем) картласа (уйарсă) тăраҫҫĕ; ҫӳреҫе вырăнне пампукран тунă рамсене витĕр курăнакан хут ҫыпăҫтарса лартаҫҫĕ. Пӳрҫĕсевҫе кăмакасем ҫук. Кăмака вырăнне пăхăр вуҫахсем тăваҫҫĕ те, унта, кăвара йалкăштарса, риссем, ҫейсем пĕҫереҫҫĕ. Пукансем, тенкелсем, сĕтелсем те ҫук; йаппунсем курăкран йе паҫмă ҫулҫисенҫен *ашăксем* ҫыхаҫҫĕ те, вĕсем ҫинҫе ларса ҫывăрса пурăнаҫҫĕ. Пӳрте кĕнĕ ҫухне йаппунсем пушмакĕсене хываҫҫĕ; пӳртĕвҫе вĕсен тап-таса; хăйсем те вĕсем тасана йуратакансқерсем; вĕсем тăтăшах йе тинĕсре, йе килĕнҫе шыв пиҫĕкинҫе шыва кĕреҫҫĕ.

Йаппунсем вĕсем пит хастарлă халăх. Авал вĕсем киттайсенҫен курса тĕрлĕ ăсталăха, йывăҫран тунă йапаласене лакпа сĕрме, фарфор тума, вĕреннĕ; вăл ĕҫсене тума вĕсем кайран киттайсенҫен те ăстана тухнă.

Иртнĕ ĕмĕр вĕҫĕнҫе йаппунсем, Йевроп халăхĕсенҫен курса, вĕрене пуҫланă та, кăшт хушăрах вĕсем пит малалла кайнă. Халĕ вĕсенĕн темĕн ҫухлĕ хапрăксем пур, унта вĕсем машшинапа мамăкран, пурҫăнран тĕрлĕ-тĕрлĕ йапаласем тĕртеҫҫĕ; тĕрлĕ тимĕр хатĕрсем тăваҫҫĕ, питĕ паха хутсем хатĕрлеҫҫĕ; йаппун хуҫĕ пит ҫирĕп, унтан варкăштармаллисем (вейĕрсем), ҫатăрсем (зонтсем), тумтирсем тăваҫҫĕ. Халĕ вĕсем хăйсемех пăраххутсем, ҫукун-ҫулсем, вакопсем, паровоссем тăваҫҫĕ. Йаппунире йĕритаврах ҫукун-ҫул, Йаппуни хулисенҫе, йалсенҫе те нумайĕшĕнҫе електритсă ҫутаҫҫĕ. Ҫакна ҫутма вĕсене пит йӳне ӳкет, мĕншĕн тесен вĕсем електритсă машшинисене ҫӳлтен ӳксе йуҳакан шывпа ĕҫлеттереҫҫĕ, унашкал шывсем Йаппунире пит нумай. Хапрăксенҫе, савăтсенҫе, ҫукун-ҫулсем ҫинҫе, хула хушшинҫе те, кил-ҫуртсенҫе те, пур ҫĕрте те Йаппунире пурăнăҫ пит йĕркелĕ.

Йаппунсем халĕ вĕренсе ҫутта тухнă халăх; ҫавă—ҫăн пахи. Вĕсем пур ҫĕрте те, хуласенҫе те, йалсенҫе те, ăшкулсем туса, ҫырăва пурне те вĕренмелле саккун кăларнă. Ҫавăнпа та йаппунсем, пурте тенĕпе пĕрех, ҫырăва пĕлеҫҫĕ, вĕсем хаҫатсем, шурналсем, кĕнекесем вулаҫҫĕ, ҫав кĕнеке тавраш Йаппунире Раҫҫейринҫен нумайтарах тухаŤ.

Ђăн аслă ăшкулсемпе вăтам ăшкулсенђе йаппунсем Йевроп халăхĕсенĕн ђĕлхисене вĕренессĕ; ĕлĕкрех вĕсем çав ăшкулсене Йевропри вĕреннĕ çынсене вĕрентме ђĕннĕ, халĕ ĕçе вĕсем-ĕрех тăвассĕ, науккăпа хăйсем те вĕсем нумай хăтланассĕ.

Патшалăха тытса тăрас ĕçе те весем Йевропри пекех тунă: вĕсенĕн ĕмпĕвин, *микадон*, ирĕкне *парламент* ђарса тăрат, парламент вăл пĕтĕм халăх уйăрса йанă çынсенĕн пухăвĕ. Парламентре саккунсем кăларассĕ, минстрсем, ђиновниксем тăвакан ĕçе пăхса тĕрĕслесе тăрассĕ, вĕсенђен хисеп ыйтассĕ. Пĕр *тĕн* тĕлĕшĕнђен анђах йаппунсем авалхи йăлапа пурăнассĕ, вĕсем пурте тенĕпе пĕрех *шинтто* тĕнне тытса тăрассĕ; вăл тĕн хушнă тăрăх йаппунсем çанталăкри вăй-хăватсене, тата ваттисен ђунĕсене пуççапса пурăнассĕ; вĕсен хушшинђе Пут (Будда) тĕнне тытса тăракансем те пур, Конфутси тĕнĕпе пурăнакансем те нумай.

Кăмăлтан пулсан, йаппун халăхĕ харсăр, паттăр халăх; хăйсем çуралнă çĕр-шывĕшĕн вĕсем вилме те хатĕр; анђах ахаљ ђипер пурăннă ђухне йаппунсем киттайсем пекех пит йапшар, вашават халăх; урам хушшинђе вăрçă-тавлашу сасси илтеймĕн. Ађа-пăђана вĕсем пит йуратассĕ, вĕсене ђипер пăхса ÿстересрен пулсан, йаппунсем пек тăрăшакан халăх Аçире пĕр халăх та çук. Йаппунсем вĕсем тата пит савăнăçлă халăх: вĕсем вăйă-кулла йуратассĕ, пуринђен ытла театтăрта мыскара тунине, вăй-хăвата, çивĕђпе хастарлăха кăтартса кĕрешнине йуратассĕ; вĕсем тата темиçе тĕрлĕ праçник тăвассĕ; çапла вĕсем ђеђексен йађĕпе праçниксем тăвассĕ: ђийе йађĕпе, тата *хрисанттем* йађепе. Йаппунире ђеђексене пурте йуратассĕ, ĕмнÿ те, çĕр ĕçлесе пурăнакан йурлă çын та, пурте тĕрлĕ ђеђексем лартса ÿстерессĕ. Йаппуни çĕрне ђеђек патшалăхĕ теме йурат: кăрлађ-уйăхĕнђе унта камели çурăлат, унтан ђийесем çурăлассĕ, вăл ђийесене йаппунсем хитрешĕн анђах лартса ÿстерессĕ, çимĕçĕсене çимессĕ; ђийе хыççăн асалисем, ириссем çурăлассĕ, çапла унта пĕр йышши ђеђек хыççăн тепĕр йышшисем тухса çурăлассĕ; ђÿк-уйăхĕнђе вара пĕтĕм Йаппунири ђăн ырă илемлĕ ђеђек хрисанттем çурăлса сарăлат.

Йаппунин пуç-хули—*Токкио.* Вăл пит пысăк хула; унта пурăнакан çын 1,800,000 йахăн çитет. Апла пулсан та, Токкио вăл тем пысăкăш йал пек туйăнат, мĕншĕн тесен çурђĕсем

унта пӧтӗмпех пӧҫӗк йывӑҫ ҫуртсем. Йулашки ҫулсенҫе анҫах йаппунсем Токкиора пысӑк ҫул-ҫуртсем тума пуҫларӗҫӗ, анҫах ҫӗр ҫӗтренине вӗсем тӳсме пултарӗҫ-и, пултармӗҫ-и, ӑна пӗлме ҫук-ха, вӑл ӳлӗм паллӑ пулӗ. Урам хушшипе Токкиора тем тӗрлӗ халӑх ҫӳрет; унта ҫуран пыраканнисем, икӗ куса-тӑранлӑ урапасене туртса пыракан ҫынсем, тата електритсӑпа ҫупакан вакопсем нумай ҫӳреҫҫӗ. Ҫак пуҫ-хула тинӗс-ури хӗрринҫе лараҫ те, анҫах тинӗс-уринҫе шыв ӑшӑх пирки пысӑк карапсем унта пыраймаҫҫӗ, вӗсем *Йоккохамӑ* йатлӑ кавӑне кӗреҫҫӗ.

Йаппунин иккӗмӗш пысӑк хули *Оссаккӑ* пулаҫ, унта пурӑнакан ҫын 1 мӗлйуна йахӑн. Хапрӑкпа савӑтсенӗн йӑви ҫакӑнта, Оссаккӑра.

Йаппунире ҫӑн аслӑ кимӗсем ҫарӑнса тӑракан хуласем *Накассаккипе Копе* пур, вӗсем Йоккохамӑран пӗрре те кайа мар.

Иессопа Саххалинре, тата Курил утравӗсенҫе йаппунсенҫен пӳҫне *айно* йатлӑ халӑхӑн наҫара тухнӑ йулашки етеммисем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем йывӑҫ хупписенҫен тӗрткелесе тува тумтирсем, тискер кайӑк тирӗсем тӑхӑнкаласа ҫӳреҫҫӗ; ҫав тискер кайӑксене вӗсем ухӑсемпе тытаҫҫӗ. Нумайах та пулмасҫ, айносем йаппунсенҫен курса ҫӗр ӗҫлеме, урӑх ӗҫ тума та вӗрене пуҫланӑ. Авал айносем йаппун утравӗсенҫе аслӑшӗпех пурӑннӑ, анҫах кайран йаппунсем пырса, вӗсене ҫур-ҫӗрелле хӑваласа йанӑ. Вӗсем сахалланнӑ-ҫемӗн сахалланса пыраҫҫӗ, халӗ вӗсем мӗн пурӗ те темиҫе пинрен ытла мар.

Корей ҫӗрӗ.

Корей ҫӗрӗ—сӑртлӑ пысӑк ҫур-утрав, пӗр йенҫен ӑна Йаппун тинӗсӗ, тепӗр йенҫен—Сарӑ тинӗс ҫуса тӑраҫ. Корей ҫӗрӗнҫи ҫанталӑк Йаппуни ҫанталӑкӗ пекех.

Унта *корей* халӑхӗ пурӑнаҫ; корейсем, тулашӗнҫен пӑхсан, киттайсемпе йаппунсем майлӑ, анҫах ӑсталӑхпа тимлӗхрен пулсан, лешсенҫен те, кусенҫен те кайа йулнӑ. Вӗсем *ҫӗр ӗҫлеҫҫӗ, вырӑх-ҫӗрлӗх усраҫҫӗ*, анҫах уй-хирӗсене вӗсем киттайсенҫен те, йаппунсенҫен те наҫартарах ӗҫлеҫҫӗ. Ҫей йывӑҫӗпе пурҫӑн хурҫӗн йывӑҫне вӗсем лартмаҫҫӗ те, тумаҫҫӗ те. Тӗрлӗ реме-

сласене тума вӗсем ӑста мар; ҫи-пуҫа тумлантарма пир-авӑрсене вӗсем йе хӑйсем ӑстанпа тӗртеҫҫӗ, йе йаппунсенҫен илеҫҫӗ. Корейсем йалӑн-йалӑн ларса, наҫар пӳрт-ҫуртсенҫе пурӑнаҫҫӗ; хуласем вӗсенӗн ҫукпа пӗрех; вӗсенӗн аслӑ хули *Сеул*, пӑхсан, пысӑк йалпа пӗрех.

Корейсем пит йӑваш, вӑрҫӑ ӗҫне йуратми халӑх; ҫавӑнпа та корейсем ӗлӗк киттай аллинҫе пулнӑ, халӗ йаппунсен аллинҫе. Корей ҫӗрӗ йаппунсемшӗн пит паха. Корей ҫӗрӗнҫе халӑх пит сахал, сайра ларса тухнӑ, Йаппуни ҫӗрӗнҫе халӑх пит нумай, ҫӑра, ҫавӑнпа йаппунсем ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе унта куҫса кайаҫҫӗ, тата хапрӑк-савӑтсенҫе тунӑ йапалисене турттарса пырса сутаҫҫӗ.

Инти ҫӗрӗ.

Инти ҫӗрӗ, йе *Хинтустан* (Интостан), тесе пит аслӑ ҫӗре калаҫҫӗ, вӑл Йевропри Раҫҫей ҫӗрӗпе пӗрехрехех; ӑна мал-йенҫен Пенкали тинӗс-ури, хыҫал-йенҫен Арави тинӗсӗ ҫуса тӑраҫҫӗ, ҫур-ҫӗр йенҫен Ҳималайӑпа Ҫӑлиман тӑвӗсем хӳтӗлесе тӑраҫҫӗ.

Инти ҫӗрӗнҫе пӗтӗмпех ырӑ тӑпра, хӗрлӗ ҫӗр; тата кӑнтӑрпа хӗвел-анӑҫ хушшинҫен вӗрекен муссонсем ҫула унта пит илпӗк ҫумӑрсем илсе пыраҫҫӗ, пуринҫен ытла ҫумӑрсем лаптак Теккан тӑвин Кат тийекен сӗвек хӗррисенҫе тата Пенкали ҫӗрӗнҫи Ҳималайӑ тӑвӗ ҫывӑхӗнҫи айлӑмсенҫе пит хытӑ ҫӑваҫҫӗ. Ҫав айлӑмсенҫе ҫимӗҫ пит пулаҭ, мӗншӗн тесен вӑл айлӑмсене Канкпа Прамапутрӑ шывӗсенҫен, вӗсенӗн йупписенҫен лӑйма йухса пырса, шӑлса лартаҭ. Ҳималайӑ ҫывӑхӗнҫе пӗр вырӑн пур, унта пӗр ҫулталӑк хушшинҫе Раҫҫей варринҫе 20 ҫул хушшинҫе ҫунӑ ҫумӑр ҫухлӗ ҫумӑр ҫӑваҭ. Пилӗк-Шыв ҫӗрӗнҫе, вӑл ҫӗр Интпе Сетлеҫ хушшинҫе, ҫумӑр пуласса сахалтарах пулаҭ те, ҫапах ҫителӗклӗ теме пулаҭ, пер Тарр пушӑ-уйӗнҫе анҫах ҫумӑрсем хутран-ситрен-ҫеҫ пулкалаҫҫӗ.

Нӳрӗк пуртап, ӑшӑ климӑтран, тата ҫӗр лайӑх пирки, Интире ҫӑн паха ырӑ йапаласем ӳсеҫҫӗ: *рис, тулӑ, ҫӗр-мамӑкӗ*, тата урӑх йапаласем те.

Троппикри авалхи тӗп-вӑрмансем халӗ Ҳималайӑ хӗррисенҫе, тата Кат сӗвекӗн хӗвел-анӑҫ йенҫе анҫах пур, ӗлӗк вӗ-

сем пур нўрĕк вырăнсенҫе пулнă; Теккан-ҫĕрĕнҫи саваннă ҫеҫен-хирĕсене те пĕтĕмпех сухаласа ана тунă. Интисен вĕҫĕ-хĕрри-сĕр уйĕсенҫе халĕ пăт-пат усравсем, уйрăм ларакан йывăҫсем, пуринҫен ытла тата панийансем анҫах тĕл пулкалаҫҫĕ.

Етеме пурăнма йуравсăр ҫĕрсем Интире сахал. Унашкал ҫĕр Тарр пуш-уйĕ пур, тата троппикри шурсем—ҫунклисем пур; вăл шурсенҫе шултăра хăмăшпа пампуксем-ҫеҫ ўсеҫҫĕ; ҫăн аслă шурсем Хималайă тăвĕ патĕнҫисем, вĕсене *терайсем* теҫҫĕ; унта тикăрсем, хир слонĕсем, мăйрака-сăмсасем, тата урăх кайăксем те пурăнаҫҫĕ.

Интири ҫăн пысăк мул—ўсен-тăран йывăҫ-курăк. Анҫах ҫĕр-ҫунран пулсан га, вăл пит пуйан. Инти ҫеремĕсем ҫинҫе темиҫе мĕлйун пуҫ. ыҫăх тăранса пурăнаť, унта курпун кă-ларнă вăкăрсем (ҫепусем) те пур, пуйвăлсем те пур. Авал Инти ҫĕрĕ алмассем, ĕнҫĕсем нумайййипе пит ҫаплă пулнă, вĕсене халĕ те кăлараҫҫĕ: алмасне Теккан ҫĕрĕнҫе, ĕнҫине Тсейлон ҫывăхĕнҫе тинĕсрен кăлараҫҫĕ. Ҫав ĕнҫе шырама хинтусем (Интус-сем) кимĕсем ҫинҫен тинĕсе тĕпне ҫитех анаҫҫĕ. Йепле пулсан та, Инти ҫĕрĕнҫи тĕрлĕ йапаласене унти йывăҫ-курăкпа танлаш-тарсан, вĕсем йывăҫ-курăкран кайа тăрса йулаҫҫĕ.

Инти ҫĕрĕ аслăшĕ Йевропри Раҫҫейрен кашт кĕҫĕнрех пу-лаť те, анҫах унта пурăнакан етем 300 мĕлйуна ҫитет, вăл пĕтĕм Раҫҫейри халăхран икĕ хут ытла пулаť.

Ҫăн ĕлĕк пĕтĕм Инти ҫĕрĕнҫе хура-ўтлĕ етемсем, *травитсем*, пурăннă; анҫах Инти ҫĕрĕнҫи пурлăх тахăҫантанпах йунашар пурăнакан наҫар халăхсене, пуринҫен ытла лаптак Иран тăвĕ ҫинҫе пурăнакан халăхсене, илĕртсе тăнă. Христос ҫуралаҫҫен нумай малтан, ҫав Инти ҫĕрне вырăнтан вырăна куҫса ҫўрекен хинту йатлă шурă-ўтлĕ халăх пырса кĕнĕ. Вĕсем ҫав Хинтустан айлăмĕпе Теккан ҫур-ҫĕр йенҫи ҫĕрĕсене йăлтах йышăннă та, вара вырăнтан вырăна куҫса ҫўрес йăлине пăрах-са, пĕр ҫĕрте вырăнаҫса пурăна пуҫланă, хура-ўтлĕ травитсе-не кăнтăралла хĕстерсе йанă.

Христос ҫуралсан кайран, Инти ҫĕрне тата вырăнтан вы-рăна куҫса ҫўрекен монколсем темиҫе хут та пыра-пыра кĕнĕ. Вĕсем хинтусене ҫĕнтерсе хăйсене пăхăнтарнă Ҫапла вĕ-сем те пысăк патшалăхсем тунă та, пĕр ҫĕрте вырăнаҫса пу-рăна пуҫланă. Пурăнсан-пурăнсан, хинтусемпе хутшăнса кайса,

хайсенĕн ҭĕлхине те манса кайнă. Çур-çĕр йенҭен Инти-çĕрне тата типет халăхĕ пырса кĕнĕ, вĕсем Хималайă ту-айаккисене лара-лара тухнă. Хинтустанăн хĕвел-анăçĕ йенҭи тинĕс хĕррин-ҭи çĕрсене халăхсем Перс çĕрĕнҭен, тата Арави çĕрĕнҭен куçса пырса ларнă. Ҭăн кайран, Инти çĕрне каймалли тинĕс çул-не тупсан, унта Йеврол халăхĕсем кайма тапраннă, малтан порттукалсем, унтан хрантсуссемпе акăлҭансем. Акăлҭансем ха-лĕ те Инти çĕрне хăйсен аллинҭе тытса тăраççĕ.

Инти çĕрĕнҭе ҭăн пысăк халăх *хинтусем* (интуссем) пулаççĕ. Вĕсем Инти çĕрне пуринҭен ытла йышăнса пурăнаççĕ, хăйсем *çĕр-ĕçпе* пурăнаççĕ. Ытла нӳрĕ, ҭĕрĕ вырăнсенҭе вĕсем *рис* акаççĕ. Çак тырă валли Пенкали çĕрĕнҭе пулакан илпĕк çӳмăрсем те çитмеççĕ, çавăнпа хинтусем Канк шывне, унăн Ҭамнă йатлă йуппинҭи шыва тата ытти шывсене те каналсем тăрăх хăй-сен уйĕ-хирĕсемваррине илсе пыраççĕ. Çавăнпа та рисе хинту-сем икĕ хутҭен акса, икĕ хутҭен вырса илеççĕ; леререх, хĕ-вел-анăçĕ йеннелле кайарах парсан, пĕрре анҭах вырса пуç-тарса илеççĕ, мĕншĕн тесен унталла çумăрсем сахалтарах пул-калаççĕ. Пилĕк-Шыв çĕрĕнҭе çанталăк уйар тăрат, çавăнпа хинту-сем (интуссем), унта *тулă* акма йуратарах параççĕ. Теккан сăрҭĕ çинҭе тата *вир* акаççĕ.

Тырă-пулăран пуçне интуссем тата *çĕр-мамăкĕ*, ҭут (*джут*) йат-лă *Инти кантăрĕ, интико*, тата мăкăнь акаççĕ; кантăренҭен вĕсем майăхсем (михĕсем, хутаççем, мишуксем), сармаллисем, ме-пĕлсене витмелли хатĕрсем тăваççĕ; интикоран кăвак сăрсем хатĕрлеççĕ; мăкăнрен оппиум тăваççĕ те, киттайсем патне йараççĕ.

Саҭĕсенҭе *панан, палмă,* тинĕс хĕррисенҭе *коккос,* Пилĕк-Шыв çĕрĕнҭе *финик* палми лартаççĕ; Хималайăпа Кат ту-айак кисенҭе нумайах пулмасть, ҭей саҭĕсем туса пĕтернĕ. Тсейлон çĕрĕнҭе коккос палмисенĕн рашҭисем, рис акса тултарнă уй-хирĕсем нумай; Тсейлон варринҭе те ту-айаккисенҭе пит пы-сăк сатсем туса пĕтернĕ: ҭей саҭĕсем, кофĕ саҭĕсем, тата *ко-ритсă* саҭĕсем.

Вылҭăх ҭĕрлĕхе интуссем çĕр-ĕçлемелĕх, кирек-мĕн йапала турттармалăх анҭах усраççĕ. Килти вылҭăх-ҭĕрлĕхе вĕсем таса йапаласем теççĕ, çавăнпа вĕсем вылҭăхĕсене нихăçан та пус-маççĕ, ашне те çимеççĕ. Интуссем йывăç-курăк çимĕçне çисе

пурӑнаҫҫӗ: рис, панан, тул-пашалу, тата урӑх апат та пӗҫерсе ҫийеҫҫӗ.

Интуссем пит наҫар пурӑнаҫҫӗ; наҫар пурӑнни вӗсенӗн икӗ йапаларан пулат: пӗр йенҫен вӗсенӗн *вӑй сахал*, ҫавӑнпа вӗсем Йевропри халӑхсем пек харсӑр ӗҫлеймеҫҫӗ; тата вӗсенӗн Инти ҫӗрӗнҫе халӑх шутсӑр нумай, ҫавӑнпа унта тырӑ-пулӑ та, пур апат-ҫимӗҫ те ҫын пуҫне пит сахал тивет. Тырӑ пулман ҫухне, муссон ҫилӗсем ҫумӑрсене илсе пыман ҫухне Интире выҫлӑх пулат те, вара унта мӗлйунӗ-мӗлйунӗпе халӑх пӗтет.

Интуссем хӑйсен тӗнӗпе пурӑнаҫҫӗ, вӗсенӗн тӗнӗ Прамӑ тӗнӗ. Вӗсенӗн аслӑ туррисем виҫҫӗ: пӗри *Прамӑ*, вӑл пурне те туса тӑракан тӗнҫери ҫун; тепӗри *Вишну*, вӑл пурне те упраса тӑраканни, виҫҫӗмӗшӗ—*Ҫивӑ*, вӑл пурне те пӑсса ҫӗмӗрсе тӑраканни; интуссем Ҫивӑран пит хӑраҫҫӗ, пӗр майах ӑна кӗл-туса парнесем парса, кӑмӑлне ҫавӑрма тӑрӑшаҫҫӗ; кунтан пуҫне интуссем тата йывӑҫри, ту ҫинҫи, шыври тӗрлӗ сывлӑшсене пуҫҫапаҫҫӗ. Пуринҫен ытла вӗсем Канк шывне хисеплеҫҫӗ; унти шыва кӗрес пулсан та, вӗсем хӑйсенӗн йӑлисене туса кӗреҫҫӗ. Интуссем пур тӗрлӗ ҫӗр-ҫунсене таса йапаласем теҫҫӗ: вӗсем ҫав ҫӗр ҫунсенӗн ӑшне вилнӗ ҫын ҫунӗсем кӗрсе пурӑнаҫҫӗ тесе шутлаҫҫӗ. Интуссем хушшинҫе нумайӗшӗ, пуринҫен ытла Иран ҫывӑхӗнҫе пурӑнаканнисем, Мухаммет тӗнне тытса пурӑнаҫҫӗ.

Интуссем—хастар халӑх; авал, пирӗн тӗп-аттемӗрсем тикки ҫынсем (кайӑк ҫынсем) пулнӑ ҫухнех, интуссенӗн науккӑсем те, тӗрлӗ ӑсталӑх та пулнӑ. Пурӑнсан-пурӑнсан кайран, вӗсенӗн ӑсӗ малалла кайма ҫарӑннӑ; вӑл халӑха тӗрлӗ-тӗрлӗ кастӑ туса уйӑрса хунинҫен килнӗ, ҫав кастӑсем вӗсенӗн халиҫҫенех пур. Пӗр кастӑри ҫынсем тепӗр кастӑрисене йуратмаҫҫӗ; ҫапла пуппемпе ҫар-ҫыннисем хӑйсенҫен кӗҫӗнтерех кастӑри ҫӗр-ӗҫлекенсенҫен, ремеслапа пурӑнакансенҫен йӗрӗнсе, вӗсемпеле хутшӑнмаҫҫӗ. Кастӑра тӑман ҫухӑн ҫынсене *пари* теҫҫӗ; вӗсенӗн ҫумне сарӑмсӑр сӗртӗнсен те, етем ирсӗрленет, теҫҫӗ. Интуссем кастӑн-кастӑн уйӑрӑлнӑ пирки Йевроп ҫыннисем вӗсене ҫӑпҫӑмӑл ҫӗнтерсе пӑхӑнтарса хунӑ.

Ҫак вӑхӑтра Инти ҫӗрӗ акӑлҫансенӗн алливҫе. Пуҫлӑхсене, суту-илӳ тӑвакан хуҫасене, ҫар-ҫыннисене пурне те пӗрле

шутласан, акă̆лъђансем Инти ҫĕрĕнђе мĕн пурĕ те 200 пине анђах ҫитеҫҫĕ, ҫапах та вĕсем ҫавăнти 300 мĕлйун ытла халăха алăра тытса тăраҫҫĕ. Интуссем вĕсем вашават, ҫемҫе, сăмаха итлекен халăх; вĕсене тытса тăма йывăрах мар. Анђах сăмаха тӳрех каласан, акăлъђансем Инти-Ҫĕрне алăра, тытса тăнипе пит пысăк усă кураҫҫĕ те, хăйсем те Инти халăхне усă тукалаҫҫĕ: суту-илӳ ĕҫне араслантарса йараҫҫĕ, ђукун-ҫулсем тăваҫҫĕ, ҫĕре шăварса тăмалли каналсем, пĕвесем тăваҫҫĕ, ăшкулсем уҫаҫҫĕ, кастăн-кастăн уйăрăлса пурăннине хуллен пĕтерсе пыраҫҫĕ. Кастăн-кастăн уйăрăлнине пуринђен ытла ђукун-ҫул пĕтерет. Пĕр ваконрах парисем те, праминсем те пыраҫҫĕ, мĕвшĕн тесен праминсенђен нумайĕшĕ парисенђен пуйанах мар.

Ку таранђђен акăлъђансем ђунклире пытанса тăракан халер ђирне, ђума йатлă мура, тата маљари текен сив-ђире анђах ҫухатаймаҫҫĕ; ҫак ђирсемпе ҫулсеренех темиҫе мĕлйун халăх пĕтет. Халер ђирĕ вăл ҫула, йĕпе-сапа вăхăтĕнђе, пĕтерет; ђума хĕлле, уйарта, пĕтерет, маљари тата ҫулталăкĕпех пĕр майах ҫĕмĕрет.

Вăл ђирсем акăлъђансене те хĕрхенмеҫҫĕ; ҫавăнпа вĕсем Интире нихăшĕ те нумай пурăнасшăн мар, ĕҫĕсене туса пĕтерсенех, ђасрах хăйсен ҫĕр-шывне, йе урăх ҫĕре, хыҫал йенђи Хималайăн сăртлă ҫĕрне, кайма тăрăшаҫҫĕ; унта ҫангалак ҫирĕпрех.

Инти ҫĕрне тытса тăма провинтсисем, патшалăхсем туса уйăрнă; провинтсисене акăлъђан кĕпĕрнеттĕрĕсем тытса тăраҫҫĕ, патшалăхсене ҫав ҫĕрсенђе пурăнакан кĕнеҫсем, *раљасем*, тытса тăраҫҫĕ. Пĕтĕм. Инти ҫĕрĕн пуҫлăхĕ акăлъђансенĕн *витсе-королĕ* пулать.

Инти ҫĕрĕн пуҫ-хули *Тели* йатлă, вăл Ђамнă шывĕ ҫинђе ларать; унта авалхи пысăк кĕлĕ-ҫурђĕсем, мăн ҫуртсем пур. Анђах Инти ҫĕрĕнђи ђăн аслă хула *Калькуттă*. 200 ҫул ĕлĕк Калькуттă вырăнĕнђе пĕр пĕђĕк йал анђах пулнă, халĕ унта пысăк порт, мăн хула; хулинђе пурăнакан халăх 1 мĕлйун ытла. Акăлъђансене пула, Инти ҫĕрĕнђи тепĕр пысăк хули *Помпей* те ҫавăн пекех ђас мăнаҫланса кайнă. Йут халăхсемпе тăвакан суту-илӳ ĕҫĕ ҫак икĕ хулара пулать. Йут

çĕрсене кайакан таварсем ак çаксем: çĕр-мамăкĕ, ђут, оппиум, пуринђен ытла вăл Киттай çĕрне кайаҭ.

Ђылай паха портсем тата ак çаксем пур: *Матрас, Каратђђи,* вăл Инт тинĕсе пырса кĕнĕ çĕрте, тата *Ісейлонри Коломпо.* Йинти варринђе ђăн ђаплă хула *Пенарес,* вăл Канк шывĕ çинђе лараҭ; вăл интуссен светтуй хули; унта турăсене пуççапма темĕн ђухлĕ халăх çӳрет, унта кĕлĕ-çурђĕ пин ытла.

Вĕсем унта кĕлĕ-çурђĕсенђе кĕл-тăваççĕ ирхине ирех Канк, ырă шывне кĕрсе çăвăнаççĕ.

Ушкăнĕ-ушкăнĕпе интуссем, кĕл-тăва кĕл-тăва, ђеђексем пăраха-пăраха, пăтранђăк Канк шывне кĕреççе. Унтан аллисемпе шыва ăсса илсе, хул-пуççисене, пуçĕсене, кăкăрĕпе çурăмĕсене йĕпетеççĕ; тăванĕ-пĕтенĕсем хайсенĕн ђирлĕ çыннисене, ђас-ђасах вилес патне çитнисене, иле-иле пыраççĕ, вĕсене Канк шывĕ ђĕрттĕр, йе ырă вилĕм йатăр, теççĕ. Шыв хĕрринђе вутсем çунаççĕ, вилнĕ çынсене унта хурса çунтарса йараççĕ. Çунса кайнă çынсенĕн кĕлне Канк шывне пăрахаççĕ, шывпа тинĕсе йухса кайтăр, теççĕ.

Интокиттай.

Интокиттай çĕрне урăхла *Катари Инти* теççĕ. Вăл сăртлă çур-утрав. Пĕр йенђен ăна Пенкали тинĕс урипе Малаккă пырĕ шывĕсем, тепĕр йенђен Кăнтăрти Киттай тинĕсĕн Çиампа Тонккин уринђи шывсем çуса тăраççĕ. Интокиттай тăвĕсем Типетрен пуçланаççĕ те, кăнтăралла кайаççĕ, унта вара хӳре пек тĕрлĕ çĕрелле сарăлса кайаççĕ. Пĕр тăвĕ кăнтăралла витрех ђăсăлса кайаҭ, вăл Малаккă йатлă çур-утрав пулаҭ.

Кăнтăрпа хĕвел-анăçĕ хушшинђен вĕрсе тăракан çулахи муссонсем Интокиттай çĕрне Хинтустанран та ытларах шӳтерсе тăраççĕ. Çавăнпа Интокиттай çĕрĕнђи тусем пурте троппик вăрманĕсем айĕнђе лараççĕ; çав вăрманĕсем варринђе слонсем, мăйрака-сăмсасем, таппирсем, темĕн ђухлĕ упăтесем пурăнаççĕ. Анђах етеме пурăнма вĕсем пит лайăхах мар, мĕншĕн тесен вĕсене тырă тумалăх хăртма пит йывăр.

Тусем хушшинђи варсем тăрăх шывсем йухаççĕ: *Меккон*к, *Іраватти,* тата урăххисем те пур. Варĕсем тăвăр, вĕсене тусем хĕстерсе тăраççĕ, çавăнпа унта çынсене пурăнма лайăхах мар.

Шывсем йухса кӗнӗ ҫӗрте анҫах вӗсем сарлака, ҫӗрӗ те япатҫимӗҫ тума лайӑх.

Интокиттайра халӑх пуринҫен ытла ҫавӑн пек ҫӗре ларса тухнӑ, Унта тӗрлӗ халӑх пур: хӗвел-тухӑҫӗнҫе *киттайсем*, кӑнтӑрта *малайсем*. Вӗсем *ҫӗр ӗҫлесе* пурӑнаҫҫӗ, *рис* акаҫҫӗ. Ҫумӑр илпӗк ҫунӑран, тата шӑвармалли йапаласем пуртан, тырӑ-пулӑ унта пит лайӑх пулаӗ, ҫавӑнпа Интокиттайран рисе урӑх ҫӗрсене те нумай турттарса кайаҫҫӗ.

Туайакки сенҫе, троппик вӑрманӗсем хушшинҫе ҫӗр ӗҫ тума пит хӗн, ҫавӑнпа унта вӑрман ӗҫне, тата ту ӗҫне ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ. Вӑрмансенҫе *тек* йывӑҫӗсене, хура йывӑҫсене, лайӑхраххисене суйла-суйла, касаҫҫӗ те, слонсемпе пысӑк шывсем ҫине антараҫҫӗ, вара ҫав шывсем тӑрӑх тинӗс ҫине илсе тухаҫҫӗ. Ту ӗҫӗ те пит паха, мӗншӗн тесен Интокиттайри тусем варринҫе тӑхлан пур, тата тӗрлӗ хаклӑ йышши ҫулсем нумай: рупинсем, сапфирсем, тата урӑххисем те пур.

Интокиттай ҫӗрӗ пӗтӗмӗшпе пӗрех Йевропри халӑхсенӗн аллинҫе тӑраӗ: ҫур-ҫӗрпе хӗвел анӑҫӗ хушшинҫи ҫӗрне *Пирмӑ* теҫҫӗ, вӑл акӑлҫансен аллинҫе, ӑна тытса тӑраканни Инти ҫӗрӗнҫи витсе-король. *Пирмӑри* ҫӑн аслӑ порт, ҫӑн пысӑк хула—*Ранкун*. Интокиттайри ытти пысӑк портсем пекех, вӑл та пит паха, унтан: рис, тек йывӑҫӗ, хура йывӑҫ, шупка-хӗрлӗ йывӑҫ, тата урӑх йывӑҫ та нумай кайаӗ.

Малаккӑ ҫӗрӗн кӑнтӑрти татӑкӗ те акӑлҫансен аллинҫех, ҫавӑн вӗҫӗнҫе тӑракан утрав ҫинҫе акӑлҫансен *Ҫинкаппур* йатлӑ пысӑк порт пур; Интипе Аслӑ Оккеан тӑрӑх ҫӳрекен карапсем пурте, кайаҫҫӑн та, килеҫҫӗн те, унта кӗрсе ҫаранса тӑраҫҫӗ.

Интокиттайри мал-йенҫи ҫӗр Хрантси аллинҫе; унти ҫӑн аслӑ порт—*Сайкон*.

Интокиттай варринҫе, Анклипе, Хрантси тытса тӑракан ҫӗрсем хушшинҫе, хӑй тӗллӗн пурӑнакан *Ҫиам* патшалӑхӗ пур. Вӑл патшалӑхӑн пуҫ-хули, аслӑ порҫӗ—*Панккок* йатлӑ

Ҫав Панккокра мӗн пурӗ 600.000 ҫын пурӑнаӗ, пуринҫен ытла киттай нумай. Вӑл хула *Менам* шывӗ ҫинҫе ларать, урамӗсем вырӑнне унта йӑлтах каналсем алтса тухнӑ. Ҫурҫӗсене канал хӗррипе свайсем ҫине лартнӑ; шывӗ ҫинҫе ҫуртсем кварттӑлӗкварттӑлӗпе йакӑрпа ишсе ҫӳреҫҫӗ. Панккокра Пут (Будда) йаҫӗ-

пе тунă пит пысăк илемлĕ кĕлĕ-çурђĕсем нумай, пĕр кĕлĕ-çуртĕнђе йаланах темиçе шурă слон тытса тăраççĕ. Çиамсем çак выђăха Пут тĕсĕ тесе хисеплеççĕ, пĕр-пĕр çĕрте вăрманта тĕл-пулсан, ăна вара, хĕпĕртесе, ђысласа, хăйсен пуç-хулине илсе пыраççĕ те, хисеплесе пăхса усраççĕ.

Малай утравĕсем.

Малай утравĕсем вĕсем Аçипе Австрали хушшинђе, вĕсем оккеанри çĕмĕрĕлсе аннă кĕпер пек, çĕмĕрĕлмесĕр йулнă кĕпер сыпăкĕсем пек курăнса тăраççĕ. Вăл утравсем ак çаксем: *Пысăк Сонтсем (Суматрă, Йавă, Порнео, Тселепес)*, *Кĕçĕн Сонтсем, Молуксем, Филиппинсем.*

Çав утравсем тăрăх тусем ђăсăлса тăраççĕ, вĕсем хăйсем те çав тусенĕн ђăсăкĕ майлă ларса тухнă, кĕлетки те вĕсенĕн çав тусенђенех килет. Çапла Суматрă, Йавă, тата Кĕçĕн Сонт утравĕсем пурте пĕр ту ђăсăкĕнђен татăлса йулнă çĕрсем, Тселепесĕн тĕленмелле капăр кĕлетки ун варринђе тĕрлĕ тусем пырса çыпăçнинђен пулса тăнă.

Утравсем çинђе çав Интипе Аслă оккеан хĕррипе сӳнсе ларнă вулкkансемпе сӳнмен вулкkансем ĕређĕпе ларса тухнă. Сӳнмен вулкkанĕсем тапранса тухнипе нумай сийен пулаŤ, пуринђен ытла унашкал йывăрлăх Суматрăпа Йавă çинђе ђас-ђасах пулаŤ. Суматрăпа Йавă хушшинђе, Сонт пырĕнђе, пĕр *Краккаттау* йатлă вулкkан пур, ăна нумайђђен сӳннĕ тесе шухăшласа пурăннă. 1883-мĕш çулта вăл пит хăрушă тапранса кайнă. Ун çăварĕнђен 30 çухрăм çӳллĕш кĕл сиксе тухнă; Краккаттау çĕрĕ пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех çӳлелле сирпĕнсе кайнă. Тинĕс хумханса кайнă тем пысăкăш тинĕс хумĕсем çыран урлă каçса Суматрăпа Йавă çĕрĕ çинелле тухнă; вĕсем вара йалсене, хуласене нумай шăлса кайнă, унта 40,000 çын ытла халăх пĕтнĕ. Вулкkан çурăлса тухнă сасă Тсейлонпа Филиппин çĕрĕнђе илтĕннĕ.

Малай архипелакĕнђе климăт троппикри те, тата пит пĕр пек тăраŤ *(мĕншĕн вăл апла?)*; унта хĕлле те, çула та пĕр пекех вĕри çанталăк. Йалан йĕпе-сапа тăраŤ, тип-уйар нихăçан та пулмасŤ; çавăнпа утравсем пурте троппикри аслă вăрман-

сем айёнҫе тăраççĕ; вăрманĕсем пит çăрă та, упăтесем пĕр турат çинҫен тепĕр турат çине сике-сике, çĕре тивмесĕрех таçта çитех кайаççĕ; йывăçĕсем тата пит çўлĕ, вĕсен çумĕнҫе пирĕн патри çĕр çулхи йуманлăхсем, вĕтлĕх пек, çамрăк хунав пек анҫах туйăнаççĕ.

Малай вăрманĕсенҫе темиçе тĕрлĕ палмăсем, пантансем, кăнхвара йывăççисем, каучук йывăçĕсем, тата йывăç пек пысăк ух-тăррисем (папоротниксем) ўсеççĕ; пурне те вĕсене лиан текен йывăççем сырса илнĕ; ăçта килҫĕ унта йут йывăç сĕткенне ĕмсе пурăнакан куракксенĕн ҫеҫекĕсем çакăнса сарăлса тăраççĕ; йывăç тымарĕсем çинҫе те параçит куракксем ўсеççĕ; çавăн пек курăк раффлеçи, учăн ҫеҫек сарлакăшĕ аршăн çурă пулаť, пĕтĕм çĕр çинҫе унпа тан пысăк ҫеҫек урăх çук. Ҫĕр-ҫунсем çавăнти вăрмансенҫе, пуринҫен ытла тĕп-çĕр (маттерик) çывăхĕнҫи утравсенҫе пит нумай: унта хир-слонĕсем те пур, мăйракасăмсасем те, тикăрсем те, тата етем тĕслĕ упăтесем те нумай. Маттерикрен шаларах кайсан ҫĕр-ҫун сахалланнă çемĕн сахалланса пыраť; Молук утравĕсенҫе халĕ асăннă ҫĕр-ҫунсенҫен пĕри те çук, амăшĕ сĕтне ĕмсе ўсекенҫĕр-ҫунсем пит сахал, тĕрлĕ вĕçен-кайăк пит нумай.

Çак утравсем çинҫе пурăнакан тĕп-халăх—*малай* халăхĕ, вăл утравсене те çавăнпа *Малай* утравĕсем теççĕ. Малайсем *çĕрĕçпе* тăранса пурăнаççĕ. Вĕсем вăрмансене кăкласа çунтарса хирсем тăваççĕ те, *рис* акаççĕ, унта вара шăварма каналсем алтаççĕ, пĕвесем туса çавăраççĕ, тата урăх та нумай хăтланаççĕ.

Малайсемшĕн рис йепле паха, *коккоспа саго* палмисем те çаван пекех пит паха. Йывăç çимĕçĕсенҫен пурте çийекен çимĕçсем *пананпа ананас*. Малайсем тата гвоздика йывăçне пăрăç тĕмисене тата пылаклă урăх йывăççене те нумай лартса ўстереççĕ; пылаклă йывăçсем вĕсем Молук уттисенҫе пит нумай.

Тахçан ĕмĕртенпе тинĕс хĕрринҫе пурăннă пирки, малайсем пит ăста пулăçăсем, тинĕс çинҫе çўреме пĕлекенсем пулса кайнă. Утравсем хушшинҫе пур çĕрте те вĕсенĕн пĕҫĕк киммиçем, парăс карнă киммисем çўреççĕ,—пулă, треппанк, коккос мăйăрĕ, пылаклă йапаласем тултарнă—пыраççĕ. Ĕлĕк вĕсене тинĕс вăрă-хурахĕсем тесе йат кăларнă-ҫҫĕ, анҫах халĕ-хурах пусас ĕç тинĕсре ҫараннăпа пĕрех.

Малайсем тинӗс хӗррисенҫе, шыв таврашӗнҫе йалӑн-йалӑн ларса тухна; кил-ҫурҫӗсене вӗсем палма тураҫӗсенҫен, ҫулҫисенҫен тӑваҫҫӗ; тискер кайӑксем йе пӗр-пӗр тӑшмансем пырса ҫӗмӗрсе кайасран вӗсем пӳрҫӗсене шыв варрине сӑвай ҫине туса лартаҫҫӗ, хӑш ҫухне тата ҫӳлӗ йываҫ ҫине те туни пур.

Малай утравӗсем, Сонтпа Молук утравӗсем, пурте тенӗпе пӗрех, Колланти аллинҫе. Коллантсем нумайранпах хӑйсенӗн ҫак колонийӗсенҫе хапрӑк-савӑт ӗҫӗпе суту-илӳ ӗҫне малалла йарасшӑн хытӑ тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӗсем малайсене сахӑр хӑмӑшне, кофӗ йывӑҫне, хинӑ йывӑҫне, тата тапак лартса ӗҫлеттернӗ, хинӑ йывӑҫне вӗсем Кӑнтӑрти Америкрен турттарса пынӑ. Халӗ Малай утравӗсенҫе нумайӗшӗн ҫинҫе пуринҫен ытла ҫав йывӑҫ-куракӑсене лартса, пахҫасем туса пит пысӑк усӑ кураҫҫӗ.

Нумай та пулмаст, Йава уттине хура сӗм-вӑрмансем анҫах хупласа тӑнӑ, вӑл вӑрмансем витӗр мӑйрака-сӑмсасенӗн ҫулӗсем тӑрӑх анҫах ҫӳреме пулнӑ. Халӗ унта уй-хирсем, пахҫасем ҫур выран ытла йышӑнса тӑраҫҫӗ Айлӑмсенҫе рис уйӗсем, сахӑр хӑмӑшӗпеле тапак пахҫисем, ҫӳлӗрех вырансенҫе кофӗпе ҫей йывӑҫӗн пахҫисем, тата ҫӳлерехре хинӑ йывӑҫӗн пахҫисем саралса тӑраҫҫӗ.

Йаварри ҫӑн аслӑ хула порт Паттави, унта Коллантин кенерал-кӗпӗрнеттӗрӗ пурӑнат.

Филиппин утравӗсем Ҫур-ҫӗр йенҫи Америкри Штатсенӗн аллинҫе, унти аслӑ порт—*Манилйӑ.*

Иран.

Иран вӑл—лаптак ту, ун тавра ҫӳлӗ сӑртсем ларса тухнӑ. Вӗсем хушшинҫе ҫи ҫӳллисем сив-йенҫе: *Хинтукушпа Елпрус.* Елпрус тӑрри *Темавент*, ун ҫӳллӗше 5 ҫухрӑм ытла; вӑл сӳнсе пӗте пуҫланӑ вулккан, унӑн краттӗрне пӗтӗмпех йур тулса ларнӑ. Иранӑн мал-йен хӗррине *Сӑлиман* тӑвӗсем тӑраҫҫӗ; Инти оккеанӗ хӗррипе, тата Перс тинӗс-ури хӗррипе Кӑнтӑрти *Иран* тӑвӗсем тӑраҫҫӗ.

Иран ҫӗрӗнҫи ҫантӑлӑк уйар ҫантӑлӑк *(мӗншӗн вӑл апла?)*; ҫула унта ҫӑтма ҫук шӑрӑх, пӗр татӑксӑр уйар ҫантӑлӑк тӑ-

раӗ, хутран-ситрен анҫах ҫӳлте пӗлӗтсем тухкалаҫҫӗ; сывлӑшра тусан тулса ҫитет те, тусем хӗрлӗ кӑвак тӗтӗм хупласа илнӗ пек курӑнаҫҫӗ. Хӗлле пулсан, сивӗ нӳрӗ ҫанталӑк пулаӗ, ту хӗррисем йурпа витӗнеҫҫӗ. Ҫур-кунне ҫав йурсем кайаҫҫӗ те, куракссм шӑтса тухаҫҫӗ, анҫах вӗсем ҫасах типсе лараҫҫӗ.

Иран ҫӗрӗнҫе вӑрмансем Елпрус тӑвӗн ҫур-ҫӗр йенҫи айаккисенҫе анҫах ӳсеҫҫӗ, унта йӗпе-сапа нумай пулаӗ, тата Хинтукуш айлӑмӗсенҫе те вӑрмансем пур. Иран ҫӗрӗнҫе хӑйӑрлӑ, тӑварлӑ пуш-хирсем пит нумай вырӑн илсе тӑраҫҫӗ, тӑварӗ вӗсенӗн хӗвелте йур пек йӑлтӑртатса выртаӗ.

Иран ҫӗрӗнҫе етем пурӑнма лайӑхрах вырӑнсем шыв хӗррисенҫе анҫах пур. Ҫӑннипе каласан, вӑл шывсем ӑшӑх, ҫитменнине тата *Килмент* шывӗ пек вӗсем нумайӗшӗ хӑйӑрта ҫухалаҫҫӗ, йе тӑварлӑ шурсем (хамунсем) пулса лараҫҫӗ; апла пулсан та, вӗсенӗн хӗррисенҫе *тырӑ та, сатсем те тума* пулаӗ, *каналсем* алтса шывсем йарса, уйсене анҫах шӑвармалла. Каналӗсенҫи шывӗсем шӑрӑхра ахаљ ан пӗҫҫӗр тесе, Иран ҫӗрӗнҫи халӑхсем, *перссемпе афкансем*, каналӗсене ҫӗр айӗпе йараҫҫӗ, тарӑнӑшне ҫас-ҫасах 50 ҫалӑш та ытларах алтаҫҫӗ. Ҫавӑнашкал ҫӗр айӗпе пыракан каналсене Иранра *канатсем* теҫҫӗ, нумайӗшӗ вӗсем темиҫешер ҫухрӑм кайаҫҫӗ

Ҫав канатсенҫе ҫӗр ҫакалакан ҫынсем пинӗ-пинӗпе ӗҫлеҫҫӗ, йӑтӑна-йӑтӑна аннӑ ҫӗрсене тасатаҫҫӗ. Ҫав канатсем тӗпне, ҫӑл пурисем тӑрӑх аҥаҫҫӗ, вӑл ҫӑлӗсене пӗр-пӗринҫӗн ытла инҫе тумаҫҫӗ. Кашни канат пуҫламӑшӗ тусем ҫинҫе пулаӗ вӗҫӗ айлӑмра пулаӗ. Унта вара шывӗ ҫийеле тухаӗ те, уйсене пахҫасене шӑвараӗ.

Иран ҫӗрӗнҫе уйсене *рис, тулӑ, урпа* акаҫҫӗ. Нумайах пулмасӗ, тата *ҫӗр-мамӑкӗпе* мӑкӑҥ акаҫҫӗ, мӑкӑнӗнҫен оппиум тӑваҫҫӗ. Пахҫисенҫе *перҫҫик*, априккос, иҫӗм-ҫырли, минтаљ, кӑнтӑртарахра финик паљми те ӳсет. Йывӑҫ ҫимӗҫӗсем пит ӑнса пулаҫҫӗ, вӑл ҫимӗҫсене Иран ҫӗрӗнҫи халӑхсем ҫӗрӗлле те, типӗлле те ҫийеҫҫӗ; вӑл ҫимӗҫсем вӗсемшӗн пирӗн пахҫа ҫимӗҫӗ вырӑнне пулаӗ.

Иран сӑрҫӗ хӗррисенҫе, куракссм ӳснӗ вырӑнсенҫе пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре куҫса ҫӳрекен халӑхсем пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем лашасем, тӗвесем, сурӑхсем, каҫакасем ӗрҫетсе пурӑнаҫҫӗ; мӑйракалӑ шултӑра выљӑхсене унта усрама май ҫук.

Иран ҫӗрӗнҙе виҫӗ тӗслӗ патшалăх: *Перҫҫи, Афканистан*, тата *Пелутҙистан*.

Перҫҫи патшалăхне *шах* тытса тăрат; ăна Мухаммет пророк вырăнӗнҙе ларат, тесе хисеплеҫҫӗ; унăн ирӗкне, нумай пулмаст, халăхран суйласа йанă ҫынсенӗн пухăвӗ (меҙлис) кӗҫӗнлетнӗ.

Перҫҫи патшалăхӗнҙе тӗплӗ йӗрке (саккун) ҫукпа пӗрех, ҫавăнпа унти тӳре-шарасем халăхран куланай пуҫтарассине те, сут ӗҫне те, халăха тыткаласине те, йепле кăмăл суннă, ҫапла тăваҫҫӗ; нумайах пулмаст, парламент саккунсем кăларма пуҫларӗ. Халăх унта пит хурлăхра: халăх ӗҫлесе тăракан ҫӗр йе шах аллинҙе, йе ҙаплă улпутсен аллинҙе; ушшăн вӗсем халăхран тунă тыррине ытлашшипех илеҫҫӗ. Халăха вӗрентмелли ăшкул ӗҫӗ унта пит наҙар; ăшкулӗсенҙе Мухаммет тӗнӗ кӗнекине, Курана, вулаҫҫӗ те, тата Перҫҫи поеҙӗсем ҫырнă сăвăсене калама анҙах вӗренеҫҫӗ.

Перҫҫи ҫӗрӗнҙе ҙукун—ҫулсем ҫук, таварсене тӗвепе, лашапа караван ҫулӗсем тăрăх турттараҫҫӗ. Йут халăхсемпе тунă суту-илӳ ӗҫӗ йут ҫӗрти ҫынсенӗн аллинҙе: ҫур-ҫӗр йенҙе вырăс аллинҙе, кăнтăрта акăлҙан аллинҙе.

Вырăссем Перҫҫи ҫӗрӗнҙен ҫӗр-мамăкӗ, рис, типӗтнӗ йываҫ ҫимӗҫӗсем, коверсем (палассем) илсе тухаҫҫӗ, хăйсем унта ҫӗр-мамăкӗнҙен тунă пир-аварсем, сахăр, тата вырăс хапрăкӗсенҙе, саваҙӗсенҙе тунă урăх йапаласем те турттарса пыраҫҫӗ.

Перҫҫи патшалăхӗн пуҫ-хули *Текеран*, унта суту-илӳ ӗҫӗ те пысăк тăрат.

Текеран вăл Елпрус тăвӗ айӗнҙе, кăнтăр йенҙе ларат; унта ҫав Елпрус тăвӗ ҫинҙен ҫӗр айӗпе шывӗ канал тăрăх пырат. Вăл хула хăйӗн пасарӗпе, миҫӗҙӗсемпе, шахăн капăр пысăк ҫурҙӗсемпе пит ҙаплă тăрат.

Ытти хуласем хушшинҙе паха хуласем ак ҫаксем: *Решт*, *Пушшир*, *Таврис*, тата *Мешхет*, Решт вăл Раҫҫейпе суту-илӳ туса тăрат, Пушшир—акăлҙанпа, Таврис—тӗрӗкпе; Мешхет перссенӗн ҫветтуй хули, унта кашни ҫул Перҫҫи ҫӗрӗнҙен пур йенҙен те темӗн ҙухлӗ халăх кӗл-тума ҫӳреҫҫӗ.

Афканистан—вăл Раҫҫейпе акăлҙан тытса тăракан ҫӗрсем хушшинҙе; Памир ҫинҙе вӗсене афкансенӗн пӗр ансăр ҫӗр хушăкӗ анҙах уйăрса тăрат. Унта пурăнакан халăх перссемпе

пӗр йӑхран тухнӑ *афкансем*; вӗсене *емир* тытса тӑрат, вӑл Инти ҫывӑхӗнҗе ларакан *Капул* йатлӑ хулара пурӑнат. Вӗсенӗн тепӗр җаплӑ хули *Херат*, вӑл Раҫҫей җикки патӗнҗе ларат.

Пелутҗистан ҫӗрӗ акӑлҗан аллинҗе, ӑна Инти витсе-королӗ тытса тӑрат.

Кӗҫӗн Аҫипе Армени ҫӗрӗ.

Кӗҫӗн Аҫи вӑл Иран пекех сӑртлӑ ҫӗр, пӗҗӗкрех те, лутрарах анҗах; ҫур-ҫӗр йенҗи җикӗре унӑн *Понт* тӑвӗсем пур, кӑнтӑр йенҗе Тавр тӑвӗсем ҫӗкленсе тӑраҫҫӗ; вӑта ҫӗрӗнҗе, тусем хушшинҗе, лаптак сӑртлӑ ҫӗр пур.

Хӗвел-анӑҫӗ йенҗӗ Кӗҫӗн Аси ҫумӗнҗе утравсем ушкӑнӗпех тӑраҫҫӗ, ӑна *Крек* утрӑвӗсем теҫҫӗ; вӗсем Аҫипе Йеврол ҫӗрне тытӑнтарса тӑракан ишӗлсе саланса кайнӑ кӗпер пек туйӑнаҫҫӗ.

Иранпа Кӗҫӗн Аҫи хушшинҗе тӑракан сӑртлӑ ҫӗре Армени ҫӗрӗ теҫҫӗ; унта сӳнсе ларнӑ вулккансем нумай

Ҫав вулккансем хушшинҗе җӑн ҫӳлли *Арарат*; ҫӳллӗшӗнҗен пулсан, вӑл Темавентрен кӑшт анҗах кайра тӑрат; тинӗс ҫийӗнҗен шутласан, унӑн ҫӳллӗшӗ 5 ҫухрам; унӑн пуҫӗ, шурӑ ҫӗлӗк тӑхӑннӑ пек, ӗмӗрхи йурпа витӗнсе тӑрат.

Вулккансем хушшинҗе хуран майлӑ ҫӗр шӑтӑкӗсем нумай, вӗсем шӑраннӑ ҫӗр пӗрӗхсе тухнипе пулнӑ: шӑравнӑ ҫӗр йухса пырса, кӗл купаланса ларса, шывлӑ айлӑмсене картласа хунӑ; хӑш-хӑш ҫӗр шӑтӑкӗсене шыв тулса, кӳлӗсем пулнӑ; *Ван кӳлли* ҫавӑн пек кӳлӗ.

Кӗҫӗн Аҫипе Арменире климӑт Иранринҗен лӑмлӑрах; йӗпесапа унта җас-җасрах пулат, мӗншӗн тесен унта нӳрӗклӗ ҫилсем Атлант тинӗсӗнҗен вӗрсе ҫитеҫҫӗ, ҫавӑнпа алӑпа шӑварса хӑтланмасӑрах унта ҫӗр-ӗҫ тума пулат. Кӗҫӗн Аҫи ҫӗрӗ варринҗе анҗах ҫӑнталӑк типӗ (*мӗншӗн вӑл?*), ҫапах та унта вылҗӑхҗӗрлӗх усрама лайӑх.

Ҫур-кунне йурсем ирӗлсе пӗтсен, Кӗҫӗн Аҫипе Арменире ҫӗр пит нумай нӳрӗк сӑхса илет; ҫавӑнпа тусем айӗнҗен ҫӑлкуҫсем вӗресе йухса тӑраҫҫӗ, варсем тӑрӑх шывсем кӗрлесе йухаҫҫӗ.

Ту-айаккисем йешĕл куракпа витĕнеççĕ, анђах çу пуçланађђен типсе лараççĕ. Вăрмансем сахал; Понт тăвĕн çур-çĕр йенђе анђах çăра йуманлăхсем, пук вăрмавĕсем пур. Çав тусенĕнех кăнтăр йевђе айлăмсенђе анђах вăрмансем пур, вĕсенђен леререх çеçен хирсемпе тăварлă пуш-хирсем сарăлса выртаççĕ. Тавр тăвĕн айаккисенђе, тата Кĕçĕн Аçин хыçалти хĕрринђе ĕмĕр йешерсе тăракан лутрашка миртпе лавр йывăçĕн вĕглĕхĕсем-çеç тĕл-пулкалаççĕ.

Кĕçĕн Аçипе Армени çĕрĕнђе пурăнакан халăхсĕм хушшинђе ђи йышлă халăх *тĕрĕксем.* Вĕсем тăрăшса ĕçлекен *çĕр-ĕç çынинсем,* тата *пахђаçăсем.* Хăйсен уйĕсене вĕсем пуринђен ытла *тулăпа урпа* акаççĕ, тырă пулăран пуçне вĕсем тата *тапакпа мăкăнђ* тăваççĕ. Оппиум туртма тĕрĕксем перссем пекех вĕреннĕ çемĕн вĕренсе пыраççĕ. Пахђисенђе вĕсем *фикă (смоква) йывăçне,* тата *иçĕм-çырли йывăçне* ӳстереççĕ: лешĕ вĕсене *ерех-çырли* парать, кун çырлинђен вĕсем иçĕм хатĕрлеççĕ. Хĕвел-анăçĕ йенђе тĕллĕн-тĕллĕн тĕрĕксем *тут йывăçĕ* ĕрђетсе, пит пысăк сатсем, планттатсисем тăваççĕ те, пурçăн хатĕрлеççĕ. Типĕрех вырăнсенђе, Кĕçĕн Аçи варринђе, вĕсем выђăх-ђĕрлĕх нумай усраççĕ, пуринђен ытла *Анкорă катђакине* ĕрђетеççĕ, вал кађака вĕсене пурçăн пек паха çăм парать. Çав кађакасене *Анкорă* хули тавраш ĕнђе нумай усраççĕ, çавăнпа кађакисене те Анкорă кађакисем теççĕ.

Тĕрĕксем вĕсем пит вăрçа йуратакан харсăр халăх. Темиçе çĕр çул ĕлĕкрех вĕсем Аçире мар, Йевроппа Африкре те пысăк çĕрсем турта-турта илнĕ. Кайран вĕсем çав вăрçса туртса илнĕ çĕрсене нумайĕшне каллех аларан ĕçертсе йанă пулсан та, Аçире вĕсен халĕ те çĕрсем пит пысăк; вĕсен аллинђе ак çак çĕрсем: *Кĕçĕн Аçи, Армени, Мессоппоттами, Çирипе Палестин,* тата Аравире те пăртак пур.

Тĕрĕксем сатур халăх пулин те, анђах пикенђĕксĕр, тĕгтĕм халăх. Вĕсен аллине кĕнĕреппе пур çĕрте те пурăнăç кайалла кайнă, халăх сахалланнă: ĕлĕк уй-хирсене шăварма тунă каналсем пăрахăç пулнă, нумай хуласем саланса-çеç выртаççĕ. Тĕрĕксен тĕнĕ *Мухаммет тĕнĕ,* мĕн вĕренни те вĕсенĕн Куран кĕнекине вулама вĕренни анђах; вĕсем Христоса ĕненекенсене йуратмасăр йĕрĕнсе пурăнаççĕ.

Кĕçĕн-Аçи хĕррисенҫе тата. Екей тинĕсĕнҫи утравесем çинҫе крексем нумай; çав крек халăхĕ суту-илӳ тума хастар халăх; Кĕçĕн-Аçири суту-илӳ ĕçĕ пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех вĕсенĕн аллинҫе. Вĕсем тата йывăç пахҫисем тăваççĕ, тинĕсĕнҫе купкă (пăлăт) тытаççĕ.

Арменире тĕрĕксенҫен пуçне тата *ерменсем, куртсем* пурăнаççĕ. Ерменсем Христос тĕнне тытса тăраççĕ, вĕсем килçуртпа пурăнаççĕ, çĕр ĕçлеççĕ, выљăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетсе пурăнаççĕ. Куртсем Мухаммет тĕнне тытса пурăнаççĕ, выљăх-ҫĕрлĕх усраса, вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ; хăйсемпе пĕр тĕнлĕ тĕрĕксем ирĕк панипе вĕсем ним хăрамасăр ерменсене çаратса вĕлерсе пурăнаççĕ. Ерменсене хĕç-пăшал тытма ирĕк памаççĕ, çавăнпа вĕсем хăйсенĕн тимĕр алăкĕсемпе ҫӳреҫери тимĕр решеткисене анҫах шанса пурăнаççĕ; нумай ермен килçурҫĕ пĕҫĕк креппĕçпе пĕрех.

Кĕçĕн Аçири ҫăн пысăк ҫаплă хула—*Смирнă*; унта пит хӳхĕм порт пур; пурăнасса крексем пурăнаççĕ; Кĕçĕн Аçи варринҫи çĕрсемпе вăл Йевроп çыннисем тунă ҫукун-çулпа хутшăнса пĕтĕçсе тăрат. Ытти паха портсем—Посфорти *Скуттари*, вăл Тĕрĕк патшалăхĕнҫи пуç-хулине, Константтиноппăле, хирĕçех, тата Хура тинĕс хĕрринҫи *Траппесунт*. Арменире ҫăн пысăк хула *Ерçерум*.

Кĕçĕн Аçирен кăнтăрлара крексем пурăнакан *Кипр* йатлă утрав пур; ĕлĕк вăл тĕрĕксен аллинҫе пулнă, хăлĕ акăљҫансен аллинҫе; вĕсем пĕр саманра унта пурăнакан халăхăн пурăнăçне çĕклесе йанă.

Мессоппоттами.

Мессоппоттами тесе Тикрпа Йевфрат шывĕ йухса выртакан айлăм çĕре калаççĕ; вăл çĕр çав шывсем çăва-çăва лартнă лăймапа йусанса тăнă; авал, каналсем туса шыв йанă ҫух, вăл çĕр пит илпĕк çимĕç кӳнĕ, вăл çăра ларса тухнă халăха тăрантарса усранă. Анҫах çав каналсем пăрахăçа тухсан, вăл çĕр пĕтĕмпех пушанса йулнă. Ăçта ĕлĕк ырă уй-хирсемпе йывăç пахҫисем пулнă, халĕ унта йе çара хăйăр, йе шурлăх, выртат; ăçта ĕлĕк хуласем пулнă, халĕ унта çав хула ванҫă-

кěсем анђах саланса тăраççě: çўревçě çынсене *Вавилон* хули ванђăкě пит тěлěнтерет.

Пăт-пат тěлте-çеç финик паљми утарěсем пур, вěсен варринђе çурт-йěрпе пурăнакан арап йалěсем пур, çав арапсем тěрěксене те куланай тўлесе пурăнаççě, *петуин* вăрă-хурахěсене те парса тăраççě.

Тикр хěррипе халăх Йевфрат шывě хěрринђен нумайтарах ларса тухнă, мěншěн тесен Тикр çине Иран тăвě çинђен йуххса анакан шыв йуппისем пырса кěреççě; Йевфрат вăл пěр майах пушă-уйваррипе пырат.

Месcопноттамири ђăн пысăк хуласем Пахтатпа Моссул, иккěш те Тикр çинђе.

Арави çěрě.

Арави çěрě вăл тем пысăкăш ђул пек, унăн кăнтăрти хěррипе хěвел-анăç йенђи хěрри çěкленерех тăраççě. Ăна пěтěмпех хěвел çунтарса йанă; унта çап-çара ђул куписем, тата ěретěн тăракан хăйăр куписем тем аслăш сарăлса выртаççě; вěсенěн варринђе оаçиссем пăт-пат анђах тěл-пулкалаççě. Çўлě сăртсем çинђе анђах çумăр ўккелет, вăл *Йемен*, урăхла каласан, *Телейлě Арави* çěрěнђе, тата *Хиђасра* пулкалат. Унта ту хěррисем—выљăха пăхма лайăх вырăнсем, унта акартси йывăçě утравěсем тěл-пулкалаççě; çав акартсирен *кумми-арапик* тăваççě. Тусем çинђен йухса анакан шыв варěсенђе йывăç пахђисем, уйсем симěсленсе тăраççě.

Аравире пурăнакан халăхсем арапсем, вěсем вырăнтан вырăна куçса çўрекеннисем те пур, çурт - йěрпе пурăнаканнисем те пур. Куçса çўрекен арапсем, урăхла *петуинсем*, выљăх-ђěрлěх усраса пурăнаççě, вěсем пит ырă лашасем, тěвесем, сурăхсем кěтў-кěтўпе ěрђетеççě. Анђах хăйсен кěтěвěсенђен вěсенěн хăйсене пурăнмалăх тупăш сахал пулат те, вěсем пуш-хирпе иртсе пыракан караваньсене, кил-çуртпа пурăнакан арапсенěн йалěсене ђас-ђасах тапăнаççě. Кил-çуртпа пурăнакан арапсем шыв хěррисенђе, çырмасенђе, йе пушхир варринђи оаçиссенђе пурăнаççě. Вěсем финик паљми, кофě йывăçě лартаççě, Африк вирě, риспе ытти урăх тырă та

акса тăваççĕ, шăварасса хăйсем шăвараççĕ. Аравире кофĕне пит нумай тăваççĕ, ăна Йеврпа нумай илсе кайаççĕ.

Арапсем—ирĕке йуратакан, мăн-кăмăллă, сатур халăх. Х.Ç. кайран, VII-мĕш ĕмĕрте, вĕсен хушшинҫе *ислам тĕнĕ*, урăхла *Мухаммет тĕнĕ*, пуçланса кайнă. Вĕсем вара çав тĕне хĕç-пашал хăваҫĕпе Хыçалти Аçипе Çур-çĕрти Африке пĕтĕмпех сарнă. Анҫах арапсенĕн хăваҫĕ вăрăма кайман, вĕсем хăйсем *тĕрĕк* халăхĕ аллине кĕнĕ; тĕрĕксем вĕсенĕн Аравири ҫи ырă çĕрĕсене, *Хиҫаспа Йемене*, туртса илнĕ. Ырă хуласем: Мухаммет çуралнă *Меккепе* ун тупăкĕ тăракан *Метине* те çав тĕрĕксенĕн аллинҫе.

Тĕрлĕ çĕрте пурăнакан, Мухаммет тĕнне тытса тăракан 200 мĕлйун халăх кĕл-тунă ҫухне, куллен-кун Мекке йеннелле пăхса тăраççĕ. Çуллен-çул Меккене кĕл тума пыракансем, хаçисем, 100, пин ытла пулаççĕ; вĕсем Кепе тийекен вырăнта кĕл-тăваççĕ те, ҫăн ҫаплă *хура ҫула* пуççапаççĕ. Пуççапма кайакансем Меккене йе типĕ çулпа, караванпа кайаççĕ, йе тинĕспе кайса, Ҫиттене пырса тухаççĕ. Христос тĕнне тытса пурăнакан çынсене, Меккене пырса кĕрсен, вĕлермелле тунă, çавăнпа ку таранҫҫен Йеврпп çӳревçисенҫен унта кĕрекен пит сахал пулнă.

Кăнтăрпа хĕвел-анăç йенҫи Арави кĕтессине акăлҫансем илнĕ. Унта вĕсем Атен йатлă порт тунă та, ăна пит тĕреклетсе хунă; унта Интипе Йевроп хушшинҫе çӳрекен карапсем кĕрсе кайаççĕ.

Атен вăл пĕçертекен шывсăр çĕрте ларать, çавăнпа акăлҫансем ĕçмелли шыва унта айакран тусем çинҫен илсе пынă, ăна усрама пысăк ҫул паççейнсем тунă.

Кăнтăрпа хĕвел-тухăç йенҫи хĕрринҫе Аравире арапсенĕн *Оман* йатлă патшалăх пур, кавăнĕ—*Маскат* йатлă; çав Оман патшалăхне акăлҫансем хута кĕрсе тăраççĕ.

Аравире ытти çĕрте пур çĕрте те арапсенĕн пĕҫĕк халăхĕсем пурăнаççĕ, вĕсене *шейхсем* тытса тăраççĕ. Вĕсем çапла хăйсенĕн ирĕкĕпе тата нумайҫҫен пурăнĕç-ха, вĕсене парăнтарма ытла çăмăлах мар. *(Мĕншĕн?)*

Ҫирипе Палестин ҫӗрӗ.

Ҫирипе Палестин ҫӗрӗ вӑл Арави лаптак тӑвӗн ҫ̌ӑсӑмӗ; вӑл тем пысӑкӑш ҫ̌улсем пек, ҫав ҫ̌улсем Ҫӗр варринҫ̌и тинӗсе пысӑк катрашкасем пулса анаҫҫӗ. Ҫири ҫӗрӗнҫ̌е ҫав ҫ̌ул хӗррисем 3 ҫухрӑма йахӑн хӑпарса тӑраҫҫӗ, вӗсенҫ̌ен икӗ пысӑк сӑрт пулаҫ̆: *Ливанпа Анттиливан;* вӗсенӗн хушшинҫ̌е лупашка пур, вӑл кӑнтӑрэлла кайса, Хӗрлӗ тинӗсе ҫитех пыраҫ̆. *(Пӑх Аҫири тусен йарӑмӗсене).* Ҫав лупашкара Иортан шывӗ йухса выртаҫ̆, вӑл *Вилӗ тинӗсе* пырса кӗрет; ҫав Вилӗ тинӗсри шыв ытти тинӗсри шывсенҫ̌ен 166 ҫ̌ӑлӑш ытларах айалта тараҫ̆.

Вӑл тинӗсӗн, тӗрӗсрех калас тесен, кӳллӗн, шывӗ тӑварлӑ, ҫавӑнпа унта ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк та, шӑван-ҫӳрен ҫ̌ӗр-ҫ̌ун та ҫукпа пӗрех, ҫавӑнпа ҫа ӑна *Вилӗ тинӗс* теҫҫӗ.

Хӗллехи уйӑхсенҫ̌е Ҫирипе Палестин ҫӗрӗнҫ̌е шутсӑр илпӗк ҫумӑрсем ҫӑваҫҫӗ, вара пӗҫ̌ӗк Иортан шывӗ те пысӑкланса мӑн шыв пулаҫ̆, сарлакӑш унӑн 2 ҫухрӑм пулаҫ̆, шыве; те Вилӗ тинӗсри шывран темиҫе ҫ̌алӑш ытла ҫӳлӗрех пулаҫ̆. Ливанпа Анттиливан ҫинҫ̌е тата пит хулӑм йур ӳкет.

Ҫур-кунне ҫавӑнти пӗтӗм ҫӗр ҫ̌еҫ̌еклӗ йешӗл курӑкпа витӗнсе хитреленсе лараҫ̆; пур ҫӗрте те лилисем, тӳҫ̌ппансем хиатсинтсем улан курӑнса тӑраҫҫӗ. Варсенҫ̌е шывсем йухаҫҫӗ, олеантрсем сарӑлаҫҫӗ; вӑл олеантрсем йывӑҫ ҫӳллӗш пулаҫҫӗ вӗсенӗн хӗрлӗпе шурӑ ҫ̌еҫ̌екӗсем ырӑ шӑршӑ кӑларса хӑйсен тавра сараҫҫӗ.

Анҫ̌ах, ҫур-кунне иртсе кайсанах, пит вӗри типӗ ҫанталӑклӑ ҫу пуҫланса кайаҫ̆. Курӑк йӑпӑртах типсе лараҫ̆ те, лаптак тусем ҫ̌уллӑ пушӑ-хир пек пулаҫҫӗ; ҫырмасемпе пӗве хӗррисенҫ̌е анҫ̌ах йывӑҫ пахҫ̌исем йешерсе лараҫҫӗ. Вӑрмансем Ливан тӑвин айаккисенҫ̌е анҫ̌ах ӳсеҫҫӗ, унта вӗсене пӗҫ̌ӗккӗнпӗҫ̌ӗккӗнех касса пӗтереҫҫӗ: пысӑк кетӑрсем унта халӗ сахал йулнӑ.

Ҫирипе Палестин ҫӗрӗнҫ̌е пурӑнакан халӑхсем *арапсем*, тата вӗсемпе туртулӑ *ҫирсем, йеврейсем.* Йеврейсем Палестинрен тухса пӗтӗм тӗнҫ̌ипе саланса пӗтнӗ, хӑйсенӗн ҫӗр-шывӗнҫ̌е пурӑнакан йеврей сахал йулнӑ. Арапсемпе ҫирсем пуриҫ̌ен ытла йывӑҫ пахҫ̌и туса пурӑнаҫҫӗ унта пахҫ̌асенҫ̌е *аппелҫҫинсем,*

ҫӗм-ҫырлисем, *фикӑсем*, тата *ҫу-ҫырлисем* ӳсеҫҫӗ. Анттиливан айӗнҗе, Ҫири ҫӗрӗнҗе, *пурҫӑн* тӑваҫҫӗ. Арапсем *ҫӗр ӗҫне те* тӑваҫҫӗ. Ҫула Ҫирипе Палестинре ҫумӑр пулманран, тырра вӗсем кӗр-куннехи ҫумӑрпа хӗллехи ҫумӑр шӑвартӑр тесе, кӗр-кунне акса хӑвараҫҫӗ те, ҫур-кунне вырса илеҫҫӗ.

Ремеслапа суту-илӳ тӗрлӗ хуласенҗе пулаӗ; ҫав хуласенҗен җаплӑраххисем *Тамаскпа Йеруссалим*; Тамаскран җукун-ҫул *Пейрута* пыраӗ, Йеруссалимрен—*Йаффа*.

Йеруссалим вӑл Христос тӗнне тытса тӑракан халӑхсемшӗн те, йеврейсемшӗн те, Мухаммет тӗнне тытса тӑракансемшӗн те паха хула. Христос тупӑкне пуҫҫапма унта Йевропран та, ытти ҫӗртен те Христос ҫыннисем темӗн җухлӗ пыраҫҫӗ; ҫав тупӑка лартма җиркӳ тунӑ, ҫав җиркӳре Христос ҫыннисем харпӑр хӑйӗн йӑлипе пур тӗрлӗ те кӗл-тӑваҫҫӗ. Йеруссалимӗн мал-йенҗе ӗлӗк Соломон җиркӗвӗ ларнӑ Ҫион тӑвӗ ҫинҗе халӗ Мухаммет ҫыннисенӗн миҫӗҗӗ лараӗ; ӑна Омар тутарнӑ та, *Омар миҫӗтҗӗ* теҫҫӗ. Ун ҫумӗнҗех йеврейсемшӗн хаклӑ ҫветтуй йапала пур, вӑл—авалхи, Соломон җиркӗвин ҫтени. Йеруссалим хӑй пысӑк хула мар, унта пурӑнакан халӑх мӗн пурӗ те 50000 ҫынна йахӑн анҗах.

Палестинрен кӑнтӑрта сӑртлӑ пушӑнҗӑк ҫур-утрав *Ҫинай* пур, унта сурт-йӗрсӗр пурӑнакан петуинсем ҫӳреҫҫӗ; унта йал-тавраше ҫук; пӗр Моиҫҫей тӑвӗ тийекен ту айӗнҗе-ҫеҫ Христос ҫыннисен мӑнастирӗ пур, ту тӑрринҗе җиркӳпе миҫӗт пур. Моиҫҫей тӑвӗ тӑрри ҫинҗен пӑхсан, Хӗрлӗ тинӗспе Африк хӗррисем ытарма ҫук лайӑхӑн курӑнса кайаҫҫӗ.

АФРИК ÇĔРĔ.

Пĕтĕмĕш çинҫен калани.

Африк вырăнĕ, унăн пысăкăшĕ, унăн хĕррисем.

Африк вăл Мал-йенҫи çур-шарĕн пайĕ пулат, унăн пысăкăшĕ Аçи çĕрĕнҫен пĕрре çур пĕҫĕкрех, Йĕвроп çĕрĕнҫен вăл виç хут пысăкрах. Аçирен ăна *Хĕрлĕ тинĕс, Йĕрӳ Хапхи пырĕ, Суес каналĕ* уйăрса тăраççĕ; Йеврол çĕрĕнҫен *Çĕр варринҫи тинĕспе Кипралттар* пырĕ татса тăраççĕ. Хыçал-йенҫен ăна *Атлант* оккеанĕпе *Квиней* тинĕс-ури çуса тăраççĕ, мал-йенҫен *Инт* оккеанĕпе *Мосампик пырĕ* çăваççĕ.

Африк хĕррисем кукăр-макăр мар, тӳрем; унăн пĕр çĕр ластăкĕ те тухса тăмаст, ун варринелле пĕр тинĕс те пĕр тинĕс-ури те пырса кĕмест. Ун çывăхĕнҫе хĕррипе утравсем йарăмланса тăмаççĕ. Çап-çара оккеан шывĕн хумĕсем пĕр ҫарăнмасăр тӳрех унăн хĕррине çитсе, мĕн пур вăйпа çапăнса саланса кайаççĕ.

Пĕлĕр: Африкĕн ҫи сив-йенҫи сăмси Планккопа ҫи кăнтăрти *Йĕп* сăмси çĕр-сарлакăшĕнҫе хăш тĕлте тăраççĕ? Масштап тăрăх вĕсенĕн хушши мĕн ҫухлĕ, шутласа кăларăр. Пĕлĕр: ҫи хыçал-йенҫи *Йешĕл* сăмса тăйекен сăмсапа ҫи мал-йенҫи сăмса Кварıафуй çĕр-вăрăмăшĕнҫе хăш тĕлте тараççĕ? Масштап тăрăх вĕсенĕн хушшине шутласа кăларăр.

Африк çĕрне пĕлни.

Йеврол çыннисем тахăçан ĕмĕртенпех Африкĕн çур-çĕр йенҫи хĕррине пыра-пыра çӳренĕ; Хĕрле тинĕс хĕррине те вĕсем нумайранпа пĕлсе тăнă, вĕсем ун тăрăх Суесрен Инти çĕрне çӳренĕ. Анҫах Африкри ытти çĕрсене Йеврол çыннисем пĕлсе çитни нумайах пулмаст. Х. Ç. кайран, XV-мĕш ĕмĕртĕ. Порттукал çыннисем Йевропран Инти çĕрне çӳреме тинĕс çулĕ шыранă ҫухне, вĕсем Африкĕн хыçал-йенҫи хĕррине тăршшĕпех

курса тухнă та, пĕр сăмса патне çитнĕ, унтан пуçласа Африк хĕрри мал-йеннелле кайнă. Çак сăмсана вĕсем малтан *Çил сăмси* тесе йат хуна, унтан Ăна *Ырă Ĕмĕт* тесе йат хунă, мĕншĕн тесен вĕсем шухăшланă: кунтан ҫипер çавăрăнса кайсан, Интине тӳрех çитме пулатъ пулĕ, тенĕ. Ҫăнах та, пăртак тăрсан, Васко-та-Камă Африке кăнтăр йенҫен çавăрăнса тухнă та, унăн мал-йенҫи хĕррипе екваттăр тарап çитсен, Инти оккеанĕ урлă каçса Инти çĕрне çитсе тăнă. Çапла Васко-та-Камă харăсах икĕ йапала пĕлнĕ: Инти çĕрне каймалли тинĕс çулне, тата Африке кăнтăрпа мал-йенҫен те оккеан çусатăнине.

Çапла ĕнтĕ Африкĕн хĕррисене пĕлнĕ, анҫах шалта, варринҫе, унăн мĕн пур, мĕн çук, ăна кимĕскер те пĕлмен. Нумайҫҫен никам çав Африк çĕрне шала кайма пикенсе тытăнман, мĕншĕн тесен унти çĕрĕк çанталăкран шикленнĕ, тата Йевроп сыннисене кураймасăр тăракан хура-ӳтлĕ çынсенҫен те хăрана.

Африк варрине ҫăн малтан кĕрсе кайса çӳрекен çын акăлҫан *Ливинкстон* пулнă. Вăл Кăнтăрти Африке Йăванкĕл çинҫен вĕрентме кайнă. Хăй пит йăваш, ырă кăмăллă пулнипе, вăл унта пурăнакан етемсенĕн кăмăлне пĕтĕмпех хăй йенне çавăрнă. Вĕсем пулăшнипе çав Ливинкстон Сампеçи шывĕ тăрăх пăхса тухнă, унта ҫăнкăран сиксе йухакан шарланкă шыв курнă, çав шарланка вăл *Виктори* тенĕ; малалла тата вăл Ҥйасса кӳллине, Конко шывĕн пуçне, тата Панквеоло кӳллине тĕл-пулса тупнă.

Ливинкстон хăй çуралнă çĕр-шывĕнҫи пĕлнĕ çыннисене хăй çинҫен хутран-ситрен анҫах пĕлтеркеленĕ; çавăнпа пĕр вăхăтра ун çинҫен, ку çухалҫĕ пулĕ, тесе шухăшланă. Ăна шырама тепĕр акăлҫан çынни *Стенли* кайнă. Вăл Африк мал-йенҫи хĕррине, Санçипар утравĕ тĕлне тухса, пысăк караванпа Тавканйиккă кӳлли патне кайнă та, унта Ливинкстона тупнă. Çав кӳлĕ тавра вĕсем иккĕшĕ çӳресе тухсан, Стенли килне таврăннă, Ливинкстон тата малалла, кăнтăралла, кайнă, анҫах ăна сыйамак (сивҫир) йерне те, вăл нумай пурăнман, вилнĕ; унăн шанҫăклă ҫурисем, некĕрсем, унăн кĕлеткине вăрман варринҫен оккеан хĕррине çĕклесе тухнă та, акăлҫан çыннисем ăна вара хăйсем патне илсе кайнă.

Стенли Африке тата виҫҫӗ хут ҫӳрсе тухнӑ; вӑл Виктори кӳллине, Конко шывне, ҫав шыв таврашӗнҗи вӑрмансене ҫӳресе тухнӑ.

Ливинкстонпа Стенлирен кайран Африк ҫӗрне урӑх ҫынсем те нумай курса ҫӳренӗ, вӗсем хушшинҗе вырӑс ҫынни тухтӑр *Йункӗр* җаплӑ; вӑл Нил пуҫне ҫитех кайнӑ, тата Конко шывӗ таврашӗнҗе етемсене ҫисе пурӑнакан ӊам-ӊам тийекен халӑх патне те ҫитсех курнӑ.

Африк ҫӗрӗн ҫийӗ.

Пӗтӗм Африк вӑл сарлака лаптак ту; вӑл ту ҫӳллӗшӗ, курт шутласан, тинӗсри шывран ҫур ҫухрӑм ытла ҫӳлӗрех. Ҫак лаптак ту сийӗсем пӗрин ҫинҗе пӗри тӳп-тӳрӗ выртаҫҫӗ, хутланҗӑк-мӗн ҫук. Кунӗ-кунӗпе, ерни-ернипе каравансем унта кайаҫҫӗ, пӗр пысӑк ту тӗл-пулмаҫҫӗ. Ҫав лаптак ту хӗррисем нумай ҫӗрте җӑнкӑ, тинӗс хӗрринелле террассӑ пек картлӑ-картлӑ пулса анаҫҫӗ. *Аҫи ҫӗрӗнҗе хӑш лаптак тусем ҫавӑн пек?*

Африк ҫӗрӗн кӑнтӑрпа мал-йен хушши хыҫал-йенпе ҫурҫӗр йен хушшинҗен ҫӳлӗрех. Пуривҗен ытла Апиҫҫини лаптак-тӑвӗ пит ҫӳлӗ, ун ҫӳллӗшӗ тӗллӗн-тӗллӗн 4 ҫухрӑм та ытларах, хӑй вӑл шӑтӑк-ҫурӑк пулса пӗтнӗ сӑртлӑ тискер ҫӗр. Траккон тӑвӗсем те пит пысӑк, вӗсем Кӑнтӑрти Африкри лаптак тӑвӑн ҫӗкленсе тӑракан хӗрри пулаҫҫӗ.

Мал-йенҗи Африкри лаптак тусем ҫинҗе тарӑн лакӑмсем пит нумай; вӗсенҗе хӑшинҗе туп-тулли шыв тӑрать, ҫавӑн пек лакӑмсем—кӳлӗсем: *Виктори кӳлли*, Танканйиккӑ кӳлли, Ӊйас кӳлли, тата урӑххисем те пур. Лакӑмӗсен хӗррипе сӳнне вулкансем ҫӗкленсе тӑраҫҫӗ; вӗсенӗн хушшинҗе җӑн ҫӳллисем *Кениапа Килиманҗаро*; вӗсенӗн ҫӳллӗшӗ 5 ҫухрӑм ытла; вӗсем ӗмӗрхи йур айӗнҗе тӑраҫҫӗ.

Мал-йенҗи Африкри лакӑмсемпе вулкансем ак ҫапла пулнӑ: лаптак ту ҫинҗе вырӑнӗ-вырӑнӗпе ҫӗр пит тарӑн ҫурӑла-ҫурӑла кайнӑ та, ҫавӑнта вара ҫӗр ана-ана ларнӑ. Ҫурӑксем хушшипе тата хӑш-хӑш тӗлте ирӗлвӗ ҫӗрпе кӗл пӗрӗхсе тухнӑ та, вулкансем пулса тӑнӑ.

Çур-çĕрпе хыçал-йенђи Африк те пит пысăк, пит сарлака лаптак ту, вăл кăнтăртипе мал йенђи лаптак-туран лутрарах. Айлăм çĕрсем унта пит сахал.

Аçири пек йăрăмăн-йăрăмăн тăсăлса выртакан тусем Африкре çук; пĕр *Атлас* тăвĕ анђах пур; вăл темиçе хутланђакран пулать те, тинĕс хĕррипе пырса, çӳлĕ ту йăрăмĕ пулса тăрать.

Африк утравĕсенђен пысăкки пĕр *Матакаскар* анђах, вăл маттерикрен пулнă; вăл тем пысăкăш лаптак ђул, хĕррисем унăн картлă-картлă Ытти Африк утравĕсем йе *вулккан* тухнипе пулнă,- унашкаллисем: *Çӳле улăхнин, Çв. Йеленăн, Канарисем, Маскаренсем,* — йе *кораллсенђен* пулнă, унашкал пулнисем Африкрен мал-йенђе тăракан вĕт утравсем нумай, вĕсен хушшинђе пĕри *Санçипар*.

Климăт.

Африк çĕрĕ икĕ троппик хушшинђе выртать, çавăнпа унти климăт пит вĕри. Хĕвел çулталăкĕпех унта пит хытă хĕртсе тăрать, хĕлпе çу хушшине те уйăрма пулмасть.

Африкре анђах мар, пĕтĕм çĕр çинђе ђи вĕри çанталăк *Саххарăра* пулать. Çулталăк температтурĕ, круком шутласан, 35^{0} çитет. Çулахи кунсенђе пуш-хирти ђулсем хĕрсе 70^{0}, хăш ђухне 80^{0} таран çитеççĕ. Сывлăш хĕрсе çитет те, сывлама та йывăр пулать. Çав пуш-уйра *самум* çилĕ урса кайсан, вĕçекен хăйăр айне çынсем караванĕ-караванĕпе пулни те пулкалать.

Каç пулсан, Саххарăра сулхан пулать, ђас-ђасах сывлăм та ӳкет; хĕлле пулсан, ђулсем пасарса лараççĕ.

Вĕрипе сивĕ пĕр май улшăнса тăнă пирки, пуш-хирти ђулсем çурăла-çурăла кайса, ванса, хăйăр пулса йулаççĕ. Çил хăйăра вĕçтерсе кайать те, айлăмрах çĕрсене йăран пек ĕређĕ-ĕређĕпе кĕрт тултарать.

Саххарăра çумăрсем пит сахал пулаççĕ, çумар пĕлĕђĕсем те нихăçан та курăнманпа пĕрех. Çавăнпа та Саххара вăл кăнтăрла пит хĕрсе кайать, çĕрле пит сивĕнсе ларать.

Саххарăри тип-уйар ак мĕнтен килет: хыçал-йенђе ăна Атлант оккеанĕ çуса тăрать, анђах унта çур-çĕрпе мал-йен хушшинђен вĕрсе тăракан çилсем, *пассатсем*, çав оккеанăн вӳрĕкне Кăнтăрти Америк патнелле илсе кайаççĕ. Саххаран малйенђе вĕри çанталăклă *Тип-Арави* çĕрĕ выртать. Хĕрлĕ тинĕспе

Ҫĕр варринҫи тинĕс Саххарăпа ҭанлаштарсан пысăк мар, ҫавăнпа вĕсем ҫителĕклĕ йĕпе-сапа кăлараймаҫҫĕ; *Квиней* тинĕс-ури ҫинҫен вĕрекен нӳрĕ ҫилсем мĕн пур нӳрĕкне пĕтĕмпе Квинейĕн ҫӳлĕ хĕррисем ҫинех тăкса хăвараҫҫĕ.

Саххарăран кăнтăрта вĕри, лăмлă ҫĕрсем выртаҫҫĕ; вĕсем екваттăрăн икĕ йеннипех тăсăлса кайаҫҫĕ. *(Пăх карт ҫине).* Нӳрĕк ҫилсем унта Атлант оккеанĕ ҫинҫен те Инти оккеанĕ ҫинҫен те йепĕ-сапа нумай илсе пыраҫҫĕ. Пуринҫен ытла ҫумăрсем *Квиней* тинĕс-ури хĕррисенҫе нумай ҫăваҫҫĕ, тата *Конко* шывĕ тавращĕнҫе. Ҫавăнта вăйлă ҫумăрсем ҫулталăкĕпе тепĕ пекех пулаҫҫĕ; ытти ҫĕрте хĕллехи уйăхсенҫе уйар пулаҭ, ҫумăрсем ҫулахи уйăхсенҫе, пуринҫен ытла хĕвел ҫи тӳпемре тăнă ҫухне пулаҫҫĕ.

Ҫав ҫумăрсене *тӳпем-хĕвел ҫумăрĕсем* теҫҫĕ. Вĕсем кашни кунах пĕр вăхăтра, пĕр сехетре пулаҫҫĕ. Иртеннпе пĕлĕт таптаса тараҭ, хĕвел касхи пăса сирсе йараҭ, вара ҫăтма ҫук пĕҫертет, кăнтăрла ҫитеспе хĕрсе ҫитнĕ сывлăш ҫӳлелле хăпарса кайаҭ те, унта сивĕнет; ҫавăнтах йывăр хура пĕлĕтсем тухаҫҫĕ, вара шутсăр хайар шывлă ҫумăр пулаҭ, аслати кĕрлет, вĕҫĕ-хĕррисĕр ҫиҫĕм ҫиҫет. Каҫ пулсан, пĕлĕт каллех тасалса кайаҭ, пур айлăмсенҫе шурă пăс тăраҭ. Ҫавăнпа ҫӳревĕ ҫынсем пурте ҫав витĕр ҫапакан сивĕ пăса хурлаҫҫĕ; хăнăхса ҫитнĕ некĕрсем те, хĕвел ҫав касхи пăса сирсе йараҭҫен, ир ҫинҫе ĕҫлеме тухмаҫҫĕ.

Каҫака (Козерог) тропикĕнҫен кăнтăрта Африк климăҭĕ ăшă. Ҫула,—вăл раштавра, мăн-кăрлаҭпа, кĕҫĕн-кăрлаҭ хушшинҫе пулаҭ.—унта вĕри ҫанталăк тăраҭ, хĕлле сивĕрех ҫанталăк пулаҭ, сăртлăрах вырăнсенҫе йур та ҫукалаҭ. Ҫумăрсене Инти оккеанĕ ҫинҫен вĕрекен ҫилсем илсе пыраҫҫĕ. Ҫавăнпа Тракон тăвĕсем ҫинҫе ҫумăрсем нумай ҫăваҫҫĕ, унтан каҫалра, *Калахари* пушă-уй пур ҫерте, ҫумăрсем пит сахал пулкалаҫҫĕ. *(Мĕншĕн вăл апла?).*

Африкĕн ҫур-ҫĕр йенҫи хĕррипҫе те, кăнтăрти пекех, ăшă климăт, анҫах унта хĕлле пулнă ҫух, лере, кăнтăрта ҫула пулаҭ ҫула пулнă ҫух, хĕлле пулаҭ. *(Мĕншĕн вăл?).*

Шывсем, кӳлӗсем.

Африкри пур пысӑк шывсен те пуҫӗсем йӗпе-сапа нумай пулакан ҫӗртен пуҫланса кайаҫҫӗ. Вӗсем ҫӳлӗ лаптак-ту ҫийӗсем тӑрӑх йухса выртаҫҫӗ. Йухса пынӑ ҫухне ҫулӗсем ҫинҫе ҫӑнка вырӑнсем, шырланкӑсем тӗл-пулаҫҫӗ, ҫавӑнпа унта шырланка ӳксе йухакан кӗрленкӗсем те пур, картласа тӑракан ҫулсем те пур.

Африкри ҫӑн пысӑк шыв *Нил*; вӑрӑмӑшӗнҫен пулсан, вӑл Миҫҫиҫҫиппипе Миссури шывӗнҫен анҫах кӗскерех, унӑн тӑршшӗ *6000* ҫухрӑма йахӑн. Вӑл *Шурӑ Нилпа* Кӑвак Нил пӗрлешнипе пулаҭ. Шурӑ Нил *Виктори* кӳллинҫен пӗр ҫухрӑм ытла ҫӳлӗрех тӑраҭ. Кӑвак Нил Апиҫҫини ҫӗрӗнҫи *Тсанӑ* йатла кӳлӗрен тухаҭ, ку кӳлли Виктори кӳллинҫен те ҫӳлӗрех тӑраҭ. Хайӗн Ҫӗр варринҫи тинӗс патне илсе пыракан ҫулӗ ҫинҫе Нил шывӗ шырланкӑ нумай тӗл-пулаҭ, ҫавӑнпа унӑн картласа тӑракан ҫуллӑ вырӑнсем (пусахасем) те нумай. Ҫавӑн пек ҫулсем тропиик ҫывӑхӗнҫе анҫах пӗтеҫҫӗ. Малалла вара Нил лӑпкӑ йухса выртаҭ: тинӗсе йухса кӗнӗ ҫӗрте вӑл ура пек туратланса кайаҭ те, теҫттӑ пулаҭ; Нил теҫтти Атӑлӑн теҫттипе пӗрехрехех.

Ҫула пулсан, Нил кашни ҫулах, хайӗн пуҫӗнҫе пысӑк ҫумӑрсем пулнӑ пирки, тулса саралаҭ те, йейӳ пулаҭ.

Ҫав ҫумӑрсем ҫур-кунне пуҫланаҫҫӗ те, ҫӑвӗпех ҫӑваҫҫӗ. Кӑвак Нилпа Шурӑ Нил иккӗш те тулса кайаҫҫӗ, вара сарӑ пӑтранҫӑк шыва вӗсем ҫур-ҫӗр йеннелле, Йекиппӗте, таҫта ҫитех, илсе ҫитереҫҫӗ. Вӑл Йекиппӗтре ҫумӑрсем пӗрре те пулмаҫҫӗ, вара ҫапла типӗ, вӗри тӑп-тӑрӑ ҫанталӑкрах унта йейӳ тухаҭ; пахсан, вырӑнсӑрах, темелле. Кӗр-кунне Нил шывӗ каллех хай ҫыранне кӗрсе вырӑнаҫаҭ, ун хыҫҫӑн ҫав айлӑма вара нӳрӗк ҫапаҭ, тырӑ тӑвакан лӑйма ларса йулаҭ.

Африкри тепӗр пысӑк шыв *Конко*. Вӑл пит туллӑх, унӑн сарлакӑшӗ вӑтамра 10 ҫухрӑма ҫитет. Анҫах тинӗсе пырса кӗнӗ ҫӗрте вӑл маттерикӗн ҫӗкленсе тӑракан хӗррине ҫурса кӗрет, вӑл тӗлте Конко сарлакӑшӗ пӗр ҫӗрӗк ҫухрӑм сарлакӑшӗ анҫах, унта вӑл тарӑн кукӑр-макӑр ҫурӑкпа ҫулсем урлӑ, пит хытӑ йухса пыраҭ, сехетре 50 ҫухрӑм кайаҭ.

Африкри виççĕмĕш вăрăм шывĕ—Никĕр; вăл Нилран тулăх та, Конкоран нумай кĕçĕн; унăн çулĕ çинҫе те картласа тăракан ҫулсем нумай, анҫах вăл *Пенуе* йухса кĕнĕ çĕртен пуçласа, вĕçне çитиҫҫенех вара лăпкăм йухать.

Ытти паллăрах шывсем Африкре ак çаксем: *Оранш, Самвеçи*, тата *Шари*; вăл Ҫат кӳллине йухса кĕрет.

Çурхи çумăрпа çулахи çумăр вăхăтĕнҫе Шари пит тулса кайать те, Ҫат кӳллине темĕн ҫухлĕ шыв илсе пырать; вара вăл кӳлĕ, тулса, темиçе ҫалăш хăпарса кайать, çыранĕсенҫен тухса, икĕ хут ытларах саралать. Хăш ҫухне шыв тулса мал-йенҫи çыранĕ урлă каçса кайать те, вара Ҫатри шыв Сахкарăран кăнтăрта выртакан айлăма пырса тулать. Ҫат кӳллинҫи шыв тăварлă мар, çавăнпа, вăл ĕлĕк йухса ɪыртакан кӳлĕ пулнă пулĕ, тесе шухăшлама пулать.

Мал-йенҫи Африкри кӳлĕсĕм ак çаксем: *Ңйасса, Танканйикка, Виктори, Алперт*, тата урăххисем те пур. Çав кӳлĕсем тарăн лакăмсем, вĕсенĕн хĕррисем ҫавка, çӳлĕ. (*Астуса илĕр: çав лакăмсем йепле пулса кайнă?*). Çав кӳлĕсенҫен ҫăн тарăнни Ңйасса кӳлли, ҫăн пысăкки Виктори кӳлли; вăл пысăкăшĕнҫен пулсан Америкри Тури кӳлĕрен анҫах кĕçĕнрех.

Африкри тĕрлĕ çĕрсене танлаштарса пăхсан, каллах: ăçта çумăр çунă çĕрте пысăк шывсем те, пĕҫĕк шывсем те, унталла та кунталла йухаççĕ; ăçта типĕ çанталăк, унта шывсем сахал йе пĕрре те çук.

Сахкарăра пĕр шыв та тухмасть, унта типĕ варсем анҫах, вĕсене *вати* теççĕ; çавсем тăрăх хутран-ситрен, çумăр çунă вăхăтра анҫах, шывсем йухаççĕ, унтан йапăртах вĕсем хăйăрпа ҫул хушшине сăхăнса типсе лараççĕ. Сахкарă хĕррипе çурçĕр йенҫе тата Атлас тăвĕсем хушшинҫе тăварлă кӳлĕсем тĕл пулкалаççĕ, вĕсене *шот* теççĕ; вĕсенҫе те шыв çумăр хыççăн анҫах пулать; ахаль ҫухне шотсенĕн тĕпĕнҫе йур пек шурă тăвар типсе ларса йулать.

Ӳсен-тăран йываç-курăк.

Квиней тинĕс-ури хĕррипе, тата Конко шывĕ таврашĕнҫе çав Африкри ҫи вӳрĕк çĕрсем çинҫе, троппик вăрманĕсем ӳсеççĕ; вĕсем пит çăра лиана сырăпкаласа пĕтнĕ, тĕттĕм

хура. Хӗвел ҫутти ҫӳҫҫӑ витӗр пӑхаймаст, сывлӑш вӗри, лӑмлӑ. Тӗслӗрен илемлӗ йывӑҫ-курӑкран пулсан, Африк вӑрманӗсем Малай утравӗсемпе Кӑнтӑрти Америк вӑрманӗсене ҫитеймӗҫҫӗ. Африкре нихӑҫан та уйар пулман ҫӗр сахал, ҫавӑнпа вӑл ҫапла.

Уйар вӑрӑм тӑнӑ ҫӗрте ҫумӑрсем ҫула анҫах пулнӑ ҫӗрте Африкре *саваннӑсем* сарӑлса выртаҫҫӗ. (*Пӑх карт ҫине*).

Вӗсем пӗтӗм ҫӗр ҫинҫи ҫи илемлӗ ҫеҫен-хирсем. Тӳпери хӗвел ҫумӑрӗсем ҫунӑ ҫухне курӑксем ӳсеҫҫӗ, етемрен те ҫӳлӗ пулаҫҫӗ. Курӑк хушшинҫе унта та кунта пысӑк йывӑҫсем, акартсисем, мимосӑсем курӑнса лараҫҫӗ, тӗллӗн-тӗллӗн пиншер ҫулхи паопапсем те курӑнкалаҫҫӗ. Ҫамрӑк паопапсем ҫукпа пӗрех, ҫавӑнпа ку йывӑҫ пӗтес йенне кайнӑ, теме пулат. Саваннӑсем урлӑ йухса выртакан шывсем тӑрӑх, варсем тӑрӑх, вӑрмансем ӳсеҫҫӗ; шывсен, кӳлӗсен латакалӑ хӗррисенҫе шултӑра хӑмӑшсем, паппируссем ӳсеҫҫӗ.

Хӗллехи уйарсем пуҫлансанах, саваннӑсенҫе курӑк типсе саралса ларат; йывӑҫсем те ҫӳҫҫисене тӑкса хытса лараҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра саваннӑра пушарсем ҫасах пулаҫҫӗ, вара вӗсем темиҫе вуншар, темиҫе ҫӗршер ҫухрӑм сарӑлаҫҫӗ. Ҫӑра тӗтӗм ҫӳле хӑпарат те, пӗлӗтпе хӗвеле хупласа хурат, пӗтӗм ҫӗр ҫине хура хӑрӑм тӑкӑнат. Саваннӑран пур ҫӗр-ҫун пӑрахса тарат, йулни унтах пӗтет; шурӑ кӑткӑсем, *термитсем*, анҫах хӑйсенӗн вут тивейми йӑвисенҫе тӑрса йулаҫҫӗ.

Африкри пушӑ-уйсенҫе, Саххарӑпа Калахаринҫе, тем пысӑкӑш вырӑнсенҫе ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк пӗрре те ҫук. Варсем тӑрӑх, ту-айаккисенҫе, ҫумӑрсем пулкаланӑ майӗпе, курӑксем шӑткалаҫҫӗ, тата ҫикекен вӗтӗ ҫӳҫҫӑлӑ лутра йывӑҫсем ӳскелеҫҫӗ; хӑйсенӗн тымарӗсем вӑрӑм та, пит пысӑк. (*Пӗлӗр: ҫав вӗтӗ ҫӳҫҫӑлӑ вӑрӑм пысӑк тымар мӗншӗн кирлӗ ҫав йывӑҫсене?*).

Африкре ҫи ҫур ҫӗр йенҫе, *Атлас* ҫӗрӗнҫе, ҫумӑрсем пулнӑ пирки, йывӑҫ курӑк Саххарӑ ҫӗрӗнҫинҫен ҫӗрӗрех; унта лаптактусем ҫинҫе ҫеҫен-хирсем пур, варсенҫе, ту-айакки хӗррисенҫе ӗмӗр симӗс вӑрмансем пур; вӑл вӑрмансенҫе ҫу-йывӑҫҫисем, олеантрсем, урӑх тӗрлӗ йывӑҫсем те нумай ӳсеҫҫӗ.

Африкре, ҫи кӑнтӑрта, лаптак тусем ҫинҫе, ҫеҫен-хирсем пур; ҫур-кунне унта сухан тымарлӑ курӑксенӗн ҫеҫекӗсем ҫурӑлаҫҫӗ те, ҫеҫен-хирсем пит хитрен курӑнса выртаҫҫӗ. Тинес хӗр-

ринҫи айлӑмсенҫе ӗмӗр симӗс ҫулҫӑлӑ йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ; вӗсем Африкре ҫи ҫур-ҫӗр йенҫи йывӑҫ ӑраттинҫен тухман, урӑх ӑратӑран тухнӑ.

Сиплӗ, усӑлӑ йывӑҫ-курӑксем нумайӗшӗ Африкрен тухнӑ: Апиҫҫинирен *кофӗ йывӑҫӗ* тухнӑ, Квиней вӑрманӗнҫен *ҫу пальми* тухнӑ, саваннӑ ҫеҫен-хирӗнҫен темиҫе тӗслӗ *вир* тухнӑ, тата *ҫӗр майӑрӗ* тухнӑ, Саххарӑ пушӑ-уйӗнҫи оаҫиссенҫен *финик пальми* тухнӑ.

Ҫӗр-ҫунсем.

Ҫӗр-ҫунсем Африкре саваннӑ ҫеҫен-хирӗсенҫе пит нумай. Унта ырӑ курӑк ҫинҫе кӗтӳ-кӗтӳпе *анттилопсем, страуссем*, тата *ҫепрӑсем* ҫӳреҫҫӗ. Саваннӑ ҫеҫен-хирӗнҫи унӑн-кунӑн ӳсекӗн акартсипе мимосӑ тураҫӗсене *ширафсем* кӑшласа ҫӳреҫҫӗ. Курӑкпа тӑранса пурӑнакан ҫӗр-ҫунсене тытасшӑн хӑваласа ҫӳрекенӗисем—тискэр кайӑксем: *ӑрӑслансем, хийенсем, шаккалсем* пур. Вӗсем пурӑнма йуратакан вырӑнсем—вӑрман хӗрринҫи уҫланкӑсем; каҫ пулсан, вӗсем унтан ҫӗр-ҫунсене тытма саваннӑ ҫеҫенхирне тухса кайаҫҫӗ.

Унтах, вӑрман уҫланкисенҫе, хулӑм тирлӗ пысӑк *слонсем, майрака-сӑмсасем* йывӑҫ тураҫӗсене, тымарӗсене, улмисене ҫисе ҫӳреҫҫӗ. Африкре вӑрман варринҫе ҫӗр-ҫунсем сахал. Пуринҫен ытла унта упӑтесемпе вӗсенӗн тӑшманӗсем леопартсем тӗл-пулкалаҫҫӗ. Ҫӑн шалта, никам ҫӳремен ҫӗрте, етем майлӑ упӑтесем *шимпанҫесем, корилласем* ҫемйи-ҫемйипе пурӑнаҫҫӗ. Вӑрман варринҫе, саваннӑ варринҫи шывсенҫе, кӳлӗсенҫе *пекемотсем, кроккотилсем* пурӑнаҫҫӗ.

Хурт-хӑмӑрсем вӑрмансенҫе, саваннӑ ҫеҫен-хирӗнҫе пит нумай, пуринҫен ытла *термитсем* нумай, вӗсенӗн йӑвисем йарса пусмассерен тӗл-пулаҫҫӗ. Африкре, кӑнтӑрта, хайар сӗлехелӗ *тсетсе* йатлӑ шӑна пур; вӑл ҫыртсан, выльӑх-ҫӗрлӗхе вӗлермесӗр хӑвармасӗ.

Нил пуҫӗнҫе, тата пысӑк кӳлӗсем ҫинҫе кайӑк-кӗшӗк пит нумай пурӑнать; хӗлле пулсан, унта ЙеврОп ҫӗрӗнҫен вӗҫен-кайӑксем кӗтӳ-кӗтӳпе, темӗн ҫухлӗ пуҫтарӑнаҫҫӗ.

Нумайах та пулмасть, Африкре тӗрлӗ кайӑксем шутсӑр нумай-ҫҫӗ. Сӑмахран калас, ҫат кӳлли патӗнҫе слонсем кӗтӳ-кӗ-

тӳпе, 500-шер пуç ытла, çӳрет-ђĕç; тата кăнтăрта антилопсем темиçе çĕр пиншер пуç ырăнтан ырăна куçса çӳрет-ђĕç. Пĕрре çӳревçĕсем Сампеçи шывĕ патĕнђе антилоп кĕтĕвĕ витĕр вăйпа аран-аран тухнă. Анђах халĕ, пер хĕрхенмесĕр тыгнă пирки, кайăксем Африкре нумай сахалланђĕç; пуринђен ытла страуссемпе слонсене нумай пĕтерђĕç, слонĕсене асав-шăлĕсемшĕн нумай тытаççĕ, страуссене—тĕкĕсемшĕн.

Саххарă çĕрĕнђе ђĕр-ђун пит сахал; унта *скорпионсем, калтасем, çĕленсем* анђах нумай; вĕсем ĕçмесĕр-çимесĕр темиçе уйăх таран пурăнма пултараççĕ. Çав ђĕр-ђунсем кăнтăрла хĕвел çинђе выртаççĕ, каç пулсан сивĕрен шăтăка, çĕр çурăкне, кĕрсе выртаççĕ.Саххарă варринђи айлăмсене, курак ӳснĕ çĕре, *антилопсем, страуссем* пыра-пыра кĕреççĕ, вĕсемшĕн кун каçађен пыршăн вуншар, темиçе çĕршер çухрăм ђупма ним те мар. Пушхир хĕррисенђе тата *арăслансем, хийенсем* тĕл-пулкалаççĕ.

Пуш-уйра пурăнакан ђĕр-ђунсем пурте шупка-кăвак тĕслĕ, çавăнпа вĕсене хăйсемпе пĕр тĕслĕ ђулла-хăйăрла çĕрте ђасах асăрхама пулмаст.

Атлас çĕрĕнђе те ĕлĕк страуссемпе арăслансем нумай пулнă, халĕ вĕсене пĕтĕмпе пĕтерсе тухнăпа пĕрех.

Пурăнакан халăхсем.

Африкре мĕн пур пурăнакан етем *150 мĕлйуна* çитет, вăл çĕр çинђе пурăнакан етемсенĕн вунă пайĕнђен пĕр пайĕ пулаť.

Африкĕн аслăшĕ 27 мĕлйун тăваткăл çухрăм пулаť, çавăнпа пĕр тăваткăл çухрăм, йăлт çурмаран шутласан, 6 çынна тивет.

Халăх йышлă пурăнни Африкре пур çĕрте те пĕр пек мар. Пуш-хирсенђе çын пурăнманпа пĕрех. Тропикри лађакалă вăрмансенђе те пурăнакан сахал, унта ухутапа пурăнакан халăхсем анђах сĕтĕренсе çӳреççĕ. Африкри саваннă çеçен-хирĕсенђе Аçи варринђи çеçен-хирсенђен халăх нумайрах пурăнаť, мĕншĕн тесен унта çумăрсем пулкалаççĕ те, тырă-пулă тума пулаť. Нил шывĕ йухса выртакан варта, анатра, халăх пит çăра пурăнаť.

Африкри халăхсем виçĕ рассăран тухнă: *хура рассăран, шурă рассăран, тата сарă рассăран.* Виç пайран икĕ пайĕ хура рассăран тухнисем. Вĕсен хушшинҫе ҫăн паллă халăх *некĕр халăхĕ.* Некĕрсем саваннă çеçен-хирĕсенҫе,троппик вăрманĕсенҫе аслăшĕпех пурăнаççĕ; ҫĕлхерен пулсан, вĕсем ик тĕрлĕ: пĕрисене *сутан* теççĕ, тепĕрисене *пантту* теççĕ.

Хоттенттотсемпе пушменсем те хура рассăран тухнă. Вĕсем Африкре кăнтăрпа хыçал-йен хушшинҫе пурăнаççĕ. Вĕсем некĕрсенҫен шурăрах, пĕркеленҫĕкрех ўтлĕ, çўçĕсем те вĕсен пайракан-пайракан ўсеççĕ.

Африкре çур-çĕрпе мал-йенҫе мĕн авалтанпах шурă рассăран тухнă халăхсем, Хамран тухнисем, пурăнаççĕ: перперсем, йекиппĕтсем, тата урăххисем те.

Вĕсенҫен кайран унта Аçи çĕрĕнҫен, *Çимрен тухнă халăхсем* вырса кĕнĕ: арапсем, йеврейсем; çавсем пурте хамитсемпе хутшăнса кайнă.

Çак халăхсем,—икĕ ушкăнĕ те: хамитсем те, çемитсем те,—тулашĕнҫен пулсан та, ҫĕлхерен пулсан та, пĕр тĕслĕрех; анҫах хамитсен некĕрсен тĕсĕ те пур: вĕсенĕн тутисем çемитсенҫен мăнăрах, сухалĕсем те çукпа пĕрех. Çемитсен те, хамитсен те ўҫĕ хурарах.

Йеврол çыннисем Африке куçса ларма пуçланă нумайах пулмаст. Вĕсем Африк çĕрĕнҫе ҫи кăнтăрти вĕçĕнҫе анҫах лăнках ларса тухнă, унти климăт вĕсемшĕн пулсан пурăнма лайăх пулнă.

Сарă рассăран тухнă халăхсем Матакаскар çинҫе пурăнаççĕ, вĕсем *матакассем.* Çав матакассем çакăнта Малай архипелакĕ çинҫен куçса килнĕ пулмалла.

Африк çĕрне пайăн-пайăн пăхса тухни.

Йекиппĕт.

Йекиппĕт тесе Нил шывĕ йухса выртакан ҫăн анатри айлăмпа ун çумĕнҫе сарăлса выртакан пуш-хирсене калаççĕ. Çав айлăм Саххарă пушă хирĕ урлă симĕс ансăр ленттă пек тăсăлса тăрать. Вăл вăрăм оаçис пек анҫах, пĕр йенҫен ăна ĕреҫĕ-ĕре-

ђёпе тăракан çӳлĕ тӳнсем, тепĕр йенђен ђуллă ђăнкă çырансем хĕстерсе тăраççĕ.

Çав Йекиппĕт айлăмĕ сарлакăшĕ 50 çухрăм пулаť пулĕ, анђах етеме пурăнма йейӳ айне пулнă çĕрсем кăна йурăхлă. Çавăн пек çĕрĕн сарлакăшĕ 15 çухрăмран ытла мар; теђттă таврашĕнђе анђах вăл ђылай сарлака. Ытти шыв сарăлман çĕрти вырăнсем пит типĕ вырăнсем, мĕншĕн тесен Йекиппĕт çĕрĕнђи çанталăк ђиксĕр типĕ çанталăк, çумăрсем уата нихăçан та çуманпа пĕрех.

Нил айлăмĕнђе *феллахсем* пурăнаççĕ, вĕсем авалхи Йекиппĕт халăхĕнђен ĕрђесе йулнă халăхсем. Феллахсем арапсемпе пăртак хутшăнкаласа кайнă та, Мухаммет тĕнне тыта пуçланă, тата калаçасса та арапла калаçа пуçланă. Феллах пурăнăçĕ Нилран килет. Ахаљ мар çав феллахсенĕн авалхи тĕп-ашшĕсем, Йекиппĕт çыннисем, Нила асăнса çапла каланă: „Мухтав сана, Нил! Мухтав сана, Йекиппĕт çĕрне ђĕрĕлĕх парса тăраканскере!“ тенĕ. Феллахсем *çĕр ĕçĕпе* пурăнаççĕ.

Нил айлăмĕнђе авалах, Фараонсем вăхăтĕнђех, *каналсем* тунă. Çав каналсем икĕ тĕрлĕ: пĕр йышшисем тарăн, тепĕр йышшисем—ăшăх. Тарăн канал тăрăх йаланах шыв йухса тăраť, ăшăххисенђе шыв Нил тулса сарăлса кайнă ђухне анђах йухаť.

Йейӳ çула, ăшă, тăп-тăрă çанталăкра пуçланса кайаť. (*Вăл мĕншĕн апла пулат?*). Ун ђухне Нил шывĕ пăтранђăклă пулаť, çӳлелле тапса хăпараť, вара каналсем тăрăх йухса хирсем урлă сарăлса кайаť; йапалисĕм пĕтĕмпех шыв айне пулаççĕ, тĕллĕн-тĕллĕн анђах çӳлĕ вырăнсем, çинђе йалсем, хуласем, паљмă катисем (рашђасем) курăнкаласа тăраççĕ.

Пăтранђăк шыв пĕвесемпе картласа хунă уйсенђе хуллен тăрăлма пуçлаť те, пĕтĕм çĕр çине лăйма сарса хăвараť. Йупа уйăхĕнђе, шыв ђаксанах, феллахсем çав çемçе лăйма ăшне куккурус, тулă, пăрăç акса хураççĕ. Акнă тырăсем кĕр-куннепе, хĕлле ӳсеççĕ. Пирĕн патра уй-хирсем йур айĕнђе выртнă ђух, Йекиппĕтре каљђасем сип-симĕс йешерсе ӳсеççĕ. Тырă вырма çуркунне пуш-уйăхпа ака-уйăхĕнђе тухаççĕ.

Тырă вырса пĕтерсен, феллахсем лăйма ларса тулнă каналĕсене тасатма тытăнаççĕ. Вĕсем лăймалă пыљђăка лăпă ăшне тултараççĕ те, çӳле илсе тухса, пĕвесене пĕвелесе çирĕплетеç-

çĕ. Çур-кунне, кашни çулах, феллахсем, темиçе çĕр пин çын пулĕ, çав ĕçе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Çур-куннепе çула Йекиппĕтре çĕре ĕçлемеççĕ. Ун ђухне шыв хĕрринђи, йе тарăн капал сывăхĕнђи уйсенђи çĕрсене анђах тăваççĕ. Çав уйсене феллахсем йавса тунă лăпăпа шăвараççĕ, лăппипе шывне йе çăл-тарасипе, йе тĕвепе пуйвăл çавăрса тăракан çăл урапипе кăлараççĕ. Çав урапа ђĕриклетсе йанăрани вара сур-кунне пĕтĕм Йекиппĕт çĕрĕпех сарăлать. Ăсса кăларнă шыва валашка çине йараççĕ те, валашкаран вара вăл пĕђĕк каналсем тăрăх пĕтĕм уйĕ аслăшĕпе йухса кайать. Уйĕсене çĕр-мамăкĕ акаççĕ, теђттăри ђăн айлăмрах çĕрсене тата сахăр хăмăшĕпе рис акаççĕ.

Çунтарса тăракан хĕвел хĕртнипе вăйран сулăнса кайаттенех феллах çынни кĕрçипе шыва пĕр каналран тепĕр канал çине куçарса çӳрет. Ĕçлеме çу-уйăхĕнђе ытла та йывăр: ун ђухне Саххарă пуш-уйĕнђен вĕри çил *хамçсин* вĕрсе тăрать те, пĕлĕт пек тусан çĕклесе пырать.

Тыpă-пулă Йекиппĕтре пит лайăх пулать. Нил варĕнђи пек тырă ниçта та пулмасть; çавăнпа та халăх унта пит çăра пурăнать. Çӳлĕрех вырăнсенђе пур çĕрте те *феллах* йалĕсем ларса тухнă.

Вĕсен кил-çурђĕсем пĕр-пĕринне перĕнсех тăраççĕ; пӳрђĕсен лаптак çийĕсем ђас-ђасах пĕр-пĕринне сыпăçса тăраççĕ. Çав пӳртсене феллахсем шыв лăймакине ваклана улăмпа çăрса тăваççĕ. Ђӳређе тавраш вĕсенĕн сукпа пĕрех, тенкел-пукан та сук. Феллахсем çывăрасса урайне выртса çывăраççĕ. Пурăнасса вĕсем пит нађар пурăнаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Йекиппĕт çĕрне тытса тăракан тӳре-шарана пит пысăк хырçă тӳлесе пурăнаççĕ.

Феллахсем Йекиппĕтре ђăн йышлă халăх. Вĕсемсĕр пуçне унта тата *арапсемпе коптсем* пурăнаççĕ. Коптсем вĕсем авалхи Йекиппĕт халăхĕнђен хунаса кайнă çынсемех, анђах феллахсенђен акă мĕнтен уйрăм: вĕсем Христос тĕнне тытса пурăнаççĕ, тĕрлĕ ремеслапа суту-илӳ ĕçне тăваççĕ, пуринђен ытла тата хуласенђе пурăнаççĕ.

Йекиппĕт çĕрне *хетив* тытса тăрать. Йевропра пысăк вăрçă пуçланса кайаттђен вăл тĕрĕксенĕн султтанне куланай тӳлесе тăнă; кирĕк мĕн ĕç тăвас пулсан, *акăлђансен куçĕнђен пăхса пу-*

рӑннӑ. Пур аслӑ вырӑнта ларакан улпутсем, пур йанаралсем, пур аслӑ ахвитсерсем, Йекиппӗтрӗ—акӑђђансем. Вӗсем Йекиппӗтрен нумай ырӑ кураҫҫӗ, анђах хӑйсем те Йекиппӗтшӗн нумай тӑрӑшан пек тӑваҫҫӗ: тӳре-шарасене халӑха йӗркелӗ саккун тӑрӑх тытса тӑма пулӑшаҫҫӗ, ђукун-ҫулсем тӑваҫҫӗ, авалхи каналсем ђипер тӑнине асӑрхаса тӑраҫҫӗ, ҫӗнӗ каналсем те алттараҫҫӗ. Вӗсем Нил вӗҫӗнђе, теђттӑ пуҫланса кайнӑ тӗлте, ӗлӗк хрантсуссем тума пуҫланӑ пӗвене пӗвелесе хунӑ, тата Ассуан тӗлӗнђе, ђулсем картласа тӑракан вырӑн пӗтнӗ ҫӗрте, тепӗр пысӑк пӗве тытса хунӑ; ҫак пӗвесем Нил шывӗсене йамасӑр ђарса хураҫҫӗ те, вара Нил тулса сарӑлнипе темӗн сарлакӑш ҫӗре нӳретсе шӑварса тӑрат̌. Йекиппӗт ҫӗрӗнђи пуҫ-хула *Каир* йатлӑ, арапла ӑна *Кахире* теҫҫӗ; вӑл Нил вӗҫӗнђе, теђттӑ пуҫланса кайнӑ тӗлте ларат̌. Каир пек пысӑк хула Йекиппӗтре анђах мар, пӗтӗм Африк ҫӗрӗнђе те урӑх ҫук; Каирта пурӑнакан халӑх мӗн пурӗ 600 пине ҫитет.

Каиртан инҫе мар тем пысӑкӑш *пирамитсем* пур, вӗсен ӑшӗнђе авалхи фараонсен тупӑкӗсем тӑраҫҫӗ; ҫав пирамитсене Христос ҫуралађђен темиҫе пин ҫул ӗлӗк тувӑ пулсан та, вӗсем йухӑнса кайман ҫирӗп тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсене пысӑк ђулсенђен тунӑ.

Йекиппӗтри ђӑн паха порт *Алексантри*; унтан Нил ҫине тухмашкӑн кимӗсем ҫӳрекен канал пур, Каира ҫӳремешкӗн ђукун-ҫул пур. Йекиппӗтрен тухакан тавар—ҫӗр-мамӑкӗ; Йекиппӗт ҫӗр-мамӑкӗ пӗтӗм ҫӗр ҫинђи ђӑн ырӑ мамӑк.

Йекиппӗт ҫӗрӗнђе тата *Суес каналӗ* пур; ҫав канал тӑрӑх каллӗ-маллӗ, Йевроппа Аҫи хушшинђе ҫӳренӗ ђух, темиҫе пин пысӑк кимӗсем иртсе кайаҫҫӗ. Кавалӑн ҫур-ҫӗр йенђи вӗҫӗнђе *Порт-Саит* йатлӑ хула пур, кӑнтӑрти вӗҫӗнђе—*Суес* пур. Порт-Саит вӑл пысӑк хула, канал алтса хуриђђен унта хӑйӑр хывса хӑварнӑ хӳресем, ӑшӑх вырӑнсем анђах пулнӑ.

Атласри ҫӗрсем: Марокко, Алшир, Тунис, Трипполипе Паркӑ.

Атлас ҫӗрӗнђе йарӑмӑн-йарӑмӑн тӑсӑлса тӑракан тусем пур, вӑл тусем Атлант оккеанӗпе Ҫӗр варринђи тинӗсӗн ҫыранӗ

хĕррипе пыраççĕ. Çыран хĕрринелле анакан ту-айаккисенђе нумай тĕлте вăрмансем ӳсеççĕ. Çав вăрмансенђе ĕмĕр йешерсе ларакан йывăçсем ӳсеççĕ: лаврсем, çу-йывăççисем, пропкă йуманĕсем, тата урăх йывăççсем те ӳсеççĕ. Çанталăк унта çăвĕпех вĕри, уйар тăраť пулсан та, тинĕс хĕррипе пыракан çĕр çинђе тырă-пулă тума та, выђăх-ђĕрлĕх усрама та пулаť, мĕншĕн тесен унта хĕллехи илпĕк çумăр нӳрĕкĕ йулаť. Тусем хушшинђи çӳлĕ вăрсенђе типĕ çеçен-хирсем анђах вырнаççĕ, çав хирсенђе шалта ђас-ђасах тăварлă кӳлĕсем—*шотсем* тĕл-пулкалаççĕ. *(Астуса илĕр: мĕнле кӳлĕсем вĕсем?)*. Çав хирсенђе тĕрлĕ курăксем ӳсеççĕ: арăм-утисем, ађфăсем, тата урăххисем те; çавăнпа унта выђăх-ђĕрлĕх усрама лайăх, теме те пулаť. Атласăн кăнтăр йенђе анђах пуш-уй пуçланса кайаť, унта оаçиссенђе анђах пурăнма пулаť. Атлас çĕрĕнђе пурăнакан тĕпхалăхсем—*перперсем*, вĕсем унта мĕн авалганпах пурăнаççĕ. Кайран унта *арапсем* Аçи çĕрĕнђен пырса кĕнĕ. Вĕсем çав перперсене çĕнтерсе илнĕ те, нумайђђен вĕсене пуç пулса, хăйсенĕн аллинђе тытса тăнă, Каçаллари Атласра халиђђенех тытса тăраççĕ.

Хуласенђе çав халăхсем иккĕш те хутшăнса кайнă та, урăх тĕрлĕ халăх пулса тăнă, вĕсене *маврсем* теççĕ. Ытти çĕрте вĕсем халĕ те пĕр-пĕринђен паллах уйрăм тăраççĕ.

Арапсем вĕсем кĕтӳçĕсем, харсăр вăрă-хурахсем. Вĕсенĕн тĕп-ĕçĕ—*выђăх-ђĕрлĕх усраса пурăнни*. Вĕсем вырăнтан вырăна куçса çӳреме йуратаççĕ, хăйсем сурăх çăмĕнђен, йе тĕве тĕкĕнђен тĕртсе тунă ђатăрсенђе пурăнаççĕ. Выђăх-ђĕрлĕхне тăрантармалли лайăхрах вырăн шыраса, вĕсем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна тек сиксе çӳреççĕ, çӳренĕ ђухне, май килсен, килçуртпа пурăнакан перперсене çаратаççĕ.

Перперсем кил-çуртпа пурăнаççĕ. Вĕсенĕн тĕп-ĕçĕ—*çĕр ĕçĕпе пахђа ĕçĕ*. Хăйсенĕн анисене вĕсем кĕр-кунне акаççĕ те, çуркунне пуçламăшĕнђех вырса илеççĕ. *(Пĕлĕр: мĕншĕн вăл апла?)*. Тырă-пулăсем, *тулăпа урпа*, лайăх пулаççĕ; хăш ђухне анђах уйри тырра шăрђăк пĕтерет.

Арçынĕсем уйра ĕçленĕ ђухне, хĕр-арăмĕсем *иçĕм-çырли* сађĕсенђе, пахђисенђе тăрăшаççĕ; çав пахђисенђе вĕсенĕн *апелççинсем, перççиксем, çу-йывăççисем* ӳсеççĕ; çу-йывăçин çимĕçĕсенђен пуса çу кăлараççĕ.

Перперсен йалĕсем ҫăнкă ту хĕррисенҫе ларaҫҫĕ; арапсем тивесрен, вĕсем йал тавра ҫул карта йе ҫĕр карта (хӳме) туса ҫавăрăваҫҫĕ.

Атласра пурăнакан халăхсенĕн тĕнĕ—*Мухаммет тĕнĕ*, калаҫасса вĕсем *арап ҫĕлхипе* калаҫаҫҫĕ. Халăха тытса тăрас тĕлĕшрен пулсан, Атлас ҫĕрĕ пайăн-пайăн уйăрăлса тăрат. Каҫалра *Марокко* йатлă патшалăх пур; нумай пулмаст, вăл хăй ирĕкĕпе пурăнат-ҫĕ, халĕ анҫах Хрантси аллинҫе тăрат.

Мароккори уплăҫсене арапсенĕн *шейхĕсем* тытса тăраҫҫĕ, вĕсем хрантсуссене пăхăнасшăнах мар, ҫас-ҫасах вĕсемпе вăрҫаҫҫĕ. Арапсем ҫапла вăрҫса сăтăр туса ҫӳренĕ пирки ăсталăхпа суту-илӳ ĕҫĕсем унта малаллă кайаймаҫҫĕ.

Мароккори аслă хуласем—*Феспе Марокко*; аслă порт—*Таншер*; Йевроппа суту-илӳ тăвас ĕҫе ҫак Таншерте тăваҫҫĕ.

Мал-йенҫи Атлас ҫĕрне *хрантсуссем* тытса тăраҫҫĕ. Вĕсенĕн унта икĕ колони пур—пĕри *Алшир*, тепри *Тунис*. Хрантсуссем ҫак колонисенҫе хăйсемшĕн нумай ырă ĕҫ тунă: *пурăнăҫа йĕркене кӳртнĕ; ҫукун-ҫулсем нумай тунă; Саххарă ҫумĕнҫи ҫĕрсене, тарăн ҫăлсем алтса, шăвармалла тунă.* Ĕлĕк ҫап-ҫара тăракан выринсенҫе халĕ финик паљми катисем хитрен курăнса тăраҫҫĕ. *Ăсталăх та, суту-илӳ ĕҫĕ те* ҫапланса пыраҫҫĕ; Йеврон ҫĕрне унтан халĕ тĕмĕн ҫухлĕ ерехсем, ҫимĕҫсем, пропкă йуманĕ хупписем, аљфă курăкĕсем турттарса тухаҫҫĕ, аљфă курăкĕнҫен арҫасем авса тăваҫҫĕ, тата ҫăн ырă хут хăтĕрлеҫҫĕ. Пĕтĕмпех каласан, хрантсуссем унта тавар тумалли хатĕрсем илеҫҫĕ, хăйсĕм хапрăкра тунă таварĕсене ҫутаҫҫĕ. Ҫăн пысăк хуласемпортсем: *Алширпе Тунис.*

Трипполипе Паркăра ҫантăлăк Туниспе Алширти пекех; йĕпе-сапа анҫах унта сахалтарах пулат, ҫавăнпа йывăҫ-курăк та унта наҫартарах. Пурăнакан халăхсем ҫав арапсемпе перперсемех. Ку таранҫҫен ҫав ҫĕрсене тĕрĕксем тытса тăрат-ҫĕҫ, анҫах халĕ ăна *итталсем* туртса илнĕ. Ҫĕнĕ хуҫасем унта халĕ пурăнăҫа майласа йĕркене кӳртме тăрăшаҫҫĕ, арапсенĕн шейхĕсене хăйсене пăхăнтарма пикенеҫҫĕ, ҫав шейхсем тĕрĕк аллинҫе пурăннă ҫух ирĕкре вăрă ĕҫĕпĕ пурăннă.

Саххарӑ.

Саххарӑ вӑл хӗвел хӗртвипе ӗнсе ларнӑ пушӑ ҫӗр. Пӗтӗм аслӑшӗпе унта ҫара ђул куписем анђах выртаҫҫӗ. Йухакан хӑйӑр куписем сарӑлса лараҫҫӗ.

Астуса илӗр: пушӑ уйсенђе ђулсем йепле саланса пӗтеҫҫӗ? Саххарӑри ђуллӑ ҫӗрсене *хамматӑ* теҫҫӗ. Унта пысӑк ђул муклашкисем купи-купипе купаланса выртаҫҫӗ, хӑйсем хӑшӗ кӑмпа йевӗрлӗ, хӑшӗ пӗр-пӗр ђӗр-ђун йевӗрлӗ, хӑшӗ тата етем пекех, тата ҫавӑн пек урӑх майлисем те пур. Ђулсем пурте пӗр пек, пӗр майлӑ ванса саланмаҫҫӗ, ҫавӑнпа ҫавнашкал пулаҫҫӗ.

Саххарӑ ҫӗрӗнђе тата хӑп-хӑш вырӑнсем пӗтӗмпех вак ђуллӑ. Ҫак вак ђулсем пысӑк ђул муклашкисем пӗр пек ванса выртнӑ ҫӗрте пулаҫҫӗ. Йулашкинђен тата пушӑ аслӑ уйсенђе йухакан хӑйӑр анђах выртат̆. Ҫавнашкал пуш-уй—Саххарӑ ҫӗрӗнђе малйенђе выртакан *Ливи пуш-уйӗ.* Унта хӑйӑр куписем, тўнсем, шыв хумӗсем пек ӗрегӗн-ӗретӗн тӑсӑлса выртнӑ, хӑйсем хӗвел ҫуттипе хӗремесленсе ылттӑн пек йӑлтӑртатса тӑраҫҫӗ. Лӑпкӑ ҫанталăкра вӗсем лӑпкӑ тӑраҫҫӗ. Анђах ҫил вӗре пуҫлаеанах, ҫав хӑйӑр купи тӑррисем тем тӗтӗм кӑларнӑ пек пулса кайаҫҫӗ: хӑйӑр ҫўлелле вӗҫсе хӑпарса кайат̆ те, вара хӑйӑр куписем пӗтӗмпех таҫта тапранса кайаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та тўнсем вырӑнтан вырӑна куҫаҫҫӗ, унта пӗр ўсен-таран йывӑҫ-курӑк та пулмаст̆.

Саххарӑ ҫӗрӗнђе етем сӑртлӑ вырӑнсенђе анђах пурӑнма пултарат̆, унта ҫумӑрсем ўккелеҫҫӗ те, курӑк пулат̆; тата оаҫиссенђе пурӑнма пултарат̆, унта айалтан шыв тапса тухат̆ те, финик паљмисем ўскелеҫҫӗ.

Саххарӑра сӑртлӑ ҫӗрсенђе *кил-ҫуртсӑр халӑхсем* пурӑнаҫҫӗ, каҫал-йенђе перперсемпе пӗр тӗслӗ *туарек* халӑхӗ пурӑнат̆. Вӗсем сӑрт айаккисенђе хӑйсен выљӑхӗсене пӑхса ҫўреҫҫӗ: кађакисене, сурӑхӗсене, тата тӗвисене.

Вӗсене хӑйсенӗн нађар кӗтӗвӗсем тӑрантараймаҫҫӗ те, вӗсем оаҫиссенђе пурӑнакан халӑхсене тапӑнаҫҫӗ. вӗсенђен хырҫӑ пуҫтараҫҫӗ; тата каравансене ҫаратаҫҫӗ; ђас-ђасах ҫаратма Сутанпа Атлас ҫӗрне пыркалаҫҫӗ. Ҫўреме тухнӑ Йевроп ҫыннисене нумайӗшне ҫав туарексем вӗлерсе ҫаратса пӗтернӗ. Вӑрӑ тӑвасси, ҫаратасси, вӑрттӑн вӗлересси, туарексемшӗн пулсан, усал ӗҫ мар, ђӑн ырӑ ӗҫ. Ҫапах та вӗсем пит нађар пу-

рӑнаççӗ: финик çитмен пирки ҫас-ҫасах вӗсем шӑрҫӑкпа калтасене çисе пурӑнаççӗ.

Оаçиссенҫе перперсем пурӑнаççӗ. Вӗсем арапсемпе, некĕрсемпе хутӑшса пӗтнӗ. Пӗтӗм пурӑнӑçӗ вӗсенӗн финик паљминҫэн килет. Çав пушӑ çӗртэ пурӑнакан халӑхсем калаççӗ: финик вӑл наҫарсене лӑплантаракан, пурне те пулӑшакан, пурне те çăлакан, теççӗ. Ҫӑнах та вӑл тӗрӗс сӑмах, мӗншӗн тесен, финик паљми пулмасан, Саххарӑра нийепле те пурӑнайас çук. Паљмӑ йывӑçӗ вӑл аҫаш йывӑç мар, шӑварма та ыйтмасt вӑл, мӗншӗн тесен унӑн тымарӗсем пит тарӑн кайаççӗ. Унӑн çимӗçӗсем çав оаçисре пурӑнакан халӑхшӑн çăкӑр, вырӑнне пулаççӗ.

Перперсем финике ҫӗрӗлле те, вӗçерсе те, типӗтсе те çийессӗ. Ҫи наҫар çимӗçӗсене, хупписене тӗвисене, лашисене, тата йыттисене параççӗ.

Оаçисре пурӑнакан халӑхсем паљмӑ айне сулхӑна тӗрлӗ çимӗç кўрекен йывӑççем лартаççӗ: перçсикпе аппелçсин йывӑçӗсене, тата урӑххисене те лартаççӗ, пуринҫен ытла паљмӑ айӗнҫи çӗре алтса тӗрлӗ тырӑ тӑваççӗ; çулталӑк хушшинҫе вӗсем тырра темиçе хут акса вырса илеççе. Çула вӗсем Африк çӗрӗнҫи варе акаççӗ, хӗлле—тулӑпа урпа акаççӗ.

Çурҫӗсене оаçисре тӑмран тӑваççӗ, çине финик паљми суљçипе витеççӗ; çапла тунӑ çуртсем Саххарӑ çӗрӗнҫе темиçе вуншар, темиçе çӗршер çул лараççӗ; пӑхсан, хайсене пӗр лайӑхрах сумӑр çусан, тӗпӗ-йӗрӗпе çуса каймалла.

Кил-çуртсӑр пурӑнакан туарексем сӑтӑр туса çаратмасан, оаçиссенҫе пӗр хуйхӑсӑр пурӑнма пулӗ-ҫҫӗ, анҫах тунӑ тырӑпулла, финиксене çав туарексем пит нумай илсе кайса хупласçсӗ. Çав вӑрӑ-курахсем пӗр оаçисрен тепӗр оаçисе, йе тинӗс хӗрринҫе пурӑнакан халӑхсем патнэ çўреме те кансӗрлеççӗ; оаçисре пурӑнакан халӑхсем çавӑнта финик илсе кайса сутаççӗ те, хайсем валли Йевропран килнӗ тӗрлӗ тавар, тумтир валли пир-авӑр туйанаççӗ. Пысӑк караванпа, хӗç-пӑшалпа анҫах çул çине тухма пулаt. Унашкал караванра темиçе çӗр тӗве пулаt; çавӑнпа апла караванпа хутран-ситрен анҫах тухаççӗ; кайна ҫухне çул çинҫе туарексене çапах та çул укçи тўлеççӗ.

Çулталăк хушшинҫе Саххарă виIёр *Сутанран Трипполине*, Мурсук урлă, пысăк каравансем страус тĕкĕпе слон шăммисене турттарса, темиçе хутҫен хуглаççĕ. Кайалла тавăрăннă ҫухне, вĕсем Сутана Йевроп таварĕсене илсе пыраççĕ; çул майĕпе тăвар та илеççĕ, вăл тăвара Саххарă çĕрĕнҫи тăварлă кўлĕсенҫен кăлараççĕ.

Саххарă çĕрĕ, пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех, хрантсуссен аллинҫе тăрат, анҫах Саххарăра пурăнакан халăхсенҫен Алшир ҫакки патĕнҫе пурăнаканнисем анҫах хрантсуссене пăхăнса тăраççĕ.

Апиççини.

Апиççини çĕрĕ вăл çўлĕ лаптак ту; вăл пĕтĕмпех шăтăкланса ту-айакки пулса пĕгнĕ çĕр; тавĕсенĕн ҫăррисем пурин те лаптак: вĕсенĕн ҫăнкă хĕррисенҫен хăйăрлă çĕр, йе хытса ларнă шараннă çĕр-пăхĕсем курăнса тăраççĕ; çавăн пек тусене Апиççинире *ампăсем* теççĕ. Унта сўнсе ларнă вулкансем те нумай.

Пурăнма майлă çанталăк Апиççини çĕрĕнҫĕ виçĕ тĕслĕ: айалти шăрăх çанталăк, çўлти сулхăн çанталăк, тата вĕсем хушшинҫи вăтамри ăшă çанталăк. Шăрăх тăракан çанталăкра çĕр вăл—тусенĕн ҫи айалти çĕрĕсем, айлăмсем. Унта пур çĕрте те троппикри сĕм-вăрмансем, тем пысăкăш пампуксем ўсеççĕ; унта упăтесем, леоппартсем кĕтў-кĕтўпе пурăнаççĕ; арăслансем те, шираф сем те, слонсем те, мăйрака-сăмсасем тө тĕл-пулкалаççĕ; шывĕсенҫе тата кроккотилсемпе пекемотсем кĕтў-кĕтўпе пурăнаççĕ. Анҫах етеме пурăнма айалта çĕрсем ытла лайăхах мар,—мĕншĕн тесен çула, çумăрсем çунă вăхăтра, варсене айлăмсене шыв тулат те, йейў тухса сарăлса кайат. Çўлти сулхăн çанталăкри çĕр те етеме пурăнма пит лайăхах мар, вăл лаптак тăвăн тăррисем тинĕсри шывран икĕ çухрăм çўрăран пуçласа таватă çухрăм таран çўлте тăраççĕ. Çавăнти ту тăррисене нумайҫен йур хупласа тăрат; çумăрсем çунă вăхăтра тата ҫас-ҫасах аçа авăтса пăр çăват; ту-айаккисенҫе унта сип-симĕс улăхсем пур, анҫах унта тĕрлĕ тырă-пулă тума май çук, пĕр урпа-çеç пулат.

Етеме пурăнма вăтамри ăшă çанталăк пуринҫен лайăх. Унта иçĕм çырли йываççи ўсет, кофĕ йывăçĕ те пулат, пуринҫен

пахи ак мĕн: çавăнти лаптак вырăнсенҫе тĕрлĕ тырăсем: урпа, тулă, вир, пит ăнса пулаççĕ, тата ырă çеремсем çинҫе темĕн ҫухлĕ пысăк кĕтӳсем, ĕне кĕтĕвĕсем, сурăх кĕтĕвĕсем, каҫака кĕтĕвĕсем тăранса çӳреççĕ.

Апиççинсем вĕсем ытти йут халăхсемпе хутăшса пулнă халăх, вĕсем—çемитсем, кунта Аравви çĕрĕнҫен куçса пына та, хамитсемпе, некĕрсемпе хутăшса кайнă; вĕсем тахăçантанпах *Христос тĕнне* тытса тăраççĕ, анҫах вĕсенĕн тĕнĕ пирĕнни пек мар, урăх майлăрах. Сăмахран каласан, ак Апиççин пупĕсем кĕл-тунă ҫухне параппан çапаççĕ, тата кĕлĕ-ташши ташлаççĕ.

Вĕсенĕн тĕп-ĕçĕсем—*вылйăх-тҫĕрлĕх усрани, тата çĕр-ĕç*. Апиççини çĕрĕнҫе çăвĕпе çумăрсем йалачах пулкалаççĕ, çавăнпа унта тырă-пулă ăнса пулат.

Апиççинсем, тата *ухутана* çӳреме пит йуратаççĕ; уйри ĕçе пĕтерсессĕн, вĕсем тарăн варсене кайаççе те, унта тискер кайăксене нумай тытаççĕ; нумайĕшне вĕсене ҫĕрĕ халлĕвех тытаççĕ те, Йевропри тискер-кайăк çурҫĕсене (сверинтсăсене) йараççĕ; анттилопсене тытмашкăн вĕсем леоппартсене алла вĕрентеççĕ; вĕсем арăслансене те алла вĕрентеççĕ. Некус çуртĕнҫе çавăн пек алла вĕреннĕ арăслансем темиçе те пур.

Апиççинсем çаврака пӳртсенҫе пурăнаççĕ, пӳрҫĕсене улампа витеççĕ. Йалĕсем вĕсенĕн ампăсем çинҫе лараççĕ, вĕсем таврa çĕр ҫас-ҫасах ҫăнкă пулат.

Апиççини çĕрĕнҫи халăхсене кĕнеçсем тытса тăраççĕ, вĕсене *рассем* теççĕ; вĕсем пĕр майах пĕр-пĕрнпе вăрçса пурăнаççĕ; пĕр-пĕрин çине пырса кĕрсе, халăха нумай сăтăр тăваççĕ. Пĕтĕм Апиççини çĕрне *некус-некести* тытса тăрат; вăл патшасенĕн патши тени пулат; хăй çыннисене вăл усрама та, вĕлерме те пултарат.

Апиççинире ҫăн аслă хула—*Аттис-Апепă*; вăл хулара çĕр пин çынна çывăх халăх пурăнат пулсан та, вăл пысăк йал майлă-кăна.

Аттис-Апепăран храптсуссенĕн портне, *Ҫипутти* йатлă хулана, каравансем çӳреççĕ, тата ҫукун-çул та пырат; Ҫипутти вăл *Атен* тивĕç-ури хĕрринҫе ларат.

Саваннăпа троппикри вăрмансенĕн çĕрĕ.

Çак çĕр Саххарă çĕрĕн кăнтăрти хĕрринҫен пуçланаҫ те, Калахари таранах кайаҫ, унтан Атлант оккеанĕ хĕрринҫе пуçланса Инти оккеанĕ çине тухаҫ.

Африкри саваннăра çанталăк пит ырă. Çу вăхăтĕнҫе, хĕвĕл çӳлте тăнă ҫух, унта куллен-кун троппикри аслатилĕ хайар шывлă çумăрсем пулаççĕ. Саваннăри çеçен-хирĕсенҫе вара вăрăм çăра курăк шăтса тухаҫ; çеçен-хир варринҫе унта-кунталаракан йывăççем ҫеҫеклене пуçлаççĕ; троппикри ырă хĕрлĕ çĕр те çĕр ĕçлекен етеме пит пысăк усă кӳрет. Хĕллехи уйăхсенҫе çанталăк уйар тулаҫ. Раççей çĕрĕнҫе кăнтăрдари пек ăшă пулаҫ; хĕвел çулахи пек ытла çӳлтех тăмасан та, хĕртессе хытă хĕртет. Саваннă çеçен-хирĕсенҫе курăк типсе саралса кайаҫ; уйарта йывăççем те çулҫине тăкаççĕ. *Саваннăра вут тухса, пушарсем пулнине астуса илĕр.*

Çумăрсем хĕлле Квиней тинĕс-ури хĕррисенҫе, тата Конко шывĕ таврашĕнҫе анҫах пулкалаççĕ; çавăнпа унта троппик вăрманĕсем ӳсеççĕ. Çавăнти вăрмансенҫе хирти çу-йывĕçĕпе ерех çырли йывăçĕсем тĕл-пулкалаççĕ. Çапах та етеме пурăнма унта ытла лайăхах мар: сырă-пулă тума унта таса вырăн пит сахал, хăртнă тума (кăк-кăклама)унта пит хурлăх.

Саваннăри çеçен-хирсенҫе, унти вăрмансенҫе *Сутан некĕрĕсемпе пантту некĕрĕсем* пурăнаççĕ. *Сутан* тесе *Никĕр шывĕ* пуçĕнҫен пуçласа, *Шурă Нил шывĕ* патне çитех сарăлса выртакан пысăк çĕре калаççĕ, *Сутан* тени вăл *хура-ӳтлĕ халăхăн çĕрĕ* тени пулаҫ. Сутан некĕрĕсем пантту некĕрĕсемпе пĕрех; тулашĕнҫен пăхсан та, пурăнăç тĕлĕшĕнҫен те вĕсенĕн уйрăм çукпа пĕрех, ҫĕлхи анҫах вĕсенĕн ăрасна.

Некĕрсенĕн тĕп-ĕçĕ—*çĕр ĕçĕ.* Вĕсем ака-суха тытма пĕлмеççĕ, çĕре урлă-пуртăпа йе шĕвĕртнĕ патакпа анҫах ҫакалаççĕ. Пуринҫен ытла вĕсем *Африк вирне* акаççĕ, ăна *турра* теççĕ. Вĕсем тата çĕр мăйăрĕпе панан, сахăр хăмăшĕ, тата урăх тĕрлĕ çимĕçсем та лайăх тăваççĕ.

Çаксем шăтса тухса, пулса çитиҫҫен, некĕрсем хайсен уйĕсене упăтесем, пекемотсем, слонсем пырса таптаса пĕтересрен сыхласа пурăнаççĕ. Пулса çитнĕ тыррине некĕрсем вырмаççĕ те, çулмаççĕ те, кашни пуҫаха çĕçĕпе пĕрерĕн-пĕрерĕн

касса татса илеççĕ; хăмăлне тислĕк вырăнне çавăнтах çунтарса йараççĕ. Тыррине ампара пуçтарса хураççĕ, ампарне тырра пĕтерекен термитсемпе тыр-хурҫĕсем пырса кĕресрен çӳлĕ йупасем тăррине тăваççĕ. Тыррине ал-арманĕпе авăртаççĕ те, çăнăхĕнҫен çăкăр вырăнне пашалусем пĕçереççĕ.

Йывăç çимĕçĕсенҫен некĕрсем *çу-палъмине* анҫах ӳстереççĕ, унăн çимĕçĕнҫен вĕсем çу кăларaççĕ.

Выҫăх-ҫĕрлĕх усрасран пулсан, саваннăра пур çĕрте те пĕр пек мар. Виктори кӳллинҫен пуçласа Лимпоппо шывĕ таран сарăлса выртакан аслă çĕрте тсетсе йатлă шăна пур; çав шăна çыртсанах, выҫăх пурăнаймасҭ, вилет. Çавăнпа вăл çĕрте выҫăх-ҫĕрлĕх пит сахал, йывăр йапаласене турттармалла пулсан, етемсем хăйсен вăйĕпех турттараççĕ. Телейне кура, вăл усал шăна çырма варĕсенҫе анҫах пурăнаҭ, апла пулмасан, Мал-йенҫи Африкре пĕр выҫăх та пурăнас çук. *Сутанпа Нупи* çĕрĕнҫе, Нил шывĕн вăта йухăмĕ çинҫе, выҫăх-ҫĕрлĕхе пит нумай усраççĕ, ăна тырă-пулă тăвассинҫен те нумай мала хураççĕ.

Ҫĕр-ҫун нумай пирки, некĕрсем пурте *ухутана* çӳреççĕ; пуринҫен ытла вĕсем анттилопсене, страуссене, тата слонсене тытма йуратаççĕ. Троппик вăрманĕсенҫе тата лутра вĕт халăхсем пур; вĕсем ухутапа анҫах пурăнаççĕ; кайăка тыгасшăн, вĕсем пĕр вырăнтан тепĕ вырăна пĕр майах куçса çӳреççĕ.

Некĕрсем кил-суртпа пурăнаççĕ. (*Пĕлĕр: мĕншĕн вăл апла?*) Хăйсенĕн пӳрҫĕсене вĕсем çапăран, курăкран, йе палъмă çуççинҫен тăваççĕ. Пурăнасса йалпала пурăнаççĕ. Хуласем вĕсенĕн пит сахал, мĕншĕн тесен вĕсенĕн суту-илӳ ĕçĕ сукпа пĕрех. Пысăкрах хуласем Сутанра пур; унта та хулисенҫе пурăнакансем çурри ытла арапсем. Унашкал хуласем ак çаксем: *Куккă, Кано, тата Тимпукту.*

Некĕрсенĕн патшалăхĕсем пит пĕҫĕккĕ; вăл патшалăхсем ҫас пулаççĕ те, ҫасах пĕтсе лараççĕ. Хăш ҫухне троппик вăрманĕнҫе пурăнакан некĕрсем темиçе йал пĕрлешеççĕ те, хăйсем уйрăм патшалăх тăваççĕ. Вăл патшалăха тытса тăракан пуçлăхĕ патша пулаҭ, ăна пăхăнса тăракан халăхăн пурăнăçĕ те, ҫунĕ, те йăлтах унăн аллинҫе. Çавăн пек патшасем хăйсемпе йунашар патшалăхсене çĕмĕрсе пырса кĕреççĕ те, май килсен хăйсем валли темĕн ҫухлĕ мул çаратса илсе кайаççĕ, тыткăна илнĕ халăха ҫура туса, сутса пĕтереççĕ.

Етем *ҫуралăха* кĕрсе ӳкни Африкри пек ниҫта та пулман, ҫурасене унтан Америкӗ караппала темĕн ҫухлĕ турттара-турттара кайнă. Халĕ Америкре етеме ҫура тăвас ĕҫ пĕтнĕ пулсан та, Африкре, пасарсенҫе, ҫурасене нумай илсе сутаҫҫĕ. Африкре, вăта ҫĕрĕнҫе, халĕ те ҫас-ҫасах ҫĕнтерсе тыткăна илнĕ етемсене тăшманĕсем ҫисе йараҫҫĕ. *Ңам-ңамсем* ҫав усал ĕҫе туса пит ҫапа тухнă, ңам-ңам тени вăл *ҫăтлăх* тени пулат. Вĕсем вăрҫăра тыткăна илнисене те, вăрҫăра вилнисене те ҫийеҫҫĕ; вăл сахал-ха вĕсене, вĕсем хăйсенĕн халăхĕн ҫыннисене те, тăлăхсемпе вăйсăрсене, тиркемеҫҫĕ, ҫийеҫҫĕ. Вĕсенĕн йалĕсенҫе, ăҫта килҫĕ, унта, етем шăммисем вырткаласа ҫӳреҫҫĕ, етем пуҫшăммисене вĕсем, хитре пултăр тесе, йывăҫ тураҫĕсем ҫине ҫакаҫака йараҫҫĕ.

Некĕр патшалăхĕсенҫен ҫăн пысăкки—*Липери респупликĕ*, унăн пуҫ-хули *Монрови*. Ҫав респуплике Америкрен ирĕке тухса пынă некĕрсем тунă.

Некĕрҫен хастарлăхĕ, йăли, тĕнĕ.

Некĕр аҫисем хут ҫырма, хут вулама ҫасах вĕренеҫҫĕ; йут ҫĕлхепе калаҫма та вĕсем ҫас вĕренеҫҫĕ. Шухăшласа пĕлесрен пулсан, вĕреннĕ ҫухне пурне те ăша хывасран пулсан, вĕсем Йевропри ăшкулра вĕренекен аҫасенҫен те малта пыраҫҫĕ; анҫах кайран вĕсем малалла кайасси ҫарăнса ларат те, вĕсем ĕмĕрлĕхе пĕҫĕк аҫасем пек пулса йулаҫҫĕ: малашнехи ҫинҫен вĕсем пĕрре те шухăшламаҫҫĕ, выљама, ташлама, калаҫма, хĕпĕртесе пурăнма анҫах йуратаҫҫĕ. Ливинкстон ҫура пулнă некĕрсене турттарса пыракан караван ҫинҫен ҫырнă ҫух ак мĕн калат: пур кирлĕ-кирлĕ мар йапала та вĕсене култарат; сăмахран калас, йапала йатса пыракан турата перĕнет-и, йапалине ӳкерет-и, вара пурте ахăлтатса кулма тытăнаҫҫĕ; йе тата пĕр-пĕр ҫынĕ, ывансан, канма ларат-и, каллех кулма тытăнаҫҫĕ, тет. Тата тепĕр курса ҫӳренĕ ҫын ак ҫапла калат: йалта параппана хăвăрт патлаттара пуҫласанах, некĕрсем пурте ĕҫĕсене пăрахаҫҫĕ те, тытăнаҫҫĕ ташлама; касkалакан хăйĕн хăмисене, хĕрарăм ал-арманне, йапала ҫĕклесе пыракан йапалине ҫавăнтах пăрахса хăвараҫҫĕ те, ташша йерме ҫупаҫҫĕ, тет.

Пĕр май ĕçлеме некĕрсем йуратмаççĕ. Вĕсем вăйлине вăйлă та, анђах ĕçленĕ ђух Йевроп çыннипе танлашаймаççĕ, нумай кайа йулаççĕ, вăйсăр интуссем ђухлĕ те пултараймаççĕ.

Вĕсенĕн тĕнĕ—*феттиш* тĕнĕ. Феттиш тесе некĕрсем пуççапакан йапаласене калаççĕ. Некĕрсем çав йапаласен ăшĕнђе, йе вĕсенĕн çывăхĕнђе, йе ырă сывлăшсем йе усал сывлăшсем тăраççĕ, тесе ĕненеççĕ; етеме ыррисем ырă тума пултараççĕ, усаллисем усал тума пултараççĕ, тесе шухăшлаççĕ. Етемпе çав сывлăшсем хушшинђе хута кĕрсе тăракансем йумăççем; çав йумăççем сывлăшсене кĕл-туса, ташласа, парнесем парса çырлахтарма пултараççĕ, тесе ĕмĕтленеççĕ, парнене етеме те пусса кӳреççĕ; çав йумăççемех сывмар çынсене амађ парса мар, тухатса усăлтарма пултараççĕ, тесе шухăшлаççĕ.

Йулашки иртнĕ ĕмĕрсенђе некĕрсем хушшинђе феттиш тĕнĕ вырăнне ислам тĕнĕ сарăла пуçларĕ. Арап хуçисем, Мухаммет тĕнне тытса пурăнакансем, çав ислама пĕтĕм Сутан çĕрне сарнă. Вĕсем вăл ислам тĕнне некĕрсене йе вăйпа, йе ӳкĕтлесе, кăмăлĕсене çаварса, кӳртнĕ,—ислам тĕнне некĕрсем ђасах вĕренеççĕ, вăл тĕн тата вĕсене пит илĕртет. Христос тĕнĕ некĕрсем хушшинђе сахал сарăлать.

Йевропри халăхсенĕн саваннăри, вăрман çĕрĕнђи колонийĕсем.

Некĕр патшалăхĕсем вăйсăр пирки вĕсене нумайĕшне Йевроп халăхĕсем вăрçăпа çĕмĕрсе туртса илнĕ, нумайĕшне ахалех парăнтарнă, çапла вара Африкри саваннăсене, вăрманлăхсене, Липери респупликĕнђен пуçне, пурне те Йевроп халăхĕсем хайсем аллине кӳртнĕ. Анђах çавăнти çĕрсенђе *климăт* ырă мар, сывлăха пĕтерет; унта пур çĕрте те сыйамак ђирĕ (мађари) атапать. Çавăнпа унти çĕре Йевроп çыннисем куçса кайса пурăнаймаççĕ; унта суту-илӳ тумалăх анђах çӳреççĕ. Йевроп çыннисем унта хĕç-пăшал, пир-авăр, сулăсем, тата урăх тĕрлĕ капăр йапаласем турттарса ыраççĕ; капăра некĕрсем пит йуратаççĕ. Хайсем некĕрсенђен пађмă *çăвĕ, каућђук, пекемотпа слон шăмми, тата тĕрлĕ кайăк тирĕ* илсе турттарса кайаççĕ.

Кимĕсем пыракан портсем: Атлант океанĕ хĕрринҫе пĕри *Таккар*, тепĕри *Лакос*; Таккарĕ хрантсуссенĕн *Сенекампи* йатлă колонийĕнҫе, Лакосĕ акăлҫансенĕн *Никери* йатлă колонийĕнҫе; *Инти* океанĕ хĕрринҫе акăлҫансен тепĕр порт пур, *Момпас* йатлă, тата порттукалсен *Лорентсо-Марккес* пур.

Тавар ҫӳретме лайăх пултăр тесе, Йеврон ҫыннисем Африк ҫĕрĕ варрине ҫитех тимиҫе ҫукун-ҫул тутарнă, тата пысăк шывсем ҫинҫе, кӳлĕсем ҫинҫе ҫӳреме пăраххутсем тунă. Ҫапла акăлҫансем Йекиппĕтрен, Нуни витĕр, *Харттума* ҫитех ҫукун-ҫул тунă; вăл Харттум тĕлĕнҫе Шурă Нилпа Кăвак Нил шывĕ пĕрлешеҫҫĕ. Акăлҫансемех тепĕр ҫукун-ҫул тунă Момпас портĕнҫен пуҫласа Виктори кӳлли патне ҫитиҫҫен. Пăраххутсем Виктори ҫинҫе, Танканийикка ҫинҫе, Ҥйасса ҫинҫе ҫӳреҫҫĕ, тата Нил тăрăх, Никĕр тăрăх, Конко тăрăх, Сампеҫи тăрăх та ҫӳреҫҫĕ, вĕсем ҫулсем ҫук ҫĕрте анҫах ҫӳреҫҫĕ.

Хăш-хăш тĕлте Йеврон ҫыннисем сахăр хăмăшĕ, кофе, каккао пахҫисем (планттатсисем) тăваҫҫĕ; анҫах унти пахҫасем питех ăнмаҫҫĕ, мĕншĕн тесен некĕрсем пĕр май ĕҫлеме йуратмаҫҫĕ, Йеврон ҫыннисем сыйамак тытнипе пит аптăраҫҫĕ. Йеврон ҫыннисем факторисенҫе пурăнаҫҫĕ, фактори тесе сутуилӳ тăвакан вырăнсене, стантсисене, калаҫҫĕ; вăл факторисене тинĕс хĕрринче, йе пысăк шывсем хĕррине тăваҫҫĕ. Кашни фактори тавра хӳме хĕвеҫҫĕ, ăна шурă-ӳтлĕ ахвитсер хура-ӳтлĕ салтаксемпе пĕрле хурал тăрат.

Троппикрен кăнтăрти Африк.

Троппикрен кăнтăрти Африк ҫĕрне климăт тĕлĕшĕнҫен виҫ тĕслĕ туса уйăрма пулат: Инти океанĕ хĕрринҫе лăмлă ҫĕр, Оранш шывĕ таврашĕнҫе типĕ ҫĕр, тата шывсăр пушă-хир Калахари.

Инти океанĕ ҫинҫен вĕрекен ҫилсем Инти океанĕ хĕррине нумай йĕпе-сапа илсе пыраҫҫĕ; ҫавăнпа унта троппик ҫывăхĕнҫи вăрмансем тĕл-пулкалаҫҫĕ, тата иҫĕм-ҫырлисем, апелҫсинсем, ытти урăх ҫимĕҫсем те пит ăнса пулаҫҫĕ. Траккон тавĕсенҫен каҫаллара йĕпе сапа сахалтарах пулат (*мĕншĕн вăл апла?*), ҫавăнпа унтан ҫеҫен-хирсем пуҫланса кайаҫҫĕ; вăл ҫеҫен

хирсенҫе выҫӑх-ҫӗрлӗх усрама анҫах аван. Калахари пушӑ-уйӗнҫе хытӑ курӑксемпе ҫӑкекен йӗплӗ йывӑҫ тӗмӗсем анҫах ӳскелеҫҫӗ.

Калахари ҫӗрӗнҫи типӗ климӑт вӑл Кӑнтӑрти Африкӗн хӗвел-анӑҫӗ йенҫен оккеанри сивӗ шыв йухса пынинҫен килет, вӑл сивӗ шывран нӳрӗк сахал тухаҭ, ӑна та кӑнтӑрпа мал-йепҫи хушӑран вӗрсе тӑракан ҫилсем оккеан ҫине илсе кайаҫҫӗ.

Кӑнтӑрти Африкре пурӑнакан тӗп-халӑхсем—*кафрсем, хоттентотсем, пушменсем.* Кафрсем вӗсем пантту некӗрӗсемпе пӗр йӑхран тухнӑ. Кӑнтӑрти Африкре климӑт пит ырӑ, кӗтӳ ҫӳрегмелли вырӑнсем те пит лайӑх, ҫавӑнпа унти вырӑнсене Йевроп ҫыннисем йуратнӑ. Пуринҫен малтан унта Колланти ҫыннисем, пурсем, куҫса кайнӑ; вӗсем хыҫҫӑн акӑлҫансем пынӑ, вӗсем халӗ Кӑнтӑрти Африке пӗтӗмпех туртса илнӗ.

Пурсем малтан Ырӑ Ӗмӗт сӑмсалӑхӗ ҫывӑхне пырса ларнӑ, унта вӗсем *Капштатт* йатлӑ хула тунӑ. Унтан вӗсем Африк ҫӗрне шалалла кайнӑ та, унта выҫӑх-ҫӗрлӗх ӗрҫетсе, ҫӗр ӗҫлесе пурӑна пуҫланӑ. Хоттентотсене, пушменсене вӗсем ҫур-ҫӗрелле хӑваласа йанӑ. Кайран акӑлҫансем Капштатт хулине туртса илнӗ те, Капштатт колонийӗ тунӑ, пурсене пӑхӑнтарнӑ, анҫах пурне те пӑрӑнтараймаҥ. Пурсенҫен нумайӗшӗ хӑйсен пурлӑхне пуҫтарса урапасем ҫине тийенӗ те, вуншар мӑшӑр вӑкӑр, хӑшӗ ыгларах та кӳлсе, Оранш шывӗнҫен ҫур-ҫӗрелле тапранса кайнӑ ҫӗнӗ ҫӗр шырама. Унта вӗсенӗн харсӑр кафр халӑхӗсемпе вӑрҫа кӗмелле пулнӑ. Вӗсем кафр халӑхӗсене нумайӗшне ҫӗнтернӗ те, икӗ респуплик тунӑ: пӗри *Оранш,* тепӗри *Трансваал.* Анҫах ҫавӑнти ҫӗрсенҫе ылтӑнпа алмас нумай тухаҭ, тенине илтсен, акӑлҫансем икӗ респуплике те туртса илнӗ те, колони тунӑ.

Кӑнтӑрти Африке куҫса ларнӑ ҫынсем те, унта тӗпренпе пурӑнаканнисем те *выҫӑх-ҫӗрлӗх усраса* пурӑнаҫҫӗ. Кӑнтӑрти Африкри ҫеҫен-хирсем ҫула ытла типсе каймаҫҫӗ, хӗлле йур айне пулмаҫҫӗ. Пысӑк сурӑх кӗтӗвӗсем унта ҫулталӑкӗпех ура айӗнҫи апатпа пурӑнаҫҫӗ, апатсӑр выҫӑхса аптӑрани сахал пулаҭ. Нумайах пулмасӗ, Кӑнтӑрти Африкре *страуссем* усра пуҫларӗҫ; вӗсене хаклӑ тӗкӗшӗн усраҫҫӗ; тата *Анкорӑ катӑкисене* пит ӗрҫете пуҫларӗҫ, вӗсене пурҫӑн пек лайӑх ҫӑмӗшӗн ытаҫҫӗ, вӗсене Кӗҫӗн Аҫирен кӳнӗ.

Кăнтăрти Африкри çеçен-хирсенче *çанталăк тинĕ,* тырă пулă *алăпа шăварсан* тин пулаť. Çавăнпа Йевропран куçса пырса пурăнакансем, çеçен-хир варринче пĕвесем пĕвеле-пĕвеле, шыва анисем çине каналсем тăрăх йараççĕ. Çапла тăрăшнипе вĕсем кăнтăрти Африкри халăха тăранса пурăнмалăх тырă тăваççĕ.

Кăнтăрти Африк ырăлăхĕ çĕр айĕнче выртаť, вăл—*ылттăнпа алмас.* Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче Трансваальре тĕнчере çук нумай *ылттăн тымарĕсем* тупнă. Ылттăн шыракансем унта пинĕ-пинĕпе пырса тулнă, ылттăн шыран тĕлте кĕçех *Йоханнеспурк* йатлă хула пулса тăнă. Пĕр хĕрĕх çул ĕлĕк пуçланса кайнăскер, Йоханнеспурк халĕ Кăнтăрти Африкре чи пысăк хула, унта пурăнакан çын 200,000 çитет.

Ылттăнпа пĕр вăхăтрах Кăнтăрти Африкре тата алмассем те тупăнна. Хоттенттот ачисем тахăçанах Ваал шывĕ хĕрринче тăрă шыв пек таса чулсем тупкаласа выляна. Пĕр пур çыннине кўршĕ ачисем çавăн пек чул пана, вăл Йевропа кайнă чух çав чула хăйпе пĕрле илсе кайнă та, унта вăл алмас иккенне пĕлнĕ. Ăна вара çав пур пысăк хакпа сутса йанă та, Африке таврăнсан, хоттенттот халăхне тытса тăракан пуçлăхран тата хаклăрах тепĕр алмас илнĕ. Вăл уншăн 500 сурăх, 12 ĕне, 2 лаша пана, сутасса ăна 100,000 тенкĕрен ытларах сутса йава. Çакăн çинчен хыпар сарăлна та, темĕн чухлĕ халăх вара *Ваал* шывĕ çине алмас шырама кайна. Чанах та Ваал варĕнче, вĕт чулпа хăйăр çинче, алмассене нумай тупна, пуринчен ытла сўнсе ларна вулкансен шăтăкĕсенче, краттĕрсенче, тупнă. Çав краттĕрсем ăшĕнче çĕр—вулканпа пулнă кăпка çĕр, алмассем ун ăшĕнче выртаççĕ. Алмас шыраса краттĕрсен ăшне алтса шахтăсем туна, çав шахтăсен ăшĕнче кафрсем ĕçлеççĕ, вĕсене Йевроп çыннисем хытă пăхаççĕ. Чăн пуйан алмаслăх патĕнче пысăк хула пулса ларна, вăл *Кимперлей* йатлă.

Ылттăнпа алмас вырăнĕсем акăлчансен аллинче. Пурсем ĕлĕкхи пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе пурăнаççĕ, вĕсем çеçен-хирсенче хăйсенĕн ырă фермисенче пурăнаççĕ. Хоттенттотсемпе кафрсем те хăйсенĕн йалĕсенче (краалсенче) выльăх-чĕрлĕх усраса пурăнаççĕ. Пушменсене пĕтĕмпе пĕтерсе пĕрех, хăвалса йулнисене Калахари çĕрнелле хăваласа йанă; вĕсем

унта пурăнăça ухутара сĕтĕрĕнсе çÿресе ирттереççĕ. Шахтăсенче ĕçлеме ҫăн каҫар кафрсем анҫах ирĕксĕр кайгççĕ. Çавăнпа шахтăсенче ĕçлеме Кăнтарти Африке Киттай кулийĕсене илсе пыра пуçлана. Ылттăнсене, алмассене, çăмсене, Кăнтăрти Африкре пулакан ытти йапаласене пурне те Йеврона: Капштатт урлă, Порт-Йелисавет урлă, тата Порт-Наттаљ урлă илсе кайаççĕ: çак портсенҫен Африк çĕрĕ варринелле кайма ҫукунçулсем тунă. Акăљҫансен Кăнтăрти Африкри пуç-хули *Капштатт*; унта вĕсенĕн йăнарал-кĕпĕрнеттĕрĕ пурăнаť; унăп ирĕкĕ халăхсем суйласа йанă çынсенĕн аллинҫе.

Пурсенĕн респупликĕсем, Оранжпа Трансвааљ, халĕ акăљҫансенĕн колонийĕсем, вĕсем хăйсене хăйсем халăх суйласа хунă пуçлăхсемпе тытса тăраççĕ; акăљҫансем пурсене пара тарсан, вĕсене хăйсен хушшинҫи ĕçсене туса тăма ирĕк панă, ăна *автономи* теççĕ.

Африкри тинĕс утравĕсем.

Африк çывăхĕнҫе пысăк утрав пĕрре анҫах, вăл *Матакаскар*. Çав Матакаскар—сарлака лаптак ҫул катăкĕ, ун çинҫе саранна çеçен-хирĕсем сарăлса выртаççĕ, троппик вăрманĕсем ÿсеççĕ; унта климăт шăрăх, сывлăхлă мар. Матакаскар çинҫе *матакас* йатлă халăх пурăнаť, вăл халах малай йăхĕнҫен тухнă, вĕсем хĕвел-анăçĕ йенҫе панту некĕрсемпе хутшăнса кайнă та, вĕсем майлах пурăнаççĕ.

Африкри ытти утравсем пысăк мар, пĕҫĕккĕ. Вĕсенҫен нумайĕшĕ вулкканран пулнă, унашкал утравсем ак çаксем: *Матейрă, Канарисем, Çÿле-Çĕкленнин, çв. Йеленăн, Маскаренсем*; ытти тинĕс утравĕсене коралл полипĕсем тунă, *Санçипар* çапла пулнă.

Африкри тинĕс утравĕсем çинҫе пурин çинҫе те йывăçкурăк нит лайăх ÿсет. Маскарен утравĕсенҫе *сахăр* хăмăшĕ нумай тăваççĕ, Санçипарта—квоçтиккă йывăçĕ тăваççĕ, Матейрăра—иçĕм—çырли лартса, ерех тăваççĕ.

Матейрăра климăт пĕр пек, çирĕп; ҫăн сивĕ уйăх—парăс-уйăхĕ, ун ҫухне те унта, танлаштарса шутласан, Тселççи тăрах 15° пулаť. Йевропран ҫирлĕ çынсем нумайĕшĕ унта хĕл ирттерме хайаççĕ.

Африкри тинĕс утравĕсем пурте Йевропри халăхсенĕн аллинҫе: Матакаскар—хрантсуссен аллинҫе, Санҫипар, ҫв. Йеленăн, Ҫӳле-Ҫĕкленнин утравĕсем акăлҫансен аллинҫе, Матейрă порттукалсен аллинтҫе; пурте ҫапла. Йевроп карапĕсем валли хăш-хăш тинĕс утравĕсем ҫинҫе ҫарăнса тăмалли стантсисем пур, унта вĕсем валли ҫимĕҫ те, кăмрăк та хатĕр тăрат.

Америк ҫĕрĕ.

Пĕтĕмĕш ҫинҫен калани.

Америк выранĕ, унӑн пысӑкӑшĕ, унӑн хĕррисем.

Америк вӑл ҫĕрĕн хĕвел-анӑҫĕ йенҫи ҫурри ҫинҫе пулаҭ, унта ҫĕрĕн хĕвел-тухӑҫĕ йенҫи ҫурри ҫинҫе ҫĕрле ҫухне кӑнтӑрла пулаҭ, кӑнтӑрла ҫухне ҫĕрле пулаҭ. Ҫӑнах та Мексҫик тинĕс-ури ҫинҫе тӑр-кӑнтӑрла Пенкали тинĕс ури ҫинҫе ҫур-ҫер тĕлĕнҫе лапах пулаҭ. (*Мĕншĕн вӑл апла пулаҭ?*).

Ытти ҫĕрсенҫен Америк ҫĕрне оккеансем уйӑрса тӑраҫҫе: Йевроппа Африкрен ӑна *Атлант* оккеанĕ уйӑрса тӑраҭ, Аҫипе Австралинҫен Аслӑ оккеан уйӑрса тӑраҭ, ҫур-ҫĕрпе хĕвĕл-анӑҫĕ хушшинҫе Америкĕн пĕр хĕрри *Перинк пырĕ* патĕнҫе Аҫи ҫывӑхнех пыраҭ.

Пысӑкӑшĕнҫен пулсан, Америк Аҫирен кӑшт анҫах пĕҫĕкрех, тӑршшĕнҫен пулсан, вӑл ытти ҫĕрсенҫен пуринҫен те вӑрӑмрах: Уелс Принтсĕ сӑмсинҫен пуҫласа Хорн сӑмсине ҫитеҫҫен 15,000 ҫухрӑм пулаҭ.

Мексҫик тинĕс-урипе Караип тинĕсĕ Америк ҫĕрĕ ҫине шалалла кĕрсе кайса, ӑна икĕ пайа уйӑраҫҫĕ: пĕр пайне *Ҫур-ҫĕр йентҫи Америк* теҫҫĕ, тепĕрине—*Кӑнтӑрти Америк* теҫҫĕ.

Ҫур-ҫĕр йенҫи Америк хĕррисем пит кукӑр-макӑр. Унӑн ҫур-утравĕсем пит нумай, вĕсенҫен ҫӑн пысӑккисем ак ҫаксем: *Лапратор*, *Флорит*, *Калифорни*, *Аљаскӑ;* ун ӑшнелле ак ҫапла тинĕс-урисем касса кĕреҫҫĕ: *Кутсонӑн*, *ҫв. Лаврентӣтин*, *Мексҫикĕн*, тата *Калифорнин*; Америк ҫывӑхĕнҫе нумай утравсем пур, паллӑраххисем ак ҫаксем: *Њйуфаунтлент*, *Кренланти*, *Паффин ҫĕрĕ*.

Кӑнтӑрти Америк хĕррисем ытла кукӑр-макӑрах мар. Унӑн пысӑк ҫур-утравĕсем те ҫук, пысӑк тинĕс-урисем те ҫук. Унӑн ҫывӑхĕнҫе пĕр пысӑк тинĕс-утти анҫах, вӑл—*Вутлӑ Ҫĕр*, ӑна Америкрен *Макеллан пырĕ* уйӑрса тӑраҭ.

Çур-çĕр йенҫи Америкпе Кăнтăрти Америк пĕр пек пулмасан та, ĕлки вĕсенĕн пĕр пек: çур-çĕр йенĕ вĕсенĕн иккĕшĕн те сарлака, кăнтăралла вĕсем иккĕшĕ те шĕвĕрĕлсе пыраççĕ.

Çур-çĕр йенҫи Америкпе Кăнтăрти Америк хушшинҫе *Вăта Америк* пур, вăл Америк çĕрин ҫи çинçе тĕлĕ, вăл Йуккаттан çур-утравĕнҫен пуçласа Панама мăйĕ патне çитиҫен пырать. Вăта Америк çумĕнҫе Анттил утравĕсен ушкăнĕ пур, ăна *Вест-Инти* теççĕ.

Америк çĕрне тупни, ăна пĕлни.

Йевроп çыннисем Америк çĕрне икĕ хутҫен шыраса тупнă. Ҫăн малтан ăна Скантинавире пурăнакан тинĕс çинҫе харсăр çÿрекен нормансем Х-мĕш ĕмĕрте тупнă. Вĕсем çĕнĕ çĕрсем шырама ҫас-ҫасах тинĕспе инçе çÿренĕ, вĕсем çапла Кренланти утравне тупнă, унтан Америкĕн хĕвел-тухăçĕ йенҫи хĕррине тупнă та, ăна *„Исĕм-çырли Çĕрĕ“* тенĕ. Унта вĕсем ирĕкре ÿсекен исĕм-çырли нумай тĕл-пулнă, çавăнпа ăна Исĕм-çырли Çĕрĕ, тесе йат хунă. Нормансем хăйсем тупнă çĕре паха йапала вырăнне хуман, вĕсем ăна ҫасах манса кайнă; Йевропри ытти халăхсем вĕсем тупнă çĕр çинҫен нимĕн те пĕлмен.

Иккĕмĕшĕнҫе, нормансене пĕлмесĕрех, Америке Иттали çынни Христофор Колумп тупнă. Хăй вăхăтĕнҫе тинĕс тăрăх çÿрекенсем пек, вăл та Инти çĕрне кайма тинĕс çулĕ тупасшăн пулнă. Çав шухăша тытса, вăл Испани çĕрне слушпа кĕнĕ те, 1492-мĕш çулта, çурла-уйăхĕн пуçламăшĕнҫе, Атлант океанĕ тăрăх хĕвел-анăçнелле кайнă. *(Астуса илĕр: мĕншĕн вăл хĕвел-анăçнелле кайнă?)*. Йупа-уйăхĕ пĕтнĕ тĕлте çав çулнех вăл Пахамă тинĕс-уттисенҫен пĕрин патне пырса ҫаранна. Вăл тата Купăпа Хаиттине тупнă та, вара Испани çĕрне таврăнна. Вăл унта ырă хыпар çитерне: Инти çĕрне тинĕспе каймалли çул тупăнҫе! тенĕ. Колумп хăй тĕл-пулнă тинĕс утравĕсене Инти çывăхĕнҫĕ пулĕ, тесе шухăшланă, Купăна Йаппуни пулĕ тенĕ.

Кайран вăл тата виçĕ хут кайса çÿренĕ, çĕнĕрен нумай тинес утравĕсем тупнă, Америк çĕрне те тупнă, анҫах вăл ку тупнă çĕнĕ çĕрсем Мал-йенпе кăнтăр хушшинҫи Аçи çывăхĕнҫи çĕрсем пулĕ, тесе шухашланă. Вăл вилеҫҫенех çапла шухăшланă.

Йеврол çыннисем вăл тупнă çĕнĕ çĕрсене Инти тенĕ, кайрантарах Вест-Инти тенĕ; Вест-Инти тени Каçалри Инти тени пулаĭ.

Тĕрлĕ çынсем нумайĕ̆ен кайа-кайа курса çӳресен тин Йеврол çыннисем Колумп çĕнĕ çĕр тупнине пĕлнĕ. Вăл çĕре *Америк* тесе *Америко-Веспутђи* йађĕпе хунă. Америко-Веспуђђи вăл çӳревçĕ çын пулнă, анђах ытла ђаплийех пулман.

Колумпран кайран Америк çĕрне курса пĕлсе çӳрекенни Испани çынни *Макеллан* пулнă. Вăл çĕр тавра çӳреме тухсан, Кăнтăрти Америк тавра кайса хăй йађĕпе хунă тинĕс пырĕ витĕр тухса çаврăннă та, Америкпе Аçи хушшинђе питĕ пысăк оккеан пуррине пур çынсенђен малтан пĕлнĕ, çав оккеана вăл *Лăпкă оккеан* тенĕ.

Çур-çĕр йенђи Америкĕн Аљаскăпа хĕвел-анăçĕ йенђи хĕррисене тинĕс çинђе çӳрекен вырăс çыннисем 1741-мĕш çулта тупнă; вĕсем икĕ караппа çӳренĕ, пуçлахĕсем *Перинкпе Ђириккоа* пулнă.

Çур-çĕр йенђи Америкĕн çур-çĕрелле тухакан хĕррисене акăљђан çыннисем *Тевис, Кутсон, Паффин*, тата урăххисем те çӳресе пĕлсе тухнă; вĕсенĕн йађĕпе пĕр тинĕс пырне—*Тевис* пырĕ теççĕ, тинĕс çулĕсене пĕрне *Кутсон* çулĕ тенĕ, тепĕрне *Паффин* çулĕ тенĕ, ыттисене те çапла йатсем парса пĕтернĕ. Тинĕспе çӳрекенсенђен хăшĕ-хăшĕ Лапратортан Аљаскăна Пăрлă оккеанпа тӳрех кайма хăтланса, йухса çӳрекен пăрсем хушшинђе выçăхса шăнса вилсе пĕтнĕ. Çапла иртнĕ ĕмĕрте Франклин хăй çыннисемпе пĕрле пĕтнĕ.

Америк варринђи çĕрсене, çур-çĕртине те, кăнтăртине те, Йевропран куçса пынă çынсем пĕлсе çӳренĕ. Нумай пĕлекен çынсем хушшинђе Кăнтăрти Америкпе Вăта Америк çинђен пит лайăх çырса хăвараканни нимĕђ çынни *Александăр фон-Хумпăлтт* пулнă.

Америк çĕрĕн çийĕ.

Америкĕн хĕвел-анăçĕ йенђи хĕррипе, Аљаскăран пуçласа Вутлă Çĕре çитиђђен витĕрех, çĕр çинђи ђи вăрăм тусем тăсăлса тăраççĕ, вĕсене *Кортилйер тăвĕсем* теççĕ, Кăнтăрти Америкре тата

Ант тăвĕсем теççĕ. Çав тăсăлса выртакан тусем Панама майĕ тĕлĕнчe анчах татăлаççĕ.

Вĕсем тăршшĕпех йăрăман-йăрăман йунашар темиçe ĕретĕн тăсăлса выртаççĕ. Çур-çĕр йенчи Америкри Кортилйерсенĕн унашкал йăрăм нумай, вĕсенĕн хăйсенĕн йачĕсем пур: хăшне *Чулл тусем*, хăшне *Каскатлăсем*, хăшне *Çиеррă—Неватă* теççĕ, тата урăххисем те пур. Çав тусем хушшинче сарлака лаптак тусем пур: *Мекçик лаптакĕ, Йуттă лаптакĕ*, тата урăххисем те пур.

Кăнтăрти Америкри Кортилйерсем, урăхла Антсем, ансăртарах та, икшĕр ĕретĕн анчах тăсăлса выртаççĕ. Вĕсем хушшинче вăрăм ансăр лаптак вырăнсем пур: *Перу лаптакĕ, Поливи лаптакĕ*, тата урăх та пур.

Çӳллĕшĕнчен пулсан, Кортилйер тăвĕсем Аçири чăн çӳлĕ тусенчен анчах лутрарах. Кăнтăрти Америкри Кортилйер тăвĕсем пит çӳлĕ. Екваттăр тĕлĕнчe Кортилйер тăвĕсенĕн хăшхăш тăррисем ĕмĕр пĕтми йур айĕнчe тăраççĕ, йур чикки унта 5 çухрăм çӳлте пуçланса кайать; чи çур-çĕрте, чăн кăнтăрта Кортилйер тăвĕсем, çӳлтен пуçласа айала çитиччeнех, йур айĕнчe лараççĕ, тем пысăкăш пăрсем океана тӳрех кĕрсе кайаççĕ; çавăнпа йур чикки тинĕс шывĕнчен пĕр çухрăм та çук çӳлерех пуçланса кайать. Кортилйер тăвĕсенчен чи çӳлли *Акконккакуа*, унăн çӳллĕшĕ 7 çухрăма çитет, вăл сӳнсе ларнă вулккан тăрри. Кортилйер тăвĕсенчен нумайĕшĕ йе сӳнсе ларнă вулккансем, йе сӳнмен вулккансем. Сӳнмен вулккансем хушшинче чăн çӳлли *Коттопахи*, унăн çӳллĕшĕ—6 çухрăм. Вăл вулккан вут кăларса пĕрĕхтернĕ чухне, ун тăррин чи йур пĕтĕмпех ирĕлсе пĕтет те, таврари çĕре шыв тулса хупласа илет, вара пит хăрушă пулать; Вăта çĕрти Америкре сӳнмен вулккан *Ориссапă* пур; çур-çĕр йенчи Америкре сӳннĕ вулккан Çв. Илйе тăвĕ пур.

Вулккансем Аслă океан хĕррипе, Вутлă Çĕртен пуçласа Алçаскăна çитех, тăршшĕпех пыраççĕ; унтан тепĕр ĕречĕ вĕсенĕн Алеут утравĕсемпе, Камччатпа Курил утравĕсемпе, Йаппун утравĕсемпе, Риу-Киупа, Филиппин утравĕсемпе, Çĕнĕ Квинейпе, Çĕнĕ Çeлантипе пырать. Çапла Аслă океан вăл *вулккамлă карта* ăшĕнчe тăрать.

Кортилйер тăвĕсен Аслă океаналла анакан хĕррисем пит чăнкă, пур тĕлте те унта сакăлтаклă вырăнсем нумай; тепĕр йенĕ апла мар, сĕвек.

Ҫур-ҫӗрти Америкре те, Кӑнтӑрти Америкре те, Кортилйер тӑвӗсенҫен пуҫласа мал-йеннелле сарлака *тӳрем ҫӗрсем* сарӑлса выртаҫҫӗ, унта ҫӗр сийӗсем Йевропри Раҫҫейри пекех тӳрӗ выртаҫҫӗ. Ҫав тӳрем ҫӗрсем йе лапамлӑ ҫӳлӗ ҫӗрсем, йе тарӑн айлӑмсем пулаҫҫӗ, ҫавӑн пек ҫӗрсем ак ҫаксем: *Миҫҫиҫҫиппи* тӳремӗ, *Амасон* тӳремӗ, тата *Лаплаттӑ* тӳремӗ. Ҫак тӳрем ҫӗрсенҫен мал-йеннелле Ҫур-ҫӗрти Америкре те, Кӑнтӑрти Америкре те, каллех тусем ҫӗкленсе кайаҫҫӗ: Ҫур-ҫерти Америкре *Аллекани тӑвӗсем*, урӑхла вӗсене *Аппалатҫ тӑвӗсем* теҫҫӗ, Кӑнтӑрти Америкре—*Праҫили тӑвӗсем*; ҫӳллӗшӗнҫен пулсан, лешсем те, кусем те Кортилйер тӑвӗсемпе танлашма пултараймаҫҫӗ, тӳпине ҫитех вӗсем ҫинҫе вӑрмансем, улӑхсем ӳсеҫҫӗ.

Ҫур-ҫӗрти Америкпе Кӑнтӑрти Америкӗн сийӗсене танлаштарса пӑхсан, иккӗш те пер пекех: хӗвел-анӑҫӗ хӗррипе тем пысӑкӑшӗ тусем тӑсӑлса выртаҫҫӗ; тусенҫен мал-йеннелле аслӑ тӳрем ҫӗрсем сарӑлса выртаҫҫӗ; тата мал-йеннеллерех каллех тусем ҫӗкленсе кайаҫҫӗ.

Климӑт.

Америк ҫӗрӗ ҫур-ҫӗр йенҫен пуҫласа кӑнтӑралла тем тӑршшӗ тӑсӑлса тӑрать: унӑн ҫур-ҫӗр йенҫи вӗҫӗ ҫур-ҫӗрти полҫус ҫавракинҫен те иртсе кайать, кӑнтӑрти вӗҫӗ кӑнтӑрти троппикрен иртет. *Пӗлӗр: Америк миҫе йарӑм* (*пояс*) *урлӑ каҫса кайать?*

Ҫур-ҫӗрти тинӗс утравӗсем ҫинҫе, тата Пӑрлӑ тинӗс хӗррисенҫе климӑт *пит сивӗ*. Ҫур-ҫӗрти Ҫипирти пекех. *Кренлантипе* хӑш-хӑш тинӗс-уттисем ӗмӗр-ӗмӗрех йур айӗнҫе, пӑр куписем айӗнҫе выртаҫҫӗ; ҫав пӑрсем оккеана тӑсӑлса кӗрсе кайаҫҫӗ те, ҫурӑла-ҫурӑла кайса, тинӗс ҫинҫе пӑр тусем пек ҫӳреҫҫӗ. Сивӗ Лапратор йухӑмӗпе вӗсем кӑнтӑралла йухса кайса, Америкӗн ҫур-ҫӗрпе хӗвел-тухӑҫӗ хушшинҫи йенне сивӗтсе йараҫҫӗ.

Пӑрлӑ оккеан хӗррипе Лапратор ҫур-утравӗнҫен пуҫне, Ҫур-ҫӗр йенҫи Америкре пур ҫерте те климӑт *вӑхӑтлӑ ӑшӑ тӑрать*, анҫах вӑл маттерик климӑҫӗ: ҫула пулсан, ҫӗр (маттерик) вӗриленсе ҫитет те, ӑшӑ 40°—50° ҫитет; хӗлле пулсан, ҫӗр пит сивӗнсе кайать, вара 40° таран сивӗсем пулаҫҫӗ.

Ăшă Мекçик тинĕс-ури тавраш̆ĕвђе авђах сивĕсем сахал пулаççĕ; хăш ђухне хĕлле йур ӳкет те, шыв çинђен çил вĕре пуçласан, ирĕлсе кайат.

Мекçик тинĕс-ури Çур-çĕрти Америкĕн климăтне пит пулăшат: сур-куннепе çула, çĕр тинĕсри шывран хытăрах вĕриленсе çатсен, çав тинĕс-ури çинђен нӳрĕк çилсем вĕре пуçлаççĕ те, Çур-çĕрти Америкĕн мал-йенђи çĕрĕсĕм çине Йĕпе-сапа нумай илсе пыраççĕ. Çав çилсем пит вăйлă пулаççĕ, çил-тăвăл пулса урса кайаççĕ; вĕсене *торнато* теççĕ, вĕсем вара акнă уйсене, йалсемпе хуласене çĕмĕрсе пĕтереççĕ.

Çавăн пек çил урса кайса, 1908-мĕш çулта 40 йал ытла çĕмĕрнĕ; ун ђухне 500 çын ытла вилсе пĕтнĕ, 1000 çынна йахăн аманнă; 20,000 çын кил-çуртсăр, пурăнмалăх йапаласăр тăрса йулнă, уйри тырă-пулă пĕтне. Çил шутсăр хыта вĕрнĕ, çынсене хăшне-хăшне 50 ђалăш çӳллĕшĕ çĕклесе кайса пăрахнă, кил-çурт çĕмрĕкĕсене вуншар çухрăм ытла вĕçтерсе кайнă.

Мекçик тинĕс-уринђен çĕр çинђи ђи ăшă тинĕс йухăмĕ *Колфштром* тапраєса кайат; вăл хăй аш̆шипе Флорите ăшăтат, унтан ĕшша сарлака оккеан варрипе Йеврап çĕрĕ патне çитех инçе илсе кайат; çапла Колђфштром Америкшĕн мар, Йевропшăн пит паха.

Çур-çĕрти Америкри пек, çĕр çинђе урăх çĕрте ниçта та полђуспа троппик тинĕсĕсем пĕр-пĕрин çывăхне пымаççĕ. Сивĕ Кутсон тинĕс-ури патĕнђен ăшă Мекçик ури патне çитиђђен 3000 çухрăм та çук. Сивĕ йенђи çилсем вĕрсен, сивĕ пĕр ђарăмсăр унта пур çĕре те сарăлат; кăнтăр йенђи ăшă çилсем вĕрсен, ăшă та çавăн пекех ђас сарăлат. Çавăнпа Çур-çĕр йенђи Америкре çанталăк пит ђас-ђасах улăшат, çĕр çинђе ниçта та урăх çĕрте апла мар.

Вăта Америкпе Кăнтăрти Америкре климăт — *троппикри*. Çулталăкĕпех унта пит ăшă, кăрлађ-уйăхĕ утă-уйăхĕпе пĕрех: Амасон вăрринђе (вĕçĕнђе) ђи ăшă ђухнехи çĕртме уйăхĕнђе пĕтĕмпе тавлаштарса шутласан температурă 26° ăшă пулат, ђăн сивĕ уйăхра, кăрлађра, та ăшă 25° пулат. Çумăрсем ђас-ђасах пулаççĕ, вĕсене çур-çĕрпе мал-йен хушшинђен вĕрекен çилсем, *пассатсем*, илсе пыраççĕ. (*Астуса илĕр: ăçтан тухаççĕ çав çилсем?*). Вĕсем çулталăкĕпех пĕр ђарăнмасăр вĕрсе тăраççĕ; Атлант ок-

кеавӗнҫи ҫи ӑшӑ тӗлтен иртсе пынӑ ҫух, вӗсем темӗн ҫухлӗ нӳрӗк илсе, ӑна Вӑта Америкпе Кӑнтӑрти Америк ҫӗрӗ ҫине, тинӗс утравӗсем ҫине пырса тӑкаҫҫӗ. Пуринҫен ытла ҫумӑрсем Амасон шыве таврашӗнҫе нумай пулаҫҫӗ.

Кӑҫӑка тропикӗнҫен кӑнтӑралла климӑт сивӗнерех, типсерех пырат. Лаплатӑ айлӑмӗнҫех хӗлпе ҫу хушши палӑра пырат, анҫах сивӗсем ҫапах унта нихӑҫан та пулмаҫҫӗ, ҫӗр те йурпа витӗнни ҫук. Хӗлле (утӑ-уйӑхӗнҫӗ) сивӗсем йаланах ҫи кӑнтӑрти Вутлӑ Ҫӗрте, тата ҫӳлӗ тусем ҫинҫе анҫах пулаҫҫӗ.

Пӗтӗм Америк ҫӗрне шӑварса тӑраканни вӑл Атлант оккеанӗ. Аслӑ оккеанран Америке Кортилйер тӑвӗсем картласа тӑраҫҫӗ, тата хӗвел-анӑҫӗ йенҫи хӗррипе сивӗ тинӗс шывӗсем йухаҫҫӗ, вӗсем нӳрӗк сахал кӑлараҫҫӗ, ӑна та Аслӑ оккеан пасӑҫӗсем хӗвел-анӑҫнелле вӗрсе илсе кайаҫҫӗ.

Америкӗн хӗвел-анӑҫӗ йенҫи хӗррисене икӗ тӗлте анҫах ҫумӑрсем лайӑх шӑвараҫҫӗ: пӗр тӗлӗ ҫур-ҫӗрте, тепри — кӑнтӑрта; унта сивӗ тинӗс шывӗсем йухмаҫҫӗ, тата оккеанран ҫас-ҫасах ҫилсем вӗрсе тӑраҫҫӗ.

Шывсем, кӳлӗсем.

Америк ҫӗрӗнҫе йӗпе сапа нумай пулат, ҫавӑнпа унти шывсем *пит туллӑх*. Вӑл шывсем пурте тенӗпе пӗрех Атлант оккеанне, тата Пӑрлӑ оккеана йухса кӗреҫҫӗ. (*Пӗлӗр: мӗншӗн Аслӑ оккеаналла каймаҫҫӗ?*).

Ҫур-ҫӗр йенҫи Америкре ҫӑн пысӑк шыв *Миҫҫиҫҫиппи*, унӑн тураҫӗсем: *Миссури*, *Окайо*, тата урӑххисем те пур. Миссурине унӑн пуҫӗ тесе шутласан, Миҫҫиҫҫиппи ҫӗр ҫинҫе ҫан вӑрӑм шыв пулат, унӑн тӑршшӗ вара 7000 ҫухрӑма ҫитет.

Миҫҫиҫҫиппин пӑтранҫӑк шывӗнҫе темӗн ҫухлӗ лӑймапа хӑйӑр пырат, ҫавӑнпа унӑн ҫырминҫе ӑшӑх вырӑнсем, утравсем нумай пулаҫҫӗ те, вӗсем кимӗсене ҫӳреме кансӗрлеҫҫӗ. Мексик тинӗс-урине йухса кӗнӗ ҫухне, вӑл пысӑк теҫттӑ пулса йухат, ҫав теҫттӑ ҫулсеренех тинӗсе шалалла кӗнӗ-ҫемӗн кӗрсе пырат.

Ҫв. Лаврентти шывӗ те пит туллӑх пысӑк шыв; вӑл Америкри аслӑ кӳлӗсенҫен: *Тури кӳлӗрен*, *Курон кӳллинҫен*, *Митҫиган кӳллинҫен*. *Ери кӳллинҫен*, тата *Онттарио кӳллинҫен*, йухса тухат. Ниҫга та ҫӗр синҫе ҫакӑнти пек тутлӑ шыв нумай кӳл-

ленсе тӑни ҫук. Тури кӳллӗн тӑршшӗ 600 ҫухрӑм ытла, вӑл Латӑкӑ кӳллинчен 4 хут пысӑкрах, тутлӑ шывлӑ кӳлӗсенчен вӑл чӑн пысӑкраххи. Ери кӳллипе Онттарио кӳлли хушшинче питпысӑк санкӑлтак пур, унтан шыв сиксе йухат, ӑна *Ниакарӑ* кӗрленки теҫҫӗ.

Ҫав санкӑлтакӑн ҫӳллӗшӗ 24 чалӑш; Ниакарӑ шыве ҫавӑнтан икӗ ҫӗрӗн уйӑрӑлса сиксе йухат. Санкӑлтак хӗрри пӗчӗккӗнпӗчӗккӗнех катӑлса ҫӗмӗрӗлет, чул катӑкӗсем йӑтӑнса анаҫҫӗ те, шывпа йухса кайаҫҫӗ. Ҫавӑнпа сикекен шыв кайалла, Ери кӳлли патнелле, хуллен чакса пырат.

Ҫур ҫӗр йевчи сӗвекре йухса выртакан шывсенчен пысӑккисем ак ҫаксем: *Нелссон*, вӑл *Виннипек* кӳллинчен йухса тӑрат, тата *Меккенҫи*, вӑл виҫӗ кӳлӗрен: *Аттапаскӑ кӳллинчен, Чура кӳллинчен*, тата *Упа кӳллинчен* йухса выртат. Ҫак шывсем туллӑх пулсан та, кимӗпе ҫӳреме май ҫук, мӗншӗн тесен вӗсем пӑрсем капланса тӑракан тинӗсе йухса кӗреҫҫӗ, тата хӑйсем те нумайлӑха шӑнса лараҫҫӗ.

Аслӑ оккеана, каҫалла, ак ҫак шывсем йухса кайаҫҫӗ: *Йуккон, Колумпи*, тата *Колорато*.

Колорато вӑл пит тарӑн ҫурӑкпа йухса пырат, ӑна *каҫйон* теҫҫӗ. Вӑл ҫурӑксем шыв темиҫӗ ҫӗр ҫул хушши йухса тӑнипе пулнӑ, вӗсенӗн тарӑнӑшӗ ҫухрӑм ҫурӑ ытла.

Кӑнтӑрти Америкре чан пысӑк шыв *Амасон*. Тӑршшӗнчен пулсан, вӑл Миҫҫиҫҫиппипе Нилран авчах кӗскерех; шыв нумайӗнчен пулсан, вӑл пӗтӗм ҫӗр ҫинче пур шывран та малта тӑрат. (*Унӑн нумай шывӗ мӗнрен килет? пӗлӗр*). Пирӗн Атӑл пек, Тон пек, Тнепр пек, Вислӑ пек пысӑк туратсем унӑн 15: *Матейрӑ, Рио-Некро*, тата урӑххисем те; ҫав турачӗсем тӑрӑх пурин тӑрӑх та кимӗсем тури вӗҫне (пуҫне) ҫитех ҫӳреҫҫӗ. Амасон тӑрӑх оккеанран пуҫласа Кортилйер тӑвӗсем таран ҫӳреҫҫӗ; анатри вӗҫӗ (вӑрри) унӑн пит тарӑн та пит сарлака, ҫавӑнпа тинӗс шывӗ ҫӗкленсе сарӑлнӑ чух, ҫав Амасон тӑрӑх тӑвалла пӗр 1000 ҫухрӑма йахӑн шалалла кӗрсе кайат.

Кӑнтӑрти Америкре урӑх палӑрах шывсем ак ҫаксем: *Ориноккопа Парана*; анатри вӗҫне унне *Лаплаттӑ* теҫҫӗ, унӑн турачӗсем Паракавайпа *Урукпай*.

Ҫур ҫӗрти Америкре те, Кӑнтӑрти Америкре те Кортилйер тӑвӗсем хушшинчи лаптак сӑртсем ҫинче тинӗсе йухми тӑварлӑ

кӳлӗсем пур (*пӗлӗр: мӗншӗн вӗсем апла?*); ҫавӑн пек кӳлӗсем Ҫур-ҫӗрти Америкре *Тӑварлӑ-Мӑн-Кӳлӗ*, Кӑнтӑрти Америкре—*Титтиккакӑ*.

Ҫур-ҫӗрти Америкре йухакан шывсене кӑнтӑртисемпе танлаштарса пӑхсан куратпӑр: Миҫҫиҫҫиппи те хӑй тураҙӗсемпе, Лаплаттӑ та хӑй тураҙӗсемпе пӗр йеннелле йухаҫҫӗ; ҫв Лаврентти шывӗ те, Амасон та пӗр май йухаҫҫӗ; Неҙссонпа Оринокко та пӗр май йухса кайаҫҫӗ. Ҫапла йухни вӑл Ҫур-ҫӗрти Америкпе Кӑнтӑрти Америкӗн ҫӗрӗсен иккӗшӗн те ҫийӗсем те, хӗррисем те пӗр пекрен килет.

Ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк.

Америкри ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк ытти ҫӗртинҙен пуринҙен те илемлӗрех. Пуш-уйсем унта ҫукпа пӗрех (*пӗлӗр: мӗншӗн вӑл апла?*); унти ҫеҫен-хирсем Аҫи ҫӗрӗнҙи пек типӗ те мар, аслах та мар (*мӗншӗн вӑл апла?*); Америк ҫурри ытла сӗм-вӑрман айӗнҙе ларат. Тунтӑрсем анҙах Америкре те Аҫири пек пит аслӑ, пит ҫара.

Тӳнтӑрсем полҙус тинӗсӗ утравӗсем ҫинҙе пур, тата Пӑрлӑ оккеан хӗрринҙе пур; ӳсен-тӑран унта та Аҫири пеҫех: мӑк, лишшай, ҫырла тӗмӗсем, тата урӑх курӑксем те ӳскелеҫҫӗ.

Тунтӑрсенҙен кӑнтӑрта (*карт ҫине пӑх*) Ҫур-ҫӗрти Америкре сӗм-вӑрмансем кайаҫҫӗ; вӗсем Ҫипирти тайка пекех, тӗрлӗрен йывӑҫ анҙах нумайтарах; унта Кив-Ҫӗрте ӳмен йывӑҫсем нумай ӳсеҫҫӗ: 40 тӗслӗ хыр, 80 тӗслӗ йуман, тата урӑх йывӑҫ та нумай; Кив-Ҫӗрте унашкал тӗслӗрен йывӑҫ сахал. Йывӑҫсем нумайӗшӗ тем пысӑкӑш ӳсеҫҫӗ; ҫавӑн пек ӳсекен йывӑҫсем—мӑн ҙӑрӑшсем, мӑн кетӑрсем; Ҫийеррӑ-Неватӑ айаккинҙе, Аслӑ оккеан хӗрринҙе, мамӑнт *йывӑҫӗсем* ӳсеҫҫӗ, ҫав паттӑр йывӑҫсем 60 ҙалӑш ҫуллӗш ӳсеҫҫӗ.

Ҫур-ҫӗрти Америкре типӗ вырӑнсенҙе ҙылай аслӑ ҫеҫенхирсем пур, вӗсене *прери* теҫҫӗ (*пӑхӑр карт ҫине*). Ҫур-куннепе ҫула прерисем йешӗл сӗткенлӗ курӑкпа витӗнеҫҫӗ; вӑл курӑкӗ ҫу иртнӗ ҙухне йе кӗр-кунне тин типсе ларат, ун ҙухне вара сип-симӗс прерисем ылттӑн тӗслӗ сарӑ пулса лараҫҫӗ.

Хӑш-хӑш тӗлте анҙах ҫеҫен-хирсем пуш-уй пулса кайаҫҫӗ.

Вăта Америкпе Кăвтăрти Америкĕн çурри йăлтах троппик *вăрманĕ* айĕнђе. Амасон айлăмĕнђе аслăшĕпех, Атлант океавĕ хĕрринђен пуçласа Кортилйер тăвĕсем патне çитиђенех, троппик вăрманĕсем ÿсеççĕ, вĕсене *селђвас* теççĕ. Селђвассем вĕсем тем пысăкăш сĕм-вăрмансем, вĕсем Йевропри Раççей ђухлĕ пулаççĕ, вĕсем çĕр çинђи пур вăрмансенђен те илемлĕрех. Йывăçĕсем унта Малай архипелакĕнђи вăрмансенђен те çÿлĕрех, пит çăра; вĕсене лиансем сырса илсе пĕтерне; вĕсем хушшинђе çÿреме çук, шыв тăрăх авђах кайма пулаТ. Селђвасра ниçта çук тĕслĕрен йывăç; унта пит паха йывăçсем ÿсеççĕ: реçин йывăçĕсем, какао йывăçĕсем, хинă йывăçĕсем, шупка-хĕрлĕ (розовое) йывăçсем, хĕрлĕ йывăçсем, тата урăх та нумай.

Кăнтăрти Америкре тинĕрех çĕрсенђе, Оринокко тăрăх, троппикри саваннă çеçен-хирĕсем пур; вĕсем çу варривђе çÿлĕ курăкпа витĕнеççĕ, хĕллехи уйар вăхăтра типсе çунса лараççĕ.

Кађака троппикĕнђен кăнтăралла кайсан, савннăсем сулхăнлăрах çĕрти çеçен-хир пулса кайаççĕ, вĕсене Кăнтăрти Америкре *памппас* теççĕ.

Егеме йурăхлă хăш-хăш ÿсен-тăран йапаласем Америкрен тухнă: *паранкă* Ант сăрђĕсем çинђе ÿснĕ, Америке тупсан, унтан ăна урăх çĕрсене куçарса кайса лартнă; халĕ ăна етем пурăнакан çĕр çинђи пур çĕрте те лартаççĕ; *маиспе куккурус* та Вăта Америкрен сарăлнă; *хинă йывăçĕ те, какао та, тапак та* Америкрен тухнă.

Йеврол çыннисем Америке Кив-Çĕртен тĕрлĕ паха ÿсентăран йапаласем куçарса кайна: тулă, рис, сахăр хăмăшĕ; кофĕ йывăçĕ, тата урăх та нумай; çав куçарса кайнă йапаласем Америкре Кив-Çĕртинђен те лайăхрах ÿсеççĕ.

Ђĕр-ђунсем.

Америкре Çур-çĕр йенђи Аçипе Йевроп çĕрĕнђе пурăнакан ђĕр-ђунсемех пĸранаççĕ; *антђах кăнтăралла кайнă-çемĕн Америкре пурăнакан ђĕр-ђунсем Кив-Çĕрте пурăнакан ђĕр-ђунсенђен паллах урăхланаççĕ.*

Америкри тунтăрта ак çак кайăксем пурăнаççĕ: сивĕри пăлан, сивĕри тилĕ, шурă хир-ђăххи; вăрмансенђе: вакшасем, тилĕсем, кашкăрсем, упасем, тата урăх кайăксем тĕ нумай. Пуривђен ытла вĕсем Нелђсон, Меккенçи, Йуккон шывĕсем тăрă-

хӗнҫе нумай, мӗнпӗн тесен унти вӑрмансене етем алли пырса тӗкӗнмен, унта пурӑнакан пит сахал.

Аслӑ кӳлӗсенҫен кӑнтӑрта етемсем нумайӑн пурӑнаҫҫӗ, вӑрмансем сахал, ҫавӑнпа унта тискер кайӑк йулман, пӗтнӗ.

Прери ҫеҫен-хирӗсенҫе, нумай пулмасӑ, хир-вӑкӑрӗсем (писонсем) кӗтӳ-кӗтӳпе темӗн ҫухлӗ ҫӳрет-ҫӗҫ; 50 ҫул ӗлӗкрех писонсем мӗн пурӗ темиҫӗ мӗлйун пуҫ пулнӑ; халӗ вӗсене пӗтӗмпех пӗтернӗ; вӗсем халӗ вӗсене тытма хушман ҫӗрте анҫах пурӑнкалаҫҫӗ.

Кӑнтӑрти Америкре ытти ҫӗрте ҫук ҫӗр-ҫунсем пит нумай: *кахал-кайӑксем*,—*кӑткӑ-ҫийенсем* (*муравьед*), *арматилсем* (*броненосец*). Америкри хайар кайӑксем—*пумӑпа йакуар*—Кив-Ҫӗрти арӑсланпа ҫикӑртан пӗҫӗкрех те, вайсӑртарах та.

Селҫвас ӑшӗнҫе темӗн ҫухлӗ, темӗн тӗрлӗ нумай ҫӗр-ҫун пурӑнаҫ. Унта вӑрӑм хӳрелӗ *упӑтесем* пит нумайӑн пурӑнаҫҫӗ, унти пек ниҫта та ҫук, вӗҫен-кайӑк та селҫвасри пек урӑх ҫӗрте ниҫта та ҫук; унта пур ҫӗрте те хитре тӗклӗ пӑппукайсем, *колиприсем*, тата урӑх кайӑксем те нумай вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Йарса пусмассерен *ҫӗленсем* ҫӳреҫҫӗ, вӗлерекен сӗлехелисем те, вӗлерми сӗлехелисем те пур; ҫӗр ҫинҫе те, шывра та, йывӑҫ тураҫӗсем ҫинҫе те вӗсем тӗл пулаҫҫӗ; вӗсем хушшинҫе ҫӑн пысӑкки *пӑвакан-ҫӗлен*; унӑн тӑршшӗ 3 ҫалӑша йахӑн пулаҫ. Шывсенҫе, кӳлӗсенҫе *каймансем* пур, вӗсем Африкри крокотилсенҫен пӑртак кӗскерех, анҫах вӗсем пекех хӑрушӑ. Шыври ӑшӑх вырӑнсенҫе тата хупӑлӑ-шапасем (черепаха) пит нумай, интсем вӗсенӗн ҫӑмартисене пуҫтарса ҫу кӑлараҫҫӗ.

Кортилйер таврашӗнҫи лаптак вырӑнсенҫе, ту сӗвекӗсенҫе *ламӑсем*, виккуҥсем (викунья) ҫӳреҫҫӗ; вӗсем тӗвесем пек, ҫӗрнелӗ выҫӑхсем; ту ҫинҫе ҫӑнкӑ тӗлсенҫе *контӑрсем* йӑва туса пурӑнаҫҫӗ, ҫав контӑрсем ҫӗр ҫинҫи ҫи пысӑк хайар кайӑксем.

Пампассенҫе тата *страуссем* кӗтӳ-кӗтӳпе ҫӳреҫҫӗ, вӗсем Африкри страуссем пекех, анҫах вӗсенҫен кӑшт пӗҫӗкрех.

Йеврсп сыннисем куҫса пыриҫҫен Америкре алла вӗреннӗ выҫӑх ҫукпа пӗрех пулнӑ; тунтӑрта пӗр *йытӑ* етемпӗн ӗҫлесе пурӑннӑ, тата Кӑнтӑрти Америкри лаптак тусем ҫинҫе *ламӑ* пулнӑ Йеврсп сыннисем Америке лашасем, ӗнесем, ытти алла вӗреннӗ выҫӑхсене те илсе пынӑ; халӗ вӗсем унта темиҫе ҫӗр мӗлйун пуҫ пулӗ.

Пурӑнакан халӑхсем.

Америкре мӗн пуҫӗ халӑх *150 мӗлйуна* ҫитет; пӗр таваткӑл ҫухрӑм, пурне те шутласан, 4 ҫынна тивет. (*Пӗлӗр: халӑх Америкре Аҫиринҫен миҫе хут сахал?*).

Сивӗри тинӗс-уттисенҫе, Пӑрлӑ тинӗс хӗррисенҫе халӑх пит сахал пӑрӑнать; унта ескимоссенӗн наҫар пӳрҫӗсем ӑҫта килҫӗ унта пӑт-пат анҫах тӗл-пулкалаҫҫӗ; ескимосӗсем хӑйсем ухутана ҫӳренипе, пулӑ тытнипе анҫах пурӑнкалаҫҫӗ.

Кутсон тинӗс-ури таврашӗнҫи Меккенҫипе Йуккон таврашӗнҫи *сӗм-вӑрмансенҫе* те пурӑнакан етем *пит сахал*; ҫанталӑк сивӗ пулнӑ пирки, унта тырӑ-пулӑ тума пулмасть; вӑрманӗсенҫе ухутапа пурӑнакан тикки интсем анҫах сӗтӗрӗнсе ҫӳреҫҫӗ.

Миҫҫиҫҫиппи таврашӗнҫе, Аслӑ Кӳлӗсем хӗррисенҫе тата Атлант оккеанӗ хӗррисенҫе климат лӑп-ӑшӑ, нӳрӗ, ҫӗр ырӑ, ҫавӑнпа унта халӑх пит ҫӑра; пӗтӗм Америкре пурӑнакан етемсенҫен ҫуррине йахӑн унта пурӑнаҫҫӗ.

Вӑта Америкре те, пуринҫен ытла Вест-Интире, халӑх ҫӑра; унта троппикри вӑрмансене кӑкласа тасатнӑ тӑ, лайӑх уйсем туса хунӑ.

Кӑнтӑрти Америкре троппикри тем аслӑш сӗм-вӑрмансем лараҫҫӗ, унта етем алли пырса тӗкӗнмен; ҫавӑнпа унта пурӑнакан халӑх *сайра*. Етем унта тинӗс хӗррисенҫе, тата шыв таврашӗнҫе анҫах пурӑнкалать, *сеҫвас* варринҫе, шалта, тунтӑрти пек, пурӑнакан етем пит сахал, вунӑ тӑваткӑл ҫухрӑмра пӗр ҫын анҫах пулать. Кӑнтӑрти Америкре лайӑх ҫӗрлӗ памппассенҫе, лаптак сӑртсем ҫинҫе пурӑнакан етем вӑрмантинҫен нумайрах.

Америкре пурӑнакан етемсенҫен икӗ пайӗ шурӑ-ӳтлӗ халӑхсем; вӗсем Йевропран куҫса пынӑ. Ҫур-ҫӗрти Америке пуринҫен ытла *акӑлҫансем, ирлантсем. нимӗҫсем* куҫса пынӑ, Вӑта Америке Кӑнтӑрти Америке *испансемпе порттукалсем* пырса ларнӑ.

Америкре пурӑнакан етемсенҫен виҫӗ пайран пӗр пайӗ тӗрлӗ халӑхсем пулаҫҫӗ: хура-ӳтлӗ *некӗрсем* сарӑ-ӳтлӗ *интсем*, некӗрсемпе шурӑ-ӳтлӗ етемсенҫен пулнӑ *мулатсемпе меттиссем*. Вӗсем Йевропри ҫынсем пурӑнма пултарайман вырӑнсенҫе пурӑнаҫҫӗ.

Йевроп ҫыннисем пырса кӗриҫҫен Америкре сарă-ўтлӗ ҫынсем анҫах пурăннă: Пăрлă оккеан хӗрринҫе *ескимоссем* пурăннă, ытти ҫӗрте тӗрлӗ *инт* халăхӗсем пурăннă.

Интсем вӗсем тикки халăх пулнă, ухутапа пурăннă, пӗр вырăнтан тепӗр вырăна куҫкаласа ҫўренӗ: вӗсенӗн кашни йăхӗ хăй ӗссӗн уйрăм пурăннă, йăхпа йăх ухутара ҫўреме лайăх вырăвсемшӗн пӗр-майах вăрҫса пурăннă. Хăш-хăш йăхсем анҫах ҫӗр ӗҫлесе кил-ҫурт лартса пурăннă; Мекҫикпе Перу лаптак тăвӗсем ҫинҫе интсем ҫапла пурăннă; вӗсенӗн пысăк патшалăхсем пулнă; вӗсенӗн пурăнăҫӗ нумай мала кайнă, вӗсенӗн хăйсем ăсӗпе кăларнă ҫыру та пулнă.

Йевроп ҫыннисем Америке ҫитсе кӗрсен, интсем вӗсемпе пит лайăх пулнă; анҫах Йевроп ҫыннисем вӗсенӗн ҫăн ырă ҫӗрӗсене туртса иле пуҫласан, интсем вара Йевроп ҫыннисене хирӗҫ тăра пуҫланă. Ҫапла ҫасах вăрҫăсем тухса кайнă, темӗн ҫухлӗ йун тăкăннă: интсем вăрҫа ухăсем, ҫӗмрӗнсем, сăнăсем, пуртăсем илсе тухнă, Йевроп ҫыннисем вӗсене хирӗҫ хӗҫ-пăшалпа пынă. Ҫавăнпа хӗрлӗ-ўтлӗ интсем темӗн ҫухлӗ паттăр пулсан та, шурă-ўтлӗ ҫынсене парăнмалла пулнă. Йевроп ҫыннисем хуллен-хулленех пӗтӗм Америке ҫӗнтерсе илнӗ, хăш-хăш инт халăхӗсене ăрунә те хăвăрман, йăлтах пӗтернӗ, хăшӗ-хашӗ вăйсăра тухса Йевроп ҫыннисене парăннă.

Некӗрсем Америке хăйсенӗн ирӗкӗпе пыман. Вӗсене Йевроп ҫыннисем хăйсенӗн Америкри пахҫисене, планттатсисене ӗҫлемешкӗн, сутăн илсе, ҫуралăха кўртсе, Африкрен Америке турттарса пынă. Ҫапла некӗрсене мӗн пурӗ темиҫе мӗлйун ытла илсе пынă. Халӗ Америкре пурăнакан етемсен сакăр пайӗнҫен пӗр пайӗ вӗсем пулаҫҫӗ; мулатсемпе пӗрле шутласан, унтан та ытларах. Иртнӗ ӗмӗрте, ҫуралăха пăрахăҫ туса, некӗрсене ирӗке кăларнă.

Америкре пуҫлăх пулса пурăнăҫа алăра тытса тăракан халăхсем—*шурă-ўтлӗ халăхсем*. Йевроп ҫыннисем, Америке куҫса пырсанах, *колони* туса, хăйсенӗн патшалăхне пăхăнса пурăннă; пурăнсан-пурăнсан кайран, ҫав колонисем уйăрăлса хăйсем уйрăм патшалăхсем пулнă, вӗсем—*респупликсем*. Ҫăн пысăк, йышлă халăхлă респуплик—*Ҫур-ҫӗрти Америкри пӗрлешсе пурăнакан Штатсем;* иккӗмӗшӗ—*Праҫили*. Колонисем хушшинҫе ҫăн пысăкки—*Канатă*, ăна акăлҫансем тытса тăраҫҫӗ.

АМЕРИК ÇĔРĔСЕНЕ УЙРĂМĂН-УЙРĂМĂН ПĂХСА ТУХНИ.

Кренлантипе Çур-çĕрти Америкри утрав-ушкăнĕсем.

Кренланти çĕр çинҫи ҫăн пысăк утрав; вăл Йевропри Раççей çурри ҫухлĕ лапах пулаĭ; анҫах етеме пурăнма унта пит лайăхах мар. Вăл ĕмĕр йурпа витĕнсе, пăрланса тăракан тем пысăкăш çулĕ ҫул пек.

Çулсеренех Кренлантире темĕн ҫухлĕ йур суса лартаĭ, вăл йур çу хушшинҫе ирĕлсе пĕтеймест. Çапла ĕмĕр хушшинҫе çав йуртан Кренлантире тем хулăмăш йур пăрланса ларнă, çав пăра *маттерик пăрĕ* теççĕ. Пур тусем, çырмасем Кренлантире йăлтах çав пăр айĕнҫе, тинĕс хĕррииҫи çырансем-çĕç пăр айĕнҫе мар.

Маттерик пăрĕ тăпă тăмасĭ, вăл икĕ сĕвек тăрăх шуса анаĭ: мал-йеннелле, тата кăнтăралла. Кренланти хĕррисем пĕтĕмпех кукăр-макăр çуркаланса, шăтăкланса пĕтнĕ, çав çурăксене *фиорт* теççĕ. Çав фиортсем тăрăх тем пысăкăш пăрсем оккеана анаççĕ те, шывра катăла-катăла кайса, пăр тусем пулаççĕ.

Кренлантире кăнтăрта анҫах пăр ирĕлсе пĕтет те, вара оккеан хĕррипе ансăр тунтăр *çĕрĕ ҫăсăмĕ курăнса выртат.*

Америк утрав-ушкăнĕнҫи *Паффин çĕрĕпе* ытти тинĕс утравĕсем те йур айĕнҫе выртаççĕ, анҫах ĕмĕр пĕтми йурпа пăр унта хăш-хăш пысăк вырăнсенҫе анҫах пур, ытти çĕрте пĕтĕмпех тунтăр вырта́ĭ.

Çав тинĕс утравĕсем çинҫе те, Кренлантире те тинĕс хĕрринҫе *ескимоссем* пурăнаççĕ. Вĕсем Аçири çур-çĕрте пурăнакан халăхсем пек мар: пăлан усрама пĕлмеççĕ, акла вĕрекнĕ вылăх вĕсенĕн — кулсе çӳрекен йытă анҫах. Вĕсем *ухутана çӳресе, пулă тытса* пурăнаççĕ. Вĕсем сивĕре пурăнакан пăлансене, шур упасене, тӳленсене, моршсене тытаççĕ. Пурăнасса вĕсем йывăç çук пирки ҫул купаласа çĕрпе витсе тунă пӳртсенҫе пурăнаççĕ; хăш ҫухне пӳрҫĕсене пăрпа йуртан купаласа та тăваççĕ.

Вĕсем пĕр пӳртре тэмиçэ çемйе пĕрле тăвăрланса, пăнђăхса пурăнаççĕ; пођусри вăрăм çĕр пуçланса кайсан, тĕттĕмре çутă пултăр тесе, вĕсем тăмран тунă ђашăк çине шăратнă çу йарса çунтараççĕ.

Кренлантипе Çур-çĕрти Америк патĕнђи тинĕс-уггисем пурте Йевропри халăхсенĕн аллинђе, анђах вĕсем хăйсем унта сивĕ çĕре хутран-ситрен-çеç пыркалаççĕ.

Кренланти Тави аллинђе, тансем Йевропра пурăнаççĕ; ытти утравсем акăлђансенĕн аллинђе; вĕсене Канатăпа пĕрлех пĕр тӳре-шара пăхса тăрат.

Çула йаланах Кренлантийе Йевропран пăраххутсем пыраççĕ, тата тырă, сăхăр, тĕрлĕ тавар тултарса пыраççĕ. Йевроп çыннисем çав таварсене ескимоссэне сутаççĕ, хăйсем вĕсенђен тӳлен çăвĕ, кайăк тирĕ, пулă илеççĕ. Кашни çулах унта тата Йевропран кимĕсемпе тинĕс кайăкĕсене: тӳленсене, моржсене, китсене тытма пыраççĕ.

Кренлантире пурăнакан ескимоссем Йевроп çыннисем вĕрентнипе Христос тĕнне кĕнĕ, çырăва вĕреннĕ. Пĕр йалта вĕсенĕн типпографхви пур, унта ескимос ђĕлхипе хаçатсем, шурналсем кăлараççĕ.

К а н а т ă.

Канатă вăл Америк çĕрĕн сивĕ çур-çĕр йенђи вырăнне йăлтах йышăнса тăрат; унта пĕр Аљаскă анђах кĕмест. Пăрлă океан хĕррипе, тата Лапратор хĕррипе те тунтăрсем выртаççĕ, ытти çĕрте пур çĕрте те сухăрлă вăрманпа хура вăрмансем лараççĕ; çав вăрмансенђе çемçэ çăмлă кайăксем пит нумай, анђах етеме пурăнма унта ытла лайăхах мар: унта çанталăк сивĕ пулат, çавăнпа Канатăра кăнтăрта анђах, мал-йенђе *св. Лаврентти тинĕс-уринђен* пуçласа, каçалла *Ванккувер* кӳлли патне çитеђђен, тырă-пулă тума пулат. (*Америкре ӳсекен йывăç-курăк картђĕ çине пăхăр та, тырă-пулă ђиккине тупăр*). Унта та çĕр тулă та, ĕçлеме пит кансĕр.

Канатăра мĕн пурĕ 8 мĕлйуна йахăн халăх пурăнат.

Тунтăрта *ескимоссем* пурăнаççĕ. вĕсем пођус патĕнђи утăсенђе пурăнакан ескимоссем пекех кайăкçăсем, пулăçăсем. Моккенçи не Неђссон шывĕсем таврашĕнђи сĕм-вăрмансенђе тикки *интсем*

пуранаççĕ; вĕсем çемçе çăмлă кайăксене, йăпарсене, хăнтăрсене, сопăлсене тытасшăн ухутара çÿресех иртгереççĕ.

Канатăра пуранакан интсен пуранаçĕ Америкре ытти çĕрти пек ытла хуйхăлах пулмав; Канатăна Йеврои çыннисем пĕтĕккĕн-пĕтĕккĕн пырса ларнă, интсем вĕсенчен хăраса, ырăрах вырăнсене пăрахса, вăрмана, шалалла, кайнă; интсем нумайĕшĕ тата хăйсенĕн вырăнĕнчех тапранмасăр йулнă; вĕсем халĕ кил-çуртлă пулса, çĕр ĕçлесе пуранаççĕ, ачисене ăшкула та йараççĕ.

Канатăра, кăнтăрта, пуринчен ытла Аслă кÿлĕсен хĕррипе тата çв. Лаврентти шывĕ тăрăх, *Йевропран куçса пынă çынсем* пуранаççĕ; Канатăри халăх хушшинче вĕсем чи нумай.

Пуринчен ытла Канатăна акăлчансем нумай пырса ларнă, çавăнпа унта акăлчан чĕлхи—пус-чĕлхе. Анчах унта чăн малтан куçса пыраканнисем хрантсуссем пулнă, халĕ те Канатăри халăхăн виççĕ пайĕнчен пĕр пайĕ вĕсем пулаççĕ; хăйсен чĕлхине те вĕсем çухатман, усраççĕ.

Канатăсен тĕп-ĕçĕ—*çĕр ĕçĕ*, тата *вылăх-чĕрлĕх усрани*. Хăйсен уйĕсенче вĕсем пуринчен ытлă тулăпа сĕлĕ, тата урпа тăваççĕ.

Аслă кÿлĕсенĕн хĕрринче канатăсем çимĕç кÿрекен пахчасем тăваççĕ. Куронпа, Ерипе Онттарио хушшинчи ластăк çинче Канатăн чăн ырă пахчи; унта иçĕм-çырли те пиçет; анчах пахчисем тата лайăхрах пулаççĕ.

Канатăсем ĕне-вылăх нумай усраççĕ, çупа чăкăт нумай хатĕрлеççĕ.

Вăрман ĕçĕ те вĕсемшĕн пит усăлă. Вăрманне хĕлле касаççĕ, çур-кунне шывпа антараççĕ йе чукун-çулпа турттараççĕ. Канатăсем тата пулă пит нумай тытаççĕ, пуринчен ытла Нйуфаунтлент ăшăхĕнче пулă лайăх кĕрет; унта *треска та, çелт те, лоссоç та* нумай.

Канатă халăхĕ—*пит вĕренн*ĕ, *ĕçчен халăх*. Вĕсем ăшкулсемшĕн пит тăрăшаççĕ: кĕçĕн ăшкулсемшĕн те, вăтаммисемшĕн те, аслисемшĕн те. Çыру пĕлмен çын вĕсем хушшинче пит сахал. Вĕсем тата чукун-çулсем нумай тунă; пĕри Атлант океанĕ хĕрринчи шăнса лармн порт Калифаксран тухаT те, Аслă океан хĕрринчи çавăн пек шăнмн порта *Ванккувере* çитет; вăл маттерик çинче Ванккувер уттине хирĕç ларат.

Канатăри ђăн пысăк хула—*Монреаљ*; вăл ç. Лэврентти шывĕ çинђе, Йевропри халăхпа унта суту-илÿ тăвaççĕ. Канатăран йывăç, выљăх-ђĕрлĕх, çу, ђăкăт, тырă турттарса кайаççĕ; çемçе çăмлă кайăксен тирĕ те нумай кайат. Канатă вăл *Акăљђан колонийĕ*, çавăнпа унти тÿре-шара пуçлăхĕ акăљђансен *йанарал-кĕпĕрнеттĕрĕ*; саккунсене Канатăра *парламент* кăларат, вăл парламентре халăх уйăрса йанă çынсем ĕçлеççĕ.

Канатă пирĕн Çипир çĕрĕпе пĕр майлă. Пысăкăшĕнђен пулсан, вĕсем иккĕшĕ те пĕр-танрах. Çур-çĕр йеђђен Канатăна та Çипире те Пăрлă оккеан çуса тăрат. Вĕсенĕн иккĕшĕн те климăт пĕр пекех сивĕ: Меккенçи шывĕ çинђе Ленă çинђи пекех сивĕ пулат. Шывсем унта тэ, кунта та çур-çĕрелле йухаççĕ, нумайђђен пăрланса тăраççĕ. Тÿрех каласан, Çипир шывĕсем вăрăм, анђах Канатăра ун выранне кÿлĕсем нумай. Йывăç-курăк тэ, ђĕр-ђунсем те пĕрех: ђи çур-çĕр йеђђе тунтăрсем, кăнтăртарах—сĕм-вăрмансем, унта темĕн ђухлĕ ăшă çăмлă кайăксем; хура лайăх çĕрлĕ çеçен-хирсем анђах Çипиртe аслăрах. Пурăнакан халăх та пĕр пекрехех ларса тухнă: Канатăра 8 мĕлйун çын, Çипиртe—10 мĕлйун; тунтăрсеђђе унта та, кунта та пĕр майлах етем çук; сĕм-вăрмансенђе унта та, кунта та кайăкçăсем сĕтĕрĕнсе çÿреççĕ: Канатăра—интсем, Çипиртe—тункуссем; етем çăра ларса тухнă вырăнсем Канатăра та, Çипирте те кăнтăрта; унта ђукун-çулсем пыраççĕ, Канатăра—Аслă оккеан çулĕ, Çипиртe—Çипир çулĕ; Канатăпа Çипиртe пурăнакан халăхсем ĕçлессе те пĕр тĕслĕ ĕçсем тăваççĕ: унта та, кунта та çĕр ĕçлеççĕ, выљăх-ђĕрлĕх усраççĕ, ухутана çÿреççĕ, пулă тытаççĕ, вăрман ĕçлеççĕ; ытти те çавăн пекех. Анђах халăха вĕрентес тĕлĕшрен пулсан, Канатăпа Çипир хушши инçе тăрат: Канатăра 16 университет, Çипиртe пĕрре анђах; вĕçĕн ăшкулсем те Канатăра Çипиртиђђен темиçе хут нумайтарах.

А љ а с к ă.

Аљаскă вăл—сивĕ, хайар çĕр. Кăнтăрта ун йурлă тусем çĕкленсе тăраççĕ; вĕсенĕн çÿллĕшĕ 5 çухрăм, 6 çухрăма çитекенни те пур. Çав тусем айĕнђе сухăрлă йывăççем ÿсеççĕ, анђах тинĕсри шывран çур çухрăм çÿлелле ĕмĕрхи йурсем пуçланса кайаççĕ. (*Пĕлĕр: мĕншĕн апла йур ђикки Аљаскăра пит айалта?*

Тинĕс хĕрринчи тусем çинчен пăрсем Аслă океан урисем ăшнѐ тӳрех шуса анаççĕ (*св. Илйе* тăвĕ çинчен çапла анаççĕ), вара вĕсене пăр тусем пулса картласа лартаççĕ.

Алjаскă варринче лаптак ту пур, унта *Йуккон шывĕ* йухать. Çав шыв тăрăх хĕррипе сухăрлă йывăççем ӳсеççĕ, унтан çурçĕрелле вара тунтăрсем пуçланса кайаççĕ. Алjаскăри климăт пит сивĕ, çавăнпа унта çĕр пит тарăн шăнса ларнă, çула пулсан, çийелтен анчах ирĕлет. Ĕмĕртенпе Алjаскăра пурăнакансем—*ескимоссемпе интсем*; вĕсенĕн тĕп-ĕçĕ—ухута, вĕсем тĕрлĕ кайăксене, тата пулă та тытаççĕ.

Йевроп çыннисенчен Алjаскăна чĕн малтан пырса кĕнисем *вырăс касакĕсемпе вырăс кайăкçисем* пулнă; вĕсем Алjаскăна Раççей аллине кӳртнĕ; анчах иртнĕ ĕмĕрте ăна Çур-çĕрти Америкри пĕрлешсе пурăнакан Штатсене сутса йанă; вăл халĕ те вĕсен аллинче, ăна „*Алjаскă территторийĕ*" теççĕ, вăл *Алjаскă çĕрĕ* тени пулать.

Нумай пулмасть, мăрикккансем Алjаскăра *ылттăн тăпри* тупнă; унта вара ылттăн шыракансем нинĕ-пинĕпе кайнă. Чăнах та унта пит паха ылттăн тăприсем тупнă, анчах, вĕсем Алjаскăра чулман, унпа йунашар Канатăра, Йуккон шывĕн Клонтайк йатлă турачĕ тăрăхĕнче, пулнă; анчах унта кайас пулсан, Алjаскă урлă каймалла; çулĕ инçе, йывăр çул, унта Пĕрлешсе пурăнакан Штатсен çĕрĕнчен тухаççĕ те, океанпа кайаççĕ, унтан типĕ çулпа, йурлă тусем урлă кайаççĕ. Ылттăнне шырама та сивĕ пирки пит йывăр: çула пулсан та, çĕрѐ вут хурса ăшăтмасăр пулмасть; пурăнассине йапăр-йапăр тукаласа лартнă пӳртсенче, хӳшĕсенче, шăтăксенче пурăнас пулать; апат-çимĕç пит хаклă, ăна Штатсенчен илсе пыраççĕ. Апла пулсан та, ылттăн шырама унта темĕн чухлĕ халăх пырать. Çапла ĕнтĕ унта пурăнăç майланма пуçланă. Халĕ Аслă океан хĕрринчен пуçласа Клонтайк шывĕ патне çитех чукун-çул тунă.

Çур-çĕр йенчи Америкри пĕрлешсе пурăнакан Штатсем.

Аслăшĕнчен пулсан, Çур-çĕр йĕнчи Америкри пĕрлешсе пурăнакан Штатсенĕн çĕрĕ, Алjаскăсăр пуçне, Канатă çĕрĕнчен

кӗҫӗнтерех те, халӑхӗ унӑн Канатӑран 10 хут ытларах: унта мӗн пурӗ *90 мӗлйун ҫын пурӑнат*. Ҫав Штатсен ҫанталӑкӗ унта кусса пыракансене пурӑнма *пит лайӑх*, *пит ырӑ*, ҫавӑнпа унта халӑх нумай.

Пӗр йенҫе унта, хӗвел-тухӑҫнелле, пит аслӑ тӳрем ҫӗр выртат, ҫӗрӗ апат-ҫимӗҫ паракан лайӑх ҫӗр, нумай тӗлте хура ҫӗр, тата Мексик тинӗс-ури ҫинҫен вӗрсе тӑракан ҫилсем унта ҫумӑрсем илсе пырса, ҫӗре *пит лайӑх шӳтерессӗ*. (*Астуса илӗр: ҫав ҫилсем хӑҫан вӗрессӗ*).

Штатсен каҫал-йенӗ ҫуллӑ, унта типӗ *лаптак тусем* выран нумай илсе тӑрассӗ; сӑмахран каласан, *Йуттӑ*; тата *ҫӳлӗ тусем* те нумай (*мӗнлӗ тусем, пӗлӗр*); анҫах каҫалра, ҫи хӗрринҫе Аслӑ оккеанпа Ҫийеррӑ Неватӑ таврашӗнҫе ҫӗр каллех— ҫимӗҫ кӳрекен лайӑх ҫӗр, климӑҫӗ те нӳрӗклӗ.

Ҫӗр айӗнҫе мал-йенҫе те, хыҫал йенҫе те *паха йапаласем пит нумай*. Миҫҫиҫҫиппи шывӗпе унӑн тураҫӗсем таврашӗнҫе ҫӗр айӗнҫе тем хулӑмӑш *ҫӗр-кӑмрӑкӗ* выртат; *Аллеканире тимӗр тӑприпе нефт* нумай тухат; Ҫуллӑ тусем, Ҫийеррӑ-Неватӑсем, Каскатлӑ тусем тата *ылттӑнран*, *кӗмӗлрен*, *пӑхӑртан*, *ҫӗрӗ-кӗмӗлтен* урӑх ытти метталсенҫен пулсан та, пит пуйан.

Ҫав паха йапаласене кӑларма Штатсенҫе йывӑрах мар, мӗншӗн тесен унта кусса ҫӳреме ҫулсем пит лайӑх. Миҫҫиҫҫиппи шывӗ, унӑн тураҫӗсем: *Окайо*, *Миссури*, ыттисем те, кимӗпе ҫӳреме тӑршшӗпех лайӑх. Атлант оккеанне йухса кӗрекен Кутсон та, ытти шывсем те вӑрӑм мар та, кимӗпе ҫӳреме лайӑх. *Аслӑ* кӳлӗсем те сул-ҫӳреме лайӑх; халӗ вӗсене *канал* алтса Кутсонпа, тата Миҫҫиҫҫиппи тураҫӗсемпе сыпӑнтарнӑ. Йулашкинҫен каласан, Пӗрлешсе пурӑнакан Штатсене мал-йенҫен те, хыҫал йенҫен те нихӑҫан та шӑнса ларми оккеансем ҫуса тӑрассӗ; вӗсенӗн пысӑк кимӗсем кӗрсе тӑмалли ырӑ вырӑнсем, *кавӑнҫем*, нумай, ҫав кавӑнҫем Йевропра, Аҫире, ытти ҫӗрте пурӑнакан халӑхсемпе пӗрлешсе хутшӑнса тӑма йапанах *уҫӑ*, *хатӗр* тӑрассӗ.

Паха пуйан ҫанталӑк, тухса ҫӳремелли лайӑх-ҫулсем, вӑхӑтлӑ-ӑшӑ ырӑ климӑт тахӑҫантанпах Йевропра пурӑнакан сынсене Штатсен ҫӗрне кусса кайма илӗртсе тӑрассӗ. Пуринҫен ытла унта *акӑлҫан сыннисем* нумай пырса тулнӑ, ҫавӑнпа акӑлҫан ҫӗлхи унта пус-ҫӗлхе. Йевропран пынӑ ытти халӑх-

сем курте, *ирлантсем те, нимĕтсем те, итталсем те, хрантсуссем те*, ыттисем те, ҫав акăлҗансемпе хутшăнса кайса, вĕсенĕн җĕлхипе калаҫа пуҫланă, пурăнăҫ йĕркипе йăлисене те пĕтĕмпех йышăннă. Ҫапла Америкре сĕнĕ халăх пулса кайнă; вĕсем хăйсене *мăриккансем* теҫҫĕ, Йевропра пурăнакан ҫынсем вĕсене куҫса кайнă акăлҗансенĕн йаҗĕпе *йанкки* теҫҫĕ. Мăриккан халăхĕ пит *тимлĕ, пĕр татăксăр, хĕмленсе ĕҫлеме йуратакан халăх.* Ҫавăнпа та Пĕрлешсе пурăнакан Штатсем җасах вăйлă патшалăх пулса тăнă, вăй-хăватран пулсан халĕ вăл ҫĕр ҫинҗи пĕр патшалăхран та кайа мар.

Шурă-ўтлĕ етемсенҗен пуҫне Штатсенҗе тата *интсемпе некĕрсем* пурăнаҫҫĕ. Интсем ĕлĕк йышлă пулнă, анҗах вĕсене нумайĕшне вĕлерсе пĕтернĕ; халĕ вĕсем мĕн пурĕ те 200 пинрен ытла мар. Некĕрсем җылăй, 10 мĕлйуна ҫитеҫҫĕ, ҫапла 8 ҫын шурă-ўтлисем пулсан, 1 некĕр пулать. Штатсенҗе вĕсем пур ҫĕрте те тĕл-пулкалаҫҫĕ, кăнтăрта, тата кăнтăрпа мал-йен хушшинҗе анҗах йышлăн пурăнаҫҫĕ: унта климăт нўрĕкрех те ăшăрах.

Вĕсене җуралăхран кăларнă, вĕсенĕн те пуринпе танах патшалăхри краштăн тивĕҫĕ пур, анҗах шурă-ўтлисем ҫапах та вĕсенҗен йĕрĕнеҫҫĕ. Пурăнăҫ тĕлĕшĕнҗен те некĕрсем пĕтĕмпех лешсен аллинҗе: вĕсем шуррисенĕн уйĕсенҗе, хапрăкĕсенҗе, рутникĕсенҗе ĕҫлеҫҫĕ, җукун-ҫулсем ҫинҗе кăҗакарта тăраҫҫĕ, тата урăх ĕҫ те нумай тăваҫҫĕ. Некĕрсем хушшинҗе хăй вăйĕпе, хăй пурăнăҫĕпе пурăнакан ҫын сайра.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенҗи *ал-ăсталăхĕ* пĕтĕмпех мăриккансен аллинҗе,вĕсене пула вăл пит ăнса малалла кайнă. Җăн малта *ҫĕр ĕҫĕпе вылăх-җĕрлĕх ĕрҗетсе усрани* тăрать. Ĕлĕк сĕм-вăрмансем ларнă ҫĕрте, ĕлĕк писон кĕтĕвĕсем йе тикки интсем ҫапкаланса ҫўренĕ прерисем пулнă ҫĕрте, халĕ вĕҫĕ-хĕрри курăнми уйсем сарăлса выртаҫҫĕ йе килти вылăх-җĕрлĕхсенĕн пысăк кĕтĕвĕсем ҫўреҫҫĕ. Уй ĕҫне мăриккансем темиҫе тĕрлĕ машшинапа тăваҫҫĕ. Ҫавăнпа вĕсем тем пысăкăш уй-хирсене йăпăртах пуҫтараҫҫĕ, тырри-пулли те вĕсенĕн лайăх пулать. Штатсенҗе пĕр *куккурус* тырри Раҫҫейри мĕн пур тырă җухлĕ пулать. Куккурус вăл етеме тăранма сахал кайать, пуринҗен ытла унпа вылăха тăрантараҫҫĕ. Мăриккансем ыраша акманпа пĕрех, ун вырăнне вĕсем *тулă* нумай тăваҫҫĕ; тулли

Штатсенђе пуранакан халăха тăранмалăх пулаť, тата ăна темиçе çĕр мĕлйун пăт Хыçалти Йеврона тур ттарса кайаççĕ.

Çĕр-мамăкне Штатсенђе, ытти çĕрсенђе пĕтĕм тĕнђипе мĕн ђухлĕ тăваççĕ, çавăнтан та ытларах тăваççĕ; Хыçалти Йеврова вăл çĕр-мамăкне тăпка туса мĕлйунĕ-мĕлйунĕпе йараççĕ, ăна пирĕн Раççейе те нумай кӳреççĕ.

Çĕр ĕçĕ мăнаçланса кайнă майĕпе выђăх-ђĕрлĕх те нумай усра пуçланă, пуринђен ытла прери çеçен-хирĕсенђе; унта суха кĕмен вырăн халĕ те пит нумай. Мăриккансем пуринђен ытла шултăра ĕнесене, сурăхсене, сыснасене ĕрђетеççĕ. Мăриккан ашне шăнтса Хыçалти Йеврона темиçе мĕлйун пăт илсе кайаççĕ.

Мăриккансем вăрмансене хăртаççĕ, çĕрсене сухаласа пĕтереççĕ, уйсене выђăхĕсене йараççĕ, çапах та вĕсем çанталăкри илемлĕ вырăнсене йуратаççĕ; çавнашкал вырăнсене пĕтерес мар тесе, вĕсене натси паркĕсем тунă; натси паркĕ тени вăл халăх ăрашђи тени пулаť; унта вара çĕре сухалама, вăрмана касма, кайăксене тытма ђарса хунă. Çавăнашкал парксем, темиçе парк, Çийерра-Неватăн сăрђĕсем çинђе пур; унта паттăр йывăçсем,—*мамăнт йывăçĕсем*, ӳсеççĕ. Анђах ђăн тĕлĕнмелле парк—*Йоллостонри натси паркĕ*; вăл Миссури шывĕн Йоллостон йатлă турађĕ хĕрринђе. Унта, пысăк тусем хушшинђе, тарăн çырмасенђе, çĕр айĕнђен вĕри шывсем тапса тăраççĕ, тата *кейсĕрсем* пĕрĕхсе тухаççĕ; унти вăрмансенђе пăлансем, писонсем çыпран хăрамасăр çӳреççĕ, ту хĕррисенђĕ анттилопсем, ту такисем сиккелесе çӳреççĕ; çырмари шывсенђе хăнтăрсем хăйсен хӳшĕ йевĕрлĕ йăвисене тăваççĕ.

Кортилйер тăвĕсем çинђе мăриккансем ылттăнпа кĕмĕл пит нумай кăлараççĕ; Австралипе Кĭнтăрти Африк анђах ылттăн кăларасран пулсан, Штатсемпе тавлашма пултараççĕ; кĕмĕл кăларасран пулсан, Мекçик тавлашма пултараť. Анђах тимĕрпе çĕр-кăмрăкĕ хаклă метталсенђен те пахарах; мĕншĕн тесен тимĕр тĕрлĕ машшина, тĕрлĕ ђукун-çул, тĕрлĕ пăраххут тунă çĕре кайаť. Çĕр-кăмрăкĕпе тимĕр кăларасран пулсан, Пĕрлешсе пурăнакан Штатсем ытти патшалăхсенђен пуринђен те, Анклирен те малта пыраť; ĕлĕк Анклире çав çĕртен кăларакан йапаласем нумай пулнă та, анђах халĕ сахалланса çите пуçланă. Йулашкинђен каласан, Штатсенђе (Аллеканире) нефт те пит

нумай кăлараççĕ; ку ĕçпе пĕр Раççей анђах Штатсемпе тавлашма пултарать; краççын тăвасран пулсан, Штатсем Раççейрен те малта пыраççĕ, мĕншĕн тесен мăриккан нефтĕнђе краççын Раççей нефтĕнђен нумайтарах.

Тĕрлĕ хапрăксем, тĕрлĕ савăтсем Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе пит нумай, пуривђен ытла машшина тăвакан савăтсем нумай. Америкре тунă çĕр ĕçлемелли машшинасем, тата çĕвĕç машшинисем пур çĕре те сарăлаççĕ, пирĕн Раççейе те вăл нумай килет.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе ђукун-çул та пит нумай,— Аçири, Йевропри ђукун çулсене пĕрле хурса шутласан, унтан та нумай. Темиçе ђукун-çул Кортилйере татса каçаççĕ, çапла вĕсем Атлант оккеанĕ çинђи портсене Аслă (Лăпкă) оккеан çинђи портсемпе пĕрле хутшăнтарса тăраççĕ; çав ђукун-çулсене *Лăпкă оккеан çулĕсем* теççĕ. Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе шывсем тăрăх, кӳлĕсем тăрăх, тинĕссем тăрăх *пăраххутсем* çӳреççĕ; тунă *каналсем* тăрăх тинĕс тăрăх çӳрекен пысăк пăраххутсем Атлант тинĕсĕнђен Аслă кӳлĕсем çине кĕрсе-тухса çӳреççĕ.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсем халăха тытса тăрас тĕлĕшрен 45 респупликь, тата 5 территтори пулса тăнă, - территтори тесе халăх сайра, сахал ларса тухнă пирки респупликь пулайман çĕрсене калаççĕ,—анђах çав уйрăм тăракан респупликсем, территторисем пĕрле тађах çыпăçса, пĕрлешсе тăраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсенĕн çулĕсем пĕрле, вĕсен пĕр ђĕлхе, пĕр тӳре—шара.

Штатсен пуçлăхĕ—*преçитент*, ăна 4 çуллăха уйăраççĕ, тата *конкрес*, унта халăк суйласа йанă çынсем лараççĕ. Конкрес саккунсем кăларать, преçитент вĕсене вырăна кӳртме тăрăшать.

Кашни штатăн пуçлахĕ—кĕпĕрнеттĕр, ăна халăх уйăрать; кашни штатра уйăрса йанă çынсем ытти штатсемсĕр пуçнех хăйсене килĕшӳлĕ саккунсем кăлараççĕ; кĕпĕрнеттĕр халăха çав саккунсем тăрăх тытса тăрать.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђи çынсем, краштăнсем, саккун тăрăх пурте, пур йенђен те пĕр-тан, пĕр тивĕçлĕ, пурин те пĕр пек правă; вĕсем сослови тăрăх уйăрăлмаççĕ. Преçитент

слушпине тултарса тухсан, ытти краштăнсем пекех пулаŏ, вĕсенђен нимрен те уйрăм мар.

Мăрикkансем пĕр-тан, пĕр тивĕçлĕ пулни çынсем пĕрле пурăннинђен те курăнса тăраŏ. Унта ахалђ рапођђи, пĕр-пĕр мĕлйунерĕн саватĕнђе ĕçлесе пурăнаkанскер, çав мĕлйунерпе хирĕç пулсан, вĕсем пĕрне-пĕри тŏрех алă параççĕ те, тан çынсем калаçнă пек, килаçаççĕ.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе халăха вĕрентесшĕн пурте пит тăрăшаççĕ: конкресĕ те преçитенђĕ те, кĕпĕрнеттĕрсем те тĕрлĕ ушкăнсем те (опђăсем те), тата ахалђ çынсем те хăшĕ-хăшĕ çав вĕрентŏ ĕçне малалла йарасшăн темĕн ђухлĕ укçа параççĕ. Универççиттетсем, тата вĕренмелли ăшкулсем те нумайĕшĕ ахалђ çынсем кăмăл туса панă укçапа пурăнаççĕ. Кĕнекесем, хаçатсем, шурналсем Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе темĕн ђухлĕ тухаŏ.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсен пуç-хули—*Вашинктон*, вăл *Колумпи* окрукĕнђе. Пĕр штат та: пуç-хула пирĕн патра, тенипе ан мухтантăр, тесе, çав окрука йури хăйне уйрăм туса хунă. Вашинктон вăл ытла пысăк та мар, ытла пĕђĕк те мар, унта мĕн пурĕ 300,000 çын пурăнаŏ; унта конкрес пухăнаŏ, *шурă çуртра* преçитент пурăнаŏ.

Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђе ђăн пысăк хула—*Ђйу-Йорк*; унта мĕн пур пурăнакан çын 4 мĕлйуна çитет; пысăкăшĕнђен пулсан, вăл Анкли пуç-хуливђен, Лонтăнрăн, анђах кĕçĕнтерех. Ђйу-Йорк вăл Кутсон шывĕ вăрринђе, ырă кавăнђ хĕрринђе лараŏ. Йут çĕрти халăхсемпе тăвакан суту-илŏ çурри Ђйу-Йоркра пулаŏ. Йевропăран Америке пурăнма куçса кайакансем те çулсерен темиçе çĕр пин çын Ђйу-Йорка тухаççĕ. 1910-мĕш çулта Пĕрлешсе пурăнакан Штатсене Йевропăран—926,000 çын куçса пынă, вĕсем пурте тенĕпе пĕрех Ђйу-Йорка çитсен тухнă. Çынсене Штатсене кайма тара тытнă укçа пысăкки пикентерет.

Ђйу-Йоркра çуртсем тĕлĕнмелле шутсăр пысăк, унта çирĕмшер, вăтăршар хутлă çуртсем нумай; урамсенђе тата електритсăпа çŏрекен вакунсем, кусан-çŏрен еккиппашсем, иртенçŏренсем сĕмсĕр йăшăлтатаççĕ; урам тăрринђе, çŏлте, йупасем çинђе ђукун-çул çŏрет; вăл кашни кун мĕлйуна йахăн çын çŏретет:

Кутсон шывӗ урлӑ, тата пырсем урлӑ кӗперсем хывнӑ, ҫӗр айӗпе туннелсем тунӑ.

Штатсем варринҫе, шалта, паллӑ хуласем ак ҫаксем: *Ҭиккако*, вӑл Миҭҭикан кӳлли хӗрринҫе; *Сен-Луи*, вӑт Миҫҫиҫҫиппипе Миссури пӗрлешнӗ тӗлтен инҫе мар, тата *Питспурк*, вӑл Окайо шывӗ ҫинҫе, нефт ҭӑн илпӗк тухакан вырӑн патӗнҫе ларат. Ҭиккакора 35 ҭукун ҫул сыпӑнаҫҫӗ, вӑл тырӑпа ашпа аҫлӑ сугӑ туса тӑракан, тӗнҫере ҫук пӗртен-пӗр хула; шӑнтнӑ аш Йеврова ҫакӑнтан пырат.

100 ҫул ӗлӗк Ҭиккако вырӑнӗнҫе пӗр пӗҭӗк инт йалӗ анҭах пулнӑ, халӗ Ҭиккакора пысӑк ҫуртсем—*елеваттӑрсем*, тунӑ, ҫав елеваттӑрсенҫен тырра кимӗсем ҫине тултараҫҫӗ те, Ҥйу-Йорка илсе кайаҫҫӗ *(пӗлӗр: мӗнле ҫулпа?)*, унтан Йеврова йараҫҫӗ. Аш пусса хатӗрлемешкӗн Ҭиккакора тӗнҫере ҫук пысӑк вылӑх пусмалли ҫуртсем (бойнясем) тунӑ.

Тинӗс хӗррин҄ҫи хуласенҫен Ҥйу-Йоркран пусҫне пахисем ак ҫаксем: Атлант оккеанӗ ҫинҫе: *Филателфи*, *Палттимор*, *По* ... Мекҫик тинӗс-ури хӗрринҫе, Миҫҫиҫҫиппи вӗҫӗнҫе, *Ҫӗнӗ Орлеан*, вӑл ҫӗр-мамӑкӗпе сут-тӑвакан пӗтӗм ҫӗр ҫинҫи паха хула; Аҫлӑ оккеан ҫинҫе—*Сан-Франтсиско*.

Мекҫик, урӑхла Меххикко.

Мекҫикри ҫанталӑк Пӗрлешсе пурӑнакан Штатсенҫи пек ытла пуйанах та мар, етеме пурӑнма та ытла лайӑхах мар. Мекҫик ҫӗрӗ лаптак сӑрт ҫинҫе, ӑна каҫал-йенҫӗн те, мал-йенҫен те Кортилйер тӑвӗсем карталаса тӑраҫҫӗ. Климӑт унта вӗри те тата типӗ *(пӗлӗр: мӗншӗн?)*, ҫавӑнпа йывӑҫ-курӑк та наҫар: вӑрмансӑр ҫара ҫӗрсем хыткан курӑкпа анҭах витӗнкеленӗ. Шултӑра йывӑҫсенҫен паллӑ йывӑҫсем—*акавпала кактуссем*; вӗсенӗн ҫулҫи ӑшӗнҫе сӗткен пит нумай пулат. Мекҫикре ҫӗр ӗҫлеме пулат те, анҭах уйар ҫанталӑк акнӑ тырра пӗтерет. *Калифорни* ҫур-утравӗ те пушӑ, ҫара, унта та типӗ ҫанталӑк, мӗншӗн тесен унта ҫывӑхра сивӗ тинӗс шыв-йухӑмӗ иртсе кайат, тата тинӗс нӳрӗкне илсе кайакан пассат ҫилӗсем те ҫавӑнта пуҫланса кайаҫҫӗ. Мекҫик тинӗс-урин хӗрринҫе, Йуккаттан ҫур-утравӗнҫе, ҫумӑр нумай ҫӑват; ҫавӑнпа унта троп-

пик вăрманĕсем ӳсеҫҫĕ; анҫах вĕсем сывлăхлă мар, ҫынна пурăнма ытла лайăхах мар.

Мекҫикри Кортилйер тăвĕсенҫе ылттăнпа кĕмĕл пит нумай. Ҫав хаклă йапаласем пирки Йеврон ҫыннисем Мекҫике пырса тулнă; пуринҫен ытла унта испан ҫыннисем нумай пынă. Вĕсенĕн йăхĕсене *креолсем* теҫҫĕ, Мекҫикре пурăнакан халăхăн пилĕк пайĕнҫен пĕр пайĕ халĕ вĕсем пулаҫҫĕ. Ҫăн ырă ҫĕрсем, ылттăн-кĕмĕл тăприсем те нумайĕшĕ вĕсенĕн аллинҫе. Анҫах Мекҫикри ҫăн йышлă тĕп-халăхсем *интсемпе меттиссем* пулаҫҫĕ. Вĕсем *ҫĕр ĕҫлесе* пурăнаҫҫĕ; куккуруспа тулă акаҫҫĕ, акав лартаҫҫĕ, унăн сĕткенĕнҫен хăйсем йуратакан сăра пек ĕҫмелли тăваҫҫĕ, ҫулҫисенҫен питĕ ҫирĕп сӳс тăваҫҫĕ тĕ, Йевропа йараҫҫĕ, вара унтан канатсем йаваҫҫĕ, ăшҫуткăсем тăваҫҫĕ.

Мекҫик тинĕс-ури таврашĕнҫе тата *кофе* йывăҫĕпе *каккао* йывăҫне лартса усă кураҫҫĕ.

Пурăнасран пулсан, Мекҫикри меттиссемпе интсем креолсем пекех пурăнаҫҫĕ, вĕсенҫен нимпех те уйрăм мар. Вĕсем пурте тенĕпе пĕрех Христос тĕнне тытса пурăнаҫҫĕ, пурте испан ҫĕлхипе калаҫаҫҫĕ.

Халăха тытса тăрас йĕркерен пулсан, Мекҫик вăл *республик*, унăн йĕрки Пĕрлешсе пурăнакан Штатсем майлă. Пуҫ-хули-*Мекҫикко*, урăхла *Меххикко*; вăл лаптак ту ҫинҫе, йурпа витĕнсе тăракан вулккансем айĕнҫе ларать.

Мекҫикри пуҫ-хулапа аслă порт *Вера-Крус* хушшинҫе икĕ ҫукун-ҫул; ҫак ҫулсем *Ориссапă* йатлă вулккан патĕнҫен, пĕри ҫур-ҫĕр йенҫен, тепĕри кăнтăр йенҫен, ҫавăрăнса иртсе кайаҫҫĕ; Ориссапă вăл Мекҫикре мар, пĕтĕм Ҫур-ҫĕрти Америкре те ҫăн пысăк вулккан.

Вăта Америк.

Вăта Америк вăл *Йуккаттанн* ҫур-утравĕнҫен пуҫласа *Панама майĕ* патне ҫитет. Ҫакăнсăр пуҫне Вăта Америк шутне Вест-Инти кĕрет; Вест-Инти тесе виҫ ушкăна калаҫҫĕ: *Аслă Анттилсене*, вĕсем: *Купă*, *Иамайккă*, *Хаитти*, *Портто-Рикко*, унтан *Кĕҫĕн Анттилсене*, тата *Пахамăсене*.

Аслă Антил утравĕсем маттерикрен пулнă, Кĕçĕн Анттил утравĕсем—вулкканран пулнă, Пахамă уттисем—кораллсенҫен*) пулнă. Кĕçĕн Антил утравĕсенҫе вулкkансем пит нумай, хăшĕ сÿнсе ларнă, хăшĕ халĕ те ĕçлеççĕ те, пит нумай сăтăр тăваççĕ. Çапла *Маррттиник* çинҫи Кукша-ту пĕрĕхсе кайнипе 40,000 çын пурăнакан хула халăхĕ-мĕнĕпе йăлтах пĕтнĕ. Пахамă утравĕсем пит лутра; тинĕс шывĕ хăпарнă ҫух вĕсем шыв айне пулаççĕ, çавăнпа вĕсем çинҫе çын пурăнманпа пĕрех.

Вăта Америкре çанталăк пит илемлĕ: пĕр май ăшă лăмлă тăнă пирки, унта троппик вăрманĕсем, ÿсеççĕ, ырă çĕр çинҫе сахăр хăмăшĕсем, панансем, тапаксем, ытти йапаласем те пит ăнса пулаççĕ. Анҫах унти климăт çирĕп мар: унта маҫари ҫирĕпе сарамаклă сыйамак пит çÿмĕреççĕ; çавăнпа Йевроп çыннисем унта пит сахал: унта пурăнакан халăхсем маттерик çинҫе—*интсемпе меттиссем*, тинĕс утравĕсем çинҫе—*некĕрсемпе мулатсем.*

Вĕсенен тĕп-ĕçĕ—*çĕр ĕçĕ*. Айлăмсенҫе вĕсем сахăр *хăмăшĕ, панан, тапак* лертаççĕ; сăртсем çинҫе, тусем çинҫе, *кофĕпе каккао* йывăçĕсене лартса, пахҫасем тăваççĕ. Сахăр хăмăшĕнҫен *сахăрпа ром* тăваççĕ, тапакран çикар тăваççĕ. Çав тавар вара Йевропа тата Пĕрлешсе пурăнакан Штатсене пит вумай кайаĭ.

Хĕрлĕ-ÿтлисемпе хура-ÿтлисем нумайҫҫен шурă-ÿтлисенĕн аллинҫе пурăнвă; вĕсене шуррисем Христос тĕнне кÿртнĕ, вĕсем нумайĕшĕ Йевропра пурăнакан пĕр-пĕр халах ҫĕлхипе калаçаççĕ, пуринҫен ытла испан ҫĕлхипе калаçаççĕ. Халăха тытса тăрас ĕçрен пулсан, Вăта Америк нумай пайа уйăрăлаĭ. Маттерик çинҫе 6 пĕҫĕк респуплик, вĕсенҫен ҫăп паллăраххи *Панама*; Пĕрлешсе пурăнакан Штатсем уп çĕрĕ çинҫе *Панама каналĕ* алтнă та, Атлант оккеанĕнҫен Аслă оккеана каллĕ-маллĕ çÿремелле тунă. Тинĕс утравĕ *Порттс-Рикко* Пĕрлешсе пурăнакан Штатсен аллинҫе. *Купă*—респуплик; унти ҫăн аслă порт—*Хаваннă*; унтан тапакпа сахăр нумай кайаĭ, вăл çавăнпа ҫаплă. Хаитти çинҫе некĕрсен икĕ респуплике пур.

Йамайккăпа Пахамă тинĕс утравĕсем акăлҫансен аллинҫе. *Кĕçĕн Анттил* утравĕсем Йевропри тĕрлĕ патшалăхсен аллинҫе.

---

*) *Коралл* тенк арапла марҫан, ҫăвашла *мерҫен* тени пулаĭ.

Венетсуелăпа Квианă (Квайанă).

Венетсуелăпа Квианă çĕрĕнђе, иккĕшĕвђе те, тĕнђе пит пуйан, анђах пурăнакан çын унта сахал. Тинĕс хĕррипе унта *тропникри сĕм-вăрмансем* ÿсеççĕ; вăл вăрмансем Квианă тăвĕсен, Кортилйер тăвĕсен хĕрринђе, айлăмĕсенђе те ÿсеççĕ. Оринокко шывĕ таврашĕнђи айлăмра саваннă çеçен-хирĕсем сарăлса выртаççĕ, вĕсене кунта *лђйанос* теççĕ.

Ĕлĕк çав айлăмра тинĕс-ури пулнă, анђах ăна çырма шывĕсем пĕђĕккен-пĕђĕккĕнех лăймапа çуса тултарса лартнă. Çĕр унта пит ырă; çумăрсем çунă вăхăтра, пуш-уйăхĕпе йупа-уйăхĕнђе, унта тем çÿллĕш курăк ÿсет; вара вăл курăк ăшĕнђе тем тĕрлĕ вĕçен-кайăк тем тĕрлĕ тискĕр кайăк пурăнаť; уйар вăхăтра, йупа-уйăхĕнђен пуçласа пуш-уйăха çитиђђен, курăк типсе хăрса лараť те, вĕçен-кайăксем вара вĕçсе кайаççĕ, тискер кайăксем тусем тăрринелле тараççĕ.

Оринокко тăрăх, унăн турађĕсем тăрăх пальмă вăрманĕсем ÿсеççĕ; уйар вăхăтра унта та пурăнăç пĕтсе лараť: ăшăхланса çитекен шывран пулăсем тарăнтарах шыва куçаççĕ; шыв-çĕленĕсем шăтăкĕсене пытанса лараççĕ, каймансем те шыв тĕпĕнђи лăйма ăшне кĕрсе выртаççĕ.

Лђйаносра выльăх усрама пит лайăх; лашасем, ĕнесем, ытти выльăх та унга ђи уйар вăхăтра та хăйсене пурăнмалăх апатпа шыв тупаççĕ.

Йевроп çыннисем Венетсуелăра та, Квианăра та Вест-Интири ђухлĕ те çук, сахал. Унта *мулатсемпе меттиссем*-кăна пурăнаççĕ. Лђйаносра вĕсем ĕнесем, лашасем, сыснасем, ытти выльăх та кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе усраççĕ. Вĕсем выльăх усрасан та, ыпа çÿреме пĕлсен те, çĕр ĕçне тиркемеççĕ: вĕсем йалĕсем тавра пананпа куккурус плантатсийĕсем тăваççĕ. Тинĕс хĕррине, троппик вăрманĕсенђе мулатсемпе меттиссем кофĕ, каккао, тата сахăр хăмăшĕ лартса ÿстереççĕ. Тинĕс хĕрринђеп шаларахра та çынсем пурăнмаççĕ. Квианă тăвĕсенђе *ылттăн* нумай, анђах ылттăн тăприне шыраса тупма пит йывăр, мĕншĕн тесен унта троппикри сĕм-вăрмансем витĕр çÿремелле.

Халăха тытса тăрас йĕркерен пулсан, *Венетсуелă* вăл— *республик*; унăн пуç-хули—*Караккас*.

Квианăра *виçĕ колони*, пĕри акăлђансен, тепĕри—хрантсуссен, тата тепĕри—коллантсен.

Прасили.

Праçили Кăнтăрти Америк çĕрне çуррине йахăн йышанса тăрат; пысăкăшĕнђен пулсан, вăл Пĕрлешсе пурăнакан Штатсенђен кăшт кĕçĕнтерех, анђах пурăнакан халăх унта 23 мĕлйувран ытла мар. Праçилире пĕтĕм Амасон шывĕ таврашĕнђи çĕр çинђе троппикри сĕм-вăрмансем, *сеђвассем*, ÿсеççĕ. (*Астуса илĕр: сеђвассем вĕсем мĕнле вăрмансем?*). Çав вăрмансем пит ђăтлăх-çăра, унта тата шурсем нумай, çавăнпа унти вăрмана кăкласа, хăртса, тырă тума пулмасť; етеме пурăнма та унта лайăх мар.

Сеђвас варринђе *тикки интсем* пурăнаççĕ; вĕсем кайăксем, пулăсем тытса пурăнаççĕ. Вĕсем хăйсем çăмăл кимĕсемпе вăрман варринђи шывсем тăрăх, кайăк нумай тĕлсене, пулăлă вырăнсене шыраса çÿреççĕ. Çурђĕсене вĕсем кăшт пурăнмалăх анђах тăваççĕ, çтелисене тумаççĕ, çине палђмă йывăçин сулђçипе витеççĕ.

Амасон тăрăх Йеврол çыннисен нăраххуђĕсем çÿреме пуçланăранпа, вăл шыв хĕрринђе унта-кунта *мулатсен, меттиссен* йалĕсем курăнкала пуçлаççĕ, вĕсенĕн тĕп-ĕçĕ—*каутђђука пуçтарни,* каутђук вăл—*реçин.* Хаљ интсем те çав реçин ĕçне тытăна пуçларĕç.

Реçине каутђук йывăçин сĕт пек шурă сĕткенĕнђен тăваççĕ. Унăн сĕткенне йухтармашкăн каутђукăн хуппине пĕр тĕлтен касса илеççĕ те, çавăнта ђашăк лартаççĕ, вара унта сĕткен пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕнех йухса тулаť. Пухăннă сĕткене тĕтĕм ăшне лартса реçин тăваççĕ, ăна ак çапла тăваççĕ: каутђук сĕткенне пăртакăн йывăç кĕреçе çине йухтăраççĕ; те кĕрĕçине пĕр 15 минут тĕтĕм çинђе тытса, çавăркаласа тăраççĕ; çапла вара сĕткен тĕтĕм хăвађĕпе çăраланса хытаť те, реçин пулаť.

Тинĕс çинђе çÿрекен кимĕсем Амасон тăрăх Матейрă шывĕ йухса кĕнĕ çĕре çитиђђен хăпараççĕ те, унта вара вĕсем çине реçин тийеççĕ, тата паха йывăçсем: хĕрлĕ йывăç, шупка-хĕрлĕ йывăç, тата урăх йывăçсене те тийесе тултараççĕ; вара çав йапала-

сене пĕтĕмпех Йевроп çĕрне йе Пĕрлешсе пурăнакан Штатсен çĕрне турттарса кайаççĕ. Çĕр çинҫе рĕçин пуринҫен ытла Амасон таврашĕнҫи селҫвасра тăваççĕ.

Праçилире етеме пурăнма лайăхрах вырăнсем *кăнтăрпа мал-йен хушшинҫе,* сăртлă çĕрте анҫах. Унта селҫвасри пек ытла ăшă та мар, ытла йĕпех те мар; тата вăрман хушăкĕсенҫе саваннăсем те пур, унта çĕр ĕçлеме те пулаť. Праçилире пурăнакан халăх пуринҫен ытла унта пурăнаť. Унта интсемпе меттиссем, некĕрсемпе мулатсем анҫах пурăнмаççĕ, тата Йевропран куçса пынă халăхсем те пурăнаççĕ, пуринҫен ытла *порттукалсемпе итталсем.*

Шурă ўтлисем малтан çавăнти Праçили çĕрне тĕрлĕ тĕслĕ йăлтăртатакан алмасшăн, тата ылттăншăн пынă, анҫах халĕ унти халăх пурте,—шуррисем те урăх тĕслисем те,—кофĕ тăваççĕ, тата пăртак сахăр хăмăшĕ, рис, çĕр çимĕçĕсене, маниокпа тутлă улма, паттат, лартаççĕ.

Кофĕ йывăçне Праçили çĕрне те, Вăта Америке те Йевроп çыннисем илсе пынă. Халĕ Праçилире, кăнтăрпа малйен хушшинҫе, ту-айаккисем тăрăх пĕтĕмпех кофĕ пахҫисем, планттатсисем, туса пĕтернĕ.

Унта кофĕ пит лайăх пулаť, çавăнпа çĕр çинҫе пулакан кофĕрен çурри ытла Праçилире пулаť.

Праçилири ҫăн аслă порт *Санттос,* унтан кофĕ пит нумай кайаť. Халăха тытса тăрас тĕлĕшрен пулсан. Праçилире те, Америкри ытти патшалăхри пек, респуплик. Унăн пуç-хулийĕ, аслă порҫĕ—*Рио-те-Шанейро.*

Лаплаттăри çĕрсем: Аркенттин, Урукваĭ, тата Паракваĭ.

Лаплаттăри çĕрсем Праçили çĕрĕнҫен типĕрех те, сулхăнрах та. *(Пĕлĕр: мĕншĕн вăл апла?).* Унта çур-çĕр йенҫе *саваннăсем* сарăлса выртаççĕ; çав саваннăсенҫе вăрăм курăксем ўсеççĕ, хăмăш айне пулнă шурсĕм тĕл-пулкалаççĕ, ушкăнăн-ушкăнăн палмăсем, ĕмĕр-йешĕл йывăççем лараççĕ. Кăнтăралла саваннăсенҫен *пампас* улăхĕсем пулса кайаççĕ. Пампасра курăк çўлех мар; унти çĕр апат-çимĕç кўрекен лайăх çĕр; унта çĕр ĕçлеме те, выҫăх-ҫĕрлĕх усрама та пит ырă.

Пампас улăхĕ айлĕм çĕр; вăл тӳп-тӳрем, лаптак улăх; унта сăртсем те, çырмасем те пăт-пат анӡах тĕл-пулкалаççĕ. Унта, кăнтăрти Раççейри пек, çумăр шывĕ çырмасене йухса кайса пĕтмест, темĕн ӡухлĕ кӳллевӡĕк пулса, çĕре хуллен сăхса кĕрет те, çемçетсе хурать. Çавăнпа пампасра курăк ӡас типсе каймасть, уй-хирсенӡе тырă-пулă пит лайăх пулать.

Кăнтăралла кайсан, пампас улăхĕсенӡен *Паттаконири* çара çеçен-хир пулса тăрать; унта ваӡар курăксем, йĕплĕ йывăç тĕмĕсем анӡах ӳскелеççĕ; çавăнти çеçен-хирсем выӆăх усрама та йурăхлă мар.

Лаплаттă çĕрĕсенӡи *ырă климăтпа, ырă çĕре* курса, Йевропран унта, пуринӡен ытла пампас улăхĕсене, темĕн ӡухлĕ халăх куçса кайса ларнă; пуринӡен ытла испансемпе итталсем. Халĕ пурăнакан халăхсем унта куçса пынă çынсем, тата меттиссем; вĕсене унта *Каутӡос* теççĕ. Ӡăн *интсем* унта çур-çĕр йенӡе саваннă улăхĕсенӡе, тата кăнтăрта, Паттаконире, пурăнаççĕ; вĕсем ухутана çӳреççĕ, выӆăх-ӡĕрлĕх усраççĕ.

Йевропран куçса пынă çынсен те, кауӡоссен те тĕп-ĕçĕсем—*выӆăх-ӡĕрлĕх ĕрӡетсе усрани,* тата *çĕр ĕçлени;* пуринӡен ытла вăл ĕçсем пампас улăхĕсенӡе ăнса пулаççĕ; нумай пулмасть, унта инт кайăкçисем сĕтĕрĕнсе çӳрет-ӡĕç, халĕ сурăхсем, ĕнесем, лашасем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе çӳреççĕ; тем (арлакăшĕ) уйсене сухаласа акаççĕ те, *тулăсем, куккуруссем* пит лайăх пулаççĕ. Хуçисем хăйсенĕн анисене йĕплĕ пралукпа карталаса хунă, çапла унта йĕплĕ пралук картисем вĕçĕ хĕрри çук карăнса тăсăлса тăраççĕ. Пур çĕрелле те ӡукун-çулсем туса пĕтернĕ, йалсем пула-пула ларнă; вĕсем тĕрлĕ çимĕç кӳрекен пахӡасем айĕнӡе, пирамит пек топпăӆсен айĕнӡе пытанса лараççĕ.

Кортилйер тăвĕсен айĕнӡе, тусем çинӡен йухса авакан шывсем тăрăх, пысăк-пысăк иçĕм пахӡисем, сахăр хăмăшĕ планттатсийĕсем туса пĕтернĕ.

Параквай шывĕ таврашĕнӡе пурăнакан çынсем, шурă-ӳтлисем те, интсем те,—Параквай ӡей йывăçин çуӆçине нумай пуçтараççĕ, вăл йывăç унта *ирĕкре* ӳсет; вăл ӡейе ĕçме кауӡоссем пит йуратаççĕ.

Халăха тытса тăрас тĕлĕшрен пулсан, Лаплаттă çĕрĕнӡе 3 респуплик: *Аркенттин, Уруквай, Параквай.* Ӡăн пысăк хуласем: *Пуенос-Айрĕс,* вăл Аркенттинĕн пуç-хули, пурăнакан çын унта

1 мӗлйун, тата *Монттевитео,* вӑл Урукваййан пуҫ-хули. Вӗсем икӗш те Лаплаттӑ шывӗ тинӗсе йухса кӗнӗ ҫӗрте ларӗҫҫӗ; вӗсем икӗш те пысӑк портсем; вӗсенҗен икӗшинҗен те Йевропа пит нумай тавар кайаҭ: тулӑ, ҫӑм, аш,—тӑварлани те, шӑнтни те,—ҫу, тир, тата урӑх йапала та нумай кайаҭ.

Кортилйерти ҫӗрсем.

Кортилйерти ҫӗрсем Панама мӑйӗнҗен пуҫласа Хорн сӑмси патне ҫитиҗҗен пыраҫҫӗ. Кӑнтӑрти Америкри Кортилйер тӑвӗсем пӗтӗмпех унта кӑреҫҫӗ. Вӑл Кортилйер ҫӗрӗсем пит аслӑ та, анҗах сынна пурӑнма унта пур тӗлте те пӗр майлӑ: лайах вырӑнсем пурте тусем хушшинҗи *лаптак сӑртсем* ҫинҗе, *ҫӳлӗ варсенҗе.* Унта климӑт ырӑ, ҫӗр тырӑ-пулӑ тума лайӑх, улӑхӗсем выҗӑх усрама аван.

Ҫавӑнти ту тӑррисем йур айӗнҗе тӑраҫҫӗ; унта җи ҫӳлте шӗп-шӗвӗр вулкансем,—сӳнменнисем те, сӳннисем те,—курӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫав ту тӑррисем пӗри те етеме пурӑнма йурӑхлӑ мар.

Тинӗс хӗррисем те етеме пурӑнма йурӑхлӑ мар. Кортилйер тӑвӗсем унта җӑнкӑ пулса тӳрех тинӗселле кӗреҫҫӗ, хӑш-хӑш тӗлте анҗах сыран хӗррипе тӳрем ҫӗр пулаҭ.

Кортилйер тӑвӗсен айаккисенҗе, кӑнтӑрти ҫӗр-сарлакӑшӗн 2-мӗш краҗӗпе (кратусӗпе) 32-мӗш краҗӗ хушшинҗе, ӳсен-тӑран йывӑҫ курӑк ҫукпа пӗрех; ҫап-ҫара җулсем хушшинҗе җикекен кактуссен тӗмӗсем анҗах пулкалаҫҫӗ; унта, океан хӗрринҗе, җӑн мушӑ-хир те пур, вӑл—*Аттаккамӑ,* унта, темиҫе вун ҫухрӑм кайсан та, пӗр курӑк та, пӗр йывӑҫ тӗмӗ те кураймӑн.

Ҫавсем пурте сывлӑш ытла типӗ пулнӑран ҫапла пулнӑ. Ҫавӑнти сыран хӗрри патӗнҗенех сивӗ тинӗс йухӑмӗ иртсе кайаҭ, ҫав йухӑмран пӑс сахал хӑпараҭ, вӑл та пулсан, кӑнтӑрпа мал-йен хушшинҗен вӗрекен пассат ҫилӗсемпе океан варринелле кайаҭ,—ҫавӑнпа унти сывлӑш типӗ.

Кӑнтӑрти ҫӗр-сарлакӑшӗн 2-мӗш кратӗнҗен ҫурҫӗр йенелле тинӗс хӗрринҗи Кортилйерсем лайӑх шӑварӑнса тӑраҫҫӗ, унта йалтах тропик вӑрманӗ лараҭ; анҗах ҫав вӑрмансем сывлӑхлӑ мар, ҫавӑнпа унта етеме пурӑнма ырӑ

мар. 32-мĕш кратран кăнтăралла та тинĕс хĕрринҫи ҫĕрсем лайăх шăварăнса тăраҫҫĕ. унта араукkари вăрманĕсем ӳсеҫҫĕ, йешерсе выртакан улăхсем пур. Унта выҫăх усрама та, ҫĕр ĕҫ-леме те пулаť, анҫах ҫыран хĕррипе пыракан ҫĕр пит аnеăр.

Кортилйер ҫĕрĕнҫе пурăнма ыгла лайăхах пулмасан та, унта Йевроп ҫыннисем, пуринҫен ытла испансем, ҫылай куҫса пырса ларнă; вĕсем унта хаклă паха метталсемшĕн пынă, ҫав метталсем Кортилйерте пит нумай. Вĕсем ҫавăнта пурăнакан интсене ҫĕнтерсе парăнтарнă та, вĕсемпе пĕрле пурăнса хутăш-са кайнă, ҫавăнпа унта пурăнакан халăх—*меттиссем*, шурă-ӳтлĕ ҫынсем унта пит сахал. Интсем инҫетре, сăртсем ҫинҫе, тата Вутлă-Ҫĕрте анҫах йулнă. Екваттăртан ҫур-ҫĕрелле йĕпе-са-палă тинĕс хĕррисенҫе тата *некĕрсемпе мулатсем* пурăнаҫҫĕ.

Интсем нумайĕшĕ, шуррисен аллине кĕрес мар, тесе, Кор-тилйер тăвĕсем ҫинҫен аннă та, Амасон таврашĕнҫи сывлăхлă мар сĕм-вăрмансемваррине, Оринокко таврашĕнҫи ҫйаноса. Лап-латă айлăмĕнҫи саваннă улăхĕсене кайса вырăнаҫнă.

Меттиссем те, шуррисем те Кортилйер ҫĕрĕнҫе *ҫĕр ĕҫлесе, тусем ҫакаласа* пурăнаҫҫĕ. Ҫи ҫӳлĕ вырăнсенҫе вĕсем урпа акаҫҫĕ, айаларах—тулă акаҫҫĕ, тата паранкă лартаҫҫĕ,—паранкă вăл ҫакăнтан тухса кайнă,—тата айаларах куккурус акаҫҫĕ. Ҫăн айалти ăшă вырăнсене, ту ҫинҫен йухса анакан шывсенĕн хĕр-рисене сахăр хăмăшĕ лартаҫҫĕ, рис акаҫҫĕ, тата урăх тĕрлĕ ҫи-мĕҫ кӳрекен йывăҫсем те лартаҫҫĕ; тинĕс хĕррин҇е, екваттăртан ҫур-ҫĕрелле, *каккао планттатсийĕсем* те пур.

Каккао йывăҫĕ унта вăрмансенҫе ирĕкре те пит нумай ӳсет; вăрманта ытти йывăҫсене касса хăртсан, каккао йывăҫне анҫах хăварсан, 3—4 ҫултан унта каккао планттатсийĕ пулса лараť.

Ĕлĕкрах ҫавăнти вăрмансенҫе тата *хинă йывăҫĕ те* нумай пулнă, анҫах халĕ вăл йывăҫа пĕтĕмпех касса пĕтернĕ; ăна пăр-так анҫах ларткалаҫҫĕ. Ҫĕр ҫинҫе тăвакан хинă пĕтĕмпе тенĕпе пĕрех Йавă тинĕс утравĕ ҫинҫе пулаť.

Кортилйер ҫĕрĕнҫи тусене ҫакаласа ĕҫлени те пит пысăк тупăш параť: унта ҫапла *ылттăн-кĕмĕл*, пуринҫен ытла *ҫелитрă* нумай тупаҫҫĕ; ҫелитрă вăл Корталйерти ҫăн типĕ вырăнсенҫе

пуривђен ытла Аттаккамăра нумай пулаҭ. Çелитрăна çакăнтан çанталăкри пур çĕре те турттарса кайаççĕ.

Аслă оккеан хĕрринђе типĕ çĕрте тата *куано* нумай кă-лараççĕ. Куано вăл темиçе çĕр çул хушшинђе тулса купаланса ларнă кайăк тирĕсĕ; унти климăт пит типĕ пулнă пирки куано вăл пĕрре те çĕрмен; çавна Йеврупа уйа тăкма турттараççĕ.

Халăха тытса тăрас тĕлĕшрен пулсан, Кортилйер çĕрĕнђе мĕн пурĕ 5 респуплик пур: *Колумпи*, *Екватор*, *Пеђу*, *Поливи* тата *Ђили*. Çав респупликсенђе ђи палл'ă хула *Сант-Йако*, вăл Ђилин пуç-хули. Унтан *Валпарайсо* йатлă порта çитиђђен ђу-кун-çул пыраҭ; тата тепĕр ђукун-çул *Пуенос-Айрĕсе* те пыраҭ, Пуйенос-Айрĕс вăл Аркенттинĕн пуç-хули.

Ытти хуласенђен паллăраххисем ак çаксем: *Покотта*, вăл-Колумпин пуç-хули; *Квитто*, вăл—Екваторăн пуç-хули, порђĕ *Квайаккил*; *Лимă*, вăл—Перун пуç-хули, порђĕ *Калйао*. Çак пуç-хуласем пур те Кортилйерти çӳлĕ сăртсем çинђе лараççĕ, унта климăт тинĕс хĕрринђинђен çирĕпрех.

АВСТРАЛИ ÇĔРĔ.

Унăн вырăнĕ, пысăкăшĕ, хĕррисем.

Австрали вăл çĕрĕн кăнтăрти çурри çинче. Ăна виçĕ йенчен ирĕкри оккеан шывĕсем çуса тăраççĕ: мал-йенчен *Аслă оккеан* шывĕсем, кăнтăрпа каçал-йенчен *Инти оккеанĕ* шывĕсем. Çурçĕрпе хĕвел-анăçĕ хушшинче, унтан инçĕ мар, Малай арххиппелакĕ пур, вăл Австралипе Аçи çĕрĕ хушшинче кĕпер пек пулат. Çут-çанталăкри ытти çĕрсенчен Австрали çĕрĕ пит инçетре тăрат.

Австрали вăл çут-çанталăкри чăн пĕчĕк çĕр: пысăкăшĕнчен пулсан, вăл Йевропран та кĕçĕн, Аçи çĕрĕнчен 6 хут пĕчĕкрех.

Австрали çĕрне масштаппа виçĕр çур-çĕр йенчен, Йорк сăмсинчен пуçласа, кăнтăралла, Уилссăн сăмси патне çитиччен, тата каçал-йенчен, Стип сăмсинчен пуçласа, мал-йĕннелле Пайрăн сăмси патне çитиччен.

Австрали хĕррисем кукăр-макăр мар: унăн пысăкрах çур-утравĕ пĕр *Йорк* анчах; унăн варринелле икĕ пысăк тинĕсурисем анчах кĕреççĕ: пĕри—*Карппенттари*, тепĕри - *Австрали ç.-у.*

Нумай тинĕс-уттисем Австрали çĕрĕ шутĕнче тăраççĕ, вĕсем Аслă оккеан варринче, маттерикрен инçетре тăраççĕ. Маттерик çывăххĕнчэ икĕ пысăк тинĕс-утти пур: пĕри—*Çĕнĕ-Квиней,* ăна маттерикрен *Торрес* йатлă тинĕс пырĕ уйăрса тăрат, тепĕри—*Тасмани,* ăна *Пасс* пырĕ уйăрса тăрат.

Австрали çĕрне тупни, ăна пĕлсе çитни.

Австрали çĕрне Йеврооп çыннисем ытти çĕрсенчен пуринчен те кайран тупнă.

Чăн малтан Макеллан 1521-мĕш çулта, тĕнче тавра çуренĕ чухне, хăй пынă çĕрте Австрали таврашĕнчи Мариан ти-

нёс-уттисене тёл пулнă. Унта тинĕспе çӳрекен Йевроп сыннисем Çĕнĕ-Квинейе тупнă, анђах вĕсем нумайђђен пĕлмен: Квиней вăл маттерик-и йе тинĕс-утти-и? Ăна 17-мĕш ĕмĕрĕн пуçламăшĕнђе Испан çынни *Торрес* пĕлнĕ, вăл Квинейпе Австрали çĕрве уйăрса тăракан тинĕс пырĕ тăрăх ишсе тухнă, çав тинĕс пырне кайран унăн йађĕпе Торрес пырĕ тенĕ.

Австрали çĕрне те хăйне 17-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнђе Торресрен 1 çул малтан Колланти çыннисем тупнă. Вĕсем хăйсен Малай архипелакĕнђи колонийĕ патĕнђе çӳренĕ ђухне, Австрали çĕрин хĕррине пырса перĕннĕ, вара ăна вĕсем *Çĕнĕ-Колланти* тенĕ. Çавăнпа нумайĕшĕ халĕ те Австрали çĕрне Çĕнĕ-Колланти теççĕ. Колланти çынни *Тасман* Австрали тавра кăнтăр йенђен кайнă ђухне тинĕс-утти тĕл-пулнă, вăл ăна: Австралин кăнтăр йенђи хĕрри пулĕ, тесе шухăшланă, вăл вара малалла, хĕвел-тухăçнелле, кайнă та, Çĕнĕ-Селанти уттине, тата Аслă оккеанри урăх тинĕс-уттисене те нумай тĕлпулнă.

Анђах Йевропри халăх савсем çинђен нумайђђен нимĕн те пĕлмен, вара 18-меш ĕмĕр вĕçĕнђе тинĕспе çӳрекен акăлђан çынни *Кук* Австрали çĕрне тепĕр хут тупнă. Аслă оккеан çинђе çӳренĕ ђухне вăл Австрали çĕрин мал-йенђи хĕррине тупнă. Кайрантарах вăл Аслă оккеан çинђе тата икĕ хутђен кайса çӳренĕ, вара ак çак тинĕс-уттисене тĕл-пулнă: Çĕнĕ-Калетони, Хавайисене, тата урăххисене те нумай тупнă. Хавайи уттисем çинђе çӳренĕ ђухне ăна унта пурăнакан тиккисем вĕлернĕ. Кукран кайран акăлђансем Австрали çĕрне куçа пуçланă, вара нумайах та тăман, унăн хĕррисене йăлтах йĕлсе çитнĕ. Шалти пушă çĕрсене анђах нумайђђен пĕлмесĕр пурăннă; вăл çĕрсене 19-мĕш ĕмĕрте-çеç пĕлсе çитнĕ, çавăнта пĕлме кайнă çынсем нумайĕшĕ вырăхса вилнĕ.

Австрали таврашĕнђи тинĕс-уттисенђен Çĕнĕ-Квинейе пĕлме питĕ хĕн пулнă, вăл ĕçе пĕлсе çӳрекен вырăс çынни *Миклухха-Маклай* нумай мала йанă, вăл нумайђђен паппуас йатлă тиккисем хушшинђе пурăнсаирттернĕ.

АВСТРАЛИ ҪӖРӖ.

Пӗтӗмӗш ҫинҗен калани.

Австрали ҫӗрин ҫийӗ.

Австрали ҫӗрӗнҗе Аслӑ оккеан хӗррипе вӑрӑм тусем тӑсӑлса тӑраҫҫӗ, вӗсенӗн пӗр айакки тинӗселле җанкӑ пулса анаҭ, тепӗр айакки сӗвек. Вӑл тусем ҫӳлӗ мар: вӗсенӗн тӑрри ҫинҗе, пӗрин ҫинҗе те, ӗмӗрхи йур ҫук. Җӑн ҫӳллисем кӑнтӑрта, вӗсене унта *Австрали Алҗӗсем, Кӑвак тусем* теҫҫӗ; Австрали Алҗӗсенӗн җи ысӑк тӑвӗ *Таунсент* 2 ҫухрӑм ҫӳллӗшӗ хӑпараҭ. Австрали Алҗӗсенӗн тӑррисем курӑкпа витӗнсе тӑраҫҫӗ, вӗсен тӑррине, кирек хӑшин ҫине те, йуналутпа хӑпарса кайма пулаҭ; ҫакӑнтан паллӑ ӗнтӗ: вӗсем пӗри те Йевропри Алҗсем пек мар, вӑл Алҗсем ӗмӗртенпех йурпа пӑрлӑх айӗнҗе тӑраҫҫӗ.

Хӗвел анӑҫӗ йенҗи Австрали ҫӗрӗ—*лаптак ту*, ун ҫинҗе сийӗн-сийӗн пӗр пек тикӗс хӑйӑрлӑ ҫӗрпе урӑх йышши ҫӗрсем выртаҫҫӗ; ҫав лаптак ту ҫинҗе хӑш-хӑш тӗлте анҗах лутра тусем курӑнкалаҫҫӗ.

Ҫак лаптак тупа Австрали Алҗӗсен хушшинҗе хуран пек айлӑм пур, унӑн җи тӗпӗнҗе Ейр кӳлли пур ҫав кӳлӗри шыв ҫийӗ оккеанран 5 җалӑш айаларах тӑраҭ.

К л и м ӑ т.

Австрали ҫӗрӗнҗи климӑт шӑрӑх, вӗри климӑт: Австрали вӑл ҫуррине йахӑн троппик картине кӗрет, ытти—җух климӑт картине кӗрет. Австрали ҫӗрӗнҗи җи шӑрӑх уйӑхсем: раштав уйӑхӗ, кӑрлаҗ уйӑхӗ, тата нарӑс уйӑхӗ; җи сулхӑн уйӑхсем: ҫӗртме уйӑхӗ, утӑ уйӑхӗ, ҫурла-уйӑхӗ. Ҫула Австралире пит шӑрӑх пулаҭ; пуринҗен ытла маттерик варринҗе ҫӗр вӗриленсе ҫитет, унта Сахара ҫӗрӗнҗи пекех пӗҫертет. Хӗлле Австралире сулхӑн ҫанталӑк тӑраҭ: сивӗсем сахал пулаҫҫӗ, пулсан та, троппикрен кӑнтӑрта анҗах пулаҫҫӗ; йур Кӑвак тусемпе Австрали Алҗӗсем ҫинҗе анҗах пулаҭ.

Тасмани утравёнҗе маттерикрен сивĕрех, анҗах унта та җи сивĕ уйăхра, çурла уйăхĕнҗе, вăтам темпператтур 8° ăшă тăрат.

Йĕпе-сапа Австралире *сахал* пулат: унăн тинĕс хĕрринҗи çĕрĕсем анҗах лайăх шăварăнаççĕ, вĕсем те пурте мар, ăшă тинĕс йухăмĕ пынисем анҗах. *(Пăхăр карт çине).* Çумăрсене çула, маттерик тинĕсрен ăшăрах тăнă җухне, тинĕс çинҗен вĕрекен çилсем илсе килеççĕ.

Пуринҗен ытла çумăрсене Австрали çине мал-йенҗи çилсем илсе килеççĕ. Вĕсене пула Австралире мал-йенҗе тинĕс хĕрринҗе шутсăр вăйлă çумăрсем пулаççĕ те, җас-җасах унта вара шывсем тулса сарăлаççĕ. Анҗах тусенĕн леш йеннелле кайсанах, вăл çилсем типерех параççĕ те, вара, каçал йеннерех кайсан, çумăрсем сахалланса йулаççĕ. Австралире, вăта çĕрĕнҗе, тата хыçал йенҗе çулталăкĕпех *шутсăр уйар* тăрат, çÿлтен җас-җасах çил-тăвăллă пĕлĕтсем иртсе кайаççĕ те, çумăрĕ çапах та сахал пулкалат.

Шывсем, кÿлĕсем.

Пысăк йухан шывсем Австрали çĕрĕнҗе *сахал*, мĕн пуррисем *ăшăх, сахал шывлă (мĕншĕн вăл апла?).* Җăн пысăк шывĕ, —*Муррей*, пирĕн çĕрти Тон тăршшĕ, анҗах шывĕ унăн сахалтарах; уйар вăхăтра вăл аран-аран оккеана пырса кĕрет. Муррейĕн йупписем нумай, вĕсенҗен пĕри, *Тарлинк*, Муррейрен хăйĕнҗен ик хута йахăн вăрăмрах, анҗах уйар вăхăтра ун тăршшĕпе йухман кÿлĕсем-çеç пулса йулаççĕ.

Вăта Австралире йухакан шывсем, *криксем*, тата шывсăртарах, вĕсенĕн çулĕсем çулталăкĕпе тенĕпе пĕрех типсе выртаççĕ; çумăрсем çунă вăхăтра-çеç вĕсем тăрăх шывсем йухаççĕ, вĕсем те пулсан йе хăйăр ăшне сăхса пĕтеççĕ, йе тăварлă лаҗакасен ăшне кĕрсе кайаççĕ. Җи вăрăм крик—*Куппĕр,* вăл *Ейр* кÿллине пырса кĕрет.

Австрали кÿллисем пурте тăварлă кÿлĕсем, теме пулат; вĕсенҗе (шыв) криксем йухнă җухне тин пулаççĕ, ахаль җухне вĕсенĕн тĕпĕнҗе тăварлă пылҗăк йе типсе ларнă тăвар сийĕ анҗах пулат.

Ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк.

Австралире ҫумӑр нумай ҫунӑ ҫӗрте вӑрмансем ӳсеҫҫӗ, ҫумӑр сахал пулнӑ ҫӗрте—ҫеҫен-хирсем, йе пуш-уйсем выртаҫҫӗ. Унӑн ҫур-ҫӗр йенҫе, тата мал-йенҫе те пӑртак, троппик таран, троппик вӑрманӗсем ӳсеҫҫӗ; пуринҫен ытла унта *лиансемпе* сырӑнкаласа пӗтнӗ *пальмӑсем* ӳсеҫҫӗ. Троппикрен кӑнтӑрта, Аслӑ оккеан хӗрринҫе, троппик ҫывӑхӗнҫи *ӗмӗр-йешӗл* вӑрмансем ӳсеҫҫӗ. Вӑл вӑрмансем ҫӑра мар, лиансемпе сырӑнман, вӗсенҫе пуринҫен ытлӑ *евкалиптсем* ӳсеҫҫӗ. Ҫав йывӑҫсенҫен хӑшӗхӑшӗ пит ҫӳлӗ пулаҫҫӗ, 70 ҫалӑша ҫитеҫҫӗ; анҫах евкалипт, вӑрманӗсем пирӗн хырӑпа йуман вӑрманӗсенҫен ҫӳлех пулмаҫҫӗ.

Ҫавӑнти вӑрмансенҫе сулхӑн сахал, мӗншӗн тесен йывӑҫ сайра, йывӑҫӗсен ҫулҫисем те сайра; вӗсем тураҫӗсен вӗҫӗнҫе анҫах ӳсеҫҫӗ, тата ҫулҫисен хӗрри ҫӳлелле пӑхса тӑрат; хӗвел ҫутти пӗр ҫӑрмавсӑр курӑклӑ ҫӗр ҫине ӳкет. Ҫав вӑрмансем парксем пек, йе тӗллӗн йывӑҫсем ларса тухнӑ улӑх пек; унта пур ҫӗртен те урапапа кайма пулат.

Йухан пӗҫӗк шывсем хӗррипе, евкалипт вӑрманӗсем хушшинҫе, *йывӑҫ пек курӑнакан ух-тӑррисем**) сарӑлса ӳсеҫҫӗ.

Аслӑ оккеан хӗрринҫен леререх кайнӑ-ҫемӗн евкалипт вӑрманӗсем сайраланса йулаҫҫӗ те, кайран курӑкпа витӗннӗ ҫеҫен-хир пулса кайаҫҫӗ. Тата каҫаларах кайсан, Куппӗр-крик леш йенҫе, тем аслӑшӗ Австрали ҫӗрӗсем ҫинҫе *ҫикекен скруп* тӗммисем, *ҫикекен курӑксем* ӳсеҫҫӗ.

Скруп вӑл—лутрашка акартсисемпе евкалиптсем. Скруп пӑхма пит пӑшӑлкӑ: ҫулҫисем вӗтӗ, хура-кӑвак, ҫас-ҫасах йӗп пек; ҫумӑрсем ҫунӑ вӑхӑтра анҫах скруп пӑртак ҫӗрӗлет те, унӑн тураҫӗсем ҫинҫе вара сӑнсӑр ҫеҫексем тухаҫҫӗ.

Австралире, ҫитипӗ ҫӗрте, *пуш-уйсем* пур, вӗсене ҫул кукисем, йе хӑйӑр кӗрҫӗсем хупласа тӑраҫҫӗ.

Культтурпа пулнӑ йывӑҫ-курӑк Австралире Йеврон ҫыннисем пыриччен пӗрре те пулман. Австрали ҫыннисем ирӗкре ӳсен-тӑран йывӑҫ-курӑк вӑррисене ҫисе пурӑнаҫҫӗ; анҫах вӗсем сахал тутӑ тытаҫҫӗ; пӗлсе ҫӳрекен Перк, Австрали витӗр

*) Урӑхла—шӗшлӗ-курӑкӗсем, асанне-саррисем, Иван тухатмӑш тымаррисем.

кӑнтӑртан ҫур-ҫӗрелле тухсан, кайалла таваӑраннӑ ђух, ҫав вӑрӑсенђен пӗҫернӗ пашалусене анђах ҫисе пурӑннӑ та, нађарланса вилнӗ.

Ђӗр-ђунсем.

Австралири ђӗр-ђунсем ытти ҫӗрти пек мар, йӑлтах *урӑх тӗслӗ.* Лаша ђӗрниллӗ ђӗр-ђунсем унта, Йевроп ҫыннисем пыриђђен, пӗрре те пулман; ҫавӑн кекех унта ушӑтесем те пӗрре те пулман. Тискер хайар кайӑксенђен унта йытӑ *жинко* анђах пулнӑ, ӑна та унта кӗр-пӗр етем илсе пынӑ пулмалла та, вӑл вара тискерленсе хайара тухса кайнӑ пулмалла. Тӳрех каласан, Австралире ытти ҫӗрте пурӑнакан ђӗр-ђунсенђен нумайӗшин ӑрӑвӗ те пулман. Ун вырӑнне Австралире *хутаҫлӑ,* ватраслӑ, кайӑксем пит нумай; ватраслӑ тесе вӗсене хырӑмӗ айӗнђе ађисене йатса ҫӳремелли хутаҫ пуртан калаҫҫӗ. Ҫавӑн пек ватраслӑ кайӑксем ытти ҫӗрте те ӗлӗк пулнӑ та, анђах вӗсем пурте пӗтнӗ, вӗсен пӗр тӗсӗ Америкре анђах тӑрса йулнӑ. Пурӑнаҫӗнђен пулсан вӗсенђен хӑшӗ курӑк ҫисе пурӑнакан йышшисем, хӑшӗ—тискер кайӑк йышшисем, хӑшӗ тата—хурт-хӑмӑр ҫисе пурӑнакан йышшисем, ыттисем те ҫапла; пысӑкӑшӗнђен пулсан, вӗсен хӑшӗ йӗке-хӳререн те пысӑк мар, хӑшӗ тата етем пысӑкӑш те пур. Унта пур ҫӗрте те хунаса сарӑлнӑ ватраслӑ кайӑк—*кенкуру;* вӗсем мӗн пурӗ темиҫе вун тӗслӗ те пур; вӗсем унта пур ҫӗрте те пурӑнаҫҫӗ.

Австралире тата тӗлӗнмелле кайӑксем пур, вӗсем пӗри еххитнӑ, тепӗри *кӑвакал-сӑмси (утконос).* Ҫав кайӑксем, йавкаланса ҫӳрекен ҫӗлен-калта пек, вӗҫсе ҫӳрекен кайӑк-кӗшӗк пек, ҫӑмарта тӑваҫҫӗ; ҫурисем тухсан, вӗсене сӗтне ӗмӗртсе ӳстереҫҫӗ.

Вӑрмансенђе, ҫеҫен-хирсенђе Австралире *вӗҫен-кайӑк пит нумай;* пуривђен ытла *поппукай* кайӑк нумай, вӗсем унта темиҫе пиншерӗн вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Троппик вӑрманӗсенђе хитре кайӑк *лир* ђаҫ-ђасах тӗл-пулкалаӗ, ҫеҫен-хирсенђе страус—*ему* пур, вӑл пысӑкӑшӗнђен пулсан Африк страусӗнђен кӗђӗкрех, Америк страусӗнђен пысӑкрах.

Йевроп ҫыннисем Австралийе пыриђђен, унта алла вӗреннӗ ђӗр-ђунсем пулман, тиккисене пӑхӑнса пурӑнакан пӗр

тинко йытă анҫах пулнă. Йевроп çыннисем унта хăйсен выҫăхĕсене пурне те куçарса пынă, халĕ вĕсем унта пит нумай ĕрҫесе кайнă, пуринҫен ытла сурăхсем, ĕнесем, лашасем.

Пурăнакан халăхсем.

Австралипе Тасманире мĕн пурĕ *5 мĕлйун çын* пуранаҫ.

Ун мал-йенҫе халăх *тҫылай çăра* ларса тухнă, унта çĕр ĕçлеме, выҫăх-ҫĕрлĕх усрама аван. Австралире пурăнакан халăх пилĕк пайран тăват пайĕ унта пурăнаҫ. Ҫикекен курăксем, скрупсем анҫах ӳсекен çеçен-хирсенҫе етем çук, пушуйсенҫе те çавăн пекех.

Австралире пурăнакан хаҫхи халăх пĕтĕмпех *шурă-ӳтлисем*, вĕсем Йевропран куçса пынă, пуринҫен ытла *акăлҫан* халăхĕ. Вĕсем пĕтĕм Австрали çĕрне йарса илнĕ, анҫах пурăнасса ҫи лайăх вырăнсенҫе-çеç пурăнаççĕ.

Австралире тĕпрен пурăнакан тиккисем—*хура-ӳтлисем*; вĕсене хăшне йăлтах пĕтернĕ, хăшне пушă çара çĕре хăваласа йанă. Вĕсем мĕн пурĕ халĕ 200 пине йахăн анҫах.

Вĕсем, мĕскĕнсем, ҫукмарпа, пумеранкпа, сăнăпа Йевроп çыннисене хирĕç тăма пултарайман, мĕншĕн тесен лешсем вĕсене хирĕç хĕç-пăшалпа пынă.

Австралири колонисем.

Австрали маттерикĕ çинҫе *акăлҫансен 5 колони: Виктори, Кăнтăрти Çĕнĕ-Уелс, Квинслент, Кăнтăрти Австрали*, Çур-çĕр йенҫи терриττорипе тата *Каçалри Австрали. Тасманипе* пĕрле çав колонисем пĕр „Австрали Сойусĕ" пулаççĕ. Унăн пуçлăхĕ акăлҫансем лартнă йăнарал—кĕпĕрнеттĕр пулин те, сойус вăл никама та пăхăнса тăмасҫ, халăха халăх уйăрса йанă çынсем кăларакан саккунпа тытса тăраҫ. Халăх ҫи çăра ларса тухнă колонисем ак çаксем: Виктори, Кăнтăрти Çĕнĕ-Уелс, тата Квислент. Çав колонисенҫе *çĕр ĕçĕ, выҫах ĕçĕ, тата*

ту ĕçĕ пит вăйлă тăрат. Унта тулăпа куккурус пит лайăх пулаççĕ, сурăхсем, ĕнесем, лашасем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе çÿреççĕ.

Хăш-хăш вылăх хуçисем Австралире темиçе çĕршер пин вуç вылăх усраççĕ. Çавăн пек çынсен кил-тавраш йалпа пĕрех, вĕсенĕн унта пурăнмалли кил-çуртран пуçне тата çăмсем, тирсем, ытти йапаласене усрамалли пысăк çуртсем пулаççĕ. Хăш хуçасен тата килĕсенче Арттуа çăлĕсем тунă. Вылăхсене пăхакан кĕтÿçĕсем çурри тикки австралисем.

Австралире тырра-пулла, вылăх-чĕрлĕхе *сайккасем* (кроликсем) пит пысăк сийен тăваççĕ; вăл сайккасене Австрали çĕрне Йеврол сыннисем хăйсемех илсе пынă, халĕ вĕсем унта пит ĕрчесе кайнă та, тырăсене уйĕ-уйĕпе, куракçене улăхĕ-улахĕпе çисе пĕтереççĕ. Çав сайккасене чармашкăн хуçасем хăйсен уйĕсене йĕплĕ пралук картисем тытса пĕтереççĕ. Тырăпулла тата *уйарсем*, пушă хирсенчен вĕрекен *вĕри çилсем* нумай пăсаççĕ.

Австрали тăвĕсем *ылттăнран* пуйан, çав меттала Австралире Пĕрлешсе пурăнакан Штатри чухлех кăлараççĕ. Ылттăнран пуçне унта тата *кĕмĕлпе çĕр-кăмрăкĕ* нумай кăлараççĕ. Ылттăн тăприне Австралире 19-мĕш ĕмĕрĕн варринче пĕр ылттăн шыракан мăриккан çынни тупнă. Çавăн çинчен хыпар сарăлсанах, Австралири хуласенче, йалсенче пурăнакан çынсем, ĕçĕсене пăрахса, кĕреçесем илсе, тусем çинелле кайнă. Хăшĕхăшĕ çавăнта ылттăн катăкĕсем тупкаланă, вара пур çĕртен те Австралийе темиçе вунă пин çын ылттăн шырама пынă. Анчах ылттăн тăприсене часах ĕçлесе пĕтернĕ те, халĕ ăна ылттăн тымарĕ тăрăх çĕр тĕпне чакаласа анса кăлараççĕ.

Австралире пурăнакан колонистсем *тимлĕ, вĕреннĕ* халăх. Вĕсем Австралире мал-йенче *чукун-çулсем* нумай тунă, тип вырăнсенче *пĕвесем, Арттуа çăлĕсем, шăвармаллисем* туса пĕтернĕ. Вĕренÿрен пулсан, вĕсем мăриккансенчен кăшт анчах кайарах тăраççĕ: вĕсенĕн темиçе тĕрлĕ ăшкул, кĕнеке-пÿрчĕсем нумай, тата кĕнекесем, хаçатсем, шурналсем нумай тухаççĕ.

Австралири колонисенче чи пысăк хуласем ак çаксем: *Мелпурн*,—пурăнакан çын 500,000; *Çитней*,—пурăнакан çын

500 000; тата *Ателаит*. Вĕсем пурте паха портсем; унтан Йеврпа ылттăн, тулă, çăм, шăнтнă ашпа тăварланă аш, çу, ђĕр-çу, шăн çу, тата урăх тавар та нумай турттарса кайаççĕ.

Паллăрах портсем тата ак çаксем: *Приспен*, унтан çăм кайат; *Ђйу-Кастъ*, унтан çĕр-кăмрăкĕ кайат; тата *Хопăрт*, вăл Тасманире ђăн ырă порт.

Хура Австрали çыннисем халиђђенех ухутара çӯресе пурăнаççĕ. Алăра сăнăпа пумеранк тытса, вĕсем троппик вăрманĕсенђе, скрупсенђе кенкурупа ытти кайăксене те тытасшăн çӯреççĕ. Апатсăр аптăраса, вĕсем ђас-ђасах çĕлен-калтасене те, урăх йапаласене те çийеççĕ, хăш ђухне вилнĕ етеме те тиркемеççĕ. Кил-çурт вырăнне вĕсем хăвăл йывăç ăшĕсенђе, çĕр шăтăкĕсенђе, туратсенђен тукаласа хунă ӯплесенђе пурăнаççĕ. Çав тиккисем сахалланнă-çемĕн сахалланса пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене шуррисем хĕстернĕ-çемĕн хĕстерсе пыраççĕ, вĕсен тата ађи-пăђине вĕлерес йăла та пур: асапланса, сĕтĕрĕнсе çӯренĕ ђух, ађа-пăђана йăтса çӯресси кансĕр, çавăнпа вĕсене вĕлереççĕ.

УТРАВСЕМ.

Çанталăк.

Австрали тавраш ĕнђе утравсем пит нумай; вĕсене пурне те пĕрле *Оккеани* теççĕ.

Çав утравсенђен хăшĕ-хашĕ анђах маттерик çывăхĕнђе выртаççĕ; ыттисем пурте унтан инçетре, Аслă оккеан варринђе выртаççĕ; çавăнпа та унти çанталăк Австралири пек мар, нумай ăрасна. *Виçĕр маттерикрен пуçласа Паумоттупа Хавайи утравсем патне çитиђђен.*

Оккеани утравĕсенђен ђăн пысăккисем ак çаксем: *Çĕнĕ-Квиней*, вăл пĕтĕм çĕр çинђе 2-мĕш пысăк утрав; *Çĕнĕ-Селанти*, вăл икĕ утравлă; тата *Калетони*. Оккеанири ытти утравсем пурте вĕтĕ, вĕсем тинĕс варринђе ушкăнăн-ушкăнăн лараççĕ, хăш ушкăнра темиçе вун утрав, хăшинђе тата темиçе çĕр те пур. Çав ушкăнсем пурте тинĕс тĕпĕнђен *хăпарса тăракан çĕр çинђе, панккă* çинђе тытăнса тăраççĕ; çав панккăсем пурте хĕ-

вел-анаҫӗпе ҫур-ҫӗр хушшинҗен пуҫланаҫҫӗ те кӑнтӑрпа хӗвел-тухӑҫӗ хушшинелле тӑсӑлса кайаҫҫӗ. Ҫав панккӑсем хушшинҗе хуран пек *тарӑн вырӑнсем*, авӑрсем пур, ҫавӑн пек вырӑн Мариан утравӗсенҗен мал-йенҗе пур, вӑл халиҗҗен? шыраса тупнӑ вырӑнсенҗен җӑн *тарӑн вырӑн*, ун тарӑнӑшӗ 9 ҫухрӑм.

Утравсем пуринҗен ытла *коралл* утравӗсем; вӗсенҗен нумайӗшӗ шыв айӗнҗи ту тӑррине туса лартнӑ *аттоллсем* пек. *Астуса илӗр: мӗн вӑл аттолл!* Коралл утравӗсем ак ҫаксем: *Маршшалсем, Каролинсем, Паумотту*, урӑхла *Лутрисем*,—вӗсем пит лутра, патне пынӑ җух вӗсем ҫинҗи йывӑҫсем шывран шӑтса тухнӑ пек курӑнса лараҫҫӗ,—тата урӑх утравсем те пур.

Пӗр оккеанра та ҫак Аслӑ оккеанри пек коралл утравӗсем, коралл шӗвӗрӗсем (рифсем) ҫук. Пуринҗен ытла рифсем Коралл тинӗсӗнҗе пит нумай. Полипсем тунӑ ҫуртсем маттерик ҫумӗпе пӗр 1500 ҫухрӑм ларса тухнӑ, вӗсенҗен ҫапла *Пысӑк Парйер рифӗ* пулнӑ.

Коралл утравӗсемпе пӗрлех Оккеанире тата *вулккан утравӗсем* пур. Вӗсем ак ҫаксем: *Хавайисем, Йулташлӑх, Самоа, тата Ҫӗнӗ-Селантин* ҫур-ҫӗр йенҗи пысӑк утравӗ.

Хавайи утравӗсем ҫинҗе пысӑк вулккансем темиҫе те пур: *Маунӑ-Кей, Маунӑ-Лой*; Маунӑ-Лой ҫӑварӗ сарлакӑшӗ 10 ҫухрӑм, унта туп-тулли шӑраннӑ ҫӗр тӑрать, вӑл хӗррипе шӑнса хытнӑ, варринҗе вут кӳлӗсем пек курӑнса тӑрать; унта шӑраннӑ ҫӗр пӗр майах вӗресе хумханса тӑрать, перре хӑпарать, пӗрре анать. Ҫӗнӗ-Селантири ҫур-ҫӗр йенҗи утравӗ ҫинҗе вулккансем, сӳнсе ларнисем те, сӳнменнисем те, нумай; пур ҫӗрте те унта вӗри ҫӑлкуҫсем, кейсӗрсем, тата вӗри кӳлӗсем тӗл-пулаҫҫӗ.

Ҫӗнӗ-Селантири кӑнтӑрти утравӗ, тата Ҫӗнӗ-Калетонипе Ҫӗнӗ-Квиней пурте *маттерикрен пулнӑ*; ӗлӗк вӗсем Австралипе пӗрле пӗр ҫӗр пулнӑ пулмалла. Ҫав утравсем ҫинҗе ҫӳлӗ тусем пур. Ҫӗне-Селантире ту тӑррисепе ӗмӗрхи йурпа пӑрлӑх витсе тӑрать, вӗсене Кӑнтӑрти Алҗпсем теҫҫӗ, вӗсенӗн җи ҫӳлли, *Кук тӑвӗ*, 3-ҫухрӑм ҫурӑ пулать.

Оккеанире климӑт пур ҫӗрте те троппикри, анҗах вӗри мар, мӗншӗн тесен пысӑк оккеан ӑна сулхӑнлатса тӑрать. Җӑн паллӑ ҫилсем Оккеанире *пассатсем*, вӗсем ҫулталӑкӗпех вӗрсе тӑраҫҫӗ, ҫур-ҫӗр йенҗи ҫур-шар ҫинҗе ҫур-ҫӗрпе хӗвел-тухӑҫӗ

хушшинҗен, кӑнтӑртинҗе кӑнтӑрпа мал-йен хушшинҗэн вӗреҫҫӗ; йӗле-сапа вӗсем ытла нумайах илсе пымасан та, ҫителӗклӗ тӑратаҫҫӗ.

Йываҫ-куракран, җӗр-җунран пулсан, Оккеани ҫителӗклӗ пуйан. анҗах мал-йеннелле кайнӑ-ҫемӗн, вӑл наҗарланса пырат.

Ҫӗнӗ-Квинейре троппик вӑрманӗсем ӳсеҫҫӗ, унта темӗн җухлӗ җӗр-җунсем пурӑнаҫҫӗ, ватраслисем пит нумай, тата темиҫе тӗрлӗ вӗҫен-кайӑк пур, *рай кайӑкӗсем те*, урӑх вӗҫен-кайӑксем те нумай.

Ҫӗнӗ-Селанти троппик ҫывӑхӗнҗи ӗмӗр-йешӗл вӑрмансем айӗнҗе ларат, анҗах җӗр-җунсем унта сахал, вӗсем хушшинҗэ җӑн палли тӗксӗр ҫара кайӑк *киви-киви*.

Оккеан варринҗи утравсем ҫинҗе ирӗкре ӳсекен йываҫкурӑк ҫукпа пӗрех, җӗр-җун та пит сахал, ҫурисене ӗмӗртсе ӳстерекен кайӑксенҗен унта пӗр ҫара-ҫерҫисем анҗах.

Ун вырӑнне оккеанра җӗр-җун пит нумай, пуринҗен ытла коралл утравӗсен ҫывӑхӗнҗе: тӑп-тӑрӑ тарӑн шывра *полипсем* тунӑ тӗлӗнмелле ҫуртсем лайӑхах курӑнса тӑраҫҫӗ; вӗсен хушшисенҗе темиҫе тӗрлӗ ҫутӑ пулӑсем, *тинӗс ҫӑлтӑрӗсем* пинӗ-пинӗпе ишсе ҫӳреҫҫӗ; тинӗс тӗпӗнҗе хупӑлӑ-шапасем,*) ӑраксем, хуртсем, ӗнҗӗ-хуранӗсем (жемчужные раковины) йӑшӑлтатса ҫӳреҫҫӗ. Шыв ҫинҗе тата тинӗс кайӑкӗсем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ.

Алӑпа ӗҫлесе тунӑ йываҫ-курӑк Оккеанире нумай: *коккос пальми*, вӑл ҫакӑнта ҫуралнӑ, халӗ те хӑш-хӑш тӗлте ирӗкре ӳсет; ҫӗрге пулакан ҫимӗҫсем те, *йамспа таро*. ҫакӑнта ҫуралнӑ. Алла вӗреннӗ выҗӑхсенҗен, Йевроп ҫыннисем куҫса пыриҗҗен, Оккеанире етеме усӑ кӳрсе тӑраканнисем ак ҫаксем пулнӑ: җӑх-җӗпсем, сыснасем, тата йытӑсем, вӗсем те пур утрав ҫинҗе пулман. Йевроп ҫыннисем Оккеани утравӗсем ҫине хӑйсен выҗӑх-җӗрлӗхӗсене пур тӗслисене те илсе пынӑ; Ҫӗнӗ-Селантире вӗсем халӗ пит ӗрҗесе кайнӑ.

---

*) Урӑхла—хуранлӑ-шапа, хурҫӑ-сӑртлӑ шапа, тимӗр-шапа.

Пуранакан халăхсем, колонисем.

Оккеанире пуранакан халăхсем виç-тĕслĕ: *хура-ўтлисем, сарă-ўтлисем, шурă-ўтлисем.* Хура-ўтлисем австралисемпе пĕр кăкран тухнă *паппуассем*, урăхла вĕсене *меланеçи* сем теççĕ, вĕсем *Çĕнĕ-Квинейре, Писмăрк архипелакĕ çинҫе, Соломон утравĕсем çинҫе, Çĕнĕ-Калетонире,* тата урăх утравсем çинҫе те пурăнаççĕ

Сарă-ўтлисем малайсемпе туртулнă пулнă *полинеçисем*, вĕсем *Йулташлăх утравĕсем* çинҫе, *Лутра утравсем* çинҫе, тата оккеан варринҫи ытти вĕтĕ утравсем çинҫе пурăнаççĕ.

Шурă-ўтлисем Йевропран куçса пынă çынсем; вĕсем пĕтĕм Оккеанийе хăйсен аллине илнĕ, анҫах пурăнасса Çĕнĕ-Селанти çинҫе йышлăн пурăнаççĕ.

Паппуассемпе полинеçисем, пурăнăç тĕлĕшĕнҫен пулсан, пĕрпĕринпе нимрен те уйрăм мар. Вĕсенĕн тĕп-ĕçĕ—*çĕр ĕçĕ*; вĕсем *коккос палмине, çăкăр йывăçне,* тата çĕрте пулакан çимĕçсене, *таропа йамса*, лартса тăваççĕ.

Коккос палми вĕсене пурăнма мĕн кирлине йăлтах парать. Пулса çитмен коккос мăйăрин сĕткенĕнҫен вĕсем хăйсене ĕçмелли тăваççĕ; пулса çитнĕ мăйăр тĕшшинҫен вĕсем апат хатĕрлеççĕ; мăйăр хуппине çăмхаласа тăракан сўсрен саппансем тĕртсе тăваççĕ, вĕсенĕн мĕн пур тумтирĕ те çав саппан анҫах. Палми пĕренисенҫен вĕсем хăйсем валлҫи пурăнмалли çуртсем тăваççĕ.

Вĕсене тата пулă тытни нумай усă кўрет. Аслă оккеанра пулăсем, тинĕс ăракĕсем, хупăлă-шапасем, треппанксем, ытти йышши кайăксем те пит нумай; утравсенҫе пурăнакан çынсем çавсене пурне те пит нумай тытаççĕ. Вĕсем, *тинĕс çинҫе çўреме ăстаскерсем*, хăйсен киммисем çине ларса инçе кайаççĕ.

Йевропран пыракан карапсем ҫарăнса тăракан утравсем патне йăланах темĕн ҫухлĕ кимĕсем пырса тулаççĕ. Оккеани çыннисем унта *копр* турттарса пыраççĕ, копр вăл—коккос мăйăрин типĕтнĕ тĕшши пулать, Йевроп çыннисем унтан çу кăлараççĕ, хăйсем вĕсене тимĕртен тунă тĕрлĕ хатĕр сутаççĕ. Хавайи утравĕсем çине киттайсемпе йаппунсем пит нумай пырса ларнă, вĕсем унта *риспеле сахăр хăмăшĕ* планттатсийĕсем туса пĕтернĕ.

Ҫӗнӗ-Селантире Йевропран пынӑ ҫынсем Австралири пекех *вырӑх ӗҫӗпе, ҫӗр ӗҫӗпе, ту ӗҫӗпе* пурӑнаҫҫӗ. Ҫӗнӗ-Селантире улӑхсенҫе темиҫе мӗлйун *вурах*, *ӗне вырӑх* ҫӳрет; уй-хирсенҫе *тулӑпа куккурус* пит ӑнса пулат; тусем ҫинҫе ылттӑнпа ҫӗр-кӑмрӑкӗ пит нумай кӑлараҫҫӗ.

Ҫӗнӗ-Селанти вӑл Оккеанири колонисенҫен пуринҫен те ҫӑн пахи. 100 ҫул ӗлӗк унта *етеме ҫисе* пурӑнакан тиккисем, *маорисем*, пурӑннӑ, халӗ унта пит ӗҫҫен, нумай вӗреннӗ ҫейе халӑх пурӑнат, вӗсем Америкре пурӑнакан халӑх майлӑ, хайсем пӗтӗмпех акӑлҫансем. Ҫӗнӗ-Селантире ҫукун-ҫулсем урлӑ та пирлӗ ҫӳреҫҫӗ; ун таврашӗнҫе темӗн ҫухлӗ пӑраххутсем ҫӳреҫҫӗ; тинӗс хӗррисенҫе хуласем пула-пула ларҫӗҫ; ҫӑн аслӑ хули *Уеллинктон* Ҫӗнӗ-Селантири ҫур-ҫӗр йенҫи утравӗ ҫинҫе ларат.

Ҫӗнӗ-Селанти акӑлҫансен аллинҫе пулсан та, вӑл хӑй ирӗкӗпе пурӑнат, саккунсене халӑх уйӑрса йанӑ ҫынсем кӑлараҫҫӗ. Тӗпренпе пурӑнакан маорисем унта нумайах йулман, вӗсем те шурӑ-ӳтлисем майлах пурӑнаҫҫӗ.

Аслӑ утрав *Ҫӗнӗ-Квиней* Йевроп халӑхӗшӗн пит пахах мар, мӗншӗн тесен кусса кайса пурӑнас тесен, унта климӑт ырӑ мар, суту-илӳ тӑвас тесен, унта пурӑнакан паппуассем пит наҫар халӑх.

Апла пулсан та, вӑл утрава Йевропри виҫӗ патшалӑх пӗрле уйӑрса илнӗ: каҫал-йенҫи ҫӗре *Коллапти* илнӗ, кӑнтӑрпа мал-йен хушшинҫине *Анкли* илнӗ, тата Импператтӑр Вилхелм Ҫӗрӗпе Писмӑрк утравӗсене *Кермани* илнӗ.

Ҫӗнӗ-Калетонире климӑт сулхӑнрах, пит сывлӑхлӑ; унта тата тӗрлӗ метталл, пуринҫен ытла *никкӗл* нумай. Вӑл утрав хрантсус аллинҫе, весем унта пуҫ кайнӑ айӑплӑ ҫынсене йараҫҫӗ.

Ытти колонисенҫен пахараххисем *Хавайи утравӗсем*, вӗсем Пӗрлешсе пурӑнакан Штатсен аллинҫе. Ҫав утравсем ҫинҫе сахӑр пит нумай тӑваҫҫӗ. Ҫи аслӑ порт *Хонолулу*; Ҫур-Ҫӗрти Америкрен Аҫипе Австралийе ҫӳрекен карапсем, иртсе ҫӳренӗ ҫух, унта кӗрсе ҫаранса тӑраҫҫӗ.

Ҫӳревҫӗсем ҫинҙен кӗскен каласа кӑтартни.

ҪЕМЕН ТЕШНЕВ.

Ҫемен Тешнев Сизӗри Твина шывӗ ҫинҙе таракан Аслӑ Устюк йатлӑ хулара ҫуралнӑ. Анҙах пӗҙӗк ҙухнех вӑл Ҫипире кайнӑ та, касак пулнӑ. Малтан вӑл Иртыш шывӗ ҫинҙе таракан Тополҙски хулинҙе пурӑннӑ, унтан тата малалла, Ленӑ шывӗ ҫине кайнӑ, унҙен анҙах унта касаксем Йаккут Острокӗпе Йаккутски хули тунӑ. Ҫак хуларан малалли ҫӗрсем, мал-йенҙисем те, ҫур-ҫӗр йенҙисем те, никам пӗлми ҫӗрсем пулнӑ, унта никам парӑнтарман халӑхсем пурӑннӑ.

1641-мӗш ҫулта Йаккутскинҙен 15 касак тухнӑ та, ҫур-ҫӗрелле тункуссемпе вӑрҫма кайнӑ. Касаксен пуҫлӑхӗ Миххайлӑв пулнӑ, ахаҙ касаксем хушшинҙе пӗри Тешнев пулнӑ. Йанӑ-пуҫӗ тӑвӗ *) урлӑ каҫса кайсан, касаксем Йанӑ шывӗ патне аннӑ та, унти йӑлансем пӑхса ҫитерсе ҫӳрекен тункуссене вырӑс аллине пӑхӑнтара пуҫланӑ. Вӗсем вумай та пулман кулаҫай пуҫтарнӑ: 320 сопӑлҙ, тата 2 хура-хӑмӑр тилӗ тирӗ. Ҫав хысна сопӑлӗсене леҫме Миххайлӑв Тешнева виҫӗ касакпа пӗрле йанӑ. Ҫул ҫинҙе ҫавсене тункуссем 40 ҫын ухӑсемпе тапӑннӑ. Тиккисем касаксене тимӗр вӗҫлӗ ухӑсемпе пере пуҫланӑ, вут ҙуллӗ пӑшалсемпе иенӗ. Хысна сопӑлҙне Тешнев ҫапах та ҙипер ҫитерсе, Йаккутскинҙи ҫар-пуҫлӑхне панӑ.

Тепӗр ҫулне Тешнева каллех ҫур-ҫӗр йенне йанӑ. Касаксем унта пӗр шыв ҫинҙе пысӑк кимӗ тунӑ, пӑлан тирӗнҙен парӑс тунӑ, хатӗрӗсене ҙӗнрен тунӑ, йакӑр вырӑнне пысӑк ҙул катӑкӗ илнӗ, ӑна ҙӗнрен йавнӑ канатпа ҫыхса хунӑ. Ҫав кимӗпе вӗсем шыв тарӑх анаталла *ҫенӗ ҫӗр шырама* кайнӑ. Кайсан, кайсан, вӗсем *Сивӗ тинӗсе* пырса кӗнӗ, вӑл пӗтӗмпех пӑрлӑ пулнӑ. Ҫил пӑрсене ҫыран хӗрринҙен шалалла хӑваласа йарсан, касаксем киммипе мал-йеннелле кайнӑ та, Колым вӑррине ҫитнӗ.

Унта кӗрсен, вӗсем хӑйсен Йаккутскинҙен пынӑ касакӗсене тӗл-пулнӑ, вӗсенӗн пуҫлӑхӗ ӗлӗкхи йулташӗ Миххайлӑв пулнӑ.

---

*) Верхоянский хребет; ун ҫинҙен *Йанӑ* йатлӑ шыв йукса анаҫ.

Вĕсем унта ҫитни ҫулталăк пулнă; вĕсем унта пĕҫĕк острок туса лартнă, ăна *Анатри Колым* тенĕ.

Сивĕ тинĕс хĕрринҫе вĕсем *пулă шăлĕсене* шыра пуҫланă, пулă шăлĕ тесе вĕсем мамăнт шăлĕсене каланă; Мускавра ҫав шăлсем елон шăмми пек пит хаклă пулнă. Вĕсене пуҫтара-пуҫтара, вĕсем Йаккутскине йанă, унтан Мускава тăратнă.

Колымра пурăннă ҫухне, Тешнев йунашар пурăнакан ҫукҫăсенҫен илтнĕ: ҫав шăлсем Анатыр вăрринҫе ăшăх вырăнсенҫе нумай пулнă, тет.

Вара 1648-мĕш ҫулта касак Тешнев усламҫă Хветут Алекҫейĕвпе пĕрле пысăк партти тунă та, 6 кимĕпе Колымран Сивĕ тинĕс ҫине тухса кайнă.

Тинĕсре пĕр пăр та пулман, хĕвел—анаҫĕпе кăнтăр хушшинҫен вĕсене ҫул май ҫил вĕрнĕ. Касаксем хĕпĕртесе кайнă, вĕсем тиртен тунă парăсĕсене карнă та, савăнăҫлă йуррине йурласа, кайнă мал-йеннелле ҫĕнĕ ҫĕр шырама. Вĕсем тата Анатыр патне ҫитсе, киммисем тулли пулă шăлĕсем тултарасшăн пулнă. Вĕсем шухăшланă: ку ытла инҫех пулме-ха, тенĕ. Анҫах вăл апла пулман. Вĕсем вăрмансăр ҫап-ҫара ҫуллă ҫыран хĕррипе 2 уйăх ытла ишсе пынă, Анатырĕ курăнман та. Ҫил ҫас-ҫасах унгалла та, кунталла та вĕрнĕ, парăссене те темиҫе хутҫен пуҫтарса хумалла пулнă, кĕсменсене алла тытса, тĕгре витĕр, пăрсем хушшипе ишсе пымалла пулнă. 3 кимĕ тăрса йулнă, 3 кимми анҫах *Пысăк Ҫул сăмси* патне ҫитнĕ, вăл тинĕселле шала тухса тăнă; ҫак сăмса Аҫи ҫĕрин ҫи мал-йенҫи вĕҫĕ пулнă, ăна халĕ *Тешнев сăмси* теҫҫĕ. Ҫак сăмса патĕнҫе касаксем ҫарăвнă та, ҫукҫăсем пурăнакан ҫĕре пынă, вĕсен унта кит шăммисене купаласа тунă креппăҫ пекки пулнă.

Пысăк Ҫул сăмси патĕнҫен касаксем кăнтăралла ишсе кайнă та, Аҫипе Америке уйăрса тăракан пыра пырса кĕнĕ. Унта ҫил-тăвăл тапранса кайнă. Пысăк хумсем касаксен киммисене ҫătса йарас пек мĕкĕрсе-ҫеҫ тăнă. Вĕсем парăссене пуҫтарса хунă та, хăйсене хăйсем хум ирĕкне панă, Вĕсем кимме кĕрекен шыва анҫах пĕр май алтăрсемпе тăкса тăнă. Ҫапла 2 ерне вĕсенĕн киммисем тинĕс тăрăх ҫапкаланса ҫӳренĕ; ҫӳресен-ҫӳресен, курте пĕр-пĕрин куҫĕнҫен ҫухалнă.

Йулашкинҫен ҫӳк-уйӑхӗнҫе Тешнева йулташӗсемпе пӗрле хумсем ҫыран ҫине, Анатыртен мала, кӑларса пӑрахнӑ. Тешнев вара 24 йулташӗпе пӗрле Анатыр ҫине ҫуран кайнӑ. Вун ерне лапах вӗсем выҫӑлӑ—тутӑлӑ ҫумӑр витӗр, йур витӗр, ҫарамас, ҫара-уран ҫӳренӗ. Мӗн сисе пурӑннӑ вӗсем, пӗлмеҫҫӗ; тунтӑрта пурӑнакан хир-ҫӑххисене тыткаласа ҫинӗ пулӗ, теҫҫӗ.

Тешнев калаӗ: Анатыр ҫине ҫитсен, епир, мӗскӗнсем, уйӑрӑлса саланса пӗтрӗмӗр, тет. 12 ҫын ҫиме шырама, етеме тӗл-пулайӑпӑр-и? тесе, Анатыр тӑрӑх тӑвалла кайнӑ, анҫах вӗсенҫен виҫҫӗшӗ анҫах тӑрса йулнӑ, ыттисем пӗтнӗ. Тешнев ҫапах та аран аран хӗл касҫаланӑ та, тепӗр ҫулне вӑйне пуҫтарса, унта пурӑнакан ҫукҫӑсене, корексене ҫӗнтерсе хӑйне пӑхӑнтарнӑ, Анатыр острокӗ тунӑ. Хветут Алексҫейӗв ҫинҫен Тешнев кайран илтнӗ: ӑна тинӗс хумӗсем унран та леререх кӑларса ывӑтнӑ, тет те, вӑл ҫавӑнта Камҫҫат таврашӗнҫе вилнӗ пулмалла.

Тешнев Анатыр ҫинҫе тата темиҫе ҫул пурӑннӑ, унта вӑл Анатыр вӑрри ҫывӑхӗнҫе мамӑнт шӑммисем нумай тупнӑ. Ҫакна анҫах вӑл паха йапала тесе шутланӑ. Кеокрахвишӗн пулсан, вӑл тинӗс тӑрӑх ҫӳрени пит пахи унӑн шухӑшне те кӗмен, Америк ҫинҫен те нимӗскер пӗлмен. Кайран вӑл Мускава *пулӑ-шӑлӗпе* сопӑҫ хыснипе кайнӑ та, унта патшана, Елексҫей Миххайлӑҫа, хут ҫырса панӑ: инҫетре ҫӳресе ирттернӗ вӑхӑтра илмен шалу укҫине ыйтнӑ. Шалуне ӑна панӑ, 19 ҫулшӑн вӑл 126 тенкӗ илнӗ. Унсӑр пуҫне тата ӑна утаман тунӑ. Ҫав ӗҫпе тухнӑ приккас ҫинҫе ак ҫапла каласа ҫырнӑ: ҫав Ҫумккана служпӑшӑн, тата пулӑ шӑлӗсем тупнӑшӑн, шӑмӑшӑн, аманнӑшӑн—утамана кӳртес пулаӗ, шалуне те ӑна ытти йулташӗсенҫен, утамансенҫен, ытларах, ҫулталӑка 9 тенкӗ парас пулаӗ, тенӗ.

Пршеваљски.

Пршеваљскин тӗп-йӑхӗ Пароваљски йатлӑ касак пулнӑ; вӑл пит харсӑр ҫын пулнӑ пулмалла, мӗншӗн тесен Пароваљски тени пӑсӗпех ҫӗнтерекен тени пулаӗ. Ҫав касак 15-мӗш

ӗмӗрте Польшӑна пурӑнма кусӑ, унта ун хушаматне малтан Превальски, кайран Пршевальски тесе улӑштарнӑ. Ҫак ҫаплӑ ҫуревҫӗ 1839-мӗш ҫулта, Смоленски кӗпӗрнинче, Отратни именийӗнче ҫуралнӑ.

Пршевальски пӗчӗкреннех хайӗн пӗчӗк шӑллӗпе вӑрмана ҫӳреме йуратнӑ. „Епӗ йалта кӑйӑк пек ӳсрӗм", тенӗ вӑл хӑй ҫинчен ҫитӗнсе ҫитсен. Килтен кайма ӑна кирек хӑш вӑхӑтра та йуранӑ, чаракан никам та пулман. Чӗреслетсе ҫӑвакан ҫумӑр айӗн вӑл пӗр хут кӗпепех чупса ҫӳренӗ. Икӗ пӗр тӑван ӳссе ҫитсен, вӗсене Смоленски кимназине вӗренме йанӑ. Унта вӗсем пӗр пӗчӗк хваттерте пурӑннӑ. Вӗсене пӑхса усраканни Отратни именийӗнчен йанӑ пӗр тӗреклӗ вӑйлӑ чура пулнӑ. Пршевальски вӗренессе аван вӗреннӗ. Унӑн тӑнӗ-пуҫӗ ас-тӑвас тӗлешрен майсӑр аван пулнӑ, анчах вӑл пит чӑрсӑр аҫа пулнӑ. „Рускӑ сахал ленкмен мана пӗчӗк чухне килте те, кимназинче те", тесе асӑннӑ вӑл ҫитӗнсен. Пӗрре ӑна кимназинчен кӑларса йама тытӑннӑ. Амӑшӗ пынӑ та: „Кӑларса йариччен, лайӑхрах ҫаптарӑр ӑна", тесе йӑлӑнса кӑларттарман. Ҫакӑн ҫинчен Пршевальски калать: „Мана хӗнемен пулсан, кӑларса йанӑ пулсан, манран ырӑ ҫын пулас ҫук-чӗ", тет.

Вӗренме пӑрахсан, вӗсем ҫула килне пурӑнма кайнӑ. Вӗсем унта уйрӑм ҫуртра хӑйсен мучӑшӗпе пурӑннӑ. Вӑл вӗсене пӑшал пеме вӗрентнӗ, вӗсемпе пӗр майах йе ухутана, йе пулӑ тытма ҫӳренӗ. Киле вӗсем ҫывӑрма кӑна таврӑннӑ. Йаланах ухутара ҫӳресе, Пршевальски тӗреклӗ алӑлӑ, вӑйлӑ кусӑлӑ пулса кайнӑ.

16 ҫулта, кимназинчен вӗренсе тухсан, вӑл слушпӑна кӗнӗ. Унта вӑл 5 ҫул пурӑннӑ. Ҫакӑнтан кайран вӑл йӑнарал-штап аккатемине кӗнӗ. Унтан вӗренсе тухсан, варшшаври йункккӗр школӗнче кеокрахви вӗрентсе пурӑннӑ.

1867-мӗш ҫулра вӑл Ҫӗпӗре, хӗвел тухӑҫне, слушпӑна кусӑ унта ӑна Уссури тийӗкен ҫӗре йанӑ. Ун чух вӑл пирвайхи хут ҫӳреве тухса кайнӑ. Унтан кайран вӑл хӑйӗн пурӑнӑҫне Аҫи ҫӗрне пӗлесшӗн ҫӳресех ирттернӗ.

Вӑл виҫҫӗмӗш хут ҫул ҫӳренине епир ҫакӑнта кӗскенӗн каласа парӑпӑр. Вӑл ун чухне Типет ҫӗрне кӗрсе, *Лхасса* хулинех ҫитсе курма шухӑш тытнӑ. Питӗртен тухсан, вӑл ҫунапа 5

ернере Киттай ђиккинђи *Сайсана* çитнĕ. Унта вăл мĕн кирлине пурне те хатĕрленĕ те, 1879-мĕш çулта, пуш-уйăхĕнђе çӳреве тапранса тухнă.

Çак çӳрсвре, експетитсире, çӳреме унпа пĕрле унăн 2 йулташĕ, 3 салтак, Пайккал леш йенђи касаксем, 5 çын, тата пĕр ухвитсер пынă.

Ђункари хирĕ урлă кайни.

Киттай ђиккинђен каçсан, Пршеваљски Ђункари çеçен-хирĕ урлă каçса кайнă. Çав çеçен-хир урлă караван кунне 25-шер çухрăм кайнă; вĕсем ирхине, хĕвел тухсан, тухнă та, 6--7 шер сехет уттарса кайнă; йулавутлисем хăшĕ малалла кайнă, хăшĕ тăра-тăра йулнă, вĕсем çапла коллексиваллитĕрлĕ ӳсен-тăрансем пуçтарнă, калтасем тытнă, тата тĕл-пулакан тискер кайăксене те пăшалпа пере-пере тытнă. Пĕр вун çухрăмне вĕсем асăрхамасăрах кайнă, тепĕр вун çухрăмне кайнă ђухнĕ, вĕсем ывăна пуçланă. Пĕçерте пуçласан, вĕсем пурте пĕр-пĕр çăл çук-ши? тесе, малалла пăха пуçланă. Ăна курсанах вĕсем сиккипе кайнă, тĕвесем те уçăмлăрах ута пуçланă. Çăл патне çитсен, тĕвесем çĕре выртнă, вĕсем çинђен тийенĕ йапалисене пушатнă. Касак вут ђĕртсе йарса, ђей пĕçернĕ; вут-кăвайт вырăнне вăл типсе хытнă тислĕк çунтарнă, ăна монколсем *аркал* теççĕ. Ђăн ырă аркал—ĕне выљăхин, унтан тĕвепе лашан, кирлĕ ђухне сурăх аркалне те ђиркемеççĕ.

Наљ-Шаљ тăвĕсем çине хăпарсан, Пршеваљски унта халиђђен никам пĕлмен икĕ çӳлĕ ту курнă. Çав тусем тăрринђе ĕмĕр кайми йур выртнă. Пршеваљски айалта тахăçанђђен курăксем пуçтарса çӳренĕ, тата ту синђи тискер кайăксене: *архарсене* (ту такисене), *маралсене* (пысăк йышши паха пăлансене), *тискер йаксене* пăшалпа персе тытасшăн йĕрлесе çӳренĕ. Çапла çӳренĕ хушăра унттĕр-ухвитсер Йекорăв ђутах пĕтмен.

Вăл ĕç ак йепле пулнă. Пĕр тарăн хĕсĕк çырмара унђђен малтанхи кун пăшалпа персе амантнă тискер йак выртнă. Йекорăвпа тепĕр касака çавна шырама йанă. Çырма патне çитсен, вĕсем йĕр тăрăх тискер кайăка шыраса кайнă. Çапла йĕрлесе пынă ђух, сисмен хутрах, вĕсем пĕр-цĕринђен уйăрăлса

кайнӑ: касак арххарсене ытараймасӑр вӗсем хыҫҫӑн ҫупнӑ, ҫав вӑхӑтра вара Йекорӑв куҫран ҫухалнӑ. Касак ӑна тӗттӗмҫҫеле́х шыраса ҫӳренӗ, анҫах тупайман та, килне кайнӑ. Тул та ҫутӑлнӑ, Йекорӑв ҫапах таврӑнман. Ҫанталӑк сивӗ тӑнӑ. Йекорӑв кӗпе-вӗҫҫӗн анҫах пулнӑ, хайпе пӗрле вут ҫӗртмелли тавраш та пулман. Пршевалҫски Йекорӑва шырама отрет кӑларса йанӑ. Аманнӑ тискер кайӑк йӗррипе пырсан-пырсан, касаксем ҫавӑнтах Йекорӑв йӗррине те курнӑ. (Унӑн уринҫе хӑй тунӑ кӗлесӗр атӑ пулнӑ).

Пӗр-икӗ ҫухрӑм кайсан, касаксем аманнӑ тискӗр йак вырӑнӑ йӗр тӗлне ҫитнӗ. Ҫав йӗр ҫине пӑхсан, паллӑ пулнӑ: Йекорӑв, ниме́нскер, ӑна-кӑна асӑрхамасӑр, кайӑк ҫывӑхнех пырса тӑнӑ-мӗн, лешӗ вара выртнӑ ҫӗртенех ун ҫине ыткӑннӑ. Тискер йакӑн йӗррипе тата малалла кайсан, касаксем хӑш-хӑш тӗлте Йекорӑв йӗррине те тӗл-пулкаланӑ. Анҫах тата виҫӗ ҫухрӑмран, ҫав йӗрсем пӗтӗмпех ҫӗтнӗ. Тепӗр кун кӑвак ҫутӑлах Пршевалҫски, пилӗк ҫын илсе, Йекорӑва шырама хӑй кайнӑ. Вӑл касҫенех сулланса ҫӳренӗ, кашни тарӑн ҫырманах пӑшалпа пенӗ. Ҫӗртме уйӑхӗ пулсан та, ҫанталӑк сивӗ тӑнӑ. Ир-ир сивӗ ҫиҫӗ крата йахӑн пулнӑ, кӑнтӑрла сивӗ ҫил вӗрсе сывлӑшра тусан мӑкӑрлантарса тӑнӑ. Пршевалҫски Йекорӑва монколсем тӑнӑ ҫӗре лекмен-ши тесе, касаксене йулапутсемпе унта тӑракан монколсем патне Йекорӑва шырама йанӑ. Касаксем виҫӗ кун тусем ҫинҫе шыраса ҫӳренӗ. Монколсем патне те ҫитсе ыйтнӑ, анҫах лешсем епир ун пекскер курман тенӗ. Пршевалҫски Йекорӑва: вилнӗ ӗнтӗ вӑл, тесе шутласа, ҫав вырӑнтан хӗвел-анӑҫ йеннелле кайнӑ. Пӗр 25 ҫухрӑм кайсан, вӗсем ҫӑл-куҫ патӗнҫе пӑртак каннӑ та, каллах малалла кайнӑ. Караван хайӗн йӗркипе пынӑ, никам та пӗр сӑмах та ҫӗнмен, пурте йывӑр хуйхӑ ҫинҫен шухӑшласа пынӑ. Сасартӑк ҫав вӑхӑтра малта пыракан касак, хайӗн витӗр куракан куҫӗсемпе айакра, караванран сылтӑм йенҫе, пӗр темӗнскер ту ҫинҫен мӑкӑлтетсе аннине курах кайнӑ. Малтан ӑна: тискер кайӑк пулӗ, тесе шутланӑ, Анҫах Пршевалҫски тӗкӗр витӗр пӑхсан: „Ку ҫын, ку Йекорӑв"! тесе кӑшкӑрса йанӑ. Касаксем ҫил пек Йекорӑв патне вӗҫтернӗ Пӗр ҫур сехетрен ӑна вӗсем лаша ҫине лартса илсе пынӑ Пршевалҫски ун ҫинҫен ак ҫапла каласа парать: Йекорӑ-

ва курсан, епир пурте хĕрхеннипе, тупăннăшăн хĕпĕртенипе макăрса йатăмăр. Вăл наҫарланса хуралса кайнă, хĕрелсе кайнă кусĕсемпе тискеррĕн пăхнă. Ҫара ӳтне пĕр кĕпи анҫах пăртак витсе тăнă; картгусĕ те, йĕмĕ те ун ҫинҫе вулман; урисене ҫĕтĕк-ҫурăк тутăр татăкĕсемпе ҫĕркелесе йанă. Икĕ ҫухрăм кайсан, ҫăл куҫ тĕл пултăмăр. Унта вара ҫарăнса Йекорăва ҫей вĕретсе ĕҫтертĕмĕр. Пăртак сывлăш ҫавăрсан, Иекорăв пире хăй ҫухалса ҫӳрени ҫинҫен каласа паҫĕ. Малтанхи ҫĕр вăл йĕр майах утнă. Тул ҫутăлсан сывлăшра тусан йĕрсĕр мăкăрланса тăнипе, Иекорăв хăй ăҫта ҫитсе тăнине нийепле те ҫухласа илеймен. Виҫĕ тавлăк вăл ҫапла аташса ҫӳренĕ. Ҫав вăхăтра нимĕн те ҫимен, ревен курăкин йӳҫĕ ҫулҫисене анҫах ҫăмлакаланӑ, ҫас-ҫасах шыв ĕҫнĕ. Йекорăв ҫапла каласа панă: «Ҫийесси аса та килмест-ҫĕ; тусем ҫинҫе тискер кайăк пек ҫăмăллăн ҫупса ҫӳретĕп», тенĕ. Ҫапла ҫӳресе унăн аттисем шăпăртах ҫĕтĕлсе пĕтнĕ. Вара вăл ҫара урисене хăйĕн ҫĕгĕк йĕмĕпе ҫĕркесе, йанă. Урине нимĕн тăхăнма ҫук пирки, Йекорăв ури тупанĕсене шĕвĕр ҫивĕҫĕ ҫулсемпе пĕтĕмпех ватса пĕтернĕ. Ҫĕрлехи вăхăта вăл ҫуллă сăртсем айĕнҫе выртса ирттернĕ. Вут ҫĕртес пулсан, вăл акă мĕн тунă. Пушă патрон ăшне хăйĕн карттусĕнҫен ҫĕр-мамăкĕ татса хунă. Персе йарсан, ҫĕр-мамăкĕ татăкĕ мăкăрлана пуҫланă. Ҫавна илсе, вара Йекорăв йакăн типсе кайнă тислĕкне пуҫтарса вĕре-вĕре ҫĕртнĕ. Анҫах ҫĕрĕпех вут ҫунтарма май килмен, ҫавăнпа Йекорăв хытă шăнса кайасран, кĕпи ăшне (ҫурăм хыҫне) каллак йакăн типшĕрнĕ тислĕкне тултарнă. Унтан ҫĕрĕп пек хутланса ҫыварнă. Тăваттăмĕш кун ҫинҫе вăл пит ывăннă, хырăмĕ те шутсăр выҫса кайнă. Пăртак та пулсан хырăм выҫнине ирттерес тесе, мулкаҫă тытса ăна ҫĕрĕлех ҫикĕ. Ҫиҫĕмĕш кунне: пĕтрĕм ĕнтĕ, тесе, шухăшланă. Вара вилĕмлĕх кĕпи шурă пултăр тесе, мĕн пур йулашки вăйне пуҫтарса, ăҫта та пулсан шыв хĕрринҫе кĕпине ҫуса тасатас тесе, кайнă. *Анҫах ăна ҫавăнта вилмелле ҫырман иккен.* Икĕ кун хушшинҫе вăл ҫылайах самайланнă, тĕве ҫинҫе ларса ҫуреме те пултарнă.

Типет ҫӗрӗнҭи тусем урлӑ кайни.

Тсайтам йатлӑ ҫарҫ лаптак тусем урлӑ каҫса кайсан, караван ҫӳлӗ сӑртлӑ Типет ҫӗрнелле хӑпарса кайнӑ. Ҫавӑнта тусем ҫинҭен йухса анакан шыв айлӑмӗсенҭе, тата лапӑсенҭе курӑк ҫисе ҫӳрекен кайӑксем нумай пулнӑ. Пршеваҭски ун ҫинҭен ҫапла калат: пире ҫул ҫинҭе пӗр майах кулансем, йаксем, анттилопсем тӗл-пулат-ҭӗҫ, вӗсем караванран тӗлӗнсе пӗр хӑрамасӑр пӑхса тӑрат-ҭӗҫ. Кулансем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе пирӗн умран кӑшт пӑрӑнат-ҭӗҫ, те, пире ҫул парат-ҭӗҫ; хӑш-хӑш кулак кӗтӗвӗсем пирӗн тӗвесем хыҫҫӑн пырат-ҭӗҫ, хӑш ҭухне тата тӗрлӗ йышши анттилопсем улӑхсенҭе пӗр шикленмесӗр ҭип-ҭипер курӑк ҫисе ҫӳреҫҫӗ, ҫул урлӑ йуналутпа пыракансем умӗнҭенех каҫа-каҫа кайаҫҫӗ. Тутӑ выртакан йаксем, хӑйсем патӗнҭен пӗр ҭӗрӗк сухрӑмран иртсе каймалла пулсан, тӑрса тарма шухӑшламаҫҫӗ те. Пире авалхи райа кӗнӗ пекех туйӑнҭӗ, тет.

Тӗслӗрен кайӑк тирӗсене пуҫтарас тесе, Пршеваҭски ҭарӑна-ҭарӑна кайӑка ҫӳренӗ. Кайӑксем, пӑшал сассине илтменскерсем, сасартӑк хӑраса, тарас вырӑнне ушкӑнӗпе пуҫтарӑнса, пӗр пӗрин ҫумне хӗскеленсе, пӗр вырӑнтах тапӑртатса сиккелесе тӑнӑ.

Ак кӗр ҫитнӗ. Йупа уйӑхӗ пуҫламӑшӗнҭе малтанхи йур та ӳкнӗ, вӑл ҫӳлӗ тусене те, лаптак сӑртсене те, тарӑн варсене те шурӑпа витнӗ. Унтан пит вӑйлӑ ҫил-тӑман тухнӑ пирки, Пршеваҭскин темиҫе кун пӗр вырӑнтах ҭарӑнса тӑмалла пулнӑ. Ҫакӑнта тӑнӑ ҭухне, вӑл хӑйсен шалашӗ патӗнҭен темӗн ҭухлӗ йаксем, ытти тӗрлӗ кайӑксем те кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе ирте-ирте-кайнине курнӑ, вӗсем кӑнтӑралла Кӑвак-Шыв лапнелле хӳтӗӑшӑ ҫӗре кайнӑ. Ҫавӑнта ҫул-пуҫӗ, монкол ҫынни, ҫӳревҫӗсене кайалла, Тсайтама, тавӑрнас тесе, йӑлӑна пуҫланӑ. Вӑл каланӑ: кайӑксем кунта йывӑр хӗл пулассине сиссе, кунтан кайаҫҫӗ. Епир кунта йулсан, ыррине курас ҫук, пурте пӗтӗпӗр, тенӗ. Пршеваҭски: мӗн пулсан та, пулӗ, епир хамӑр малаллах кайӑпӑр, тенӗ. Тӑман ҭарӑнсан вара караван малалла тапранса кайнӑ. Анҭах йур хӗвелпе пит йӑлтӑртатса тӑнӑ пирки, пурин те куҫӗсем ыратма пуҫланӑ; ҫыннисем анҭах

мар, выљăхĕсем те аптăраса çитнĕ. Вара тĕвесен куçĕсене ђей шывĕпе тата хура-тăхлан (свинец) шывĕпе çунă. Çынсем те çав амаљсемпех усă курнă. Кăвак куçлăхран китех усси пулман. Касаксем тата хăйсен куçĕсене тутăрсемпе çыхнă. Çав çулпуçĕ кăшт кайсанах, çулне çĕттернĕ те, ăна вара килне йанă.

Пршеваљски çўлĕ Тан-ла йатлă тусем урлă каçсан, çакăнта ăна кил çуртсăр пурăнакан типетсем хупăрланă. Çав типетсем малтан çу сутан пек пулса, караван патне пынă та, калаçма пуçланă, унтан сасартăк, асăрхаман хушăра, сăннисене, хĕçĕсене туртса кăларнă та, тапратнă çўревçĕсене çĕмĕрме. Алă вĕççĕн кусене çĕнтерес çуккине курнă та, типетсем ту çинелле тарнă, вара унта пăшал хăйăвĕсене ђĕртсе йанă, тата хăйсен ђĕнрен тунă ђăлтăркисем çине (пращасем çине) хурса, ђулпа пит вирлĕ пере пуçланă. Пăшал пени илтĕнсен, темиçе пуљкка шăхăрса иртсе кайсан, Пршеваљски те касаксене вăрçă тапратма хушнă. Тăват вăрă-хурах çавăнтах вилсе виртнă, тата аманнисем темиçе те пулнă. Ыттисем хăранипе тарма тытăннă. Çĕр каçах таврари тусем çинђе тискер сасăсем илтĕннĕ: типетсем хăйсене хур-тăвакансене хирĕç тавăрма хатĕрленнĕ. Тепĕр кунне ирхине ђăнах та каравана утлă типетсем йĕри-таврах хупăрласа илнĕ, вĕсем мĕн пурĕ 70 çын патнеллех пулнă. Çав вăрсăра Пршеваљски Типет çыннисене çĕнтернĕ.

Тан-ла çинђен ансан, каравана тĕл пулнă Тсайтамри виçĕ монкол. Çав çынсем ак мĕнле хыпар çитернĕ: Лхассăра вырăссем талай-ламана вăрлама килеççĕ тенĕ сăмах сарăлнă. Çавăнти халăх çав сăмаха ĕненнĕ те каланă: малтан вырăссем пире пурсăмăра та вĕлерсе пĕтерђĕр те, вара хулана кĕресси мĕн пулĕ унта, тенĕ. Унђен те пулман, Типет ĕçлĕ-çыннисем канвуйсемпе Пршеваљски патне кĕçех çитнĕ. Çав ĕçлĕ-çынсем каланă: сире Типетри пуçлăхсем малалла йама хушмарĕç, тенĕ. Пршеваљски вара вĕсене хăйĕн Киттай пилетне кăтартнă та, малалла çул пама ыйтнă. Ĕçлĕ-çынсем каравана ђарăнма хушнă та, хăйсем Лхасса çын ђуптарнă. Çавăнтан хыпар икĕ ернесĕр кайалла килме пултарайман. Каравана çакăнта ђарса тăратни пит йуранă, мĕншĕн тесен, çынсем те, выљăхсем те пит ывăннă пулнă. Пршеваљски вара çав тав-

рара куҫса ҫӳрекен кил-ҫуртсӑр Типет халӑхӗ йепле пурӑннине лайӑх курса пӗлсе ҫитнӗ.

Вӗсем йак ҫӑмӗнђен тӗртсе тунӑ хура ђатӑрсевђе пурӑннӑ; ђатӑрӗ тӳпинђе сутӑ кӗмелӗх, тӗтӗм тухмалӑх шӑтӑк пулнӑ. Шӑтӑкӗ тӗлӗнђе, ҫӗрте, вуђахра пӗр майах вут, аркал ҫунса тӑнӑ, ҫӗр-урайне вуђаххи тавра выртма-ларма така тирӗсене сарса хунӑ. Ђатӑрӗнђех каткисенђе йак сӗђӗсем йӳҫсе ларнӑ. Йаксем вӗсемшӗн пит усӑлӑ выљӑхсем, мӗншӗн тесен вӗсем сӗт те, ҫӑм та параҫҫӗ. Ҫав выљӑхсем пӑр ҫинђен те пит аван ҫӳреҫҫӗ, ытла шуҫлӑк (йака) ҫӗрте вӗсем тӑрмалапа*) кайнӑ пекех ђӗрнисемпе шуҫаҫҫӗ. Типет ҫыннисем сӗтрен пуҫне тата така какайӗ ҫийеҫҫӗ; какайне вӗсем ђас-ђасах пӗҫермесӗрех ҫийеҫҫӗ; ҫинӗ ђухне кил-хуҫи ыттисене ашне кас-каса илсе йытӑсене пӑрахса панӑ пек, пӑрахса парать.

Тӗнӗ вӗсен Пут тӗнӗ; вӗсем пит Турӑ шутлӑ: ҫӳренӗ ђухне те пӗр майах кӗлӗсем калаҫҫӗ, сулахай аллинђе пурак пек ҫаврака йапала ҫӗклесе ҫавӑрсах ҫӳреҫҫӗ, унӑн ӑшӗнђӗ кӗлӗ ҫырнӑ хут татӑкӗсем пур. Кашнийех мӑйӗсенђен пӗђӗк ӗрђа пекки ҫакса ҫӳреҫҫӗ, ун ӑшне туррисен кӗлеткисене тата тем тӗрлӗ акӑш-макӑшсем тултарнӑ. Ҫынна хӑналантарма вӗсем йуратман, шутсӑр укҫашӑн пулнӑ, тата пит суйеҫтерме йуратнӑ. Ҫавӑнпа монколсем вӗсем ҫинђен ак ҫапла каланӑ: вӗсен ђунӗсем хӑрӑм пек, тенӗ. Монколсем калани ђӑпах та выраҫлах пулнӑ.

Вилесене вӗсем нихҫан та пытарман, йаланах путеккайӑкӗсене, тата йур-кайӑкӗсене валли кӑлара-кӑлара пӑрахнӑ. Ҫав кайӑксем, типетсем ҫапла вӗрентнӗ пирки, пӗрех майах Пршеваљски караванӗ тӑнӑ ҫӗре хайсен шутсӑр пысӑк ҫунађесемпе вӗҫе-вӗҫе пынӑ, вӗсен ҫунађӗсем сарса йарсан, 9 фута йахӑн пулнӑ.

Талай-лама йанӑ ҫынсем вунултӑ кунган ҫитнӗ те: вырӑссене малалла йамалла мар, тесе каланӑ. иртсе кайсан кайран Пршеваљски ак ҫапла сӑмах илтнӗ: вырӑссем Лхасса ан килсе

*) Куњккапа, куњккипе.

кӗҫҫӗр, тесе, унта кӗлӗсем тунӑ, тет, тата ламасем пӗр кӗлӗ-ҫуртӗнҫе йытӑ пуҫӗсене ҫурса, ҫӗлхе вӗрсе хӑтланнӑ, тет.

Кайалла таварӑннӑ ҫух, Пршеваљски Кукку-Нор кӳллине, тата Сарӑ-Шыв пуҫламӑшне лайӑх пӑхса пӗлсе тухнӑ та, вӗсене план ҫине паллӑ тунӑ; унтан вара Копи урлӑ Раҫҫейе таварӑннӑ. Пршеваљски ҫапла икӗ ҫул ҫӳренӗ, ҫав вӑхӑтра вӑл Вӗта-Аҫаре 7180 ҫухрӑм тунӑ. Унтан кайран вӑл Вӑта-Аҫийе тата кайса ҫӳренӗ; ҫи йулашкинҫен, 5-мӗш хут кайсан, вӑл Ыссык-Кӳлӗ хӗрринҫе ҫирленӗ те, пӗр хулара вилнӗ; ҫав хулана кайран ҫав ҫаплӑ ҫӳревҫӗ йаҫӗпе асӑнмалӑх Пршеваљски (Пржевальск) тесе йат панӑ.

Ливинкстон.

Ливинкстон Анкли ҫӗрӗнҫе ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ-амӑшӗ наҫар ҫынсем пулнӑ. Пӗҫӗкҫӗ ҫухне вӑл хапрӑк-савӑтра ӗҫленӗ, кайран ӑшкула вӗренме кайнӑ. Вӑл пит тӑрӑшса вӗреннӗ: 16 ҫулта латтин ҫӗлхипе калаҫма мар, стихсем ҫырма та пултарнӑ. Тата Ливинкстон Йӑванкӗлпе ытти тӗн ҫинҫен ҫырнӑ кӗнекесене вулама йуратнӑ. Ҫирӗм ҫула ҫитсен, Ливинкстонӑн тӗвшӗн пит ӗҫлесси килнӗ, ҫавӑнпа вӑл инҫе ҫӗре, тиккисем патне кайса, Христос тӗнӗ ҫинҫен вӗрентес-ҫӗ, тесе шухӑшла пуҫланӑ.

Ҫак ӗҫе вырӑна кӳрес тесе, Ливинкстон халӑха Христос тӗнӗ ҫинҫен вӗрентме, тата тухтӑра кӗме йексамӗн панӑ. Унтан вӑл Африк ҫӗрне кӑнтӑр йеппелле кайнӑ. Унта Оранш (Оранжевая) тийекен шыв хӗрринҫе, кафрсем патӗнҫе, вӗсен ҫӗлхипе вӗренсе ҫылай ҫул пурӑннӑ. Вӑл вӗсене, аҫасене йуратнӑ пек, пӗтӗм ырӑ кӑмӑлтан йуратнӑ. Тӗрлӗ инкек-синкекре вӑл вӗсене ырӑ сӑмахсемпе йӑпатнӑ; пурне те ӑса вӗрентнӗ, ҫирлисене сыватнӑ, ҫавӑнпа та унӑн ӗҫӗ малалла кайнӑ, ун ҫинҫен ырӑ йат йӗри-тавра темиҫе ҫӗр ҫухрӑм таран сарӑлнӑ. Ливинкстон ҫур-ҫӗр йеннелле куҫса пынӑ. Ҫапла вӑл Лимппоппо йатлӑ шыв патне пырса ҫитнӗ. Ҫак шыв патӗнҫе ӑна пӗр арӑслан ҫутах ҫурса пӑрахман. Ку ӗҫ акӑ мӗнле пулнӑ. Пӗрре Ливинкстон ытти кафр ҫынвисемпе ухатана кайсан пӗр арӑслана пӑшалпа персе ӳкернӗ. Анҫах

арăсланĕ сасартăк сиксе тăвă та, Ливинкстона хăй урисем айне туса, унăн сулахай алливе кăшла пуçлавă. Çав вăхăтра кусем патне пĕр кафр ђупса пынă. Вăл, Христос тĕнне анђахрах кĕнĕскер, Ливинкстона пит йуратаканскер пулнă. Арăслан çак кафр çине сиксе ларнă та, ăна пит хытă амантнă. Тепĕр кафрĕ ђупса пырсе, арăслана сăпăпа ђикнĕ. Ливинкстон çак çынна, нумай пулмасť, вилес пек ђирлĕ выртнă çĕртен сыватнă. Арăслан Ливинкстона 10 çĕртен суранлатнă, сулахай аллине хытă амантнă. Вăл вара нумайђђен ђирлесе пурăннă, сулахай алли унăн ĕмĕрех вăйсăрланса йулнă.

Ливинкстон Африк çĕрин пĕтĕм çур-çĕр йенне пĕлсе çӳресшĕн пулнă. Типĕ-хир Калахари урлă каççан; вăл Сампеçи тийекен пысăк шыв патне пырса çитнĕ. Йевроп çыннисем çак шывăн пуçламăшне анђах пĕлнĕ. Унти некĕрсем Ливинкстона савăнса хĕпĕртесе хирĕç тухса илнĕ. Вĕсен патши хăйĕн çыннисене. Ливинкстона, хăйне хисепленĕ пек, хисеплеме хушнă. Ливинкстон йала пырса кĕнĕ ђухне, йал пуçлăхĕ: „Акă аслă пуçлăх Арăслан килет!“ тесе кăшкăрса тăнă.

Ку йалтан çур-çĕр йеннелли йалсем те Ливинкстона хĕпĕртесе хирĕç тухса илнĕ. Вĕсен хĕр-арăм патши унпа туслă пуласшăн пулнă. Унăн хĕрĕ Левинкстона кӳршĕ патши патне ăсатса йама пынă, вăл патша унăн муђђăшĕ пулнă. Патша хĕрĕ вăйлă çумăр айĕн, ђăтлăх вăрман витĕр, Ливинкстон караванĕсене йертсе пынă. Ку патша патĕнђе вăл хăй ĕмĕрĕнђе ђи малтан тимĕрленĕ ђурасене курнă. Çак некĕрсен ђурасене ирĕксĕрлесе тытса тăрас йăла пулнă. Вĕсен патши Ливинкстона пĕр 5 çулхи ађа-ђурана парасшăн пулнă, анђах лешĕ илмен те, вăл унтан пит тĕлĕннĕ. Çак йалтан тухсан, вĕсем сарлака лама тухнă. Ку ламра çăмăр пĕр майах çунăран пур çĕртре те шыв кӳлленсе тăвă. Вăкăр çинђе ларса пыракан Ливинкстона шыв вырăнăн ђăркуççине çитнĕ, вырăнăн пилĕке çитнĕ. Çак ламран иртсессĕн, йухан шывсем тĕл-пулнă. Вăл шывсем ĕнтĕ кăнтăр йеннелле йухман, çур-çĕр йеннелле йухнă. Вĕсем Сампеçипе Ковко турађĕсене уйăрса тăракан çӳлĕ сăрт çинђе пулнă.

Ливинкстон Сампеçи тăрăх çӳрени.

Левинкстон троппик вăрманĕсенҫе нумайҫҫен çӳренĕ. Унтан вăл Сампеçи шывĕ йепле йухнине пĕлесшĕн пулнă. Вара 1855-мĕш çулта вăл çула тухса кайнă. Некĕрсен патши Секкелет ăна хăйĕн ик çĕр салтакĕпе ăсатнă. Каç выртма вырăн хатĕрлемешкĕн каравана малтан йанă. Ливинкстонпа Секкелет кайран пынă. Вĕсем пымалли çул çинҫе тсетсе йатлă шăнасем пулнă. Çавăнпа вĕсем çула çĕрле тухса кайнă. Каç сĕм-тĕттĕм пулнă, вăкăҫĕ-вăхăҫĕпе çиçĕм çиçнипе анҫах çутăлса тăнă, унтан çумăр ҫĕреслетсех йанă. Шăрăх кун хыççăн сивĕ каç пулнă. Ливинкстон йĕпенсе шăнса кайнипе ҫĕтресе тăнă. Вĕсем вара малтан çитнĕ çынсем вут хунҫă çĕре çитнĕ те, çавăнтах çĕр каçма шухăшланă. Ливинкстон пӳр çĕр çинех выртнă, витĕнме унăн нимĕн те пулман. Ун витĕнмеллине малтан йанă, çавăнпа Секкелет хăйĕн тумтирне хывса, Ливинкстона панă та, витĕнме хушнă, хăй çара çĕр çине выртнă. Ливинкстонпа Секкелет унтан Сампеçи шыв хĕррине пырса çитнĕ. Вăл тĕлте шыв сарлакăшĕ пĕр çухрăмран та ытла пулнă, вăл çавăнта сырмана татса кайакан шырланка питĕ шавласа йухнă. Шырланкин çӳллĕшĕ 50 ҫалăш пулнă, вăл ĕлĕк вулккаппа шăранса кайса, кайран шăнса хытса ларнă пасалҫт пулнă. Шыв йухнă çĕрте шыв сирпĕнҫĕкĕ темĕн ҫухлĕ пулат, вăл çӳлелле çавра-çил пек, йупа пек пулса хăпарат. Инçетрен пăхсан, кĕрленкĕрен тĕтĕм тухнă пек тăрат, çавăнпала çав çĕрти çынсем ăна *Мĕкĕрекен Тĕтĕм* теççĕ. Ливинкстон акăлҫан патши йаҫĕпе ăна *Виктори* тесе йат панă. Çав кĕрленкĕ патĕнҫе вăл Секкелетрен уйăрăлнă та, малалла 120 çынпа пĕрле кайнă.

Çулĕ Сампеçин сулахай йенҫен çӳлĕ, хĕррипе пынă. Вырăнĕ питĕ хитре пулнă, сăртлă, илемлĕ саваннăсем (çеçен-хирсем) вăрмансемпе ылмашса пынă. Пур çĕрте те пит нумай ирĕкре пурăнакан кайăксем тĕл-пулнă. Ак, сăмахран каласан: Ливинкстон хăйĕн кун кĕнеки çинҫе ак çапла çырат: „Епĕ сăрт çи не хăпарсассăн, темиçе çĕр пуйвăлсем, çепрăсем куртăм, вĕсен хушшинҫе слонсем пит ҫаплă çӳрет-ҫĕç. Çакна курсассăн, хвоттокрахви ӳкерменшĕн епĕ питĕ ӳкĕнтĕм, мĕншĕн тесен çак çĕре пăшал килсе кĕрсессĕн, вĕсем пурте пĕтĕç. Епир

лапа ансассӑн, ҫак кайӑксем, епир ҫывӑхрине курсассӑн та, пиртен пӗрте хӑрамарӗҫ. Епир слонсем патӗнҫен ҫӗр ҫалӑш ытларахран иртсе кайрӑмӑр, вӗсем пире курман пек, пысӑк хӑлхисемпе сулласа, пӗр тапранмасӑр йывӑҫсем айӗнҫе тӑрса йулҫӗҫ. Ҫакна курни мана авалхи вӑхӑт ҫинҫен, малтанхи етемсем ҫинҫен шухӑша йаҫӗ, тет. Некӗрсен йӑхин пуҫлахӗсем Ливинкстон валли ҫимӗҫсем йанӑ; ун вырӑнне вӑл вӗсене, пӗрер аршӑн пустав пек, кӑштшар парнӗсем пара-пара йанӑ. Некӗрсем ытлашши ыйтман та. Ливинкстонӑн ухутана кайса килсен, кайӑк ашӗ нумай пулсан, вӑл вара ӑна унти ҫынсене валеҫнӗ. Хӑйӗн ҫитмесен, ӑна унти ҫынсем панӑ.

Кайсан-кайсан, вӑл хӑрушӑ Мпент патша ҫӗрне кӗнӗ. Ҫав Мпент вӗсене хирӗҫ вӑйлӑ отрет йанӑ. Отретӗнҫен вара икӗ старик тухнӑ та: ку мӗнле йут ҫын килҫӗ? тесе ыйтнӑ. Ливинкстонӗ: „Епӗ акӑлҫан ҫынни,“ тенӗ. Лешӗ: „Епир ун пек халӑха пӗлместпӗр, тенӗ. Есӗ порттукал ҫынни пулмалла, епир вӗсемпеле вӑрҫатпӑр“, тенӗ. Левинкстон ҫӑнах та хӑй порттукал маррине ӗнентерес тесе, вӗсене хӑйӗн сарӑ ҫӳҫне, шурӑ кӑкӑрне уҫса кӑтартнӑ. Стариксем вара нимӗн тумасӑрах кайнӑ. Мпент аслӑ ҫыннисене канаш тума пуҫтарнӑ. Ҫав хутлӑхра Ливинкстон, пӗр ҫирлӗ некӗре илсе кайма, тесе, йала пӗр ҫынна кимӗ илме йанӑ. Мпент ҫавна пӗлсен, хӗпӗртесе каланӑ: ҫӑнахах ку шурӑ ҫын пирӗн майлӑ ҫын, пирӗн тус: вӑл ахаҫ некӗршӗн ҫав тери тӑрӑшат! тенӗ.

Хӗвел-тухӑҫ йенҫи Африк ҫыранӗ патне тухсан, Ливинкстон акӑлҫансен карапне кӗтсе илнӗ те, ун ҫинҫе килне таврӑннӑ.

Кайран Ливинкстон каллех Африке таврӑннӑ та, унта хӑйӗн кунӗ пӗтиҫҫенех ҫӳренӗ. Ҫу уйӑхин 1-мӗш кунӗнҫе; 1873-мӗш ҫулта, унӑн тарҫисем ӑна шалашра вилӗ тупнӑ. Вӑл хӑйӗн курӑкран тунӑ вырӑнӗ патӗнҫе, пуҫне аллисем ҫине ҫиксе, ҫӑр-куҫҫи ҫинҫе тӑнӑ. Унӑн вилӗмӗ ун патне ҫапла кӗл-тунӑ сехетре ҫитнӗ. Унӑн ырӑ тарҫисем унӑн ҫӗрипе ӑшҫиккине ҫавӑнта пысӑк йывӑҫ айне пытарнӑ; ӳтне типӗтсе, ҫыран хӗррине йӑтса кайна та, акӑлҫансен карапӗ ҫинҫи кӑппиттанӑн аллине Ливинкстонӑн мӗн пур ҫырнӑ йапалисене картсене, тата кашни кун ҫырнӑ кӗнекисене пӗтӗмлех панӑ.

Стенли.

Иртнĕ ĕмĕрте, утмăлăмĕш çулсенче, нумай çынсем Ливинкстон çинчен шухăшла пуçланă: „Пурăнат-ши ку, пурăнмаст-ши? Пурăнат пулсан, мĕншĕн çак пилĕк çул хушшинче ун çинчен ним сас-хура та илтĕнмест“, тенĕ. Вара Америкре *Нью-Йорк Херăльт* йатлă хаçата кăларакан çын хăйĕн йулташне, Стенли йатлăскере, Ливинкстона шырама Африке йанă.

Стенли 1871-мĕш çулта Санçипара çитсен, вăл унта шăрçасем, вунă пăта йахăн пăхăр пралук, тата темиçе пин аршăн çĕр-мамăкĕнчен тунă пусма илнĕ. Шăрçасем Африкре пăхăр укçа вырăнне, пăхăр пралукĕ ылттăн вырăнне, çĕр-мамăкĕ пусми кĕмĕл укçа вырăнне çӳренĕ.

Африк çĕрне çитсессĕн, Стенли пĕр уйăх хушшинче Танканйикка пĕрин хыççăн пĕрне пилĕк караван йанă. Хăй вăл Ливинкстон çавăнта пурăнат пулĕ, тесе шухăшланă. Караванĕсем унăн пĕр пек пулман, хăшĕ пысăк, хăшĕ пĕчĕккĕ пулнă. Йулашки караванпа Стенли хăй те кайнă. Вăл питĕ пысăк пулнă, унта çынсăр пуçне 17 ашак, 2 йытă, тата лаша пулнă. Пĕр лаши питĕ лайăх пулнă, ăна Стенлийе Санçипар султтанĕ парне панă.

Вĕсен пĕр май сукмакпа вăрман витĕр кайма пулнă. Çул икĕ айăккипе те питĕ пахха çарансем пулнă. Çавăн чухле çаран çинче пулсан та, унти халăх выльăх—чĕрлĕх çапах усраман, мĕншĕн тесен, унта *тсетсе* йатлă шăнасем нумай. Малтанах Стенлин ашакĕсемпе лашисем ним сисмесĕр малалла кайнă. Çапла вĕсем пĕр асап курмасăр пĕр пĕчĕк шыв хĕррине çитнĕ. Çав шыв хĕрринче вĕсене хайхи шăнасем тапăннă.

Стенли каланă тăрăх: çав шăнасем пĕр пек пулман, хăшĕ питĕ пысăк, хăшĕ тата хамăр пӳртри шăнасенчен ытла пысăках та пулман. Сăрлатасса та вĕсем пĕр пек сăрлатман. Пысăккисем мăн сасăпа, пĕчĕккисем çинçерех сасăпа сăрлатса çӳренĕ. Çак шăнасем лашапа ашаксене питĕ хытă сăхнă, лашисем чĕп чĕр йун пулса, ним тума пĕлмесĕр сиксе-кăна тăпнă.

Стенли вумай шăласем тытнă та, çав шăнасенђен тсетсе хăшĕ тесе, уйăрасшăн пулнă. Малтан вăл ђи пысăкки тсетсе пулĕ, тесе шухăшланă, анђах ђи пысăккисем, Ливинкстон каланă пек, тсетсе пулман. Çавăнти çынсем: çав шăнасем выђăхђĕрлĕхе питĕ пĕтерессĕ, тенĕ. Тсетсе пўртри шăнасенђен кăшт анђах пысăкрах пулнă. Вăл хуллеп ађтпа йурланă, сăхсан, питĕ ыраттарнă. Çавна Стенли кайран, тин пĕлсе çитнĕ. Çавăнтан кайран, темиçе кун иртсен, султтан панă арап лаши вилнĕ. Стенлин хăйпе пĕрле илнĕ выђăхсем ыттисем те пĕђĕккĕн-пĕђĕккĕн вилсе пĕтнĕ. Вĕсем те тсетсе çыртнăран, те урăх йапаларан вилнĕ, ăна Стенли пĕлме пултарайман.

Çăва тухни пĕр уйăх çитсен, Стенли арапсен пысăк караванне тĕл-пулнă. Çав караван çинђе 300 слунăн асав-шăлĕсем пулнă, çавсене Танканйиккă йатлă кўлĕ патĕнђен илсе пынă. Арап çынни, караван пуçлăхĕ, Стенлийе Ливинкстон çинђен каласа пĕлтернĕ: вăл унпала пĕр пўртрех икĕ ерне хушши пĕрле пурăннă. Тата вăл Стенлийе Ливинкстон ватăлни çинђен, унăн сухалĕсем ўсни çинђен, вăл, уçă мар выртса, нађарланни çинђен йăлтах каласа кăтартнă.

Çурма çула йахăн кайсассăн, Стенлийе нийепле те малалла кайма май килмен. Вăл кайас çĕре вăрçă çаварса илнĕ. Некĕрсен патши Мирампо, халăх йунне ĕçме йуратакансскер, çула çаварса илнĕ те: çак çулпа нимĕнле каравана та йамаслăп, тесе пĕлтернĕ. Аран хуçисем некĕрсенђен икĕ пин салтак пухнă та, Мирампона çул çинђен хăваласа йарас тесе, ăна хирĕç кайнă. Стенли те хăйĕн тарçисемпе вĕсемпе пĕрле кайнă. Анђах çапăçма патне çитсен, унăн тарçисем пĕтĕмпех тарма тытăннă. Стенли хăй те кĕç тыткăна лекмен.

Çакăн пек ăнман хыççăн, Стенли Мирампоран нимĕн çулсăрах кăнтăрла йенне айакран иртсе кайнă. Йапаласене йăтса пыракансем питĕ сахалăн пынă, çавăн пирки унăн хăш-хăш йапалисене арапсем патнех хăвармалла пулнă. Çулĕ вăрман витĕр, саваннăсем урлă кайнă, унта ђас-ђасах çепрă кĕтĕвĕсем, тата пуйвăл кĕтĕвĕсем тĕл-пулнă, шывсенђе крокотилсем йăшăлтатса выртнă. Пĕр çĕртĕ питĕ тăрă шыв йухса выртнă. Çав шыв хĕрринђе Стенли салтăннă та, шыва кĕрес тесе, сикме, аллисене тăснă, анђах сасартăк шывра тимĕскер хураскер, вă-

рӑмҫкер выртнине курах кайнӑ. Лайӑхрах пӑхсассӑн, вӑл крок-котил пуҫне курнӑ та, пит хӑранӑ. Ҫавна курсан, Стенли ӗнтӗ темӗнле тӑрӑ шыв курсан та, Африкре шыва кӗрессӗм ҫук, тенӗ.

Караван Танканйиккӑ патне ҫите пуҫласан, йалсем курӑна пуҫланӑ. Ҫав йалсен патшисем питӗ пысӑк *парӑм* ыйтнӑ. Стенли малтан парсах пыркаланӑ, анҫах парса пырсассӑн, Ливинкстон патне унӑн ним хатӗрсӗрех пырса кӗмелле пулнӑ. Ҫавӑнпа вӑл парӑмсене текех парасшӑн пулман та, ҫейеленнӗ: вӑл йаланах йалсем патӗнҫен каҫпа питӗ хуллен ҫирте-ирте кайнӑ. Йулашкинҫен Стенли вӑрӑм ҫула пӗтернӗ. Ҫул ҫине тухнӑранпа 236-мӗш кунӗнҫе Стенли умӗнҫе ҫап-ҫутӑ сарлака кӳлӗ, тата йӗри-тавра паҫмӑлӑ йал курӑнса кайнӑ. Вара Стенли: „Ҫак Уҫиҫи йалӗ. Ура!" тесе кӑшкӑрса йанӑ; ун хыҫҫӑн пурте хӑпӗртенипе аслати пек кӑшкӑрнӑ. Ҫав кунах вӑл Ливинкстона курнӑ. Ливинкстон усӑ мар пулнӑ, ун ним хатӗр те пулман, ниҫтан илессине те кӗтмен. Хатӗрсемсӗр пуҫне тата Стенли Ливинкстон патне ҫырусем илсе пынӑ, ҫав ҫырусем 5 ҫул хушши Санҫипарта купаланса выртнӑ.

Кайалла кайнӑ ҫух, Ливинкстон Стенлийе хӑй хатӗрӗсене хӑварнӑ арап ҫӗрне ҫитиҫҫен ӑсатса йанӑ. Унта вара вӗсем пӗр-пӗринҫен уйӑрӑлнӑ. Ливинкстон каллех Африке кайнӑ, Стенли Америке таврӑннӑ.

Стенли Африк ҫӗрӗнҫе урлӑ-пирлӗ ҫӳрени.

1874-мӗш ҫулта, Ливинкстон вилсессӗн, Стенли хӑй тепӗр хут ҫул ҫӳреме тухса кайнӑ, вӑл Конко шывӗ мӗнле йухнине пӗлесшӗн пулнӑ. Хатӗр ҫитсессӗн, вӑл, хӑйпе пӗрле мӗн пурӗ виҫӗ ҫӗр утмӑл ҫынна пуҫтарӑнса, каравансемпе ҫула тухса кайнӑ. Танканйиккӑ кӳлли патне ҫитсессӗн, ун караванӗ ҫурри те йулман: хӑшӗ-хӑшӗ тиккисемпе вӑрҫнӑ ҫух вилсе пӗтнӗ, ыттисем тата ҫул ҫинҫи йыварлӑхсенҫен хӑраса кайалла тарнӑ.

Танканйиккӑ кӳллинҫен хӗвел анӑҫнерех, ҫынҫийекен етемсем пурӑннӑ. Стенли, шикленнӗ майӗпе, хӑйӗн караванне ҫӗмӗртерес мар, тесе, пӗр пуйан арап ҫыннипе ак ҫапла килӗшӳ тунӑ: арап ҫыннин 250 салтакпа виҫӗ уйӑхҫен вӗсене сыхла-

са ҫӳремелле, уншăн ăна 5000 толлăр памалла пулнă, вăл 10000 тенкĕ пулаť. Ҫаксем тапранса [кайнă-кайманах,] пĕр пысăк сĕм-вăрмана пырса кĕнĕ. Ку вăрманта питĕ тĕттĕм пулнă. Ҫавăнпа Стенли тăп-тăр кăнтăрла хăй кĕнеки ҫине аран ҫыркаланă. Йывăҫсем ҫинҭен сывлăм, ҫумăр ҫунă пек, шăпăртатнă. Ҫавăнпа вĕсен тумтирĕсем пĕртте типсе курман. Ҫăрăнса тăракан пыҭҭăк ҫинҭе урисем пута-пута ларса асапланнă, аллисемпе ҫыхланса ларнă йывăҫ тураҭĕсене сирсе пынă, ҫитменнине вырăнĕ-вырăнĕпе] пуртăпа касса ҫул уҫмалла пулнă.

Икĕ ерне хĕвел ҫутти курмасăр, вăрманпа пырса, йулашкинҭен Ливинкстон тупнă Луалапă йатлă шыв хĕррине пырса тухнă.

Нил шывĕ-ши ку, Конко шывĕ-ши? пирĕн ҫакна мĕнле те пулин, пĕлме тăрăшас пулаť, тенĕ Стенли. Ҫак вăхăтра Стенли сыннисемпе арап салтакĕсем: калла кайатпăр, тесе кутăнлана пуҫланă. Стенли тем каласа йăпатсан та, вĕсен шухăшланă шухăшне сĕвĕрсе йарайман. Вара Стенли пурне те пĕр ҫĕре пухса каланă: „Епĕ пĕҭҭенех Пысăк Тăварлă-Шыв патне, оккеан патне, ҫак ҫырмапа ишсе кайăп; есир, манпа пĕрле ҫакăн ҭухлĕ килнĕскерсем, мĕнле вара мана пĕҭҭен пăрахса хăварăр? Есир вилес пулсан та, аҭисем аштĕ хыҫҫăн пынă пек, ман хыҫҫăн пымăр-и вара?“ тенĕ. Пĕр некĕр ҫавăнта ҭупса пырса, Стенли урисене ыталаса илсе, кăшкăрса йанă: „Пуҫлăхăм, пăх-ха: епĕ пурăнмалла пулсан та, вилмелле пулсан та, санран уйăрăлассăм ҫук!“ тенĕ. Ҫавăнтах: „Епĕ те! епĕ те!“ тенĕ сасăсем илтĕннĕ. Ҫакна кура, вара арапсем те малалла кайма шухăш тытнă.

Стенли вара кун хыҫҫăн хăйĕн експетитсине икĕ ушкăна уйăрнă. Пĕр ушкăнĕ шывпа ишсе пынă, тепĕри ҫырма хĕррипе ҭĕтлăх вăрманпа ҫул уҫса пынă. Каҫ пулттипе, ҫĕр каҫма, икĕ ушкăнĕ те пĕр ҫĕре пуҫтараннă. Ҫырма хĕррипе пыракан ушкăнĕ нумай йал витĕр тухкаланă, Ҫак йалсен урамĕсене илемшĕн шаҭҫа тăррине ҫын пуҫĕсене ҫака-ҫака йанă. Кунта ҫын ҫиекен етемсем пурăннă; салтаксем пыра пуҫласан, вĕсем вăрманалла тарнă, анҭах кăшт тăрсанах, вĕсем, пĕрле пухăнса, сисĕнҭĕксĕр пыра-пыра ҫĕмĕрнĕ. Стенли йал тĕлĕнҭен иртсе

пынă ђух, ђас-ђасах çав некĕрсем калаçнине илткеленĕ. Вĕсем: „Атăр, хĕвел çыннисен какайне çийĕпĕр ĕнтĕ, пирĕн какай нумай!“ тенĕ.

Пĕр çĕрте çапла Стенлийе хирĕç тиккисем вунтăватă кимĕпе тухнă. Пĕр тиккисен ђĕлхине пĕлекен вĕсене: пирĕн мĕн пурĕ те пĕр пысăк кимĕпе пилĕк пĕђĕк кимĕ (путник) анђах, епир вăрçакан çынсем мар, сывмар çынсем илсе пырăтпăр! тесе кăшкăрнă. Авђах тиккисем айакранах хайар сассисемпе кăшкăрса ухăсенђен пере пуçланă Сгенли вара хăйĕн салтакĕсене тиккисен киммисене тĕплесе харăс пеме хушнă. Тиккисен киммисем шăтни пĕри шыв тĕпнелле пута пуçланă. Çакна курсан. тиккисем тарма тытăннă. Çавăнтан кайран вара шывра та, çĕр çинђе те вăрçă тапранса кайнă. Стенли çине пĕр шыв херринђе пурăнакан етеме çийекен некĕрсем анђах мар, тата çитменнине вăрман ăшĕнђе пурăнакан лутакай çынсем, карликсем те, пыра-пыра çĕмĕрнĕ Çак лутакай çынсем, ађă пек пĕђĕккĕ, упăте пек çăмламас пулнă; куçĕсем те упăтесен пек пĕр-пĕрин çывăхĕнђе тăнă. Вĕсем питĕ сийен тăваканскерсем пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем уххисенĕн йĕпĕсем вĕçне вĕлерекен йапала сĕрнĕ. Церре çапла Стенли çыннисем сухаллă пĕђĕк çынна тытнă. Вăл хăранипе ђĕтресе-çеç тăнă. Аллисенђе унăн ухă аврипе темиçе ухă пулнă, ухă вĕçĕсене хурапа сĕрнĕ, çийелтен çулçăпа ђĕркенĕ. Стенли пĕр уххине илнĕ те, çулçине илсе пăрахса, лутакай çынна тăрăнтаран пек тунă. Лешĕ аллисене кăкăри çине хурса: ан вĕлер! тесе кăшкăрса йанă.

Тиккисем Стенли çарне кăнтăрла та, çĕрле те пĕр майах хирĕç тапăннă. Қаçхине, çывăрнă ђухне, вĕсем лакăр пек туса ăна йĕри-тавра пĕренесемпе, çапăсемпе картланă, тата хуралсем тăратнă. Ђас-ђасах вĕсен каçхине тăрса çапăçмалла пулнă. Халран кайнипе, апат çук пирки, салтак хушшинђе ђирсем сарăлса, кунсерен икшер-виçшер çын вилнĕ. Арап çынни малалла кайма пăрахнă, калаçнă тăрăх, унăн тата сакăр утăм (переход) каймалла пулнă. Стенли хăй те апла кайма пулас çуккине пĕлнĕ, çавăнпа вăл арапа пĕр хирĕçтермесĕрех укçине тӳленĕ те, килне йанă. Çавăнтан кайран Стенли хăй çĕрле пĕр хирĕçекен йапала сисĕнђĕксĕр пырса кĕнĕ те, унтан çирĕм виçĕ кимĕ вăрласа пынă, вара хăйĕн çыннисене çав кимĕсем

ҫине лартса, малалла иртсе кайнӑ. Авӗах екваттӑр патӗнӗе, пӑртак хӗвел анӑҫнерех, шыв ҫаврӑнӑшӗнӗе кӗтмен инкек тӗл пулнӑ: кунта кӗрленкӗсем, ӗул-куписем йӗрки-йӗркипе ӗретленсе пынӑ.

Айакранах Стенли шыв хайӗррӑн шавланине илтнӗ, ҫитсессӗн вӑл курнӑ: ҫав тӗлте ҫырми ансӑр пулнӑ, сакӑлтаксенӗен шывӗ пӗтӗмпе кӑпӑкланса кайса, хӑрушӑн сиксе йухнӑ. Стенлин ирӗксӗрех киммисене шывран кӑларса, ҫыран хӗррипе сӗтӗрсе пымалла пулнӑ, вӑрманне касса, ҫул уҫмалла пулнӑ, ҫитменнине тата ҫын ҫийекен тиккисем пухӑна-пухӑна вӗсене тапӑннӑ. Хайсем: какай! какай! тесе кӑшкӑрнӑ. Стенли хӑйӗн салтакӗсене икӗ ушкӑна уйӑрнӑ: пӗри ҫапӑҫнӑ, тепӗри кимӗсене сӗтӗрсе пынӑ. Малтанхи ӗул патӗнӗен иртсе каймашкӑн 78 сахет тертленмелле пулнӑ. Ҫапла вӗсем иккӗмӗш ӗул патӗнӗен, виҫҫӗмӗш ӗул патӗнӗен, йулашкинӗен ҫиӗӗмӗш ӗул патӗнӗен тухса иртсе кайсан тин сарӑлса пӗр пек йухакан шыв ҫине пырса кӗнӗ.

Малалла кайнӑ ҫем кайса Стенли иккӗмӗш хут екваттӑр урлӑ каҫнӑ та, Конко шывӗ океана йухса кӗнӗ ҫӗрти сакӑлтаклӑ ҫӗре ҫитсе тӑнӑ, унта тем пысӑкӑш ӗулсем пулнӑ. Кунта каллех кимӗсене шывран кӑларса ҫыран хӗррипе сӗтӗрсе пымалла пулнӑ, пӗӗӗккӗрех сакӑлтаксенӗе канат вӗҫҫӗн йарӑнтарса пынӑ. Ҫапла мӗн пурӗ 32 шыв сакӑлтакӗ тӗл пулнӑ, вӗсем патӗнӗен тавра ҫӳресе 31 кун иртнӗ. Йулашкинӗен Санҫипартан тухни икӗ ҫул та тӑватӑ уйӑх тулнӑ ҫӗре Конко шывӗ вӑррине Стенли аран-аран пырса тухнӑ.

Тинӗсри ҫӳревҫӗ Ӗемс Кук.

Кук 1728-мӗш ҫулта Анклире наӗар хресӗен ҫемйинӗе ҫуралнӑ. Аӗа ӗухне вӑл йалта пурӑннӑ, ҫиӗ ҫултанпах вӑл ашшӗне хирти ӗҫсене тума пулӑша пуҫланӑ. Ашкулта вӑл ҫырма, шутлама-кӑна вӗреннӗ, унтан ӑна ашшӗ тинӗс хӗррияӗи пӗӗӗк хулара вак йапаласемпе суту-илӳ тӑвакан сутуҫӑ патне тарҫа панӑ. Лавккари ӗҫ ӑна пӗртте кӑмалне каймаи, вара вӑл тинӗс карапӗ ҫине йункӑна кӗнӗ, унтан тата ҫар карапӗ ҫине

матруса кӗнӗ. Ҫав вӑхӑтра акӑлҫансемпе хрантсуссем Канатӑ ҫӗрӗшӗн вӑрҫӑ пуҫланӑ. Ҫав вӑрҫӑра Кук мухтава тухнӑ тата ӑна лейттенант туса хунӑ. Кайран вӑл хӑй вӗреннине нумай малалла йанӑ, маттематтикпе астрономи вӗреннӗ.

1768-мӗш ҫулта ӑна Аслӑ тинӗсе кайакан ҫар карапин кӑппиттанӗ тунӑ. Америкӗн кӑнтӑр йенҫи Хорн йатлӑ сӑмсин патне ҫитсен, Кук, кӑнтӑрла йенҫе урӑх пӗлмӗн ҫӗр сук-шиха тесе, тӳрех унталла ишсе кайнӑ. Вӑл 120 сехет кайнӑ, анҫах ҫара тинӗсрен пуҫне урӑх нимӗн те курман. Вара вӑл ҫавӑрӑнса, хӗвел-анӑҫӗпе ҫур-ҫӗр хушшинелле кайнӑ та, Аслӑ оккеана кӗнӗ. Темиҫе ерне карап хыҫӗнҫен аҫпатроссемпе шыв-ҫарланӗсем вӗҫсе пынӑ, кайран вӗсем те курӑнми пулнӑ. Пӗр вӗҫекен пулӑсем анҫах хӑш ҫухне ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе шыв ҫине тухкаланӑ, хӑше карап урлӑ вӗҫе-вӗҫе каҫнӑ. Икӗ уйӑх карап, нимӗнле утрав та, ҫӗр палли те тӗл-пулмасӑр, вӗҫӗ-хӗррисӗр тинӗс тӑрӑх ишсе ҫӳрене. Анҫах кайсан-кайсан инҫетре, ҫанталӑк хӗрринҫе, ҫӳлӗ тусем курӑнах кайнӑ: ҫав Таитти утравӗ пулнӑ, ӑна темиҫе ҫул унҫен акӑлҫансем тупнӑ.

Карап йакӑр йарсанах, ӑна темӗн ҫухлӗ кимӗсем йӗритавра сырса илнӗ. Киммисем ҫинҫе тиккисем ларнӑ. Вӗсем хӑйсем килӗштернине, хӑйсем хӗпӗртенине кӑтартса, симӗс йывӑҫ тураҫӗсемпе сулланӑ. Хӑшӗ-хӑшӗ пулӑпа пахҫа ҫимӗҫӗсем илсе пынӑ та, матруссене панӑ. Матруссем хӗпӗртесе утрав ҫине тухса, ун тӑрӑх инҫете кайса килнӗ. Пур ҫӗрте те вӗсем коккос паҫмипе ҫӑкӑр йывӑҫин илемлӗ ӑрашҫисене курнӑ. Пӗр тимӗр пӑташӑн тиккисем акӑлҫансенеултӑ коккос мӑйӑри, йе аҫа пуҫӗ пысӑкӑшӗ ултӑ ҫӑкӑр йывӑҫҫи мӑйӑрне панӑ. Пӗр сыснана икӗ тимӗр пӑталла сутнӑ. Суту-илӳ тума тиккисем утравӑн пур йенҫен те пухӑннӑ: нумайӗшӗ ашӑкран тунӑ парӑс карнӑ кимӗсемпе пынӑ. Ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пухӑнса, вӗсем тӗрлӗ вӑййӑсем выҫанӑ, параппан ҫапса, шӑхлиҫӗ каласа ташланӑ. Тата вӗсем тинӗсре шыва кӗме пит йуратнӑ; ишессе вӗсем тӗлӗнсе каймалла лайӑх ишнӗ: улт ҫулхи аҫисем те вӗсен шыва пӗр-ик ҫалӑш таран ҫӑмнӑ, витӗр курӑнакан шывран пӑрахнӑ пӑтасене тупса кӑларнӑ.

Кук малалла кайма пуҫтарӑна пуҫласан, ун патне темӗн ҫухлӗ кимӗсем пухӑннӑ, карап ҫине шӑнӑҫма пултарнӑ таран

ҫын тулнӑ. Пурте: ҫул телейлӗ пултӑр! тенӗ; нумайӗшӗ макӑрнӑ. Кука пӗр кӗлӗҫӗ аҙипе иккӗшве илсе кайма йӑлӑннӑ. Кукӑн тӑлмаҙӑ пулман, ҫавӑнпа вӗсене хӑйпе пӗрле илсе кайма пулнӑ Акӑ ӗнтӗ йакӑрне хӑпартнӑ, парӑссем карӑнса тӑнӑ, карап вара уҫӑ тинӗсе тухса, кӑнтӑрла йеннелле кайнӑ.

Таиттирен Австралийе ҫитиҙӗв.

Ҫӗр курмасӑр Кук тинӗс тӑрӑх нумайҙӗн ишсе ҫӳренӗ. Вӑл ҫавӑнта пӗҙӗк утравсем темиҫе те тупнӑ. Ҫил-тӑвӑлра тинӗс пит хумханнӑ пирки, унӑн хӑйӗн ҫулӗнҙен темиҫе хут та урӑх ҫӗрелле пӑрӑнса ҫӳремелле пулнӑ. Икӗ уйӑх иртнӗ, ҫӗр ҫапах та курӑнман. Анҙах акӑ вӗсем тинӗспе йухса пыракан пӗренесене тӗл-пула пуҫлана, тата карапӑн маҙтисем *) ҫине кайӑксем пыра-пыра лара пуслана. Маҙтӑ тӑрне ҫыхнӑ пиҙӗкере ларакан матрусӗ малалла пит хытӑ тинкерсе пӑхса пынӑ. 1769-мӗш ҫулта йупа уйӑхин 6-мӗш кунӗнҙе ҫавӑнтан: ҫӗр! тесе кӑшкӑрни илтӗнсе кайнӑ. Кӑшт тӑрсан, палуп ҫинҙен те инҫетри тусем курӑна пуҫланӑ. Патнерех ҫывхарсан, вӑл тусем йарӑмӑн-йарӑмӑн тӑсӑлса тӑни паллах пулнӑ. Пӗр йарӑмӗ ҫинҙе йур выртнӑ.

Хайхи ҫӳревҫӗсем йакӑр йанӑ та, тинӗс херрине ҫӗр ҫине тухнӑ Унта вӗсем ҫеҫен улӑхсем, вӑрмансем курнӑ, анҙах вӗсем ӑшӑ ҫӗрти, троппикри пек пулман; паљмӑпа панан тавраш ниҗӗн те курӑнман. Инҫетре ту-айаккисенҙе хирсем, пӳртсем курӑннӑ; кӗҫех унта пурӑнакан ҫыннисем те курӑнса кайнӑ. Вӗсем вӑрӑм сӑнӑсемпе, ҙулран тунӑ пысӑк пуртӑсемпе кӗтӗвӗпе кӗпӗрлевсе пынӑ. Вӗсен ҫийӗнҙе тумтир ҫукпа пӗрех, кӗлеткисене вӗсем сӑрласа пӗтернӗ. Вара Таиттирен илнӗ ҫын малалла тухнӑ та, каланӑ: „Йут ҫӗрти ҫынсем кунта суту-илӳ тума килҙӗҫ, вӗсем ҙасах кайалла кайаҫҫӗ,“ тенӗ. Акӑљҙансен пит тӗлӗнмелле пулнӑ: тиккисем Таитти ҫынни каланине ӑнланнӑ. Анҙах вӗсем хирӗҫ ҙӗнес вырӑнне вӑрҫӑ йуррине йурласа йанӑ, пит хытӑ ҫиленнипе пит-куҫӗсем вӗсен тискерленсе кайнӑ. Кук йун тӑкасшӑн пулман, ҫавӑнпа вӑл пӑшалсене ҫӳлелле

*) Ҙӑвашла—тункатисем.

пеме хушпӑ. Тиккисем кӑшт ҫарӑнса тӑнӑ та, кайран каллех сӑнӑсемпе йунаса малалла кӗре пуҫланӑ. Кук вӗт пуҫккӑпа пеме хушнӑ, анҫах вӑл та пулӑшман. Йулашкинҫен вара шултӑра пуҫккӑсемпех пемелле пулнӑ: темиҫе ҫын вилнӗ, ыттисем тарса пӗтнӗ. Ҫав ҫӗнӗрен тупнӑ ҫӗр мӗн пысӑкӑшне пӗлмешкӗн, Кук унӑн пӗр хӗррине кайнӑ. Йӗри-тавра ҫавӑрӑнса ҫитсен, Кук ҫав ҫӗр Ҫӗнӗ-Селанти пулнине пӗлнӗ, вӑл ҫӗре Тасман унтан малтан тупнӑ. Ҫӗрӗн хӗррисене пӑхса ҫӳренӗ ҫух, Кук Ҫӗнӗ-Селантийе татса икӗ утрав тӑвакан тинӗс пырне тупнӑ, ҫав тинӗс пырне халӗ Кук пырӗ теҫҫӗ. Ҫӗнӗ-Селантирен кайнӑ ҫух, акӑлҫансем пӗр ту ҫине ҫулсенҫен пирамит туса лартнӑ; ҫав утравсене Анкли хӑй аллине илнине пӗлтерме вӗсем пирамит ҫине тата Анкли йалавне ҫакса хӑварнӑ.

Унтан Кук йулташӗсемпе канаш тӑвас тесе пухнӑ та, ҫавӑнта вӗсем, кӑшт ҫур-ҫӗр йеннеллерех пӑрӑнса, хӗвел-анӑҫ йеннелле иртсе кайас тенӗ. Вара кайнӑ та, вӗсем икӗ ернерен каллех пысӑк ҫӗр курса йанӑ. Ҫав ҫӗр Австрали пулнӑ, унӑн хӗвел-тухӑҫ йенҫи хӗррисене Йеврол ҫыннисем ун ҫухне пӗлмен. Акӑлҫансем ҫыран хӗррине ансан, вӗсене хирӗҫ тиккисем сӑнӑсемпе, ҫукмарсемпе тухнӑ, вӗсем йунаса темӗскер кӑшкӑрнӑ. Тӑлмаҫӑ сӑмахӗсене вӗсем ӑнланман, паллӑ туса та вӗсене лӑплантарма пулман. Ҫакӑнта та акӑлҫансем малтан вӗт пуҫккӑпа, кайран шултӑра пуҫккӑпа пенӗ Тиккисем тарсан, акӑлҫансем вӗсен наҫар шалашӗсене пӑхса тухнӑ. Пӗр шалашӗнҫе вӗсем тиртен тунӑ шҫит айне пытанса ларнӑ икӗ пӗҫӗк аҫана курнӑ. Унтан вӗсем ҫыран хӗрринҫен шалалла кайса пӑхса ҫӳренӗ. Унта тӗлӗнмелле вӑрмансем пулнӑ; унти ҫӳлӗ йывӑҫсем пӗр-пӗринҫен инҫетре сайран ларнӑ. Йывӑҫсем айӗнҫе хӳхӗм улӑхсем сарӑлса выртнӑ; унта унҫен курман курӑксем, ҫеҫексем ӳснӗ. Улӑхсем тӗлӗнҫе ҫӳлте кӗмӗл тӗслӗ каккатусем, темӗн тӗслӗ поппукайсем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе вӗҫсе ҫӳренӗ. Ҫынсене акӑлҫансем сахал тӗл-пулнӑ: ҫав ҫӗрте ҫын сахал пулни курӑнса тӑнӑ. Ҫыран хӗррипе ҫур-ҫӗр йеннелле ишсе пынӑ ҫух, Кук коралл рифӗсем тӗлӗнҫе карапне ҫутах путарман. Вӑл ак мӗнле пулнӑ. Пӗрре ҫӗрле карап, ҫиле май кайаканскер, сасартӑк пит хытӑ ҫӗтрессе кайнӑ та, ҫарӑнса тӑнӑ. Вӑл шыв айӗнҫи рифсем хушшине тӗл-пулнӑ. Хумсем ӑна

ҫĕклесе рифсем ҫине ҫапа пуҫланă, вĕсем карап хăмисене тата-тата ӳкĕрнĕ; карап тĕпне (трюмне) шыв кĕрсе кайнă. Тавлăкĕпех хумсем карапа рифсем ҫумне ҫаптарнă. Тепĕр каҫхине тин, тинĕс шывĕ тапса килнĕ ҫухнĕ, карап ҫĕкленсе ҫавăнтан тухса кайнă. Ҫыран хĕррине ҫитсе, тăратмалли вырăн тупсан, Кук карапне аран-аран йусакаланă та, каллех малалла ҫурҫĕр йеннелле кайнă. Вăл Торрес пырĕ тăрăх тухнă та, Йавă йатлă утрав патне ҫитнĕ.

Кук аран-аран Африк ҫĕрĕ тавра ҫавăрăнса кайнă. Йевроп патне ҫитнĕ ҫĕре унăн карапĕ пит хăтсăрланса ҫитнĕ. Парăссемпе канатсем кивелсе кайнипе ҫĕтĕлсе, татăлса пĕтнĕ. Ытти карапсем ҫав карапа хăваласа ҫитсе, ирте-ирте кайнă: вăл ывăнса ҫитнĕ ҫӳревҫĕ пек, аран-аран малалла кайнă. Акă ĕнтĕ Ламанш! акă ĕнтĕ ҫуралнă ҫĕр-шывсем!

Ҫапла Кук тĕнҙе тавра икĕ ҫул та, тăхăр уйăх ҫӳренĕ.

Кук йулашки ҫӳреве кайни.

1776-мĕш ҫулта Кук йулашки хут тинĕс ҫине ҫӳреме тухса кайнă.

Ку хутĕнҙе вăл ҫур-ҫĕр йеннелле, Аслă оккеана, никам ҫитсе курман ҫĕре кайнă. Вăл унта Сантвиҙ, урăхла Хавайи, утравĕсене тупнă та, Америкĕн ҫур-ҫĕрпе хĕвел-анăҫĕ хушшинҙи хĕррине пĕлсе курса тухнă, Уелс принтсĕ сăмсине тупнă та, ăна карт ҫине ӳкерне. Пăрлă оккеана пырса кĕрсен, вăл ҫав оккеан урлă Атлант оккеанне тӳрех ӳкесшĕн пулнă, анҙах пăрсем ҙарса тăнă пирки, унăн калла тухмалла пулнă, вăл вара тепĕр хут Хавайи утравĕсем патнелле кайнă. Унта тиккисем Кука турă вырăнне хунă. Вăл ҫыран хĕррине тухсассăнах, вĕсем ун умне ҙăркуҫҫи ҫине тăрса, кĕлĕсемкаланă. Пĕрре тата кĕлĕҫĕсем тăваттăн йывăҫран тунă турăсен кĕлеткисем тăракан ҫĕре илсе пынă та, пур халăх умĕнҙе ăна ҫӳлĕ вырăн ҫине хăпарма хушнă. Ҫавăнта хăпарса тăрсан, Кука халăх парне панă: пĕр сыснапа пĕр татăк хĕрлĕ пусма. Ҫавăн ҙухне кĕлĕҫĕсем: Роно, тесе темĕскер йурланă. Кайран тин пĕлнĕ: Роно вăл пĕр авалхи пуҫлăхăн йаҙĕ пулнă. Вăл авал кимĕпе оккеан варринелле ишсе кайнă, тухса кайнă ҙух вăл: ӳлĕм ҫакăнта епĕ пĕр утрав ҫине

ларса таврӑнӑп, тесе хӑварнӑ. Парне кӳнӗ хыҫҫӑн Кука питӗ хисеплесе тӑнӑ. Акӑљђансем пурӑнакан ӑрашђара кашни кун ӑна кӗл-туса, парнесем кӳнӗ. Кук патне карап ҫине парнене сыснасем, мӑйӑрсем, тем тӗслӗ ҫимӗҫсем пыра-пыра панӑ. Ахаљ ҫынсем ӑна ан ђӑрмантарђӑр тесе, кӗлӗҫӗсем акӑљђансем пурӑнакан ҫӗре пӗр ҫынна та ура пусма хушман; вӗсем пурӑнакан вырӑна таса вырӑн, *тапу*, тенӗ. Парнийӗ пит нумай пулнӑ: акӑљђансем икӗ уйӑх хушшинђе икӗ пин пӑта йахӑн хатӗрлесе хунӑ. Унти халӑхсем нађар пулнӑ; урӑх парне кӳме пултарайман; ҫавӑнпа вӗсем Кука, ђасрах кайтӑр, тесе тархасланӑ. Кук малтан тӗлӗнсе кайнӑ, унтан ђухласа илнӗ те, ђасрах хатӗрленсе ҫула тухса кайнӑ. Анђах хайар ҫил-тӑвал тухвӑ та, мађтӑ хуҫӑлса аннӑ, ҫавӑнпа кайалла таврӑнмалла пулнӑ. Ку хутӗнђе тиккисем акӑљђансене тӑшманӑн курнӑ. Пӗр ик-виҫ кунтан вӑрҫӑ тухнӑ та, алӑпа тытӑнса вӑрҫнӑ, ҫавӑнта вара Кука вӗлернӗ. Унӑн ӳтне тиккисем пайӑн-пайӑн пайланӑ та ҫисе йанӑ. Матруссем пӑшалсемпе тухсӑссӑн, хӑйсен кӑпиттанин хӑш-хӑш шӑм-шаккисене анђах тупнӑ.

Миклухха-Маклай.

Миклухха Маклай Новкӑрӑт кӗпӗрнинђе ҫуралнӑ. Ун ашшӗ хаххул йахӗнђен пулнӑ. Вунӑ ҫула ҫитиђђен вӑл йалта пурӑннӑ. Вӑл унта йалти ађасемпе пӗрле вӑрманта ҫӳреме, шыва кӗме йуратнӑ; тата вӑл выртмара вут хӗрринђе ларма пит йуратнӑ. Вӗренессе вӑл Питӗрте, иккӗмӗш кимнаҫире, унтан университтетре, кайран тата йут патшалӑхра аслӑ ӑшкулсенђе вӗреннӗ.

1871-мӗш ҫулта, 23 ҫула ҫитсен, Миклухха-Маклай Ҫӗнӗ Квиней йатлӑ ҫӗр ҫине кайса курма шухӑш тытнӑ. Унђен Ҫӗнӗ-Квиней ҫинђен никам та пӗлмен. Вӑл унта кайсан, тиккисем хушшинђе пурӑнса, вӗсенӗн пурӑнӑҫне пӗлес тенӗ.

Шывпа ҫав тери инҫе кайма вӑй ҫитмен пиркп вӑл кеокрахви упђинђен пулӑшу ыйтнӑ. Лешӗ ӑна пӑртак укҫа панӑ та, Аслӑ оккеан ҫинђе ҫӳрекен „Витязь“ (Паттӑр) йатлӑ карап ҫине вырӑнаҫтарнӑ. 1871-мӗш ҫулта, ҫу уйӑхӗнђе, ҫак карап Аслӑ оккеан ҫине тухнӑ. Вӑл 4 уйӑх ҫур-ҫӗрпе хӗвел-анӑҫ хушшинђе ишсе пынӑ. Хӑш-хӑш утӑсем тӗлӗнђе вӑл ђаранка-

ланӑ. Кайсан-кайсан, авӑн уйӑхин 8-мӗш кунӗнђе вӗсене айакранах Ҫӗнӗ-Квинейӗн ҫӳлӗ ту-тӑррисем курӑна пуҫланӑ.

Миклухха Маклай каланӑ тӑрӑх, карапӗ Астролђапи кукӑрне кӗнӗ. Кунта халиђђен никам та Йевропран килсе курман. Ҫав кукӑра кӗрсен, вӗсем ҫыран хӗрринђе сӗм-вӑрман ситӗнсе ларнине курнӑ. Унта ниҫта та етем пурӑчнӑ палли курӑнман.

Катара (айакра) ҫӳлӗ шӗвӗр тӑрӑлӑ тусем курӑннӑ. Ту тӑррисем пӗлӗтрен те ҫӳлте пулнӑ. Витязь машшинисем ђарӑннӑ та, йакӑр пӑрахнӑ. Кӑппиттан тӗкӗр витӗр пӑхнӑ, вӑл вӑрмантан ҫӗра-пакартан, хура ӳтлӗ, кӑтра ҫӳҫлӗ ҫынсем тухнине курнӑ. Вӗсен пуҫлӑхӗ малтан пынӑ. Вӑл пуҫлӑх пулни пуҫӗ ҫинђи ерешлентернӗ капӑр тӗксенђен паллӑ пулнӑ. Ун хыҫҫӑн улттӑн йӗркипе коккос мӑйӑрӗсем йатса пынӑ, тата икӗ тикки икӗ пӗђӗк хӗрлӗ йытӑ ҫавӑтса пынӑ. Лейттенант кулса каланӑ: кусем пире парне парасшӑн пулмалла. Вӗсем нихӑҫан та карап курман пулӗ-ҫке, тенӗ.—Пӑхӑр-ха, пӑхӑр! тесе кӑшкӑрса йанӑ. Маклай: вӗсем мӑйӑрӗсене ҫӗре хуђӗҫ, йыттисене пусаҫҫӗ! тенӗ. Паллах тиккисем Витязе Турӑ вырӑнне хунӑ та, ӑна парне парса ҫырлахтарасшӑн пулнӑ. Анђах ҫавӑнта сасартӑк кӗтмен йапала пулнӑ-тӑнӑ. Витязӗн машшина пӑхаканӗ ҫыран хӗрринђе мӗн пулнине курман та, карап клаппӑнне уҫса йанӑ, вара вӑйлӑ сасӑ йанӑраса тухса кайнӑ, карапӑн хура тӑрупине пӑс хупласа илнӗ. Паппуассем хӑраса, аллисемпе сулкаласа, хӑлхисене хупласа, вӑрмана тарса кӗнӗ, ҫыран хӗррине коккос мӑйӑрӗсемпе, пусса пӑрахнӑ йытӑсем анђах выртса йулнӑ. Миклухха-Маклай хӑйӗн икӗ тарҫипе кимӗ ҫине ларнӑ та, ҫыран патнелле ишсе кайнӑ. Тарҫисем пӗри швет ҫынни Уилђсон, тепӗри полинеҫи ађи пулнӑ. Вӗсем унта тиккисен киммисене хӑйӑр ҫинђе выртнине курнӑ. Вӑл вырӑнтан утма-ҫул [1]) вӑрманалла кӗрсе кайнӑ. Маклай ҫав ҫулпала пӗђђен пӑшалсӑрах шалалла кӗрсе кайнӑ. Пӑртак кайсан, коккос палђмисем хушшинђе ларакан йал патне ҫитнӗ. Пӳрђӗсем патӗнђе ик-виҫ хуралҫӑ тӑнӑ, йалӗнђе урӑх никам та пулман. Анђах вӗсем те, Маклайа курсан, тарма тапратнӑ.

---

[1]) Урӑхла—ҫуран-ҫул, сукмак.

Маклай вĕсене хăваламан, вăл аллисемпе кăтарткаласа, сире тивес çук, тесе, пĕлтерме тăрăшнă. Пĕҫĕккĕн-пĕҫĕккĕнех тиккисем хăйуланса ун çывăхнерех пынă. Маклай вара вĕсене ҫалкар пир татăкĕсем, шăрçасем кăтартма пуçланă. Вара тиккисем тата çывăхарах пырса капăр хатĕрсене илме пуçланă. Унтан ун ури патне икĕ сысна, çыхса пырса, хунă. Миклухха кулкаласа, пуçне тайса, хĕпĕртенине пĕлтернĕ. Хăй аллисемпе кăтарткаласа, вăл хăй кимми çине сысенисене леçсе пама хушнă. Вăл паппуассене астарса, карап çине илсе кайса, кăтартасшăн пулнă. Вăл карапне кăтартса, унтан хăрамалла маррине пĕлтересшĕн пулнă, анҫах лешсем пырасшăн пулман. Вара ултавпа тиккисен пĕр киммине пукçирпа тытнă та, икĕ тиккине вăйпа карап çине çĕклекелесе хăпартнă. Малтан вĕсем шăнтакан ҫир пек ҫĕтренĕ; унтан хăйсене никам та нимĕн усал туманнине курнă та, аҫасем пек хĕпĕрте те пуçланă. Пур йапала та вĕсене тĕлĕнтернĕ; нимрен ытла вĕсем тĕрлĕ тимĕртен тунă йапаласене курсан тĕлĕннĕ. Тата вĕсене пысăк куç-кĕски те пит кăмăла килĕшнĕ. Унта вĕсем хăйсене курсан, нумайҫҫен каçса кайса кулнă. Çавăнтан кайран тиккисене килне йанă.

Виççĕмĕш кунне 110 матрус Миклухха-Маклай валли пÿрт тума çыран çине тухнă. Никам тĕкĕнмен вăрманта матруссем пĕр вырăна суйласа тасатнă та, пÿрт туса лартнă. Пÿртне пысăк пÿлĕмлĕ тунă. Пÿлĕмне икĕ пайа уйăрнă. Пĕр пайĕ Маклай валли, тепĕри икĕ тарçи валли пулнă. Пÿрт çине палҫмă çулçисемпе витнĕ. Йунашар пĕр кивĕ паппуас пÿрҫĕ пулнă, ăна кухне тунă. Питех кирлĕ мар ытлашши йапалисене малалла валли пÿрт айĕнҫи нÿхрепе тултарнă. Унпа йунашар тепĕр нÿхреп пулнă, унта темиçе пăт тар тултарнă. Пÿрт умне хĕвел сехеҫĕ туса лартнă. Маҫҫи тăррине Раççей йалавне çакса йанă. Кăппиттан Маклайа виçĕ кĕсменлĕ пысăк кимĕ панă. Ун çинҫе кăшт ишсе çÿреме те лайăх пулнă, тиккисенҫен тармалла пулсан, вăрăм çула тухса кайма та йуранă.

Кăппиттанĕ те, ухвитсерсем те, Кука тиккисем вĕлерсе çисе йанă пек, Маклайа та çапла тăвĕç, тесе хăранă. Ухвистерсем ăва хăйсен çимĕçĕсенҫен рис, ҫей, сахăр, тата консерв-

сем парса хăварнă. Акă ĕнтĕ уйăрăлса йулмалли вăхăт ҫитсе тăнă: Миклухха-Маклай пуринпе те ђуп-туса тухнă та, киммиҫине ларса ҫыран хĕррине кайнă, карапĕ тинђселле, пăс кăларса, тухса кайнă.

Миклухха-Маклай паппуассем патĕнђе пурăнни.

Карап хускалса кайсассăн, паппуассем Маклайран шикленсе, ăна тăшманăн кура пуҫланă. Вĕсем кăшкăрса, аллисемпе тинĕс йенне кăтартса каланă: ăҫтан килтĕн, ҫавăнтах кай, тенĕ. Вăл йал патне пыра пуҫласанах, хĕр-арăмсемпе ађасем, шăри-шари кăшкăрса, тарса пытаннă; арҫынсем аллисене вăрҫă-хатĕрĕсем тытса, ăна ҫавăрса илсе, вăрҫăри пек кăшкăрашнă. Темиҫе хутђен ун пиђĕ ҫумĕнђенех ҫĕмĕрен те йанă, ҫăварне сăнă вĕҫĕпе хайăрса уҫнă. Ҫаксене пурне те Миклухха-Маклай ђăтса, лăпкăн ирттерсе йама тăрăшнă, аллине те хĕҫ-пăшал тытман. Йалсене кĕрсен, хăйне курса, сасартăк хăраса ан ӳкђĕр тесе, вăл йал патне ҫывхарсан, шăхлиђĕпе шăхăртнă. Ҫапла вара хĕр-арăмсемпе ађасем вăл пырассине пĕлсе, ђасрах тĕмсен айне пытаннă. Йерри-йеррипе тикккисем Миклухха-Маклайа хăнăха пуҫланă; вăрҫă хатĕрĕсем те аллисене сахал тытнă.

Темиҫе уйăх иртсессĕн, Миклухха-Маклай вĕсен ђĕлхине ăнкарса ҫитнĕ. Унтан вара вăл хăйне сывлăшра ҫӳрекен турă вырăнне хунине ăнласа илнĕ. Миклухха калаĭ: „Епĕ асăрха пуҫларăм,—вĕсем калаҫнă ђух, ђас-ђасах: каарам—тамо, теҫҫĕ. Каарăм вăл уйăх тени, тамо—ҫын тени пулаĭ Епĕ малтан ку сăмахсем мĕне пĕлтернине ăн ланаймастăм-ђђĕ, пурăна-киле вара пĕлсе ҫитрĕм: вĕсем мана уйăх ҫинђен аннă ҫын тенĕ-мĕн," тет.

Тиккисем ăна ытти ҫынсенђен уйăрса хисеплесессĕн те, ҫапах та темиҫе хутђен вĕлерме тăнă. Пĕрре ҫапла вăл, пысăк пуху ҫуртне пырса кĕрсен, хăй ҫинђен хытă тавлашнине илтнĕ. Тавлашсан-тавлашсăн, вĕсенђен пĕри Миклуххаран: „Епир пĕлес тетпĕр, есĕ пирĕн пекех вилĕм лĕ-ши?" тенĕ. Маклай те-

миçе минутҫен нимĕн те кала пĕлмен. Унтан çтена çумĕнҫе çакăнса: таракан сăнна курнă та, ăна илсе, тиккийе парса каланă: сăнаса пăх, тенĕ. Паппуас сăннипе сулса йанă, анҫах çавăнтах унăн аллисем лăштах кайнă та, вăл сăннине вырăнне çакса хунă. Вăл: есĕ вилĕмлĕ пулсан, хăна ху вĕлерме памăттăн, тенĕ. Маклай пĕр йалла хăйне вĕлерессшĕн тенине тата илтнĕ. Вăл çинҫех çав йалăн пуçлăхĕ патне кайнă та; пĕр сăмахра пулнă çынсене пурне те пуçтарма хушнă. Лешсем пуçтарăнсассăн, Миклухха-Маклай вĕсене каланă: „Халĕ епĕ çывăрма кайатăп, есир мана вĕлерес тетĕр пулсан, вăл ĕçе хăвăртрах. епĕ çывăрнă ҫухнех, ăйхăран вăранса вăй кĕриҫҫен, тума тăрăшăр", тенĕ. Çакăн хыççăн Маклай ҫăнах та ҫасах выртса çывăрса кайнă. Пĕр сăмахра пулнă çынсем, ăна вĕлерме, аллине çĕклеймен.

Çав хутлăхра Миклухха-Маклай паппуассен пурăнăçнĕ, вĕсен йăлисене сăнаса пĕлсе çитнĕ. Вăл халăхсен пурăнăçĕ шăлт ҫи малтанхи етем пурăнăçĕ пекех пулнă. Вĕсем меттал таврашне пĕлмен. Мĕн пур ĕç-таврашĕсенә ҫулран, шăмăран, йывăçран тунă. Вут тунас йĕркене пĕлмен пирки, йаланах вут çунтарнă.

Çĕр ĕçлес пулсан, вĕсен арçынниссем темиçен йĕркипе тăрса, вĕçлĕ патакпа çĕре алтнă. Вĕсен хыççăн хĕр-арăмсем пысăк çĕр муклашкисене кĕреçепе çĕмĕрсе пынă. Хĕр-арăмсем хыççăн аҫа-пăҫасем йеррипе шуса, çара аллисемпех çĕре ватса пынă,

Миклухха-Маклай хăй мĕн сăнанисене, курнисене пурне те хăйĕн кун-кĕнеки çине çырса пынă. Унтан пуçне тата вăл йапаласен коллексийĕсене пуçтарнă. Анҫах ăна йаланах çапла ĕçлеме килсенех йернĕ сивĕ-ҫир кансĕрленĕ. Унăн тарçисем те çав ҫирпех ҫирленĕ, вăл вĕсене те хăйех пăхнă. Çамрăк полинеçи çынни амаҫ ĕçмен пирки вилнĕ.

1872-мĕш çул иртсе пынă ҫухне пирĕн çĕревçĕсенĕн пурăнăçĕ пит кансĕрленсе çитнĕ. Маклайăн тарçи, швет çынни, ҫирлĕ выртнă хушăрах, хинă та, çими те пĕтнĕ. Çавăнпа вĕсен тиккисен çиминех çимелле пулнă. Малтанласа Маклай ухатана кайса, хир-сыснисем те тыткаланă, анҫах халĕ курăк пĕтсе килнĕ. Урв-тăхăнăвĕ çĕтĕлнипе унăн урисем суран-

ланса кайса тӳрленми пулнӑ. Шăрпăк ђĕрĕлнĕ пирки вăл хăйĕн пӳрђĕ çумĕнђе йаланах вут тытнӑ. Çурђин тăрри çĕрсе, ун ăшне çумăр кайа пуçланӑ. Йуписене кăткăсем кăшланипе йăвана пуçланӑ. Çапла нимĕн тума май пулман пирки, вăл паппуассенђен сăрт çине хăй валли çĕнĕ çурт туса пама ыйтнӑ.

1872-мĕш çулта, раштав уйăхин 19-мĕш кунĕнђе ирхине Миклухха хăйĕн çĕнĕ çурђĕ çинђен каласма тесе йала кайнӑ. Ăна хирĕç паппуассем ђупнӑ. Вĕсем тинĕсрен пĕр çĕрте тĕтĕм тухат! тесе кăшкăрна. Ђăнах та çанталăк хĕрринђе инçетре тĕтĕм çавăрăнса тухнӑ, ун хыççăн карап та курăннӑ. Кăнтăрла иртсен, тинĕс кукăрне, пухта, вырăс çар-карапĕ Исумрут кĕнĕ. Миклухха-Маклай валли ăна йури йанӑ. Вăл васкаса, хăйĕн коллексийĕсене, çырăвĕсене пуçтарнӑ та, карап çине куçнӑ.

Кайађђен вăл икĕ кун, икĕ каç кӳршĕ йалĕсене çӳренĕ. Унти çынсем ăна факкĕлсемпе илсе çӳренĕ. Тиккисем ăна хăйсем патĕнђен: ан кай, тенĕ, йарасшăн пулман. Йулсан, ун валли кашни йала çĕнĕ çурт туса пама пулнӑ.

Миклухха Исумрут çине ларнӑ та, Йавă çине сивĕ-ђирĕнђен сывалма кайнӑ. Кайран вăл тата темиçе хутђен Сонт утравĕсем тăрăх, Интокиттай тăрăх, Полинеçи утравĕсем тăрăх çӳренĕ. Темиçе хут Çĕнĕ-Квинейе те пынӑ. Унти пĕлекен тиккисем, ăна хавас туса, йаланах хирĕç тухса илнĕ.

Пĕр май сивĕ-ђирпе аптăранăран унăн сывлăхĕ пĕге пуçланӑ. 1886-мĕш çулта вăл Петрократа пынӑ. Хăй мĕн курса илтнине каласа пĕтерейместĕрех вăл унта вилнĕ. Унăн мĕн курнине çырнӑ кĕнекисене халĕ те çапман, вĕсем Кеокрахви Упђинђе выртаççĕ. Вĕсене лайăхрах уйăрса та илеймен-ха. Унăн паха, хаклă коллексийĕсене Пĕлĕмлĕхсен Аккатемийĕнђи Етнокрахви Муçейĕнђе курма пулат. Вăл пурăннă Квиней çыранне унăн йађĕпе *Миклухха* çыранĕ теççĕ.

Нанссĕн.

Фриттиоф Нанссĕн вăл Норвеки çынни. Вăл Норвеки пуçхули Христианирен инçех мар, Скантинави тăвĕ айĕнђе, 1861-

мĕш çултă çуралнă. Вăл ту çинђен йухса анакан пĕђĕк шыв хĕрринђе, вăрман варринђе, пĕр пĕђĕк именире ӳснĕ. Çав шывра ишсе çӳреме, ту çинђен йĕлтĕрпе йарăнма вăл питĕ йуратнă. Реалђ ăшкулран вĕренсе тухсан, вăл университтете кĕнĕ. Унтан вĕренсе тухсан, вăл çур-çĕрти полђус-патĕнђи çĕрсене пĕтĕмпех пĕлестĕн пулнă.

Нанссĕн Кренланти витĕр çӳрени.

Нанссĕн 1885-мĕш çулта Кренлантийе витĕр тухма шухăшлана. Ĕлĕк çавăн пек Кренланти витĕр икĕ çын тухасшăн пулнă: пĕри швет çынни Нортĕншшелђт пулнă, тепĕри — Америк çынни Пири пулнă. Анђах вĕсем пĕри те тухайман. Нанссĕн Кренланти витĕр йĕлтĕрпе кайас тенĕ. Вăл унта маллйенђи, çын пурăнман çĕртен, пăр купаланса тăракан вырăнтан пырса кĕнĕ. Нанссĕн хăйпе пĕрле пилĕк çын илнĕ: вĕсенђен виççĕшĕ Норвеки çыннисем пулнă, иккĕшĕ лоппарсем пулнă. Вĕсем пăрлă тинĕсе тӳленсем тытма кайакан карап çине ларнă. Çав карап Кренланти çывăхне çитнĕ те, анђах çыран çине тухма май пулман. Тинĕсре пăр пит нумай пулнă, вăл пăрлă уй пек темиçе мил тăсăлса йухса пынă. Пăр татăкĕсем çинђе тӳленсем йухса пынă; тинĕс кайăкçисем çав тӳленсене тытасшăн çӳренĕ. Пĕр уйăх иртнĕ, пăр çаплах виçĕ-херри çук йухнă; кĕсменпе ĕçлесе, пит хытă йухăмпа кĕрешмелле пулнă; тата пăрсем пырса çапăнасран, вĕсем пуртăпа, йе пакурпа ĕçленĕ. Темиçе хутђен пысăк пăр тăвĕсем çула пӳлсе тăнă. Пĕр тăвĕ пысăк патша çурђĕпе пĕрех пулнă: унăн тăррине пашне пулнă, айаккинђе хура-кăвакăн курăнакан шăтăк пулнă; вăл шăтăка хумсем çапа-çапа шăтарнă. Тепĕри лаптак тăрлă пулнă. Нанссĕн ун çине улăхса пăхнă, çав ту çӳллĕшĕ тинесри шывран 33 ђалăш çӳлте пулнă. Çакăн пек пăрсем çыран хĕррине темиçе вуншарăн та, çĕршерĕн те йуха-йуха пынă. Вĕсем хушшинђен туха-туха кайма хăрушă пулнă та, тата ытла та йывăр пулнă; мĕншĕн тесен, Нанссĕнсем пынă çĕртех пăр куписем ишĕле-ишĕле аннă, йе ту пек пысăк пăрсем салана-салана кайнă, йе тата ђипер пыракан пăрсемех çавăрăна-çавăрăна кайнă, вара унта тинĕс вĕресе кăпăкланса анђах тăнă. Çӳре-

сен-çӳресен хайхи Нанссĕн хăй тухас тен ĕçĕре, пĕр хвиорт патне çитнĕ. Ун тăрăх темĕн ђухлĕ пăр тинĕселле кайнă. Киммисене вĕсем çĕр çине кăларнă та, ђулайне купаласа хăварнă. Унтан мĕн пур йапалисене 5 çуна çине тийенĕ те, турттарса кайнă. Пăрла çĕр çуркаланђăк пулнă, тата пит ђăнкă ту пулса çӳлелле тăсăлса кайнă. Нанссĕнсем аран-аран мĕн пур вăйĕпе çунисене вĕренрен туртса пынă. Кайран Нассĕн çавăн ђухнехине асăнса калат: пĕтĕм кĕлеткем çĕмĕрĕлђĕ, хулсем ыратнипе вут пек çунђĕç, тет. Оккеан шывĕнђен çӳлерех пĕр ик çухрăм улăхсассăн, çул сĕвекленерех панă, унтан вĕсене йурлă-пăрлă тӳрем çĕр курăнса кайнă. Çавăнта унта-кунта ту тăрринђе хура ђулсем анђах курăнкаласа тăнă, вĕсене *нунаттак*, теççĕ.

Анђах çак çĕрĕн тĕсĕсем те ђасах çухалђĕç, йĕри-тавра пăрпа йур анђах пулнă, вăл куçпа та пăхмалла мар йăлтăртатса тăнă. Пурте тĕттĕм куçлăх тăхăнса, вуалђпе пĕркенсе пынă. Хĕвел ђылай хытă хĕртнĕ, çиелти йур ирĕлнипе шĕлкĕшленнĕ; анђах, хĕвел ансанах, шăнта пуçланă та, сивĕ пĕр 30—40 крата йахăн пулнă. Çĕрле вара Нанссĕнсем хӳшĕ карса, пăлан тирĕнђен тунă çывăрмалли михĕсем ăшне виçшерĕн кĕрсе выртнă. Анђах михĕ ăшенђе те пит сивĕ пулнă, вĕсенĕн пуçĕсем ир йенне пасара-пасара кайнă. Авăн уйăхин 5-мĕш кунĕнђе вĕсем лаптак тăвăн ђăн çӳлĕ тӳпинђен каçса кайнă. Унăн çӳллĕшĕ 8,900 фут пулнă. Вĕсем тата икĕ ерне пăрлăх тăрăх çӳренĕ, унтан вара çĕр хĕвел-анăç йеннелле сĕвеклене пуçланă. Вĕсен телейне çула май вăйлă çил тухнă. Вара Нанссĕн пресентрен парăс тунă та, çуни çине карса йанă. Çапла вĕсем парăспа çĕрĕн-кунĕн йарăнса кайнă. Анђах кайсан-кайсан, вĕсем ђутах пĕтмен, вĕсем пынă çĕрте пĕр тĕлте пăр çурканса пĕтнĕ, çуракĕсен тарăнăшĕ 50 ђалăшран та ытла пулнă. Нанссĕн вĕсене уйăх çуттипе курнă та, хăйĕн йулташĕсене ђасрах систернĕ.

Ансăр çуракĕсем урлă вĕсем йĕлтĕрпе ђипер каçа каçа кайнă; унта кĕрсе ӳксен, те йĕлтĕр патаккисене çурăк урлă хурса, шăтăка анса кайасран хăтăлса йулнă. Авăн уйăхин 24 мĕш кунĕнђе тин вăсем хĕвел анăç йенђи тинĕс хĕррине çитсе тăнă. Çапла вĕсем 450 çухрăм тунă. Тевис тийекен тинĕс пырĕнђе Нанссĕн Йевропа кайакан йулашки пăраххут

ҫине ларасшӑн пулнӑ та, анҏах пӑраххуҏӗ вӗсем ҫитиҏҏен тухса кайнӑ. Вара вӗсенӗн ҫав хӗле Тани ескимосӗсем пӑрӑнакан йалта пурӑнса иреттермелле пулнӑ.

Нанссӗн ҫур-ҫӗрти поҏус патне кайни.

Нанссӗн Кренлантирен таварӑнсан, ҫур-ҫӗрти поҏус патне кайса ҫӳреме шухӑш тытнӑ. Вара вӑл ҫӗмӗрейми тӗреклӗ карап тӑвас та, ҫав карап ҫине ларса, Аҫи хӗррипе Ҫӗнӗ Ҫӗпӗр утравӗсем патӗнҏен ишсе кайас тенӗ; унтан ҫур-ҫӗр йеннелле тухса, пӑр варрине кӳртсе шӑтса лартас та, шыв йухӑмӗпе малалла кайас тенӗ. Унӑн шухӑшӗпе ҫак тинӗс йухӑмӗ ӑна поҏус урлӑ, йе ун ҫывӑхӗнҏен каҫарса кайса, Кренланти патне илсе тухмалла пулнӑ. Нанссӗн хӑйӗн карапне *Фрам* йатлӑ хунӑ, Фрам тени *Малалла* тени пулаѓ. Карапне вӑл йуманран тутарнӑ, тата сӑмсине, хӳрине, пӑр ан ҫӗмӗртӗр тесе, хӗстерсен те, ҫӳлелле ҫӗклентӗр, тесе вӑл хурҫӑпа ҫаптарнӑ. Поҏус патне кайас текен нумай пулнӑ, анҏах Нанссӗн вӗсенҏен вуниккӗшне-кӑна суйласа илнӗ. Ҫвертрупа кӑппиттан тунӑ, вӑл шыв ҫинҏе ҫӳрекелесе курнӑскер пулнӑ, тата Кренланти витӗр тухнӑ ҏухнехи шанҏӑклӑ йулташӗ пулнӑ. Йохан-ссӗне вут хуракан кӑҏакар тунӑ, вӑл Норвекире ҏӑн ӑста кимнаст пулнӑ.

1893-мӗш ҫулта, ҫула Нанссӗн Норвеки ҫӗрне пӑрахса тухнӑ та, Карӑ тинӗсӗ йеннелле кайнӑ. Ҫав тинӗсре вӑл пӗр ҫыравта ҏарӑннӑ та, кӳлсе ҫӳрекен Ҫипир йыттисене туйаннӑ, вӑл йытӑсене ун патне Оп йатлӑ шыв патӗнҏен илсе пынӑ. Пӗр уйӑхран вӑл Ҏелӳскин йатлӑ ҫӗр сӑмси патне ҫитсе тӑнӑ, унтан тинӗсе тухнӑ та, пӑрсем ҫине пырса кӗнӗ. Ҫаванта вӑл пӗр пысӑк пӑр ҫумне пырса ҏарӑннӑ та, ӑна йӗри-таврах пӑрсем ҫавӑрса илнӗ. Ҫакӑнтан пӳҫласа вара Фрам пӑрсем шунӑ майӗпе анҏах шунӑ. Карап хӳри ванса ан ӳктӗр, тесе, ӑна илсе хунӑ; ӑшӗнҏи машшини ан тутӑхтӑр, тесе, ӑна та пуҫтарса хунӑ.

Пӑрсемпе пӗрле карап тинӗс тӑрӑх унталла та кунталла шуса ҫӳренӗ. Йулашкинҏен 1895-мӗш ҫулта ҫур-кунне Нанссӗн хӑйӗн карапӗ поҏус патӗнҏен иртсе пынине пӗлнӗ. Ҫавӑнпа

вăл карап ҫинҗен аннă та, 25 йытă кӳлсе Йохансс̆нпе пӗрле ҫур-ҫӗрелле кайнă. Вӗсем пӗр ҫӗр кунлăх апат илнӗ Вӗсен пăр урлă каймалла пулна, ҫул ҫинҗе тороссем тӗл-пулкаланă, ҫул питӗ хӗн пулнă. Йыттисем аран-аран пынă. Ҫунисене пӗр майах пăр куписем урлă сӗтӗре-сӗтӗре каҫармалла пулнă. 5 ерне хушши Нансс̆н пӗр-майах ҫур-ҫӗрелле кайнă; анҗах ҫавăнта йытăсем пӗтӗмпех ывăнса ҫитнӗ. Полҗус патне ҫитесси тепӗр 400 ҫухрăм йулнă. Ҫак тӗрлӗ хӗн ҫулпа унта ҫитсе курасси ҫинҗен шухăшлама та май килмен. Нансс̆н вара кайалла таврăннă.

Ҫав вăхăтра Фрам полҗусран айакрах пулман пулсан та, Нансс̆н йепле ҫӳренине пӗлмен. Ҫавăнпа вăл Франтс Иосҫиф ҫӗрӗ патнелле кайнă. Унта ҫитес пулсан, Пăрлă оккеан тăрăх пӗр 500 ҫухрăм каймалла пулнă.

Ҫак ҫул ҫинҗе Нансс̆н асапне те, хăрамаллине те курса пӗтнӗ. Ҫапла пӗрре вӗсене шурă упа тӗл-пулнă та, Йохансс̆не җутах сыртса ҫурман. Вăл Иохансс̆не сылтăм хăлхинҗен ҫапса ӳкерчӗ те, хăй айне тӗркелесе җикнӗ; унтан йытăсене курнă та, вӗсем патнелле кайнă, Йохансс̆не пăрахса хăварнă. Ҫав вăхăтра Нансс̆н кайакран пăшал туртса кăларнă та, упана персе вӗлернӗ.

Кайсан-кайсан, вӗсем йухăм пăрсем хӗррине ҫитсе перӗннӗ. Таса тинӗсе курсан, пит хӗпӗртенӗ. Ҫавăнтах кимӗсене салтнă та, ҫунисене унта тийесе, парăс туртса карнă, вара Франтс Иосҫиф ҫӗрӗ патне җасах ишсе ҫитнӗ. Унта вӗсем пӗр тинӗс утравӗ ҫине җухнă та, пăрсăр вырăн тупса, хӗл каҫма ӳпле туса лартнă. Ӳплен стенисене җулран купаласа тунă, тăррине морш тирӗсемпе витнӗ. Җас җасах ҫак утравăн ҫыранӗсем патне тискер моршсем ишсе пырса, хăйсен виҗкӗн шăлӗсемпе пăрсенҗен ҫакланса, сынсем ҫине пăхса выртнӗ, йе пăр ҫине тухса выртса ҫыврнă. Ҫак ҫӳревҫӗсем хăш-хăш җухне пăрсем ҫине тухса, моршсене пăшалпа пере-пере тытнă. Пăшал тивсен, вӗсем пит хытă мӗкӗрсе, шыва җăмса, сынсем тăракан тӗлти пăра пуҫӗсемпе ҫапса ҫӗмӗрме хăтланнă. Моршсене тытни ҫӳревҫӗсене нумай усă кӳнӗ: морш ҫăвӗ ҫунтарса, вӗсем ӳплине ăшăтнă, тата вăл ҫутма та аван пулнă. Ҫийессине вӗсем шурă упа какайне ҫинӗ. Упасем унта морш какайӗпе ҫуне сиссе нумай пынă. Ҫапла вара полҗус ҫывăхӗнҗе виҫҫӗмӗш ҫӗре

Нанссӗнпе Йохансеӗн никам пурӑнман утравӗ, ҫинҫе хӑйсен аллипе тунӑ ӳплере ирттернӗ.

Ҫак ҫӗре каҫасси вӗсене шутсӑр киҫемӗн, вӑрӑмӑн туйӑннӑ. Ҫак ҫӗре вӗсем пуринҫен ытла хӑйсен ҫулран тунӑ вырӑнӗ ҫинҫе ҫывӑрмалли михӗ ӑшӗнҫе ирттернӗ. Ӳплерен вӗсем ҫанталӑк мӗнлине пӑхма, тата, ӗҫес килсен, пӑр илме, ҫийес килсен, какай илме, тата ҫутмалли ҫу илме анҫах тухкаланӑ. Ҫак хӗл хушшинҫе вӗсене поҫус тиллисем питӗ аптӑратнӑ. Нанссӗн хӑй ҫак тилӗсем ҫинҫен ак мӗн калаӗ: Вӗсем пирӗнне мӗн ленкнине пӗтӗмпех сӗтӗрҫӗҫ: хурҫӑ пралуксене, карппунсене, пуҫтарса хунӑ тӗрлӗ ҫулсене, мӑксене, ҫип ҫӑмхисене, термометрсене тата ытти йапаласене те, тет. Ҫапла хӗл ирткеленӗ.

1896-мӗш ҫулта, ҫу уйӑхӗнҫе, ҫул-ҫӳренсем вӑл вырӑнтан малалла тапранса кайнӑ. Малтан вӗсем пӑрсем тӑрӑх ҫунисене сӗтӗрсе пынӑ, унтан кимӗсемпе шыв тӑрӑх кайнӑ. Тинӗсре унта темӗн ҫухлӗ моршсем йӑшӑлтатса ҫӳренӗ. Пӗр-майах вӗсем ҫак ҫӳревҫӗсем хыҫҫӑн хӑваласа пынӑ, пӗрре Нанссӗн ларса пыракан кимӗ тӗпне шӑтарнӑ. Ҫӗртме уйахин пуҫламӑшӗнҫе Нанссӗнпе Йохансеӗн Франтс Иоҫсиф ҫӗрӗнҫи кӑнтӑрти утравӗ патне ҫитсе ҫаранна. Пӗрре вӗсем ирхи апат валли морш какайне пӗҫернӗ ҫух, сасартӑк йытӑ вӗрнӗ сасса илтнӗ. Нанссӗн йӗлтӗр тӑхӑннӑ та, тӗкӗр илсе, шырама кайнӑ. Нумай та, кайман, вӑл йытӑ йӗррисем тупнӑ, унтан ҫынсене курнӑ. Ҫав вырӑнта акӑлҫансен експетитсийе тухнӑ ҫыннисем Ҫексон йатлӑ пуҫлахӗпе пӗрле пурӑннӑ - мӗн. Нанссӗн вара вӗсемпе пӗрле килне тавӑрӑннӑ. Тепӗр ерне иртсен, Фрам та ҫитнӗ. Фрама пӑрсем Шпитсперкӗн патне пырса лартнӑ. Ӑна пӑр варринҫен пӑрне тарпа ҫӗмӗрсе кӑларнӑ.

Ҫак Нанссӗн ҫитсе курасшӑн пулнӑ ҫур-ҫӗрти поҫус патне Америк ҫынни Пири ҫитнӗ. Ҫакӑ кана пӗлмен ҫын хӑйӗн ӗмӗрӗнҫе виҫӗ ҫул ҫур-ҫӗрти пӑрлӑ уйсене курса пӗлес тесе ҫӳренӗ. 1908-мӗш ҫулта, ҫула вӑл караппа Кренлантин ҫурҫӗр йенҫи вӗҫне ҫитсе тӑнӑ; унта вара ҫур-кунне пуҫламӑшӗнҫех, пӑр ҫирӗп ҫухне, вӑл 1 некӗрпе, тата 5 ескимоспа пӗрле, йытӑсем кӳлсе ларнӑ та, поҫус патне ҫитнӗ.

Кăнтăрти поҫус патне кайса ҫӳренисем ҫинҫен.

Кăнтăрти поҫус ҫавраки урлă ҫăн малтан каҫса кайаканни тинĕс ҫинҫе ҫӳрекен акăлҫан ҫынни Кук пулнă. Тĕнҫе тавра иккĕмĕш хут кайнă ҫухне вăл Кăнтăрти Поҫус патĕнҫи Ҫĕре шыранă, анҫах тупайман. Темиҫе хутҫен вăл кăнтăралла инҫерех кайма тăрăшнă, анҫах вĕҫĕ-хĕррисĕр пăрсене, хайар сивĕсене, тĕтресене курсан, вăл йалан кайалла пăрахса тавăрăннă, ҫапла вăл шухăшланă: Кăнтăрти Поҫус Ҫĕрĕ пулсан та, ăна пăрсем хупласа тăнă пирки, унта кайма пулас ҫук пулĕ, тенĕ. Ун ҫинҫен Кук ҫапла каласа ҫырнă: епĕ хăйса калатăп: пĕр ҫын та манран инҫе кайма шухăшлас ҫук; ҫапла ĕнтĕ епĕ ҫитнĕ вырăнтан кăнтăрта пĕр-пĕр ҫĕр выртаť пулсан та, ăна нихăҫан та кайса курса пĕлес ҫук, тетĕп, тенĕ.

Кук ҫапла каласа хурсан, кайран нумайҫҫен никам та кăнтăрти поҫус ҫĕрĕсене кайса курасшăн пулман. 50 ҫул иртсен тин, 1-мĕш Александтăр хушнă тăрăх, унта вырăс експетитсийĕ кайнă. Вăл Кронштатран 1819-мĕш ҫулта икĕ карап ҫинҫе ларса кайнă, пĕр карапĕ Восток, тепĕри Мирный йатлă пулнă. Вĕсене май пур таран поҫус патнерех ҫитме хушса йанă.

Вырăс ҫыннисем кăнтăрти поҫус ҫавраки урлă ултă хутҫен татса каҫнă, нумай тĕлте вĕсем кăнтăра Кукран та шаларах кайнă. Кăнтăрти Америкрен инҫех мар вĕсем йурпа пăр айне пулнă утрав тупнă, ăна I-мĕш Петĕр утравĕ тенĕ.

Ҫавăнтан кайран 20 ҫул иртсен, акăлҫан ҫынни Росс Ҫĕнĕ-Селантирен кăнтăрта йурпа, пăрпа витĕнсе выртакан ҫĕре курнă, ăна Кăнтăрти Виктори тенĕ, пăрсем картласа тăнă пирки унта пырса кĕме ниҫтан та май пулман.

Ҫак ҫĕр хĕррипе кăнтăралла кайнă ҫухне, Росс хăй умĕнҫе тӳрех йурпа, пăрпа хупланса ларнă вулккана курнă, вăл ун ҫухне лапах темĕн ҫухлĕ тĕтĕмпе кĕл пĕрĕхтерсе тăнă. Йурпа пăр хушшинҫе ҫавнашкаллине курасса никам та сунман. Ҫав вулккан ҫӳллĕшĕ 4 ҫухрăм пулнă, ăна хăйсен кимми йаҫĕпе Росс *Еребус* тенĕ, йунашар тăракан тепĕр сӳнсе ларнă вулкканне тепĕр кимĕ йаҫĕпе *Террор* тенĕ. Ҫак вулккансем патĕнҫен Россăн кайалла тавăрăнмалла пулнă, мĕншĕн тесен

вӗсен ҫулне пӑрлӑ ҫтена картласа тӑна. Ҫав ҫтена тавра ҫавӑрӑнса кайас тесе, Росс ун ҫумӗпе кайнӑ, анђах темӗн ђухлӗ кайсан та, унӑн вӗҫӗ пулман. Ҫтени ҫине ҫӳле хӑпарма та нийепле май пулман; вӑл тӳп-тӳрӗ, ђӑнкӑ пулна та, тата ҫӳллӗшӗ те унӑн 25 ђалӑшран пуҫласа 50 ђалӑша ҫитнӗ; мађтӑ тӑррисем ҫав пӑрлӑ ҫтена ҫуррине анђах ҫитнӗ.

Амунтсӗнпе Скотт ҫӳрени.

1910-мӗш ҫулта кӑнтӑрти полђус патне икӗ експетитси кайнӑ: пӗри норвекисен, тепри—акӑлђђансен. Норвекисен пуҫлӑхӗ Амунтсӗн пулнӑ, акӑлђђансен—Скотт пулнӑ. Амунтсӗн унђђенех Пӑрлӑ оккеанра ҫӳренипе ђапа тухнӑ. Ун ђухне вӑл 6 ҫынпа пӗрле кит тытмалли кимӗ ҫине ларса, Паффин уринђен пуҫласа. Перинк пырӗ патне ҫитеђђен витӗрех тухнӑ. Кӑнтӑрти полђус патне вӑл Нанссӗн тунӑ Фрам йатлӑ карапа ишсе кайнӑ. Малтан вӑл карапа пӑспа ҫӳрес вырӑнне ӑшапа ҫӳремелле тунӑ, пӑс машшинине илсе, ун вырӑнне моттор лартнӑ.

1911-мӗш ҫулта, кӑрлађ уйӑхӗнђе, Фрам йухса пыракан пӑрсем хушшинђен ишсе пырса, Росс тинӗсне кӗнӗ те, унта Пӑрлӑ Парйер патне ҫитсе ђарӑннӑ. Ҫавӑнта пӑр ҫтена пек пулнӑ, унӑн ҫӳллӗшӗ 15—20 ђалӑша йахӑн пулнӑ. Ҫав пӑр ҫтена 1000 ҫухрӑм ытла тӑсӑлса кайнӑ. Ҫав 1000 ҫухрӑм хушшинђе вӑл пӗр тӗлте—Кит тинӗс-уринђе анђах лутра пулнӑ. Ҫавӑнта ҫитсен Амунтсӗн ђарӑннӑ та, пӑр ҫине тухнӑ.

Ҫавӑнтан вӑл йытӑсем кӳлсе кӑнтӑралла темиҫе хутђен ҫӳренӗ Вӑл виҫӗ склат тунӑ; пӗрне 80-мӗш кратра, тепӗрине 81-мӗш кратра, тата тепӗрине 82-мӗш кратра. Ҫав склатсене аш-кӗрпи, писквит, шокколат, хытнӑ сӗт, краҫҫын, йытӑсем валли тӳлен ашӗ, тата урӑх йапаласем те тултарнӑ; тӳленӗсене Кит кукӑрӗнђе тытнӑ.

Ака уйӑхӗнђе полђус каҫӗ пуҫланса кайнӑ. Пӗр май йур ҫунӑ та, вӗсем йур айне пулса йулнӑ. Тула тухса ҫӳремешкӗн, вӗсем кӗрте алтса, каллерейсем тунӑ. Вӗсем тула ҫанталӑка пӑхмашкӑн анђах тухкаланӑ. Авӑн уйахин, 13-мӗш кунӗнђе питӗ-питӗ сивӗ пулнӑ, Тселҫи кратӑсӗ нулђрен 59 крат айалта кӑтартса танӑ.

Çурла уйăхин 24-мĕш кунĕнҫе тин хĕвел пăхса йанă. Аван уйăхĕнҫе вара Амунтсĕн çула кайма хатĕрлене пуçланă. Йупа уйăхин 20-мĕш кунĕнҫĕ вĕсем 5 йулташĕпе тăватă çунапа поԼус патне тухса кайнă. Кашни çунана 13-шер ескимос йытти кӳлсе йанă. Вĕсем çийелтен йурпа витĕнсе тăнă пăрлă çулпа тӳрех кăнтăралла кайнă.

Калла таврăннă ҫухне аташас мар тесе, вĕсем кайнă ҫухне, çул çине майаксем туса хăварнă. Кашни майак çине нумĕрсем, тата пĕр майакран тепĕр майак хушши мĕçе çухрăмне çырса хăварнă. Ак малта вĕсене тусем курăнса кайнă. Çав тусем çинҫен пăрсем ишĕле-ишĕле аннă. Çав тусем тăрăх улăхса, вĕсем лаптак сăрт çине çитсе ҫаранна. Унăн çӳллĕшĕ 3 çухрăм пулнă. Çав лаптак сăрт тăрăх кайса, çӳревçĕсем йулашкинҫен кăнтарти поԼус патне çитвĕ те, унта вĕсем Норвеки йалавне лартнă.

ПоԼус йепле тăнине вĕсем хĕвел çӳренĕ тăрăх сăнанă. Çавăнта хĕвел тавлăкĕпех çӳлелле хăпармасăр, айалалла анмасăр пĕр çулпа çӳресе çаврăннă, кăнтăрла тĕлĕнҫе те, çур-çĕр тĕлĕнҫе те пĕр пек çӳренĕ. Хĕвел çӳреннинe сăнанă ҫух йăнăш пулма пултарнă. Çавăнпа çӳревçĕсем лайăхрах сăнамашкăн пур йеннелле те 18-шар çухрăм айаккалла кайса çӳренĕ. Çанталăк ун ҫухне пĕр майах ăшă, лăпкă тăнă. Температуртур 19 крат нуԼрен айалта тăнă. Парометрпе вĕрескелли (кипятильник) лаптак сăрт çӳллĕшĕ оккеанри шывран 3070 метр çӳлĕрех пулнине кăтартса тăнă. Сывлăш сахал пулнă та, çӳревçĕсем кăкăр пӳлĕннипе аптăранă. Амунтсĕн калать: çапла, тесе каламашкăн, пирен малтан икĕ хутҫен сывлăш çаврмалла-ҫҫĕ, тет.

ПоԼус патĕнҫе ҫатăр ăшне Амунтсĕн икĕ çыру хăварнă-пĕрне Норвеки королĕ VII мĕш Хааккон валли, тепĕрине кăпиттан Скотт валли. Унтан кайалла кайма тытăннă. Çул çинҫе аташса кайасран, вĕсен пуринҫен малла пĕр пек пушă хирте склатсене тупмашкăн тăрăшмалла пулнă. Хĕвел куçа ан йăмăхтартăр тесе, вĕсен çĕрĕ-сĕрĕпе, хĕвел вĕсене кай-йенҫен пăхнă вăхăтра, утнă. Йуртан тунă майаксем вĕсене темрен паха пулнă: хĕвел çуттипе çавсем малта електритсă майакĕсем пек йăлтăртатса тăнă. Тăманлă ҫухне, тата тĕтрелĕ ҫухне, вĕсем темиçе хутҫен çул çухаткаланă, вара, шырасан-шырасан, çав майаксем

патне пынă. Çанталăк пĕр пек аван пулнă; çил кăнтăр йенђен çÿревçĕсем хыçенђен вĕрнĕ. Çавăнпа вĕсене йĕлтĕрпе малалла кайма çăмăл пулнă.

Кăрлађăн 25-мĕш кунĕнђе, 1912-меш çулта, вĕсем Кит тинĕсури патĕнђи пÿрђĕсем патне пынă. Вĕсем çÿрени çапла 99 куна ситнĕ; вĕсем мĕн пурĕ 3000 çухрăма йахăн тунă. Йыттисем 11 анђах таварăннă; ыттисене пере-пере вĕлернĕ те, ашне йыттисене те панă, хăйсем те çинĕ. Çÿревçĕсем кайалла пурте сывă таварăннă, хăшин-хăшин анђах пит-çăмартисене тăм илкеленĕ. Тăм илни вĕсен Фрампа Кăнтăр йенђи Америке ситсен тин хăйпăна-хăйпăна ÿкнĕ.

Çав хушăра акăлђансен Скоттпа кайнă експетитсийĕ пит телейсĕр пĕтнĕ. Кăппиттан Скотт та кăнтăрти полђус патне, Амунтсĕн хыçĕнђен пĕр уйăхран, çитнĕ; анђах кайалла таварăннă ђухне, вăл çул çинђе пĕтнĕ.

Скотт хăй кун-кĕнеки çине вилес умĕн ак çапла çырса хăварнă: кайалла таварăннă ђух, пирĕн пĕр лайăх çанталăк та пулмарĕ. 88 крат сарлакăшĕнђе 3000 метр çÿллĕшĕнђе температтур лаптак сăрт çинђе кăнтăрла 30°, каçхине 47° пулђĕ. Çитменнине тата çул çинђе пĕр майах питĕ хирĕçле çил вĕрсе тăђĕ. Çапах та епир, çил-тăвăл склатран 11 милре ђарман пулсан, çитнĕ пулăттăмăр, çимелли те унта тупнă пулăттăмăр... Апат пирĕн тепĕр ик кунлăх анђах йулђĕ. Хайар çил-тавăл тăвата кун ĕнтĕ пире ђатăртан тухма памасть. Епир аптăраса çитрĕмĕр, ĕнтĕ епĕ аран-арая çыратăп, тет. Çав телейсĕрскерсене шырама кайнă çынсем вĕсене тупнă та, ђатăрах хунă, çийелтен йур купаласа, çырулă хĕрес лартса хăварнă.

Йăнăш çапнă тĕлсем.

Йэн.	Йĕрке.	Çапнă:	Вуламалла:
2	6	улăштар масăрах	улăштармасăрах.
—	8	кӳртей-мерĕмĕр	кӳртеймерĕмĕр.
7	3	*Куем-Лунҫ*	Куен-Лунҫ.
—	13	Хималайа	Хималайă.
10	12	Йан	Йанă.
17	9	лаша ҫĕрниляĕ	лаша-ҫĕрниллĕ (лаша -ҫĕрнелĕ).
—	10	суроксем	сăвăрсем.
—	21	сурок	сăвăр.
27	4	паха пирсем	пурçăнтан тĕрлĕ паха пирсем.
31	33	Ийессо	Иессо.
45	8	Колланти, колланте м	Холланти, холлантсем.
—	23	Коллантин	Холлантин.
51	7,9	Йевфрат	Евфрат.
57	25	Ҥйас	Ҥйасса.
57	11	курт	вăтам хисеппе.
58	18	вруком	
73	22	кĕтӳ-кĕтӳпе	кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе.
106	24	Лонтăнрăн	Лонтăнран.
107	17	Филатеҫфи, Посто	Филателфи, Постон (йе, тĕрĕсрех калассан,—Постăн).
116	15	*Квайаккиҫ*	*Квайаккил.*
118	8	Колланти	Холланти.
141	29	çăмăр	çумăр.
—	30	çĕртре	çĕрте.

В. Ц. № 1099. Тираж 5000